№4619

# ТĂВАН АТĂЛ

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔ
КĂЛАРАКАН АЛЬМАНАХ

## 1(34)
КĔНЕКЕ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. экз. № 25.

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар ◆ 1950

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палате
„13“ мая 1950 г.
№ 349

# ÇУЛ

РОМАН

ЯКОВ УХСАЙ

*Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики 30 çул тултарнине хисеплесе.*

*Эс, çĕршыв, тăван çĕршывăм,*
*Вăтăр çул тултарнине*
*Хисеплесшĕн эпĕ çыртăм*
*Кĕнеке—сана парне.*

*Эп чылай çĕрте çӳрерĕм,*
*Куртăм эп чылай тĕнче,*
*Сăвă-юрă кĕвĕлерĕм*
*Пур çĕрте те сан çинчен.*

*Умлăн-хыçлăн, умлăн-хыçлăн*
*Килнĕ паттăр çулсенче*
*Эпĕ пултăм аслă вăрçăн*
*Вутĕнче, окопсенче.*

*Пĕр самант та эп манмарăм,*
*Сан вăйпа ĕçӳ çинчен*
*Çырнине пухса усрарăм*
*Йывăр атă кунчинче.*

*Вăрçăра çӳренĕ майăн*
*Асăрхаттăм çуркунне*
*Картипе кикак хуркайăк*
*Сан енне ăсаннине.*

*Эп сана курма çунаттăм,*
*Çуннине тӳсмен енне*
*Вĕсемпе салам ярат тăм*
*Аслă Атăл хĕррине.*

*Эп сана, тăван çĕршывăм,*
*Чĕререн хисеплеме*
*Сыпăк хыççăн сыпăк çыртăм,*
*Çыртăм çак кĕнекеме.*

1

Автансем кашта çинче
Виçĕ тапхăр авăтсан,
Вăранать Калля пичче
Пыл пек тутлă ыйхăран.

Вăрахчен анасласа,
Вăл сырать çăпатине.
Шурăмпуç кăвакарса
Перĕнет чӳречене.

Сив шыва çăварĕпе
Пĕрĕхет те, ун хайхи
Сăтăрса çăваннипе
Сирĕлсе каять ыйхи.

Тарăн шухăша кайса
Каллĕ-маллĕ утнă май,
Лăстăр-лăстăр хускалса
Силленсе тăрать урай.

Арăмне тӳшек çинчен
Тăратас тесе, юри
Пукана Калля пиччен
Перĕнсе илет ури.

Кунĕпех итем çинче
Питĕ ывăннă иккен,
Çавăнпа та ыйхинчен
Тăталас килмест инкен.

Чылаях кĕтсе ларсан,
Упăшки вĕтеленет:
—Çимелли пулать-и сан?
Тăр-ха, карчăк, тăр-ха!—тет.

Леш тăрать алхапăлта,
Йăпăр-япăр уттипе
Чупкалать унта-кунта,
Кĕлете те нӳхрепе.

Акă ĕнтĕ ун валли
Хатĕр тепĕр самантран
Турилкке çинче тулли
Çăкăрпа шăрттан.

Арăмĕ васканипе
Тĕркĕшсе ӳкет, вара
Кивĕ кĕрĕк çаннипе
Вĕртерет сăмавара.

Çăлтăрсем тӳпе çинче
Ирĕлсе сӳнес чухне,
Тăранса, Калля пичче
Пăхкалать килкартине.

Лашине çитермелле
Питĕ тутлă, çавăнпа
Вăл парать сĕткен сĕлле
Пысăк йывăç ăскăçпа.

Çумăр хыççăн пек, таса
Янкăр уçă сывлăшра
Тапхăр-тапхăр янратса,
Тулхăрса илет лаша.

Мĕн пулсан та, тыр пĕрчи
Лектерме пăхкаласа,
Вĕçкелет нумай çерçи
Чĕвĕл-чĕвĕл шавласа.

Ӳречеллĕ урапа
Селĕм пытăр çул çинче,—
Урипе тапа-тапа
Лашине кӳлет пичче.

Арăмпе калаçнăçем
Хучĕ утă пĕр çĕклем,
Çакрĕ тикĕт лакăмне
Урапи хыçне.

Каччă чух, авланиччен,
Явнă чĕн чăпăрккине
Хĕстерет Калля пичче
Пиçиххийĕ хушшине.

Чăпăркка çĕтерекен
Лашаран ăнман, тесе,
Ашшĕ-амăш пĕчĕкрен
Ӳкĕтленĕ вĕрентсе.

Чăйăл саслă хапхине
Арăмĕ ярах уçать,
Çамрăкрах чипер ĕне
Туянма ăна калать:

— Кăтартать ĕне çулне
Карчĕ майраки çинче...
Шăхăрать çӳрен утне
Тутине пĕрсе пичче.

Тухсанах, тĕтресĕр ир
Шалтикас урамĕпе
Ярăнса утать пĕр хĕр
Чăп тулли витрисемпе.

Çул çине тухас чухне
Саванса Калля пичче
Кӳршĕри Çемен хĕрне
Хирĕç пулчĕ хальхинче.

Ку хĕре кине кĕртме
Палăртса, Калля пичче
Шухăшланă кĕрлеме
Унăн ырă туйĕнче.

Ĕçкĕре Çемен хĕрсе
Хăй тавтунă Калляна:
— Тавăсье, хăта!—тесе
Каламан пĕрре кăна.

Пасарта пулмасть инкек—
Арăскаллă çул çинче
Сумлă енчĕк тупнă пек,
Хĕпĕртет Калля пичче.

Сывлăш нӳрлĕ ир çинче.
Шыв пекех юртать лаши.
Иртнĕ чух урамсенче
Сисĕнет кукар шăрши.

Ялĕнчен тухас чухне
Уй хапхи юпи çинче
Выльăх пуç купташкине
Асăрхать Калля пичче.

Йĕрĕх-ярăх, тĕрлĕ мур,
Касă чир тăван яла
Кĕресрен, чăвашăн пур
Пуç шăмми çакас йăла.

Тусемпе сăртсем çинче
Саралса выртать пуса.
Уçăмлă кĕрхи тĕнче
Курăнать кăвакарса.

Вĕрене хĕрелнипе
Улăх урлă аякран
Вут-кăвар хĕлхемĕ пек,
Ылтăн пек курнать вăрман.

Пĕлĕт витĕр йăр та яр
Сар хĕвел çути ӳксен,
Чăннипех илемсĕр мар
Эрешмен картийĕсем.

Хăмăлпа кашличине
Сырăнса вĕçкелекен
Çипписем ана çине
Ӳкнĕ пурçăн пек иккен.

Çӳлелле пăхса илсен,
Шлĕнкă сурăх пек кăтра
Ушкăн-ушкăн пĕлĕтсем
Шăвăнаççĕ катара.

Хамăр ӳснĕ çĕрсенчен
Питĕ йывăр каясси,
Тенĕ пек, çинçен-çинçен
Илтĕнет тăрна сасси.

Кĕркунне, юман пӳлме
Тӳпеленнĕ вăхăтра,
Таврана пăхса иртме
Питĕ кăмăллă вара!

Ярăнса юртать лаша,
Тулхăрать вăл çул çинче.
Шухăша путса каять
Пасара Калля пичче.

Пĕлтĕр вăл вăтам хĕрне
Авалхи пек çураçса
Пачĕ те, тумне-мĕнне
Кайрĕ ун чылай укçа.

Ывăлне валли кăçал
Атă илесси çинчен
Шутласа, ыйхи сахал
Татăлман Калля пиччен.

Ĕмĕчĕ нумай малта,
Кирлĕ темĕн те илме.
Шухăшланă вăл тата
Кив пӳртне те сиплеме.

—Ĕмĕрте пĕр илĕп, тен,
Пурçăн тутăр арăма...
Шутлани кĕтмен çĕртен
Кайнă унăн харама.

Кăмăс пек çăра сĕтне
Тавлăкне пĕрер витре
Сутарса, хăла ĕне
Савăнтарнă çурт-йĕре.

Каçхине, пĕррехинче,
Арăмĕ ăна хупман:
Курăклă килкартинче
Машлатса çиме аван.

Кÿршĕ карчăк, сÿтĕк чун,
Килсе ларнă калаçса.
Вăл хăварнă кайнă чух
Хапхана яри уçса.

Анкарти хыçне хире
Тухса кайнă-мĕн ĕне.
Тытнă пĕр тукмак хÿре,—
Пыршă юлнă хуçине.

Ваттисем каларĕшле,
Карчăк пек пулса инкек,
Ху сисместĕн те, киле
Йăпшăнса кĕрет иккен.

Халĕ санăн килĕнте
Пулмасан сĕтпе юр-вар,
Çатмари икерчĕ те
Тип сăран пек, тутлă мар.

Çусăр ĕнтĕ—ан та суй—
Çусăр тутлă пыл кăна.
Чÿпĕк пек ларать шарккуй
Çу сĕрмен карланкăна.

Çусăр эсĕ ан тавлаш!—
Çу сĕрсе çăпатине
Сутнă пĕр чее чăваш
Ĕлĕк, чăр Иван чухне.

Ху ĕнÿ пулсан кăна
Сан чысна этем туять.
Сĕтлĕ-турăхлă çынна
Ял çинче те ырă ят.

Сарă йывăç тирĕке
Лекмесен сĕтпе хăйма,
Хĕр тени те пит тиркет
Çав киле качча пыма.

Сĕтлĕ ят та ырă ят
Шеп хула пасарĕнче
Туянас тесе, каять
Савăнса Калля пичче.

— Ĕнине тупатăп-и?—
Терĕ вăл,—хăратмалла
Шăлтăр-шалтăр урапи
Кустарать анаталла.

Лашине чара-чара
Тилхепи аллисенче
Туртăнать, çав самантра
Трактор шавĕ илтĕнчĕ.

Сăмсана кăтăкласа,
Сарăлать бензин шăрши.
Хартлатса, чĕвен тăрса,
Чăхăмлать çÿрен лаши.

Сăраллă çÿçе пĕкке
Шалт хуçса пĕтермелле,—
Ĕрĕхет сике-сике
Шыв çыранĕ еннелле.

Шăхăрать хăлхасенче
Вичкĕн çил куçа уçми.
Сирпĕнет тĕнĕлĕнчен
Хыçалти пĕр кустăрми.

Питĕ хытă кайнипе
Сирпĕнсе юлас чухне
Ватă çын аллисемпе
Хыт тытать ÿречене.

Лăнк та ланк силлентерсе
Пынипе, юлашкинчен
Çăмха пек пĕтĕрĕнсе
Вăркăнать Калля пичче.

Юриех ăна камит
Кăтартас пекех кунта
Унăн хыççăн пыр та çит
Тикĕт лакăмĕ тата.

Лакăмин çăка пăкки
Тем шуйттанĕ еннелле
Сирпĕннĕ те—ун пирки
Тикĕтпе пĕвенмелле.

Месерле аран-аран
Выртакан Калля пиччен
Ҫĕр ҫумне хаплатнăран
Кăкăрне чикет чикен.

Хыпалать те, хĕвĕнче
Кăмăлне ҫĕклетекен
Енчĕк, вăкăр тирĕнчен
Тунăскерĕ пур иккен.

Чунĕ тарăхнă енне
Харкашса выртас килет,
Кӳршĕри Ҫемен хĕрне
Ҫавăнпа аса илет:

— Чăп тулли ик витрипе
Хирĕç пулчĕ те, вара
Пысăк шанчăк кĕтнипе
Тухрăм-кайрăм пасара.

Ытлашши пупленĕрен
Ашшĕне Талпас* тесе,
Пĕр этемĕ, шăлйĕрен,
Ят кăларнă витлесе.

Ҫиллине кантариччен
Ҫемене тата хăртас
Тетчĕ вăл.
— Калля пичче!—
Тет ăна паллана сас.

— Ал-уру аманчĕ-и?
Хам йăтам-ха. Лăпкă пул!—
Тет ăна Киркка ачи,
Ҫамрăк Павăл-кăмсамул.

(Вăл ĕçлет пĕр виçĕ ҫул
Комсомол ячейкинче,
Тухнă „Павăл-кăмсамул“
Тенĕ ят ял хушшинче.)

Сăвăс ларнă пек, ĕнси
Ыратать Калля пиччен.
Суранне пĕлтерменçи
Сикрĕ-тăчĕ ҫĕр ҫинчен.

Лашине шыв хĕрринчен
Тытса килчĕ вăл матур.
Чăпăркки те—ҫумĕнче,
Шĕлепки те унăн пур.

Халĕ унăн хулана
Пасара васкамалла.
— Ан хускат-ха тракторна!—
Терĕ ҫамрăк Павăла.

Ларчĕ те тилхепине
Ҫавăрчĕ пĕр-ик хутчен,
Ҫилентернĕ лашине
Сăтăрчĕ каçанĕнчен.

Аслă ҫулăн тăршшĕпе
Чăкăр-чакăр чул пирки
Урапи кисретнипе
Ыратать шăмми-шакки.

Элеватор тăрринче
Кăвакарчăн вĕçнине
Асăрхать Калля пичче
Хулана кĕрес чухне.

Ҫухрăм ҫурă аякра
Шавлани килсе ҫитет,—
Ҫамрăк Павăл трактора
Хускатса кĕрлеттерет.

2

Юмахри пыл-хурт утарĕ
Чарăнми сĕрленĕ пек,
Тĕркĕшет хула пасарĕ
Халăх йышлă пулнипе.

Пур унта пĕçернĕ карăш,
Выльăх-чĕрлĕх те вăлта.
Шелепи старик каларĕш,
Мĕн-мĕн кăна ҫук унта!

Шыв сутать пĕр вată карчăк
Шыв колонки умĕнче.
Пилĕк пуслăх ҫеç шăварчĕ
Лашине Калля пичче.

Вăл хӳме ҫумне тăварчĕ,
Каçăртрĕ пĕр туртине,
Ун вĕçне ҫакса хăварчĕ
Пĕчĕк ҫăкăр хутаçне.

* Талпас—нумай калаçма юратакан ҫын.

Утрӗ вӑл, анчах тўсмерӗ,
Килчӗ урапи патне:
— Асӑрха, тӑванӑм!—терӗ
Кўршӗ лавӗн ачине.

— Илӗп сан валли кулачӑ!—
Терӗ те Калля пичче
Шӗлепки-мӗнпе пытанчӗ
Шавлӑ халӑх хушшинче.

Районри хула пасарӗ
Чаплӑ, пысӑк ҫав тери.
— Ал, иптешӗм!—тет тутарӗ;
Вырӑсӗ калать:—Бери!

Таварне пурте сутасшӑн.
Пултӑр хакӗ те усси!
— Кил кунта!—тесе чӑвашӑн
Илтӗнсе тӑрать сасси.

Таврари пур ялӑн ҫулӗ
Лавсене кустарнӑ та,
Ҫитмӗл ҫичӗ тӗслӗ мулӗ
Пухӑннӑ иккен кунта.

Ҫуркунне хӑйма пек юшкӑн
Юлакан уй-хирсенчен
Килнисен арбузӗ йышлӑ
Курӑнать лавсем ҫинче.

Вакласан—пӑхма илемлӗ,
Тутансан—тути сипек.
Тӗсӗ ун каҫхи хӗвелӗн
Пӗлӗтри хӗлхемӗ пек.

Пысӑк пуҫлӑ самӑр пулӑ
Вӗлтӗренлӗ лав* ҫинче
Ҫук тесен те, вун пӑт пулӗ,—
Тӗлӗнет Калля пичче.

Мӑйӑхне сирсе ишет-мӗн,—
Тенӗ чух, инҫех те мар:
— Эй, агай, ёне кирек-мӗ**—
Тет сутуҫӑ—пӗр тутар.

— Хаклӑ-и? Халех илетпӗр.
— Бишӗссӗ, эйде, дўрт тин!***
Тутарла Калля пиччемӗр
Тӗшмӗрте пуҫларӗ тин.

Ҫырмари шыва сасартӑк
Пурттине ўкернӗ пек,
Кулянса вӑл хыпаланчӑк
Утрӗ халӑх хушшипе.

Нумаях та вӑл каймарӗ,
Макӑрса мӗкӗрекен
Ёнесен хӑйсен пасарӗ—
Уйрӑм вырӑн пур иккен.

Каллӗ-маллӗ уткаларӗ,
Хаксене тӗпче-тӗпче
Йӗтесен те тупаймарӗ
Кирлине Калля пичче.

Хир пӑланӗ пек хевтеллӗ
Ёнесем, анчах илме
Енчӗке укҫа йӗркеллӗ
Тултарман килти пўлме.

Пасарта ҫитми укҫасӑр
Ҫўриччен, ҫилениччен,
Хӑвӑртрах, пӗрре пӑхмасӑр,
Каясси килет пиччен.

— Путтӑр ҫӗр тӗпне тархасшӑн
Турӑху, сӗтў-мурү!..
Ун ҫине пӑхать йӑвашшӑн
Пӗр хитре пушмак пӑру.

— Кӗркунне чупсан пӑрулӗ
Ҫӑварни эрни тӗлне,—
Шухӑша кайса йӗркеллӗ
Пычӗ ун хуҫи патне.

— Ӑҫтисем?
— Кӗрмеслӗ ялӗ,—
Терӗ уҫӑ ҫын-хуҫа,
Калляна йӑпатрӗ халӗ
Вашаватлӑ калаҫса.

---

* Чӗрӗ пулӑсем пӑсӑласран, вӗсен хушшине вӗлтӗрен хураҫҫӗ.
** — Эй, пичче, йӗп кирлӗ мар-и? Тутарла „ёне" тенӗ сӑмах йӗп тенине пӗлтерет, ҫавӑнпа Калля пичче ёне сутнӑ пек ӑнланнӑ.
*** — Пиллӗкӗш, атя, тӑватӑ пус!

Хаклашмасăр хак тупан-и,—
Алă çапрĕç виç хутчен.
Вутланса алли тупанĕ
Ыратать Калля пиччен.

Пĕртăван çынсем пек иккĕш
Турĕç ĕнтĕ пысăк ĕç,
Çавăнпа та кирлĕ имĕш,
Питĕ кирлĕ мăкариç.

Сыпмалли, тесен, чĕнмерĕ,—
Хирĕç мар Калля пичче.
Кĕçĕтнĕ пекки çӳрерĕ
Унăн пырĕ тĕпĕнче.

Ĕçсенех, шăм-шакĕ тарлĕ,
Ӳксе тупнă инкеке
Хӳтерсе кăларĕ халĕ
Виç-тăват тулли черкке.

Тип улма пек пĕркеленчĕк
Вăкăр тир енчĕккине
Хĕвĕнчен илсе кукленчĕ,
Ларчĕ вăл ури çине.

— Пĕр пусран ĕрчетĕр çиччĕ!
Укçине, тăванăм, ме!—
Пачĕ вăл.
Юлни ун çитĕ
Вак-тĕвек тавар илме.

Пĕринчен пĕри юлмасăр,
Сăмаха çаптарнипе,
Иккĕш те, ниçта пăхмасăр,
Утрĕç халăх айккипе.

Пушмакне Калля кăкарчĕ
Урапа ӳречинчен,
Çăкăрне илме антарчĕ
Хутаçне турта çинчен.

Айккипе нумай сĕтеллĕ
Сыпмалли çуртра малтан
Çӳçенсе, анчах йĕркеллĕ
Эхлетсе пĕрер стакан

Ĕçрĕç те, хула урамĕ
Курăнать тата чипер.
Вĕрентет Калля:—Юрамĕ!
Леш калать:—Хурас тепрер!

Пĕрершер татти-сыпписĕр
Янк та янк тӳнтернипе,
Тарласа ларать пиччемĕр
Мунчари пек йĕп-йĕпе.

—Пул-ха, тусăм, урă пуçлă,
Ман пек ĕç те ман пек çи!—
Хăнари пек умлăн-хыçлăн
Тархаслать пушмак хуçи.

Юратса-и е ахаль-и
Çăкăрăн чĕлли çине
Çĕçĕпе сĕрет вăл халĕ
Хуламмăн горчицине.

—Кирлĕ мар мана тип пулă,
Пăх-ха эсĕ тутанса,—
Тет хуçа, анчах куççулĕ
Сăрхăнать шăрçаланса.

—Макăрма пăрах-ха эсĕ
Йышлă халăх умĕнче!
Е тата тепре илес-и?—
Тет ăна Калля пичче.

—Çын пек ăслăччĕ пушмакăм,—
Чăннипех те йĕренçи
Сăнĕпе пăхса хăяккăн
Ларчĕ леш, пушмак хуçи.

Чăп-тулли курка çĕклерĕ,
Янракан карланкине
Ячĕ вăл, анчах сĕрмерĕ
Хальхинче горчицине.

Икĕ хут та алă пачĕ,
Сывлăх сунчĕ те пĕччен
Аслă урампа уттарчĕ
Талпăнса Калля пичче.

Кăчăкă çăмран пустарнă
Шĕлепки юлать манса:
Çамрăк çын пекех хастарлă
Вăл пырать хăйне шанса.

Тукасри Хараçăн паллă
Çирĕм пăтлă вăкăрне
Йăтмалла пекех хăватлă
Вăл туйса пырать хăйне.

Хӗрӗнсен, такам та саслӑ,
Пур пурин те паттӑрри.
Пӗр хӑмла пӗрчи сыпсассӑн,
Ӳсӗр пулнӑ, тет, тӑри.

Вӑл турра касатӑп, тенӗ,
Ҫавӑнпа хӗҫ выранне
Тяппипе тытса ҫӗкленӗ
Типӗ улӑм пӗрчине.

Ҫатӑлти мӑнтарӑн кайӑк
Юрласа ҫерем ҫинчен
Пӗлӗте ҫитес пек кайнӑ
Ҫунатти ыратиччен.

Ҡуҫҫене хупмасӑр, уҫҫӑн
Ёҫесси аван иккен.
Эх, кайран, ҫемҫелнӗ хыҫҫӑн,
Утасси вара инкек!

Вырӑс та чӑваш, тутар та
Кӗпӗрленнӗ лав панче,
Тӗлӗнсе кайса сасартӑк
Чарӑнать Калля пичче.

Ҫавӑрать пӗр ял чӑвашӗ
Пӑлтӑр-пӑлтӑр ҫӗлӗкне.
Ҫавӑрса, шуйттан илесшӗ,
Ҫаптарать сӑмаххине:

—Ку галлан патши автанӗ*
Ӳснӗ ылтӑн витере.
Ун пекки тата тупан-и
Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере!

Паллӑ ӗнтӗ, унӑн иккӗ
Ҫатлатса тӑма ҫунат.
Шӗл-кӑвар пек киккирикӗ,
Пӑхӑр-ха, епле ҫунать!

Ун хакне хума хӑюлӑх
Ҫитеймерӗ. Илтрӗр-и?
Маншӑн калӗ ырӑ халӑх.
—Икӗ тенкӗ!—тет пӗри.

Пурҫӑн тутӑр пек илемлӗ
Пӗсехеллӗ пӗр автан
Лав ҫинче ларать йӗркеллӗ—
Кантрапа ҫаклатнӑран.

Автанне тата пӑртакҫӑ
Хаклӑрах пама ыйтса,
Ҫӗлӗкне силлет такмакҫӑ
Пӑлтӑр-пӑлтӑр ҫавӑрса:

—Ку автан пӑхса ӳстернӗ
Мӑнтӑркка хитре чӑхсен
Яланах ҫиме типтерлӗ
Шултӑра ҫӑмартисем.

Ҫуркунне пӗр ватӑ карчӑк
Килсе кайрӗ ман пата.
Тӑрансан, ӑна виҫ тавлӑк
Какӑртрӗ пӗр ҫӑмарта.

Автана сутма, ыр халӑх,
Канаша килетпӗр-и?
Парӑр ӗнтӗ чун канмалӑх!
—Виҫӗ тенкӗ!—тет тепри.

—Ҫӗтӗк-ҫатӑк, ҫӗр кукшаллӑ
Ҫӗлӗкне силле-силле,
Киккирикшӗн ҫӗр те аллӑ
Парӗҫ, терӗн-и элле?

Ҫитӗ ӗнтӗ! Намӑс мар-и?—
Терӗ те Калля пичче
Такмакҫа сӑмах памарӗ
Шавлӑ халӑх умӗнче.

—Ан палка!—тесе тыттарчӗ
Пилӗк тенкӗ укҫине,
Автана илсе уттарчӗ
Урапи ларан енне.

Кӳлчӗ те кайма хистерӗ
Лашине Калля пичче.
Кӗрлесе хула кӗперӗ
Юлчӗ унӑн хыҫӗнче.

3

Вӑрманта шӑнса чӗр йывӑҫ
Шӑтӑр-шатӑр ӳкмелле
Килчӗ сивӗ, пулчӗ йывӑр
Шартлама хаяр хӗлле.

---

* Галлан автанӗ тесе ӗлӗкхи чӑваш хушшинче шултра автансене каланӑ.

Урăм-сурăм çил уларĕ
Сăлпăранлă каçсенче.
Çавăн чух куçне хупмарĕ
Тĕплĕ çын, Калля пичче.

„Ăнсăртран ĕне пăрушĕ
Картара хутланмĕ-ши?“
Туйăнчĕ ăна хăрушă
Çăварни эрни хушши.

Вăл кĕтни ахаль иртмерĕ.
Сивĕ чух, пĕрре ирпе
Чинавье инке чĕркерĕ
Пăрава сăхманĕпе.

Улт кунтан-и, эрнерен-и
Иртсе кайрĕ сĕт сарри,
Савăнпа пĕрре инкенĕн
Тумалла ĕне ырри.

Хăпарса çӳхе икерчĕ
Пиçсенех, кĕрекине
Чинавье инке чĕнтерчĕ
Çеменпе ун арăмне.

Тус пулсан, чĕлхе те уçă,
Кун та лайăх, ырă каç.
Пĕр-пĕчченçĕ ешĕл çулçă,
Çил вĕрсен те, шарламасть.

Калляпа Çемен çуралнă
Пĕр çулта, пĕр уйăхра.
Иккĕш пулнă пĕр çăварлă,
Юрăра, калаçура.

Каччă чух Талпас Çеменĕ,
Питĕ туслă яш пулса,
Калляпа пĕрле çӳренĕ
Вăйăллă Вăтакасса.

Тӳснĕ те темтепĕр курнă
Пысăк вăрăм ĕмĕрте—
Нихăçан та иккĕш урлă
Калаçса курман пĕртте.

Сар çупа пуçса тытаççĕ,
Хутлатаççĕ икерче.
Калаçса çисе лараççĕ
Çеменпе Калля пичче.

Ерипен сăмах арманĕ
Çаврăнса кĕрленĕ май,
Кăмăла хускатаканĕ
Чĕлхере тата нумай.

Çамрăк Павăл, комсомолец,
Илсе килчĕ кĕркунне
Акăш-макăш, кĕрĕс-мерĕс
Трактора хăйсен ялне.

Çĕр çурас пек пысăк трактор
Чи малтан шавласанах,
Пычĕ пĕр эрне ытла-тăр
Ял çинче нумай сăмах.

Çыврăрма тӳшек-минтерĕ
Чĕннине манса кайсах,
Тракторпа пĕрле çӳрерĕ
Шăкăр-макăр ачапча.

Кун пек шав нихçан илтменччĕ,
Çырмаран çавна кура
Пĕлĕт пек çӳле çĕкленчĕ
Чавкапа хура курак.

Трактор хыççăн ял кĕперĕ,
Пысăкки, çырма урли,
Чăтаймарĕ, тӳсеймерĕ—
Çĕнĕ хучĕç ун валли.

Хăй çулне те маннă карчăк
Тухрĕ аслă урама,
Туйине тытса уттарчĕ
Чиркĕве, сăвап ыйтма.

Çамрăк Павăлăн артелĕ
Пĕчĕкчĕ, çынсем сахал.
Халĕ ĕнтĕ хĕрĕх килĕ
Çырăнса пĕрлешнĕ хал.

Пĕр лашаллă е пит юрлă
Этемсем хавасланса
Ăрăскал тупма хăюллă
Çырăнаççĕ колхоза.

Калляран пĕрре сасартăк
Ыйтрĕ Павăл, тĕл пулсан:
—Колхоза кĕмешкĕн алăк
Уçăлать-и халĕ сан?

—Шухăшлам-ха, шăллăм,—терĕ
Пăрăнса Калля пичче,
Урăх ним чĕнме пĕлмерĕ
Харсăр йĕкĕт умĕнче.

—Саншăн Ленин шухăшланă,
Сталин саншăн тупнă çул,
Колхоза кĕме калană,—
Терĕ Павăл-кăмсамул.

—Çынсенчен ан юл, ан татăл,—
Терĕ тепĕр хут хушса,
Калляна путарчĕ Павăл
Чăн та тарăн шухăша.

Ӳхĕрет хура хĕл каçĕ
Ял çинче, урамсенче.
Кун-çулне сӳтсе яваççĕ
Çеменпе Калля пичче.

—Ĕмĕрте пĕрре те эпĕ
Çын алли çинчен çимен.
Колхоза кĕрсе тӳсеп-и?
Пултараймăп,—тет Çемен.

Арăмпа пурнатпăр иккĕн
Килĕшсе, тату, аван.
Пулкалать çапах та пирĕн
Чăркăшни те хушăран.

—Çапăçса та куркалană
Ĕлĕкрех эпир санпа,—
Терĕ чей ĕçсе тарланă
Арăмĕ, Паççи аппа.

—Колхозра çынсем чăм тарĕ
Юхиччен тăрăшасси
Пулмĕ, тетĕп,—янтăрарĕ
Чинавье инке сасси.

Вăйлисем унта хĕстерĕç,
Мăльăк пек йăваш пирки
Калляна манне тыттарĕç
Кунсерен хăлха чикки.

Çавăрать тулта тăманĕ.
Çурма çĕр иртни çинчен
Пĕлтерсе Калля автанĕ
Авăтать картишĕнче.

—Çут тĕнче ăна пилленĕ,
Хĕрхенмен хитре сасса,—
Калаçать Талпас Çеменĕ,
Сарă кĕрĕк тăхăнса.

—Çăмарта пиртен илетĕр
Чĕп ами лартас чухне,—
Каласса хавас инкемĕр
Асатать хăнасене.

4

Çеменпе Калля пиччен
Иккĕшин пĕрер лаша,
Çавăнпа ака çинче
Килчĕç ырă канаша.

Çĕтĕк-çатăк кивĕ юр
Варсенчен кайман чухне
Каллясен ачи Якур
Кӳлчĕ пĕр ака пуçне.

Ялт утланчĕ те пĕрне,
Шăнкăрчи пек шăхăрса,
Илĕм-тилĕм ирхине
Тухса кайрĕ вăл пусса.

Çитрĕç кăнтăрла, кайран,
Ашшĕпе Çемен пичче.
Кăкшăмра—çăра уйран,
Аш яшки—чĕрессенче.

Лайăх мар ялан киле
Хутласси калла-малла,
Çавăнпа хире çĕрле
Юлчĕç иккĕш выртмалла.

Хурама такан çинче
Хуранти тулли шӳрпе
Тутланать Калля пиччен
Пултăран çулçисемпе.

Çӳл тӳпе пек кăн-кăвак
Тĕслĕленнĕ тĕтĕмре
Типĕ çапă та кăвайт
Ялкăшса çунни хитре.

Вак кăварлă кĕл хĕртет,—
Сурăх пуçĕ пек ĕнсе,
Пăш та паш туса пиçет
Çĕрулми кĕрпекленсе.

Каçхине парлак* çине
Уруна явса ларсан,
Уçă сывлăшра çиме
Пур апат та тутлă сан.

Сухара этем тени
Шăм-шакки хăвачĕпе
Тăрăшсан, ыраш çăкри
Пасарти кулачă пек.

Çурăма тăварлă тар
Ăçлăк витĕр витиччен
Ĕçлесен, илемсĕр мар
Таврари çĕршыв, тĕнче.

Кунĕпе суха сынни
Лашине хисте-хисте:
Но!—тени те шăхăрни
Илтĕнсе тăрать хирте.

Пĕлĕте пиншер ĕрет
Шăнкăрав çакса юри
Тухнă пек, çӳлте кĕрлет
Тăрисен хитре сасси.

Йĕрекен шаланкăпа
Килĕшмен пек, тавлашса
Янтратать улатăпа
Типĕ шăрăх сывлăша.

Тĕренпе малти шăрта
Пăхнипе ырать ĕнсе.
Йăванаççĕ хыçалта
Касăсем пĕтĕрĕнсе.

Хурт-кăпшанкăпа ăман
Пит нумай,—çавна кура
Каçченех кунта ялан
Тĕркĕшет чавка-курак.

Ик вăрман тĕпекĕнче
Трактор кĕрлекен çĕре
Çеменпе Калля пичче
Пычĕç иккĕш те пĕрре.

Темиçе ака-пуçне
Сĕтĕрет те хăямат
Сарлака кассисене
Çырнă пек хурса каять.

— Ай-ай-ай, епле машшин!
Питĕ хакла пулмалла!—
Тупăнмарĕ иккĕшин
Пĕр сăмах та малалла.

Каялла ана çине
Кайнă чух сукмак çинче:
— Кĕмеллех пулать-и, э?—
Тет хуллен Калля пичче.

— Чухлаймастăп,—тет Çемен,
Пуплесси килмен енне
Те ахаль-и, те çиме
Таткалать кĕпçесене.

Ĕмĕре тăрантакан
Аслă хир йĕри-тавра
Виçĕнмен пек сарлакан
Курăнса выртать умра.

Сарлака, анчах ăна
Виçнĕ-каснă шит таран,
Арçынсем валли кăна
Шăпаланă авалтан.

Килĕнчи хĕрсем пирки
Ĕлĕк тарăхнă Çемен,
Çавăнпа Паççи инки
Сахалах патак çимен.

Иккĕшне те мунчара
Симĕс сĕрĕм лекнĕ пек,
Уткалаççĕ шăрăхра
Пĕр йăран сукмакĕпе.

Янкăр уçă тӳпери
Хĕвелпе ялан пиçсе
Выртакан ана тăпри
Ăшă кукăль пек çемçе.

Илтĕнет пур тĕрлĕрен
Юрлани те, шав та сас.
Ăнсăртран, хутран-ситрен
Шăхăрса илет тыркас.

* Парлак—ацасем хушшинчи çерем,

Чаранса силлет хĕрхи
Лăпсăр-лăпсăр çунатне,
Асăрхать вăл пĕлтĕрхи
Мăянри шăшисене.

Кăнтăрла, ытла вĕри,
Пит шăрăх сехетсенче
Утсене ĕçе юри
Кăлармарĕç ик пичче.

Кăмака çăварĕ пек
Пĕçерен çĕре ашса,
Хысани тарланипе
Савăнса пымасть лаша.

Çавăнпа ирхи хĕвел
Вăранса çĕклениччен
Ĕçлеме кăларчĕç мел
Çеменпе Калля пичче.

Çил вĕрмен çанталăкра
Ирхине çăра тĕтре
Нӳр парсан, пырать вара
Çу çинчи пекех суха.

Иккĕш те вĕсем пĕрле
Çывăхри çерем çине
Шурути çиме çĕрле
Вĕренлерĕç утсене.

Çилсĕр хӳтĕ айлăма
Йăлтăрти вучах чĕртсен,
Юмахпа халап яма
Пухăнаççĕ ваттисем.

Тихасен мăйĕсенче
Хăнкăрав янранине
Итлеме çерем çинче
Пит те лайăх ун чухне.

Павăл пычĕ те пĕрре
Ыйтрĕ сулăм суттинче:
— Шухăшу çитес çĕре
Çитрĕ-и, Калля пичче?

—Çук,—тет леш,—пăртак тăхта
Колхоза кĕрессине...
Халь аса илет кунта
Павăл Ленин шухăшне:

— Пĕр-пĕччен хресчен çынни
Хĕн-хурпа инкексенчен
Ĕмĕрне тухмасть тени
Пур Ильич кĕнекинче.

Таран шухăша каять
Сталин Кремль çуртĕнче.
Колхоза кĕме калать
Вăл сана, Калля пичче.

Шăнăрпа ура лаппи
Супиччен ĕçленĕрен
Çураки, сехре хăппи,
Иртрĕ икĕ эрнерен.

Юлашки çурпилĕке
Сӳресе тухас чухне
Утсенчен хура мĕлке
Яр выртатчĕ çĕр çине.

Шăварма лашисене
Улăха каять Якур,—
Çӳлĕ тăвăн айккине
Тухакан çăлкуçĕ пур.

Сухара, уяр хирте
Пухăннă тарпа тусан
Лашасем çинчен иртет,
Хырчăкпа хырса çусан.

Утрĕç иккĕш те çуран,—
Çеменпе Калля пичче.
Пĕр яшкалăх пултăран
Татрĕç çул хĕррисенче.

Сухара тăварланни
Мунчара тасалмалла—
Авалтан чăваш çыннин
Пынă çакăн пек йăла.

Суракан пĕççисене
Кантарса, лашка çинче
Çапăнасшăн каçхине
Çеменпе Калля пичче.

Çурăм урлă çăт та çат
Сăтăрма чĕре-чĕре
Хурăн милĕк—чĕр турат—
Хатĕрлерĕç вĕтлĕхре.

5

Пусăран Çемен пичче
Килчĕ, çÿремерĕ.
Çенĕхри ырçа* çинче
Илĕртет минтерĕ.

Мунчана каяс чухне
Вăратма каларĕ,
Çавăнтах хăй сăмсине
Шăхăртма пуçларĕ.

Пултăр халĕ салмапа
Çураки апачĕ!—
Йĕтĕрпе Паççи аппа
Чустине унатчĕ.

Чăх анать-и йăвинчен...
Те хĕрен** пуртан-и,
Сухăрса килкартинче
Авăтать автанĕ.

Лаçĕнчи аппа:—Кăшша!—
Терĕ те тухмарĕ,
Харкашуллă тамаша
Килнине туймарĕ.

Вырăсла хапха айне
Хупламан та—халĕ,
Мунчана каяс чухне,
Пĕр камит хускалчĕ.

Каччă пек пырса кĕрет—
Сар автан иленнĕ.
Пурçăн галстук пек çиçет
Пĕсехин илемĕ.

Атă шпорĕ пек хитре
Урисем качаллă,
Çавăнпа та кÿршĕре
Унăн ячĕ паллă.

Питĕ вирлĕ çапăçса
Аманса та курнă,
Пур чăхха та пĕр хуçа,
Пĕр начальник пулнă.

Вăл çÿренĕ хăй тĕкне
Якăтса типтерлĕ,
Кÿршĕри автансене
Çĕнтерсе пĕтернĕ.

Вăл пырать кил-çуртсене
Яланах хăюллă,
Хăварать автансене
Киккириксĕр, юнлă.

Чылаях инкексенче
Çÿресе вăл курнă,—
Ун çинчен пĕррехинче
Акт пекки те çырнă.

Вăл паян, юлашкинчен,
Çапăçса мухтанĕ,
Ма тесен Çемен пиччен
Кайттă мар автанĕ.

Тăшмана ялан çĕнсе,
Малалли ăрушăн
Çапăçма сăмси çинçе,
Çип-çинçе, хăрушă.

Кăт-кăтик!—текелесе
Каллясен чиперĕ
Чăхсене чĕнкелесе
Илĕртсе çÿрерĕ.

Пĕр енчи çунаттине
Антарса ташларĕ,
Сикрĕ те пĕр саррине
Урипе таптарĕ.

Кун пек пысăк намăса
Курнă чух аван-и—
Кÿлешет хастарланса
Çеменсен автанĕ.

Çапăçу пуçлас тесен,
Артиллери кирлĕ,
Çавăнпа сасси вĕсен
Иккĕшин те вирлĕ.

Иккĕш те, мăйне тăсса,
Харăс хире-хирĕç
Пычĕç те, çунат çапса,
Вут çинчи пек сикрĕç.

---

* Ырçа—çăнăх усрамалли хăмаран тунă арча.
** Хĕрен—чĕп тытакан кайăк.

Пур вĕсен хăйне кура
Тактика манерĕ:
Сикмелли атакăра
Чи çӳлти çĕнтерĕ.

Çăт та çат тăват çунат
Çатлатать пĕр авăк.
Сывлăшра вĕçсе тăрать
Тĕк те, юн та мамăк.

Лаçĕнчен Паççи алпа
Тухрĕ те тустарчĕ,
Йĕтĕр тытнă алăпа
Хăмсарма хăтланчĕ.

Кун пек пысăк инкеке
Кăшкăрса чаран-и—
Кĕрешет сике-сике
Каллясен автанĕ.

Çеменсен мăнтарăнне
Вăл çыртса пĕтерчĕ,
Çĕлĕк пек киккирикне
Вăтăрса ӳкерчĕ.

Çăнăхпа пăтратнине
Темиçе тĕпренчĕк
Çирĕ те хӳме çине
Вăл вĕçсе çĕкленчĕ.

Савăнса, мăйне тăсса,
Авăтать пĕр-иккĕ.
Ялкăшать кăварланса
Мăнтăр киккирикĕ.

Çунатне çапа-çапа
Авăтать каппайчăк.
Йĕтĕрне Паççи аппа
Вăркăтать сасартăк.

Уринчен пырса лекет
Йĕтĕрĕ, шуйттанĕ.
Месерле персе ӳкет
Каллясен автанĕ.

Каç хĕвелĕ пĕлĕтрен
Хĕрелсе пăхатчĕ.
Чинавье инке пӳртрен
Килкартне тухатчĕ.

Вăл вĕри мунча валли
Шыв ăсма каятчĕ,
Курчĕ те, усал çилли
Чĕрине капланчĕ.

Шăлтăр-шăлтăр витрине
Лартрĕ вăл,васкарĕ,
Хурама кĕвентине
Аллинчен ямарĕ.

— Автанпа кĕрешесси
Лайăх-и, чипер-и!—
Чинавье инке сасси
Янраса кĕрлерĕ.

— Пурлăхăр хăватсăртан
Мухтанма туянтăр
Виçĕ пуслăх пĕр автан!—
Тет Паççи аппамăр.

Урăм-сурăм мăшкăл ят
Илтнине тӳсмесĕр,
Çивĕтрен ярса тытать
Чинавье инкемĕр.

Вăл кӳтсе çиленнипе
Халĕ ĕнтĕ урнă,
Ăшалать кĕвентипе
Тăрăхла та урлă.

Килĕнчи шава илтсен,
Ним те ăнланмасăр,
Ялт сиксе тăрать Çемен
Ыйхинчен хавассăр.

Пычĕ вăл чарас тесе,—
Кĕвентен пĕр карчĕ
Тăнлаври тирне сӳсе
Юнлатса хăварчĕ.

Питĕнчи шĕлпер юна
Тасатма тăратчĕ.
Чинавье инке ăна
Тепĕр хут тыттарчĕ.

Çав самант Çемен пиччен,
Ыратмасăр мар-тăр,
Сикрĕ-тухрĕ куçĕнчен
Вучĕ йăлтăр-ялтăр.

— Хамăн килĕмре юри
Намăса курам-и,
Лăхăл-лахăл култăр-и
Аслă ял урамĕ?—

Тенĕ чух Çемен пиччен
Вăркаса вылярĕ
Пĕтĕм ÿчĕ-тирĕнче
Тавăру кăварĕ.

Чĕринчи усал вĕчче
Вăл чарса тăмарĕ,
Ăшĕ-чикĕ каниччен
Тÿнккеме пуçларĕ.

Акă халăх умĕнче
Чăл та пар çĕр татăк
Çурăлать инке çинче
Сар кĕпи сасартăк.

Хăмаççип йĕмпе кăна
(Калама илемсĕр)
Тăрса юлчĕ çарана
Чинавье инкемĕр.

Вăл çапах кĕвентине
Аллинчен ямарĕ,
Çеменне те арăмне
Тыттарма манмарĕ.

Пусăра, тăпра çинче,
Ывăнса вăл утнă,—
Çавăнпа Калля пичче
Çывăратчĕ тутлă.

Çухăру кĕрлевĕнче
Канлĕ ыйхă тарчĕ.
Çапăçма Калля пичче
Хускаласшăн марччĕ.

Вăл малтан, чÿречерен
Вăрттăн пăхнă майăн,
Курчĕ—килнĕ кÿршĕрен
Этемсем нумайăн.

Арăмин саттин кĕпи
Чăл та пар çĕр çурăк
Çурăлсан, чĕре хаппи*
Тÿсеймерĕ урăх.

Çилĕллĕ Калля пичче
Тĕксĕм ансăр пÿрчĕн
Тĕпелти кÿкрашкинче
Пĕр ухват çеç курчĕ.

Хĕç-пăшал пекех ăна
Илчĕ те мăнтарăн
Сехремет атакăна
Кайрĕ вăл хаяррăн.

Çемене хăлха чикки
Тыттарма аванччĕ,—
Вăл пĕрре хĕнес пирки
Шухăша каятчĕ.

Çав самант Паççи аппа,
Чун илли хĕрарăм,
Тытрĕ çирĕп алăпа
Сухалне пĕр ярăм.

Тытрĕ вăл, нумай пĕрче
Вăтăрса кăларчĕ.
Лач сурса Калля пичче
Каялла уттарчĕ.

Терт-асап килессинчен
Пысăк ăрăм пултăр!—
Çавăнпа сакайĕнчен
Вăл кăларчĕ пуртă.

— Ман тупа паллисене
Туррăмçăм пĕтерĕ,
Çавăн чух Çемен килне
Эпĕ пырăп,—терĕ.

Ушапуç юпи çине
Сăхсăхса та мар-и
Умлăм-хыçлăн виç картне
Пуртăпа картларĕ.

Тухрĕ те Калля пичче
Кăшт пулин те канлĕ
Куракла килкартинче
Утрĕ каллĕ-маллĕ.

Пăчăр тĕкĕ пек татса
Çăлнă хыççăн—халĕ—
Урăм-сурăм ыратса
Чĕпĕтет сухалĕ.

* Чĕре хаппи—чĕре вăйĕ, чăтăмĕ.

Иртсе кайнă инкеке
Тарăхса пыратчĕ.
Хăрах уран сике-сике
Тухрĕ чаплă „каччă“.

Суранланнă-мĕн пăртак
Самăр киккирикĕ.
Кикакак та какакак
Чăххисем вуниккĕ.

— Кŭршĕ-аршă умĕнче
Намăс куртăм,—терĕ,
Автанне Калля пичче
Хŭтерсе çŭрерĕ.

Хăшăл-хашăл хашкаса
Чупнипе тытан-и:
Кăть-кăтик!—тесе тарса
Сиккелет автанĕ.

Кун пек тепĕр хŭтерсен,
Кŭршисем те курĕç...
Вăл кăларчĕ кĕлетрен
Урпине пĕр ывăç.

Қаçхине автан чĕри
Ăшĕ те пĕверĕ
Çиленсе çиме юри
Пăсланса вĕрерĕ.

Тарават автан яшки
Пĕçерсен, хыпарĕ
Хăнасем пухас пирки
Ял çине тухмарĕ.

Тукмакне Калля пичче
Пĕр-пĕччен кышларĕ,
Кил сĕтелĕ хушшинче
Ним те калаçмарĕ.

6

Кăнтăрла татти-сыпписĕр
Тăрисен юррисенче
Пĕр самант та ŭркенмесĕр
Янраса тăрать тĕнче.

Таврара кăвак çанталăк,
Илемпе мухтаннăçем,
Выльăх-чĕрлĕх хăпармалăх
Ешерет çурхи çерем.

Вĕллене тулли тăвасшăн
Каç та, ир те—кун хушши—
Чĕлхене тивсе пылакăн
Саланать чечек шăрши.

Çут тĕнчен хĕвелĕ ăшшăн
Ылтăн çутă сапнă май,
Пĕрене çине пĕр ушкăн
Тухса ларнă кукамай.

Çакăн пек чухне хавaслă.
Кăмăлăм сикет вĕçсе.
Туртăнать хăватлă алă
Тулалла, хире, ĕçе!

Шĕтĕрнек карса тыттарнă
Пахчинче, тăпра çинче,
Кĕпине хывас пек тарлă
Тĕрмешет Калля пичче.

Ывăнсан та хăпăл-хапăл
Вылятать кĕреçине,
Ĕхлетсе те тимлесех вăл
Купалать йăрансене.

Ваккăн-ваккăн алтнă майăн,
Тирĕсленĕ вырăнтан
Йатăнса тухать нумайăн
Хурт та, кăткă та ăман.

Чăмăр, самăр пĕсехеллĕ
Чăххисем какаласа
Уткалаççĕ каллĕ-маллĕ
Хурт-кăпшанкă пуçтарса.

— Эй, айван галлан автанĕ,
Ашкăнма хăтланмасан,
Уруна та хуçаканĕ,
Тупата, пулмастчĕ сан.

Кŭршĕри Талпас тискерĕ
Пиркиех сана пусма
Эпĕ ăнсăртран çĕклерĕм
Хамăн йывăр аллăма.

Чĕрине касса пытанчăк
Шухăш килнĕ тĕлсенче
Кĕреçи çине таянчĕ
Кулянса Калля пичче.

Инкеке пĕлсен, каймастчĕ
Шавлă шĕкĕр хулана,
Тем тесен те, туянмастчĕ
Кун пек саслă автана.

Ун пулмастчĕ мăшкăл ячĕ
Кÿршĕ-аршă хушшинче.
— Çапăçса сухал таттарчĕ,—
Теççĕ халĕ ун çинчен.

— Сывă-и, Калля тăванăм?
Сан патна килсе курас,—
Илтĕнсе каять хурланнăн
Пĕр хăюсăр мĕскĕн сас.

Шĕтĕрнек çине пăртакçă
Таянса тăра парать
Тукасри Митти Хараçĕ,
Юратса пек пăхкалать.

Тип вăраннă пек васканчăк
Пычĕ те Калля пичче,
Калаçу вĕсен пуçланчĕ
Ун çинчен те кун çинчен.

— Е ыран, е кĕçĕр каç-и
Çумăр пулĕ ахăрне,—
Пат перет Митти Хараçĕ
Сăмахне тупман енне.

— Йĕпене-тĕр хăрăм çунчĕ
Вучахри хуран çинче.
Çĕр хута шăмшак та сурчĕ,—
Текелет Калля пичче.

Ĕмĕрне арлан пек тутă
Тукасри Хараç пуян
Каллясем патне пĕр утăм
Халиччен ярса пусман.

Кăррăн çеç пăхса иртетчĕ,
Хырăм урлă ун чухне
Вăл яратчĕ çут сехечĕн
Ылтăн вăчăрисене.

Путене аçи пек самăр
Питĕнче вылятчĕ ун
Пĕр самант та шуралмасăр
Кĕр пилешĕ евĕр юн.

Лашисем сиксе тăратчĕç
Сăлăплана картара,
Çăмарта пекех якаччĕ,
Сăрт çĕленĕ пек хура.

Сыпнă хыççăн вăл катаччă
Чупнă чух, çул хĕрринче
Карăш пек пăхса юлатчĕ
Ырханкка Калля пичче.

Сивĕ çумăр çитмĕл çичĕ
Чĕресрен тăкса ăна
Лÿшкентернĕ пек, сăн-пичĕ
Халĕ пит йăваш кăна.

Саккунсем çине пăхасшăн
Тытнă аллине хаçат.
Çывăх тусĕ пек ачашшăн
Калляпа вăл калаçать:

— Санăн арăмпа ман арăм
Хурăнташлă, çавăнпа
Сан патна килме васкарăм
Эпĕ хамăн çăмăлпа.

Налукпа темтепĕр урлă
Советсем куллен хĕссен,
Упраса пуçтарнă пурлăх
Саланать саланнăçем.

Эп сана, Калля юлташăм,
Халĕ ыррăн пулăшса
Ахалех парса хурасшăн,
Сутнă пек туса, лаша.

Халĕ хамăр ял совечĕ
Ытлашши хĕсмен чухне
Сыхлама тата илесчĕ
Арăм ăпăр-тапăрне.

Пурăна-киле, тен, маншăн
Йăвашланĕ самана.
Пархатарлă ырлăхушăн
Манмăп эпĕ те сана.

— Йăтăнса выртать çын мулĕ
Тăйлăк-тайлăк пÿртĕнче,—
Тейĕ халăх, халăх кулĕ,—
Тет ăна Калля пичче.

— Ним те сисмĕ ял этемĕ.
Пулĕ хамăр хушăра.
Çерçилле вĕçсе çӳремĕ
Урлă-пирлĕ сас-хура.

—Тупăнать иккен телейĕ
Çĕтĕк-çатăк апăршан.
Шăркине сутса-и, тейĕç,
Илсе ячĕ вăл лаша...

Кулакпа туслашнă мурĕ,
Хӳтĕлет тесе, кинет*
Ял совечĕ çапĕ-хурĕ
Ман çамкам çине пичет.

Тукасри Митти Харасĕн
Ӳкĕте кĕртме юри
Куçĕсем сиксе выляççĕ,
Пĕрĕнет тута хĕрри.

Ун çемçе чĕлхи-çăварĕ
Пакăлтатрĕ нумайччен.
Яхăнне те çавăрмарĕ
Кăмăлне Калля пичче.

Утăмне çуршар хăлаçăн
Виçнĕ пек, ĕнсе хыçса,
Талпăнать Митти Харасĕ,
Муллă çын, çĕрме хуçа.

Чĕлĕм тĕтĕмĕ кăваккăн
Карăнса пырать çинче.
—Эх, чĕлхи чее кулакăн!—
Терĕ те Калля пичче

Урипе пырса таптарĕ
Кĕреçин хăлхи çине,
Вăркăтма каллех пуçларĕ
Нӳрлĕ кăпăш тăприне.

Пĕр уяв килсе çитмен-и?
Кам ĕçке чĕнтерекен?
Кӳршĕри Талпас Çеменĕ
Çĕпĕре каять иккен.

Çавăнпа та пĕтĕм ялĕ
Кăнтăрла ĕçре чухне
Вăл килне пуçтарнă халĕ
Хурăнташ-вĕрлисене.

Хăнасем пурте пĕр харăс
Çавăрса юрланăран
Чĕтренсе тăрать-мĕн сывлăш
Анатран Тукас таран.

Ташăри çынсен хавасĕ
Тăхтами кĕрленĕ май,
Хуçălас-и, аванас-и,—
Тенĕ пек сикет урай.

Çак шава итленĕçемĕн
Ларма çук кураксене
Кӳршĕри Талпас Çеменĕн
Умĕнчи йăмра çине.

Йăвине ларасшăн халĕ
Кăшкăрса, йĕре-йĕре,
Каллĕ-маллĕ, каллĕ-маллĕ
Явăнаççĕ пĕлĕтре.

—Эх, Çемен, тĕнче айванĕ,
Колхоза кĕрессинчен
Пăрăнса тăрса юлан-и
Çĕпĕрти вăрмансенче?..

Çĕпĕрте колхоз хăвачĕ,
Çĕпĕрте те çĕн тĕнче...
Шухăша кайса тăратчĕ
Пахчара Калля пичче.

Сулхăн çил ачаш çуначĕ
Вăштăр-вăштăр лекнипе
Ун çинче типсе тăратчĕ
Лачăкам йĕпе кĕпе.

—Ĕçлеме, пичче, вăй патăр!—
Терĕ çамрăк уçă сас.
Килчĕ тухрĕ Павăл-паттăр
Яланхи пекех хавас.

Нăтăркка та чăмăртанчăк
Лашине утланнă та
Пăшатан пек куçлă çамрăк
Вылятать саламата.

---

* Кинет—сасартăк.

—Шухăшна хăçан шутарăн
Колхоза, Калля пичче?
—Шухăш-и? Выртать-ха тарăн,
Çичĕ чулăн айĕнче.

—Вăхăт çитĕ те, пин татăк
Пулĕ çичĕ йывăр чул!—
Терĕ те утне сасартăк
Туртрĕ Павăл-кăмсамул.

Çуркунне хĕвел кăварĕ
Ăшшинчи Анаткассин
Такăр çулĕпе янрарĕ
Чăк та чак такан сасси.

7

Çавракка сăн-питлĕ уйăх
Халĕ тӳпере,
Çавăнпа та ялăн уйĕ
Таврара хитре.

Йывăçсен тата хуралтăн
Мĕлкисем канма
Хуп-хура пĕр хускалмасăр
Выртнă урама.

Уйăх шунă майăн хытă
Çапăннă тĕлте
Пĕлĕтсен хĕрри çап-çутă
Курăнать çӳлте.

Питĕ лăпкă, лăпкă питĕ
Халĕ таврара.
Кăкăрта чĕре тапни те
Илтĕнсе тăрать.

Кĕмĕл кaç ытла та лайăх
Çӳреме хĕрпе.
Çырмара юрлать саркайăк
Шăпчăкпа пĕрле.

Ватăлсан та асăнмалăх
Выляса кулма
Вут чĕреллĕ çамрăк халăх
Тухнă урама.

Тӳ çинче пĕр ушкăн хурăн
Курнă-и эсир,—
Çавăн пек хĕрсен шап-шурă
Çийĕнчи тумтир.

Çĕмĕрсе тăран вăй-халлă
Каччăсем çĕрле
Ярăнаççĕ алла-аллăн
Хĕрсемпе пĕрле.

Акаран килсен те шурă
Тум вĕсем çинче.
Янтăрать хăватлă юрă
Вăйă картинче.

Нӳрлĕ кaç илсе çӳрерĕ
Аякка юрра,
А-а-а... тени кĕрлерĕ
Аслă улăхра.

Çеменсем тухса каяççĕ
Çĕпĕре ыран,
Çавăнпа вĕсен Настаçĕ
Хурланать паян.

Хăй çуралнă çĕрĕн-шывăн
Аркинчен куçса,
Инçене кайма-çке йывăр
Пирĕн Настаçа.

Сарă кайăк пек хавaслă
Тантăш-туссене
Вĕрирен те вĕри аллă
Парĕ ирхине.

Эрленсе чĕри хускалчĕ,—
Пуç тая-тая
Ăсанма вăл тухнă халĕ
Юлашки вăййа.

Ирхине тухса каяс-тăк,
Савăнас ялта!
Чарăнса тăрать сасартăк
Вăйăлла карта.

Сывлама таса та янкăр
Уçă сывлăшра
Янтăраççĕ йăнтăр-янтăр
Кĕслепе тăмра.

Кĕслепе тăмра пĕр харăс
Иккĕш тавлашса,
Яшсене чĕне пуçларĕç
Тăвăл пек ташша.

Ялӗнче вӑй-кулӑ касӗ
Юлашки иртет,
Ҫавӑнпа иккен Настаҫӑн
Ташласси килет.

Ҫурнӑ ҫӗмӗрт евӗр шурӑ
Тумӗ ун ҫинче.
Акӑш пек вӑл шурӗ, шурӗ,
Вӑйӑ умӗнче.

Кӗмӗл ҫунӑ пек ҫап-ҫутӑ
Уйӑх айӗнче
Вӗлкӗшет ҫунат пек тутӑр
Сылтӑм аллинче.

Вӑркӑнать Калля Якурӗ
Халӑх хушшинчен,
Тӑпӑр-тӑпӑр-тӑпӑр турӗ
Хӗрӗ умӗнче.

Хӗр тавра пӗртте канмасӑр
Ҫӑмӑл та матур,
Ҫавраҫил пекех вӑр та вӑр
Ҫаврӑнать Якур.

Итеме юман тӑпачӑ
Ҫапнӑ пек, ури
Тапнӑ майӑн хускалатчӗ
Вӑтакас тӑпри.

Ташласа тата пӑртакҫӑ
Настаҫпа пӗрле
Иртмеллеччӗ... Чарӑнаҫҫӗ
Тӑмрапа кӗсле.

Ташлани те ҫитрӗ халӗ,
Ситрӗ юрлани.
Ҫывӑрсан, ирех хускалӗ
Ҫамрӑк ял ҫынни.

Кӑтӑш пулнӑ хыҫҫӑн ӗнтӗ,
Сӗтлӗ чей ӗҫсе,
Каймалла пулать пурин те
Уй-хирти ӗҫе.

Чӗп сӑмси пекех ҫурхи ҫӗр
Кӗскине кура,
Кулянаҫҫӗ каччӑпа хӗр
Халӗ урамра.

Кун ҫути кайса пӗтмерӗ,
Хупаймарӗ куҫ,
Вӑранса чаршав ҫӗклерӗ
Кӗмӗл шурӑмпуҫ.

Ирхине тӗнче ҫӑварӗ
Вӗрнӗ пек, хитре
Ҫӑлтӑр та сӳне пуҫларӗ
Тарӑн тӳпере.

Тӗлӗкре сар тулӑ курнӑ
Автансен юрри
Янраса каять ял урлӑ
Халь шӑри-шари.

Якурпа чипер Настаҫӑн
Каймалла, анчах
Пӗр-пӗрне вӗсем каласшӑн
Пилӗк-улт сӑмах.

Лапсӑркка ҫӑра туратлӑ
Ӳснӗ хурама.
Якурпа Настаҫ юратнӑ
Ун айне ларма.

Паллӑ пулнӑ ҫакӑ вырӑн
Ӗлӗкех-авал.
Выҫлӑха кӗтсе-мӗн тырӑ
Пухнӑ тертлӗ ял.

Мӑкаҫей кӗлечӗ пулнӑ
Ҫакӑ вырӑнта.
Ӗлӗк те икшерӗн юлнӑ
Савнисем кунта.

Мӑкаҫей кӗлечӗ пулнӑ
Вырӑнта пӗрре
Калляпа Ҫемен чуптунӑ
Иккӗш ик хӗре.

Халӗ те унта пӑртакҫӑ
Никӗс йӗрӗ пур.
Йывӑҫ айӗнче лараҫҫӗ
Настаҫпа Якур.

Калаҫса Калля Якурӗн
Ҫӳҫенет чӗри:
—Кайӑн та, сана куҫ хурӗ
Ҫӗпӗрте тепри.

Эс кайсан, сăну сан юлĕ
Манăн куç умне.
Хурлăх пулĕ, йывăр пулĕ
Пĕр-пĕччен чухне.

Сывлăхна пĕлсе пулин те
Савăнса тăма
Ман пата ан манччĕ ĕнтĕ
Çырусем çырма.

Йăпатать Настаç Якурăн
Аллине тытса:
—Малашне хама та курăн,
Илтĕн ман сасса.

Çĕпĕр çĕрĕнче çанталăк
Сивĕ те, чĕре
Ман вĕри... Якур сасартăк
Ыталать хĕре.

Калама ăна памарĕ,
Пурччĕ каласси.
Урамра хуллен янрарĕ
Чуптунин сасси.

Чӳрече те, хир те хурăн,
Пĕлĕт те кăвак.
Ларасси килет Якурăн
Хĕрĕпе пĕртак.

Савнă тусĕпе мăнтарăн
Лармалла, анчах
Ĕçлеме ялти хĕрарăм
Тăнă паçăрах.

Кĕтĕве тухса каясшăн
Мĕкĕрет ĕне.
Настаçа Якур ачашшăн
Пачĕ аллине.

Урине кире пуканĕ
Çакнă пек, темле
Уттармасть чĕре суранĕ
Килĕ еннелле.

Йĕтĕн пир пекех шап-шурă
Çĕмĕрт пахчинче
Шăпчăксем юрлаççĕ юрă
Нӳрлĕ ир çинче.

8

Тукасри Митти Хараçĕ
Йăхĕ-несĕлĕ çинчен
Ваттисем чăнне калаççĕ
Халĕ халăх хушшинче.

Хараçсен аслашшĕ килнĕ
Инçетрен, Чикме енчен,
Ку яла ларма хут илнĕ
Кантурти тиексенчен:

Вăл малтан хăйне хуçалăх
Йĕркеленĕ вăхăтра
Лавĕпе турттарнă халăх
Тутă тĕшлĕ мăйăра.

Çамрăксем татма çӳренĕ,
Татнă та тăраниччен
Сарă мăйăр шĕкĕлченĕ
Хĕллехи улахсенче.

Выçă та вĕри куççуллĕ
Чухăн халăх асĕнче
Питĕ паллă мăйăр çулĕ
Юлнă ĕмĕр тăршшĕнче.

Кирлĕ чухлĕ пархатарлă
Çимелли пулман енне
Кайăксем те писсе тарнă
Вăрмана, уй-хирсене.

Мăйăр та пĕрре çеç пулнă,
Çĕр çулта пĕрре кăна.
— Эх, телей!—тесе астунă
Ваттисем вара ăна.

Тукасри Хараç аслашшĕ
Мăйăр çул килни çинчен
Тĕплĕрех ыйтса пĕлесшĕн
Эпĕ ватă çынсенчен.

— Иртнине пĕртак асту та,
Хăш çулта, Калля пичче,
Мăйăр пулнă питĕ тутă?—
Ыйтрăм эп тĕпче-тĕпче.

— Каласа пире паратчĕ
Асатте курнисене.
Пулнă вăл çап-çамрăк каччă
Мăйăр ăннă çулхине.

Асатте ун чух авланнă,
Туй туса ирттернĕ те
Тепĕр çул хайхи çуралнă
Кĕркунне атте.

Шунă питĕ вăрăм ĕмĕр,
Иртнĕ-тĕр çĕр çул ытла,—
Кăтартать Калля пиччемĕр
Пÿрнипе шутла-шутла.

Сĕлĕх пек Хараç тымарĕ
Хытă ĕмнĕ çак яла.
Кăкласа тăкма пулмарĕ
Инкеке çĕр çул ытла.

Ун аслашшĕ, тĕп усалĕ,
Хăй çуралнă ялĕнче
Кам пулни çинчен те халĕ
Пур чăнни чĕлхесенче.

Хир-хир урлă, ял-ял урлă
Хăрăм пек хура çĕрле
Çÿресе пурне те курнă,
Çитнĕ вăл нумай тĕле.

Е таварлă, е укçаллă
Çынсене курас пулсан,
Ун алли, чукмарлă алă,
Тÿрĕ панă çамкаран.

Этемсем пĕрре кăварлă
Çиллипе хĕне-хĕне:
— Эй, ăнлан!—тесе шăтарнă
Тимĕрпе çапса пуçне.

—Ан çаклат!—тесе шалт хуçнă
Сылтăм аллине, анчах
Тăмана пек витĕр куçлă
Тухнă вăл çĕрле çаплах.

Вăл лектернĕ те шутарнă
Утсене вырттмасенчен,
Тус-йышне парса суттарнă
Инçетри пасарсенче.

Таврара нумай вăрланă,
Çавăнпа пыра-киле
Ун сехри хăпма пуçланă
Хăрăм пек хура çĕрле.

Тукасри Хараç аслашшĕ
Чÿлмекне тулли укçа
Пухнă та пуçне çăласшăн
Кайнă аякка куçса.

Лавĕпе мăйăр турттарнă
Паллă çул, çĕр çул ытла
Ĕлĕкрех килсе вăл ларнă
Ку çĕре, кунти яла.

—Парăр вырăн пÿрт лартмалăх,
Пĕр пахча та пултăр ман! —
Тенĕ вăл, анчах та халăх
Килĕшме пултарайман.

—Çитĕ вăхăт, юнăр анĕ
Ман патра ĕçленипе!—
Тенĕ вăл, хаяр юнанă
Кукăр шĕвĕр пÿрнипе.

— Çĕтĕк халăх, эс пĕлен-и,
Манăн ылтăн йăлтăркка!
Астутарăп эпĕ!—тенĕ
Туйипе шакка-шакка.

Чăннипех Хараç аслашшĕ
Çынсене тытать алла,
Кунĕн-çĕрĕн мул пухасшăн
Çаратма пуçлать яла.

Чи малтан вилес пек выçă
Кăрманай Энтипĕнчен
Çĕр илет; нÿхреп пек куçĕ
Тăранма пĕлмест иккен.

Чÿлмекри укçа хăвачĕ
Кăмăлне уртарнăран
Вăл пухать нумай çĕр ячĕ
Чухăн, юрлă халăхран.

Хăй çапа-çапа вĕлернĕ
Этемсен укçисене
Вăл шутне пĕлсе типтерлĕ
Чăмтарать хуçалăхне.

Çак çĕрме пуян хуçалăх
Сарăлса пыни çинчен
Пĕтĕмпе пĕлет тавралăх
Хĕрĕх çухрăм пур енче.

Хăпарать шанкав чул çурчĕ
Чи сăртра, ял варринче.
Çирĕм пилĕк самăр учĕ
Кĕçенет витисенче.

Шăварма кăларнă выльăх,
Питĕ йышлă пулнăран,
Тăсăлса каять ял тăрăх
Хапхаран валак таран.

Пурлăхпа мăкланнă килĕ
Çулсерен, анчах пĕрре
Хуçана хисепсĕр вилĕм
Илсе кайнă нӳр çĕре.

Кунĕн-çĕрĕн пархатарсăр
Пуяна çиленнипе
Çамкинчен ăна пĕр тарçă
Янă пуртă тăршшипе.

Муллă кил хивре йĕвенĕ
Ывăлĕн аллисенче
Çынсене пăвса силленĕ
Малалли кун-çулсенче.

Ашшĕ çын пусса пуçтарнă
Пурлăхне тирпейлеме,
Сыхлама Митти тыттарнă
Кивĕ çурт тавра хӳме.

Вăл мулне тата та хытă
Ӳстерме шырарĕ мел...
Çунтарса ярас пек çутă
Ялтăрать çулла хĕвел.

Юрламасть тăри те юрă.
Кунсерен хăра-хăра
Çатмасем çинчи пек тырă
Ĕнсе ларчĕ шăрăхра.

Çĕтĕк-çатăк выçă халăх,
Çамрăкки, ватти-вĕтти
Шыçăнса вилсен, хуçалăх
Хунаса каять Миттин.

Хуçисемсĕр тăрса юлнă,
Акăнман анасене
Сухалас тесе хăюллă
Кăларать тарçисене.

Тукасри Митти пуянĕ
Сисĕнет йĕри-тавра.
Виçĕ чуллă шыв арманĕ
Лартнă аслă улăхра.

Йытă варĕнчи утарĕ
Çулленех çу тăршшĕпе
Сĕрлесе пыл пухнă мар-и
Каткипе, чĕресĕпе!

Çук пире çеçке шерпечĕ,
Уçă шыв сасси пире
Кантармасть—
вĕсен тивлечĕ
Сăхă куçлă Миттире.

Пирĕн сивĕ çĕр урайлă
Тăйлăк-тайлăк пӳртсенчен
Ырлăхпа хаваслăх кайнă,
Юлнă пĕр усал тĕнче.

Юмахри вăрман пек лайăх
Миттисен сад-пахчинче
Юрласа ларать саркайăк
Лапсăркка турат çинче.

Тĕтĕмлĕ, асап шăршиллĕ,
Йӳçĕ сывлăшлă çурта
Иленмест телей юрриллĕ
Шăпчăк та, саркайăк та.

Миттие хĕвел пăхатчĕ,
Ăшăтатчĕ çут тĕнче,
Уйăх та çĕрле выртатчĕ
Çаврака кӳлли çинче.

Çулсерен пуйса пыратчĕ
Тукасри Митти, анчах
Çĕнĕлле саккун хăвачĕ
Хатĕрлет вĕри мунча.

—Халăх патшана ӳкерчĕ!—
Теекен хыпар-хăнар
Çитрĕ те чĕтĕрентерчĕ
Сивĕ чир пекех хаяр.

Арăш-пирĕш хыпаланчăк
Шухăшра тĕрмешнипе
Шăтарать Митти сасартăк
Николай сăнне йĕппе.

Шăтарать, анчах та халĕ
Патшана каллех чĕнсен
Вăрăм çӳçлĕ пуп çыркалĕ
Айăп хучĕ ун çинчен.

—Патшана-и эсĕ хирĕç!—
Тесе çапĕç кĕлеме
Çамкине, вара ăсатĕç
Çĕпĕре инкек тӳсме.

Ик куçне тĕртсе шăтарнă
Николай патша сăнне
Тукасри Митти çунтарнă
Шиклĕ шухăшлă чухне.

—Малашне патша кун-çулĕ
Таврăнса килес пулсан,
Çĕнĕ сăн илме те пулĕ,—
Тенĕ вăл, сехри хăпман.

Сарлака Раççей патшасăр
Пурăнать, анчах тĕнче
Çĕнĕлле йĕрке тумасăр
Тăсăлать-ха ялсенче.

Ылтăнпа кĕмĕл тумтирлĕ
Пупăн пысăк чиркӳре
Тĕтĕрет паникадилĕ
Эрнере ялан пĕрре.

—Турăмăр, çӳлти аттемĕр,
Сыхласам Керенскине!—
Тенĕ пуп сасси кĕр те кĕр
Кисретет иконсене.

Тукасри Митти пĕртакçă
Таврана пăха-пăха
Шикленет, анчах та тарçă
Уй-хирте тăвать суха.

Калаçаççĕ çĕрĕн-кунĕн
Çĕр илме кирли çинчен
Халăхра; килмест саккунĕ
Шĕкĕр Питĕр хулинчен.

Кăмăл пур таран акмалăх
Çĕр касса илме декрет
Тухасса пур чухăн халăх
Кунсерен кĕтет.

Çĕр илесчĕ!—тенĕ шухăш
Ялсенчи этемсенне
Çăварни çĕпри пек шухă
Хускатса тăрать ăсне.

Аслăран та аслă Ленин
Çĕр илме кирли çинчен
Çырнисем килсе иленнĕ
Салтаксен кутамккинче.

Пысăк вăрçă пынă майăн
Чĕрене шари çурсах
Килнĕçем килет нумайăн
Ялсене уксах-чăлах.

Килсенех, мунча хутаççĕ,
Çапăнма выртас чухне
Каштасем çине çакаççĕ
Лăстăркка шинельсене.

Вăрçăран илсе çитернĕ
Шăркапа пыйта, чире
Ĕнтмелле иккен типтерлĕ,
Шарт-шарт чуллă вĕрире.

Ерипен капланнă кирĕк
Сĕвĕнет ӳтрен, анчах
Тĕнчене çумашкăн кирлĕ
Вĕрирен вĕри мунча!

Питĕрти Керенский влаçĕ
Муллă çынсемпе пĕрле
Пулнине туйма пуçлаççĕ
Хресченсем пыра-киле.

Çавăнпа çилли кӳтенĕ
Вăхăтра пĕрре ялта
Халăх тытрĕ тимĕр сенĕк,
Чукмарпа турта.

Атăл хумĕ пек пĕр харăс
Кайрĕç те улпут патне,
Хуçине çакса хăварчĕç
Пĕр йăмра çине.

Пирĕн кĕр-кĕр шавлă халăх
Шăпасем яма тухсан,
Илчĕ çĕр нумай ят тăрăх
Тукасри Митти пуян.

Вăл асран пĕртте ямарĕ
Ĕмĕрхи чеелĕхне,
Хăнана чĕнме манмарĕ
Чи карма çăварсене.

Вăл вара хайхи улпутăн
Çеремпе уçас чухне
Кӳлтерсе кăларчĕ тутă
Утсемпе вăкăрсене.

Вăл пуйма пăхса çӳретчĕ...
Кĕркунне, октябрьте
Аслă Ленинăн декречĕ
Янтăрарĕ пур çĕрте.

Ĕçлĕ халăхăн тивлечĕ
Пуçланса кайни çинчен
Тĕнчене сехет пĕлтерчĕ
Чаплă Смольнăй çуртĕнчен.

Кĕçĕ ернĕ евĕр хăвăрт
Тарăхса ĕнсе хыçма,
Макăрма та çитрĕ вăхăт,
Миттие, мур-харама.

Чухăнсен ял комитечĕ
Илчĕ хăйĕн аллине
Икĕ хутлă чул кĕлечĕн
Картлă-картлă уççине.

Павăл ашшĕ, харсăр пуçлăх,
Пырса тухрĕ халăхпа,
Тиесе кăларчĕ пурлăх—
Çирĕм пилĕк урапа.

Пӳр пек йĕрĕнчĕк хаярĕ
Тапнине тӳсмен енне
Тавăрма Митти шутларĕ
Комитет çыннисене.

Вăл пуçтарчĕ хăй пек хирĕç
Çынсене,—вара пĕрле
Ахăрса вĕсем çӳрерĕç
Урамра кĕрхи çĕрле.

Иккĕн-виççĕн харăс тытрĕç
Сенĕке, виç юплине,
Кăкăртан тирсе çĕклерĕç
Комбед председательне.

Тукасри Митти хăтланчĕ
Çиеле тухма, анчах
Тепĕр кун хăеx туянчĕ
Вилĕмле вĕри мунча.

Пирĕн тĕрĕс халăх сучĕ
Тишкĕрсен, пичет хурсан,
Çамкине унне шарт çурчĕ
Виç мăскал тăхлан.

Пĕтрĕ вăл, анчах тымарĕ
Малтанхи кĕрешӳре
Татăлмарĕ, кăкланмарĕ.
Ик ачи пур çĕр çинче.

Кĕçĕн ывăлĕ пĕр тапхăр
Хусанта вĕреннипе
Килсе тухрĕ йăлтăр-ялтăр
Офицер погонĕпе.

Килчĕ те вăрах тăмарĕ
Ашшĕ-амăш килĕнче,
Малашне вара пулмарĕ
Пĕр хыпар та ун çинчен.

Ĕмĕрне совет пăшалĕ
Вутлă граждан вăрçинче
Татайман пулсан, вăл халĕ
Тен çӳрет-тĕр çĕр çинче.

Советсен çап-çамрăк влаçĕ
Харсăр çапăçнă чухне
Чи аслиー—Митти Хараçĕ—
Ӳстермен хуçалăхне.

Хыснана нумай тырпулă
Парасси килмен енне
Вăл акма хĕрхенчĕ пулĕ
Пусăри анисене.

Мул пухма нимле те шанчăк
Ун чухне пулманнипе
Ун итемĕ те хупланчĕ
Мăянпа, армутипе.

Вăрçă иртсе кайнă хыççăн
Сарлака анкартинче
Вĕçрĕ ушкăн кăвакарчăн
Ĕçкĕртпе капан çинче.

Тукасри Митти Харасĕ
Сĕнĕрен пуйса кайма
Тытрĕ пилĕк-ултă тарçă
Арçынна, хĕрарăма.

Çынсене çемçе кулачă
Çитерме килти мулне
Хĕрхенмен пек вăл тытатчĕ
Халăх умĕнче хăйне.

Калаçма чĕлхи-çăварĕ
Пултарать-мĕн пур çĕрте.
Михетер рольне вылярĕ
Вăл пĕрре спектакăльте.

Вăл хăйне ытла советлă
Кăтартатчĕ, çавăнпа
Яхăнне памастчĕ алă
Ёлĕкхи тусне-пупа.

Ял пупне курсан, утатчĕ
Курманçи пек инçетрен,
Хаçатсем те çырăнатчĕ,
Календарь те—çулсерен.

Вăл пыра-киле туянчĕ
Чи аван машинсене,
Утланса ларма хăтланчĕ
Пирĕн ял ĕнси çине.

Мăкланса пыма шутларĕ
Малашне, анчах ялта
Пуç çине килме пуçларĕ
Кулака çапас турта.

Хамăр ял совечĕ халĕ
Панă пысăк парăма
Тӳлесен, Митти сухалĕ
Тытăнать кăвакарма.

Трактор килчĕ, кисрентерчĕ
Ыйхăллă уй-хирсене,
Ушкăна пыма чĕнтерчĕ
Таврари хресченсене.

Комсомолец çамрăк Павăл
Колхоза пуçларĕ те
Халиччен пулман çил-тăвăл
Хускатать мĕн пур çĕрте.

Ёлĕк чухăн комитечĕ
Тыр пухса çӳрес чухне
Павăл ашшĕ хĕстеретчĕ
Чи пуян этемсене.

Граждан вăрçинче çӳрерĕ,
Килчĕ ик туя çинче.
Килсенех, ялав çĕклерĕ
Ялĕнчи кантур çинче.

Ывăлĕ те паттăр ашшĕн
Аслă çулĕпе кайса
Ӳкĕтлет, çапла кĕртесшĕн
Пур çынна та колхоза.

Ёлĕкхи лавкаçă çурчĕн
Çамкинчи хăма çине
Павăл хăй илемлĕ çырчĕ
Ялĕнчи артель ятне.

Павăл хăй пĕрре хăпарчĕ
Çӳлĕ çуртăн тăррине,
Вĕлкĕшме çакса хăварчĕ
Шерепеллĕ ялавне.

Вăштăр-вăштăр кăнтăр çилĕ
Силлесе хăпартнăран
Курăнать ялав хĕп-хĕрлĕ
Хир-хир урлă аякран.

Тукасри Митти Харасĕ
Кураймасть, анчах паян
Ялава савса пăхаççĕ
Çын та, сăрт та сĕм вăрман.

Сывлăша вĕреннĕ кайăк
Шурă пĕлĕт хушшинчен
Асăрханă май сасартăк
Явăнать ялав çинче.

Кăтартать ялав, атьсемĕр,
Пирĕн ĕнтĕ малашне
Ялсенче хăватлă ĕмĕр
Кĕрлесе пуçланнине.

Йăранпа кулак мухтавĕ,
Çумлă курăк та хирте
Пĕтессе колхоз ялавĕ
Вĕлкĕшсе калать çӳлте.

Тукасри Митти Харачĕн
Йахĕ-неселĕ ялта
Хĕснине пĕлсе тăраççĕ
Ваттисем çĕр çул ытла.

Юмахри шывран та анлă
Ĕмĕрте усал ята
Пĕтерме çынсем ылханнă
Хытă чĕл çырта-çырта.

Тавăрас тесе кăварлă
Чĕресем паллисене
Пуртăпа касса хăварнă
Ушапуç юпи çине.

Аçлăк витĕр тухнă тарлă
Асапри ĕçре çĕр çул
Миттисем ялан юхтарнă
Халăхран вĕри куççуль.

Сехетсем куллен шаккаççĕ.
Çитрĕ вăхăт—
малалла
Тукасри Митти Харачĕн
Тымарне кăкламалла!

Хăй те, ашшĕ те аслашшĕ
Пухнă пысăк пурлăха
Пĕтĕмпе эпир парасшăн
Халĕ ĕçлĕ халăха!

Тукасри Харач хăвачĕ
Халĕ ĕнтĕ пĕтмелле,
Çавăнпа та ял совечĕ
Пуçтарать пуху çĕрле.

Çамрăк Павăл вут пек куçлă
Тӳр пăхать, ялти этем
Умлăн-хыçлăн, умлăн-хыçлăн
Калаçать калаçнăçем.

Тукасри инкек çĕленĕ
Еплерех пуйни çинчен
Каласа кунта параççĕ
Чухăнсем кăвак çутчен.

Вăхăт çитнĕ кăкламашкăн!
Пĕтерес ăна! Хăртас!—
Янраса каять пĕр ушкăн
Кĕрĕс-мерĕс вирлĕ сас,

— Тавăратпăр —тенĕ туйăм
Хускалать те куçсене
Тăхланран та йывăр ыйăх
Хуплаймасть çиллес чухне.

Кĕркунне саралнă çулçă
Кăчăрт шăннă çĕр çинче
Чăштăртатнă сасă уçă
Илтĕнет урамсенче.

Вĕçеймен хуркайăк тăлăх
Юлнă, тейĕн, кӳлĕре—
Ярăнать пĕчченçĕ уйăх
Халĕ çӳлĕ тӳпере.

Çăлтăрсем мăч-мач пăртакçă
Юлкаланă.
Пĕр-пĕччен
Тукасри Митти Харачĕ
Уткалать килкартинче.

Çăп-çăра хирте сăр кашкăр
Хирĕçле вĕрен çиле
Шăрăшланă пек, пăхмашкăн
Тăрăшать вăл пур тĕле.

Чул хӳмеллĕ ватă килĕ
Кăтăш пулнă сехетре
Тытамак пек йывăр чирлĕ
Тăк та так тапать чĕре.

Чӳрече пек кăвакарнă
Сивĕ сывлăшлă тулта
Шурă лĕпĕш пек пас ларнă
Пăтари чĕн хăмăта.

Хуçине сиссе, сасартăк
Витери çӳрен лаша
Тапнă майăн йывăр алăк
Кисрентерчĕ сывлăша.

Шăварма ыйтса пек хурлă
Кĕçенен сасси хитре
Саланать хуралтă урлă
Улăха, ялпа хире.

Хуçине сиссе вăраннă
Ушкăн сурăхпа ĕне
Янратса яраççĕ анлă,
Сарлака килкартине.

Алăка Митти яр ячĕ,
Тутине пĕре-пĕре
Шăхăрса утне кăларчĕ
Шăршă çапнă витерен.

Хуçине тем пек юрасшăн
Темиçе минут хушши
Тулхăрать, вара ачашшăн
Йăпшăнать çӳрен лаши.

Ун хуçи Митти Хараçĕ,
Пĕлĕт те ирхи тĕнче—
Курăнса пурте выртаççĕ
Унăн тарăн куçĕнче.

Хуçине лаша çӳретнĕ
Кĕркунне, çулла, хĕлле.
— Эсĕ халь каятăп, тетни,
Колхозри витенелле?

Павăла юрасшăн мар-и?
Парăп çул паян сана!—
Тукасри Хараç кларĕ
Пӳрнипе юна-юна.

Ыйхăсăр хĕрелнĕ куçĕ
Пăхкалать унта-кунта.
Вăл сасартăк акă курчĕ
Пĕр каска çинчи пуртта.

Вăл алли çине лач сурчĕ,
Шăлкаларĕ тупанне.
Шăнарми çилли ун тулчĕ
Сăвăслан пек чĕрине.

Кĕрĕкне хывса хăварчĕ,
Çĕлĕкне те—пуç çинчен,
Пуртăпа вара тыттарчĕ
Лашине чĕри панчен.

Юн палкать. Епле тăратăн,
Янавар, çӳрен лаша?..
Ӳкрĕ те выртать мăнтарăн
Каллĕ-маллĕ туртăшса.

Юн шăршин чипер хыпарĕ
Сывлăша сарăлнинчен
Тĕлĕнсе тухма вăскарĕ
Йытă çенĕх айĕнчен.

Чĕлхипе шăлса якатнă
Кăлтăрмач пек хӳрине
Тăратса вăл вăшаватлă
Пычĕ хăй хуçи патне.

Яланах сыхлавлă тытăп
Эпĕ хамăр çурт-йĕре,—
Тенĕ пек илемлĕ йытă
Сиккелет вĕре-вĕре.

Чĕлхипе пĕрре çуласшăн
Хуçине чĕре тулли
Тавтуса, анчах Хараçăн
Ăшĕнче вăркать çилли.

— Колхозра сана хуралçă
Тăвăп-и!—тесе пуртта
Çĕклесе Митти Хараçĕ
Хырăмран парать йытта.

Пушарти пек питĕ хытă
Чупкалать килкартинче.
Сулланать юнланнă пуртă
Сылтăм аллинче.

Сурăхсем чупса çӳреççĕ,
Ĕрĕхеççĕ ĕнесем.
Хапхаран пырса кĕреççĕ
Павăлпа ытти çынсем.

Мĕскĕн йытă халĕ сывлăх
Ыйтнă пек вĕсем патне
Хырăмпа шуса çĕр тăрăх
Сĕтĕрет пыршисене.

9

Колхозсен усси çинчен
Çирĕм тăххăрмĕш çулта
Чылаях вăтам хресчен
Ăнланса çитет ялта.

Уй-хирте машинăпа
Ĕçлесе пыни паха,—
Вăл та кайрĕ çавăнпа
Ушкăнла хуçалăха.

Аслăран та аслă çын
Малалла кăтартнипе
Хресченсем ялта пин-пин
Утрĕç тĕрĕс çулĕпе.

Аташни те ялсенче
Пулкаларĕ—
пĕр самант
Турĕç-хучĕç хут çинче
Çич ялтан коммун-гигант.

Хăш çынсем пăтратнипе,
Ушкăнла хуçалăха
Сырчĕç-хучĕç йĕркипе
Кăт-кăтик чăпар чăхха.

Ĕçлĕ халăх колхоза
Умлăм-хыçлăн кĕнипе
Хăшин пуçĕ çаврăнса
Кайрĕ ал арманĕ пек.

Ĕмĕрхи усал хăват
Хăрнă чух тăшман хаяр
Çиленсе сарма тăрать
Элекпе хура хыпар.

Пурăнма хăйне кĕске
Татăк вăхăт юлнă та,
Вăл такам пулса та-çке
Йăпшăнса çӳрет ялта.

Аслă вăтăрмĕш çулта
Январьте-и е кайран
Пакăлтатнă-мĕн ялта
Пĕр суя ыйткалакан.

Туртапуçкасси енче
Хĕрсемпе инкесене
Пĕр çурта пухни çинчен
Вăл калаçнă ун чухне.

Ъатă карчăк-кĕрчĕке
Пухнă, имĕш, ялсенче
Янă çакă инкеке
Савăта ӳт-тирĕнчен

Супăнь шăратма... тата
Трактор фончĕ тӳлевне
Татма каснă, тет, ялта
Пур хĕрарăм çивĕтне.

Аслă вăтăрмĕш çулта
Çĕршыври пур ялсенче
Киввине тапта-тапта
Кĕрлесе пырать тĕнче.

Чи хаяр кĕрешӳре
Киввине çĕнет çĕнни.
Сталин сырнă ĕмĕре
Талпăнать колхоз çынни.

Ушкăнпа пĕрле хĕрсе
Тракторпа машин илме
Пуçтараççĕ яш хĕрсем
Çутă кĕмĕл шӳлкеме.

Кăткă йăвинчи çĕлен
Авкаланнă пек, тăшман
Антăхсан та чĕринчен
Хăй хура юнне тăкман.

Лĕкĕрти усал чĕлхе,
Хуртлă кĕçĕ лекнĕ пек,
Сарчĕ выльăх-чĕрлĕхе
Пустарма тесе элек.

Тăвансем, эсир епле
Суяна тăнлатăр-ши?
Саланать хура çĕрле
Урамра кукар шăрши.

Тепĕр çул çăра хăйма
Памалли пушмак-тына
Хуплупа шăрттан пулма
Вăркăнать кăмакана.

Кутсăр-пуççăр çил-тăман
Çурт-хуралтă хĕррине
Çапăнать, хăлха таран
Хăварать хӳсе кĕртне.

Çурăмне амантнă пек,
Ачалла йĕре-йĕре,
Чарăнмарĕ çĕрĕпех
Çил уларĕ мăръере.

Çывăрса харлатмалла
Канлĕ çурçĕр тĕлĕнче
Шăмăсем кышла-кышла
Тĕрмешет Калля пичче.

Питĕ çулă, тарават
Мимине ĕмес майпе
Пакăлча шăмма ватать
Пысăк пуртă тăршипе.

Вăрăм ĕмĕр тăршшĕнче
Çинĕ те, анчах какай
Кимĕрмен* Калля пичче
Кăçалхи пекех нумай.

Çулăмпа кăвар çинче
Пуç-ура ĕнтме юри
Хытă хутнă пÿртĕнче
Мунчари пекех вĕри.

Çимелли ыран ирпе
Пĕр сĕтел тулли пулать:
Хур ами какайĕпе
Пăсланса шарккуй ларать.

Çил-тăман тавралăха
Витнĕ çурçĕр тĕлĕнче.
Ăшĕ вĕçнĕ пек ыйха
Каяймасть Калля пичче.

Çамрăк Павăл-кăмсамул
Калашле-мĕн, тĕнчере
Ленин çулĕ—аслă çул—
Тухнăçем тухать тÿрре.

Чĕлĕм тĕтĕмĕ çăра
Явăнать пухусенче.
Темиçе те пухура
Пулнă вăл, Калля пичче.

Пĕр йăрансăр уй-хирте,
Ăмăртса та тавлашса
Ĕçлесе пыма пĕртте
Вăл килмерĕ канаша.

Пÿрнесем пурте пĕр тан
Туртăнмаççĕ ĕç патне.
—Пĕр çием те пĕр тарам!—
Тенĕ, тет, кача пÿрне.

Шухăша каймасăр мар,
Тĕшмĕшлĕ Калля пичче
Шыраса тупать кусар
Тĕпелти сакайĕнче.

Хулпуççи çине сăхман
Çаклатса, килти хуçа
Тухрĕ-кайрĕ кĕл тума
Килкартне çара пуçах.

Татăк-татăк пĕлĕте
Вичкĕн çил хÿтернипе
Курăнса тăрать çÿлте
Шунă пек кăвак тÿпе.

Аялти çемçе юра
Вĕçтерет çуран тăман.
Çурçĕр иртнĕ. Таврара
Хăйă çутнă кил юлман.

Тăрăх пир пекех шап-шур
Ярăм-ярăм та çинçе
Ÿкекен пĕр çутă пур
Ял Совечĕ çуртĕнче.

Колхозри ĕçе тата
Çÿлерех çĕклемелле,—
Канашлать актив унта
Çамрăк Павăлпа пĕрле.

Тăмана сăмсийĕ пек
Кукăр уйăх умĕнче
Ентĕркенĕ сассипе
Такмаклать Калля пичче.

„—Çичĕ тинĕс леш енче
Шурă чул выртать иккен.
Пулĕ вăл пĕррехинче
Хурчăка пек вĕçекен.

Манăн пÿртĕм тăрринчен
Çавă чул çунатланса
Вашкăрса вĕçсе иртсен,
Эпĕ кĕрĕп колхоза.

Колхоза кĕрессинчен
Çурт-йĕре тытса тăма
Эпĕ карăп виç хутчен
Хамăн тимĕр картама.

Колхозсен шăрши-марши
Килĕме иленесрен
Эсĕ, турă, сыхлăн-ши?
Эх, сыхлаччĕ инкекрен!"

Пăр пек сивĕ кусара
Тытнă та Калля пичче
Çаврăнать йĕри-тавра
Кăкăр çÿлĕш кĕрт çинче.

---

* Кимĕрмен—çăвар тулли çимен

Сăхманне силле-силле,
Ӳкерес пек ураран
Чи пуçтах çавра-çилле
Ахăрать кăра тăман.

Çăтăл-çатăл çивчĕ юр
Хирĕç-хирĕç лекнипе,
Ыратать çамки те, мур,
Пичĕ-куçĕ те йĕпе.

Чăпăркка пекех хивре
Çапакан çилсем çинче
Ĕнтĕркет, анчах тепре
Такмаклать Калля пичче.

„Упапа тукмак хӳре
Утă çинĕ вăхăтра
Тапĕ манăн ват чĕре
Ушкăнри хуçалăхра.

Колхоза кĕрессинчен
Аякра тăрса юлма
Эпĕ карăп виç хутчен
Хамăн тимĕр картама.

Çырмари карма шапа
Кĕнеке вула-вула
Кăтартсан, хам арăмпа
Пырăп эп колхозалла...“

Чĕркуççи таран юра
Вăр та вар ашса иртме
Пăлтăр-пăлтăр тăвăлра
Йывăр ватă этеме.

Имшеркке шăмшаккине
Сивĕ çил хытариччен
Чаплă тимĕр картине
Çавăрасчĕ виç хутчен!

Кивĕ тунката тĕпне
Тăрăнса, Калля пичче
Печĕ-ӳкрĕ юр ăшне
Пӳрт кĕтесĕ умĕнче.

Инкеке кура кунта,
Путăк-шăтăклă çĕрте,
Вăркăнса каять тата
Аллинчи кусарĕ те.

Сивĕ те, анчах кăпка
Мамăк евĕр юр çинчен,
Майĕпен хашка-хашка,
Çĕкленет Калля пичче.

Мăшкăлпа инкек-синкек
Курнă хыççăн вăл хăйне
Вырттарса çапасшăн пек
Шăмарса кĕрет пӳртне.

Чăххăн ăсĕ пек кĕске
Ыйхине çĕр хушшинче
Çывăрма пит меллĕ-çке
Кăмака лаппи çинче.

Вĕчĕлти çилли темле
Сӳрĕлмерĕ чĕринче,
Çавăнпа чĕрре кĕме
Шухăшлать Калля пичче.

Арăмĕ паян шартах
Хуçрĕ йывăç сенĕке.
Ятласси килет, анчах
Çывăрать иккен инке.

Юриех витленĕ пек
Шăхăрса илет сăмси.
Малашне тĕл килмĕ тек
Ун пек сенĕк тупасси.

Ирĕкленнĕ ывăлне
Тустарма сăлтавĕ пур.
Çав самант çилли çине
Таврăнать килне Якур.

—Урамра паян çиле
Хӳтерсе çӳрерĕн-им?
Кил тĕлне те пĕлмелле.
Малашне вĕрентĕп. Чим!

—Хальхинче тепре алла
Калăпна тытса çеç кур,
Çап мана, комсомола!—
Каласа хурать Якур.

—Кулленех какай кӳпсе
Лармалли пĕр ĕмĕте
Эсĕ халĕ тиркесе
Пăрахатăн-ши, атте?

Вĕрентме ман пур тивлет,
Манăн пысăк тивĕç пур!—
Сĕтелли çине билет
Ҫăларса хурать Якур.

10.

Сив çĕрле алри кусарĕ
Ӳкрĕ те—
Калля пиччен
Тепĕр кун тăрса пулмарĕ
Сарнă вырăн çийĕнчен.

Ӳпкине çакланнă чирĕ
Ҫунтарса пĕçернипе,
Ал-ури те ӳчĕ-тирĕ
Питĕ тарлă, йĕп-йĕпе.

Чинавье инке çӳренĕ
Икĕ хут та юмăça,
Хĕрхенмен, пайтах тӳленĕ
Тырă та пирпе укçа.

Юмăç карчăк, ватă маймăл,
Канашне итленипе,
Ҫырмана вăл вăрттăн кайнă
Кăвак çут чухне, ирпе.

Шыв туррин те пур хаярлăх,
Туррине çырлахтарма
Валака вара юхтарнă
Пĕр чĕрес тулли хăйма.

Кивĕ ялăн киремечĕ,
Авалхи чăваш турри,
Ҫапасран юсман пĕçерчĕ
Сĕтпеле юрса юри.

Ҫулăхман-ши леш хаярĕ,
Ҫырмара выртаканни?
Чинавье инкен юлмарĕ
Йăлăнса каламанни.

—Йĕрĕх сывлăш, ырă пулччĕ,
Ан çилен-ха, ан хăрат!—
Терĕ те кайса вăл хучĕ
Сарринчен татса нухрат.

Асăнса çăкри-тăварĕ
Тăвансен çăви çинче
Тăкăнсан та, тăраймарĕ
Чĕрĕлсе Калля пичче.

Путса аннă чакăр куçĕ.
Чирлĕ ӳт тарланипе
Ҫийĕнчи таса çи-пуçĕ
Каç та, ир те йĕп-йĕпе.

Яланах сурать çан-çурăм.
Тĕлĕрсен те, ыйхинче
Акăш-макăш, урăм-сурăм
Аташать Калля пичче.

Ҫĕр çинче тата çур ĕмĕр
Пурăнасшăн, çавăнпа
Чĕнтерет Калля пиччемĕр
Ялĕнчи хура пупа.

Те çапла вĕрентнĕ ашшĕ,
Те ытти сăлтав пуртан,
Яхăнне те пуп таврашĕ
Кăмăлне унне кайман.

Выçă та хăш чух тырпуллă
Вăрăм кунĕ-çулĕнче
Пĕтĕмпе те иккĕ пулнă
Чиркӳре Калля пичче.

Ялĕнчи пуп тарăхтарнă,
Хăраса чĕтрекене
Ҫиччĕре чухне чăмтарнă
Касмăка, светтуй шывне.

—Турă хушнă пек венчетлĕ
Пулмалла-тăр пирĕн те,—
Туйĕ хыççăн вĕчĕлтетнĕ
Чинавье инке килте.

Ҫавăнпа Калля пиччемĕр
Ĕмĕрте тата тепре
Пăрăнса юлма пĕлмесĕр,
Пулнă имĕш чиркӳре.

„Турăпа эсрел-шуйттансăр
Тытăнмасть-тăр çут тĕнче„—
Шухăшланă, кĕлтумасăр
Пурăнман Калля пичче.

Нихăçан та ячĕ чаплă
Пулайман ĕмĕрĕнче,
Вăрманпа хирте пуççапнă
Туррине Калля пичче.

Хыткукар пулман, анчах та
Пупсене çуллен, ялан
Тӳлесе пыма нихçан та
Килĕшме пултарайман.

Ун тулашнă ăшĕ-чикĕ,
Юратман вăл кĕркунне
Тыр пухса пуппа течукĕ
Килсерен çӳренине.

Çĕр çинче çӳрет çур ĕмĕр,
Пуранать, анчах пупа
Ал паман Калля пиччемĕр
Тавлă ăшă сăмахпа.

Çĕлĕкне илмен.
Яман-и
вăл юмах пупсем çинчен?
Курайман, анчах суранĕ
Вĕтелет ӳпкисенче.

Аптрана кăвакалĕ
Кутан чăмнă пек, килне
Чĕнтерет пупа вăл халĕ
Вилесси килмен енне.

Тул енчен чăпта çĕленĕ
Йывăр алăка туп-туп
Тапнă хыççăн ерипенĕн
Килчĕ кĕчĕ вата пуп.

Тăлăпин арки-çуначĕ
Каллĕ-маллĕ вăркăшса
Сак хăми таран тултарчĕ
Шурă сивĕ сывлăша.

Пăшалти кăвас чĕресĕ
Йӳçнĕ евĕр ăшĕнче
Кĕлтуса илет, хĕресĕ
Ялтăрать кăкри çинче.

Турипе вăл кăтăр-кăтăр
Якатать кăвак çӳçне:
—Çылăху, тăванăм, пур-тăр,—
Пăхкалать Калля çине.

—Çылăха кĕни пур ĕнтĕ,
Пур вăл çакă çĕр çинче
Шапапа çара çерçин те,—
Тет ăна Калля пичче.

—Çинĕ-и лаша какайĕ?
Тĕрĕсне кала! Ан тун!
– Çинĕ çав. Пăрахмалла-и?
Çимесcе-и пур саккун?

—Аслă туррăн пур саккунĕ.
Сăхсăх та сăлтав ан туп!
Эсĕ пысăк çылăх кӳнĕ,—
Тет ăна çиллеслĕ пуп.

Итлессе итлет, анчах та
Хайĕн кутăн чунĕнче
Чĕптĕм чухлĕ те, пăртак та
Килĕшмест Калля пичче.

Ывăнма-канма пĕлмеççĕ
Хуçипе пĕрле лаша.
Тăрăшса вĕсем ĕçлеççĕ
Шăрăхра тăпра ашса.

– Ăслă вырьăх!—тет пиччемĕр
Ăшĕнче.
Вăл çавăнпа,
Çиллине ирттереймесĕр
Пĕр ыйту парать пупа.

—Ват лаша ăçта кун тупĕ?
Мĕн тăвас унпа вара?
Мăч пăхса илет те пупĕ:
—Сутса яр,—тет,—тутара!

Урла-пирлĕ, каллĕ-маллĕ
Аташса калаçиччен –
Çылăх каçарттарччĕ халĕ
Чи çӳлти аттемĕртен!

Кукамайĕ ĕмĕрте пĕр
Кăтартса вĕрентнĕлле
Тытрĕ халь Калля пиччемĕр,
Виçĕ пӳрнине пĕрле.

—Чуруна савапла туччĕ!—
Терĕ те, пĕлмен енне,
Чи малтан вăл ала хучĕ
Кăвапи тĕлне.

Хулпуççи çине хурасшăн
Юлчĕ ала тăсасси.
—Çамкунтан пуçла
тархасшăн!—
Терĕ хулăм пуп сасси.

Чĕринчи пур тӳсĕм терчĕ
Тухиччен Калля пичче
Сахсăхса аран иртгерчĕ
Пуп хĕресĕ умĕнче.

—Малашне тата тем те пĕр
Тĕпчеминччĕ ентĕ,—тет,
Кӳренсе Калля пиччемĕр
Ĕнсине хыçса илет.

—Çылăха кĕрсе, тăванăм,
Çӳремен-и ясара?
Илтĕнет сасси шуйттанăн
Халхара янра-янра.

—Эпĕ вата. Эс куласшăн,—
Тет ăна Калля пичче,
Пĕр хăлха чикки парасшăн
Юн вылять аллисенче.

Ăшĕнчи çилли капланчăк
Килнине тӳсмен енне
Çавăрнса выртать сасартăк
Пĕрене çумне.

—Çамрăк чух ясар туман-и?
Уç чунна, чунна ан хуп!—
Калаçса утать ăнманĕ,
Лĕкĕрти чĕлхеллĕ пуп.

Тарăхса Калля пиччемĕр
Чăр пăхать инки çине:
Варттăн ĕç çинчен
пуплетпĕр,—
Тенĕ пек хĕсет куçне.

Чинавье инке сасартăк
Вăркăнать хĕр пек пусса.
Параймасть ун хыççăн алăк
Кăр-кăрик текен сасса.

Тытăнать Калля пиччемĕр
Каласа пама вара:
—Ясара кайни пĕртен-пĕр
Пулнă манăн пурнăçра.

Вăтăр çул-и, ĕлĕкрех-и,
Çимĕк çитнĕ вăхăтра
Кирлĕччĕ хула эрехĕ
Макарис тума мана.

Тинтерех авланнă сынччĕ,
Çĕн çуртра урай хума
Урата кашти те çукчĕ,
Çукчĕ ман чылай хăма.

Йывăç пур, анчах хуралçă
Киленче калаçнă чух
Сыпмалли кирлех пăртакçă,
Сахалтан, пĕр пулăштух.

Ун чухне лавка тавращĕ
Çукчĕ пирĕн таврара,
Çаванпа Муççа Наташĕ
Вăрттăн-шарттăн Тукасра

Пĕр лавка пекки тытатчĕ,
Типĕ пула та эрех
Шăкăр-макăр суткалатчĕ
Пĕр патентсăр-мĕнсĕрех.

Чун çунтармăш тăлăх арăм
Чăмăркка та тăпăлкка.
Куçĕ ун черкке пек тарăн,
Хăлхинче хура алка.

Пĕкĕ пек авмак тăратчĕ
Унăн хӳхĕм куçхарши.
Тарăн куçĕнче тапатчĕ
Юрату, чĕре ăшши.

Эпĕ те ун чух патварччĕ,
Каçăркка картус тавра
Чăрсăр çуçĕм явăнатчĕ
Йытпырши пекех кăтра.

Ман унта пырса кĕрес-и?
Пĕр кĕрес те пĕр тăрас!
—Чи малтан тутан-ха эсĕ,—
Тет пылтан та тутлă сас.

Эп çӳçеннĕ пек тытатăп,
Шăлкалатăп тутана:
—Тавăсье!—тесе йăтатăп
Йăкăр-йăкăр стакана.

Янк яратăп та, пĕр сивĕ,
Пĕр вĕри ирте-ирте,
Алхаспа ясарлăх шывĕ
Хускатса ярать ӳте.

—Сывă пул!—тесе Наташăм
Черккине ченклеттерет.
Ĕçнĕ хыççăн вăл ачашшăн
Тутине пĕрсе илет.

Чун çунтармăш тăлăх арăм
Кăлт тĕртет хул айĕнчен.
Хĕрлĕ сăн çунать кăваррăн
Икĕ питçăмартинче.

Ирхине тĕтре шап-шурă.
Кĕтӳ кайнă аккурат.
Арăм килнĕ те ах турă!—
Алăка хаплаттарать.

Кĕвенти вара хĕн-хурлăх
Пачĕ çутă тĕнчере,
Ислентерчĕ çугăм урлă
Наташпа иксĕмĕре.

Тăлăх арăм пултаратчĕ
Хăтланма апла-капла.
Кăкăрĕ тапса таратчĕ
Пасарти хăпартулла.

Ĕçмелли унта чиперччĕ,
Çимелли чăш-паш кăна.
Вăл сана та илертетчĕ.
Тĕрĕс мар-и, пуçана?

Санпала Наташ ясарĕ
Пулнине çынсем пĕлеç.
Пуп кăн-канăн пăхкаларĕ:
—И аз грешен!—терĕ çеç.

—Турăсен кĕнекинче
Колхозсем пирки самах
Пур-и?—тет Калля пичче,
Пуп çине пăхмасăрах.

—Колхозсем историре
Пуласса, пура-çука
Асăнман кĕнекере
Ни Иаков, ни Лука.

—Колхозла тĕнче пирки
Пĕлнĕ-тĕр Христос, анчах
Яккупа хайхи Лукки
Юлнă пуль çырмасăрах.

—Пророксем çинчен ахаль
Çылăха кĕрсе ан суп.
Турă илтĕ,—терĕ халь
Силенсе тарланă пуп.

—Пирĕн Павăл-кăмсамул
Вĕсенчен ытла пĕлет.
Турăран апла ан кул!
Ахăрсамана çитет.

- Вырăн тупĕ. Çиттĕр-и!
Вырăн пысăк çĕр çинче,—
Тарăхлас тесе юри
Калаçать Калля пичче.

Калаçу хĕрсе илемлĕ
Саралса пыратчĕ те...
Ик тулли калай витреллĕ
Чинавье кĕрет пӳрте.

Кĕлтунишĕн кирлĕ хакĕ,
Кирлĕ пĕр витре парне,
Çавăнпа та анчĕ акă
Чинавйи тĕпсакайне.

Кĕпĕр-кĕпĕр, кĕпĕр-кĕпĕр
Çĕрулми пуçтарнине
Итлесе Калля пиччемĕр
Пухрĕ чăркăш шухăшне.

Вăл тăрса ларма хăтланчĕ
Таянса алли сине.
Шиклĕ çиçĕм хыпаланчăк
Чупкаларĕ чĕрере.

- Ăçтине суйларăн?—терĕ,
Пуп тухса кăна кайсан.
Чинавье инке пĕлмерĕ
Ним чĕнме те ăнсăртран.

- Шĕпĕнли, вĕтти-çке пурччĕ
Урата юпи панче!—
Терĕ те çĕре лач сурчĕ
Тарăхса Калля пичче.

Ăшĕнчи хура, пытанчăк
Çиллине тӳсмен енне
Кĕрĕкне те вăркăнтарчĕ,
Минтерне те урайне.

Ĕмĕрне ăна ним чирĕ,
Хăнтрамак, кĕсен-çăпан
Çулăхман пек, патăр, тӳрĕ
Сикрĕ-тăчĕ вырăнтан.

11

Е тăман, е вăйлă çил
Шавласа килессине
Пĕлтерсе нумай çерçи
Сырăнать çуртсем çине.

Пирĕн савнă çĕршыва
Вăхăт çитнĕ шăнкăрча
Таврăнма—
хăма йăва
Хатĕрленĕ ачапча.

Çĕнĕ ял çунаттине
Кун пек анлă саракан
Кăçалхи пек çуркунне
Халиччен пĕртте пулман.

Хăшĕсен анра пуçне
Тӳрлетме кирли çинчен
Çырнă Сталин статйине
Ир те, каç та ялсенче

Вулама ярса илет
Çамрăкки, ватти—пурте.
Сталин шухăшĕ çӳрет
Килсерен, пӳртрен пӳрте.

Статьяна темиçе хут
Итлесен,
Калля пичче:
— Пултăр, терĕ, хаклă хут
Килĕнче, чĕри панче.

Çырусем валеçекен
Ачаран вăл ун чухне
Сутăн илчĕ виç тенке
Райхаçат пĕр номерне.

Пысăк мар çырни, анчах
Кĕртес çук вĕрентнине
Калăпран та хулăмрах,
Тачăка кĕнекене.

— Эсĕ Ленин шухăшне
Астуса тĕреклĕ пул!—
Тет çулпуç,
хресченсене
Кăтартать чи тĕрĕс çул.

Çутă çул! Ăна курать,
Асăрхать ăна тĕнче.
Малашне унпа каять
Çĕр çинчи мĕнпур хресчен.

Ун çутти çак тĕттĕм каç
Пыл пек тутлă тĕлĕке,
Ыйăха кайма памасть
Короле, помещике.

Вăрăм çеç çурхи каçа
Ирттерсе, Калля пичче
Хытă пушăта хуçса
Тĕрмешет пукан çинче.

Кантăр çип арлать инке,
Кушака алхасiарса
Ташласа çӳрет йĕке
Кăлтăр-кăлтăр çавăрса.

— Пухăва, эй-эй, васка!—
Тет такам, каяс чухне
Пӳрнипе шакка-шакка
Янратать чӳречене.

Шĕшлине кашта çине
Кармашса Калля пичче
Хучĕ те инке патне
Пычĕ-тăчĕ хальхинче:

— Шухăш пар-ха, Чинавье,
Пăт та пат татса кала:
Колхоза кĕрер-и е
Пурăнар-и индусла?

— Ĕлĕкрен каларĕшле,
Çӳçĕм вăрăм, ăс кĕске.
Санăн хăвăн пĕлмелле!—
Çиленсе калать инке.

Тĕрлĕ шухăш пуçĕнче
Янраса тăрать, анчах
Инкене Калля пичче
Калаймасть пĕр-ик сăмах.

Ним тума аптранăран
Урмăшса каять темле,
Тахăнма тăрать малтан
Кĕрĕке те тӳнтерле.

— Шухăшлам эппин,—тесе,
Сарă кĕрĕк кĕсйине
Енчĕкпе пĕрле персе
Чикрĕ пăхăр чĕлĕмне.

Тул енчен ик хут чăпта
Çапнă алăка хупсан,
Варкăшса вĕçет тулта
Хирĕçле кăра тăман.

Çамкипе питне хуплать
Алсипе Калля пичче.
Вирлĕ çил шăлса пырать
Сукмакне ун хыçĕнче.

Ял совечĕ çуртĕнче
Типĕрех ларас—вара
Сиккелет, ури çинчен
Ӳкерет çемçе юра.

Халăх тулнă пӳлĕме
Кĕрсенех, Калля пичче
Асăрхать пĕр этеме
Тĕпелте, сĕтел панче.

Вăл ахаль курасшăн мар,
Пулăшма килни çинчен
Кĕрлесе çӳрет хыпар
Халĕ халăх хушшинче.

Павăл вырăс çыннипе
Яланах çӳрет пĕрле,
Иккĕш, тек калаçнипе,
Çывăрмаççĕ, тет, çĕрле.

— Ăслă Павăл та унтан
Вĕренет пулсан,
апла
Ку çынна эпир ялта
Хытăрах тăнламалла.

Пĕр сăмах та юлмиччен
Итлеме, чĕре патне
Çитерме ларать пичче
Чи малти тенкел çине.

Анлă хулпуççиллĕскер,
Аллине сула-сула,
Уткалать, виççе, кĕскен
Ерипен калать çапла:

— Юлташсем, эпир сире
Пулăшма васкатпăр,
Кăларатпăр уй-хире
Трактор хыççăн трактор.

Халĕ трактор уссинчен
Кам писме пултарĕ?
— Çук!—тесе Калля пичче
Кăшкăрсах каларĕ.

— Тĕрĕс çав!—тесе калать
Савăтра ĕçлевçĕ.
Вăл Калля çине пăхать,
Куçĕсем çиçеççĕ.

Вăтанан Калля патне
Ерипен вăл пычĕ,
Унăн хулпуççи çине
Аллине лăшт хучĕ.

— Сан кунта тухса калас
Шухăш çук-и?—терĕ.
— Хăй инхус!—тесе пĕр сас
Халăхра кĕрлерĕ.

Пысăк çын ятлассине
Халь Калля кĕтетчĕ,
Вутсăр пăхăр чĕлĕмне
Паккаса ĕметчĕ.

— Эсĕ халăх умĕнче
Ан питле тархасшăн!
Ыра пул!—тесе пичче
Тилмĕрсе каласшăн.

Тăрăшать, анчах пĕртте
Каласа пулмарĕ.
Чĕтретсе илет ӳте
Чĕркуççи тымарĕ.

Унӑн хулпуҫҫи ҫинчен
Аллине илмерӗ
Савӑтри:
— Инхуссенчен
Вӑл та тухӗ!—терӗ.

—Эпӗ, терӗ вӑл, шанса
Ун ҫине пӑхатӑп,
Сирӗн „Атӑл“ колхоза
Кӗрессе шанатӑп.

Колхоза кӗрсен, ҫав ҫул
Ҫитӗ ун телейӗ.
Вӑл пурне те:—Ман пек пул!
Колхоза кӗр!—тейӗ.

Вӑхӑт ҫитӗ, пурсӑр та
Колхоза иленӗр,
Пӗр тӑван пекех ялта
Туслашса ҫӗкленӗр!

Маларах кӗни чапа
Тухнӑ пек хӑтланӗ,
Кӑкӑрне ҫапа-ҫапа
Умӑрта мухтанӗ.

Пӗр-пӗр питӗ пӑтрашса
Юлнӑ ҫын та курӗ,
Илмесен, кӗртме ыйтса
Мускава та ҫырӗ.

Малалла калас-и?—тет
Савӑтра ӗҫлевҫӗ.
Хресченсем:—Итлес килет!—
Теҫҫӗ те кӗрлеҫҫӗ.

—Малашне кун пек хитре
Ушкӑн пурнӑҫ ҫулӗ
Пулӗ пысӑк Индире,
Китайра та пулӗ.

Тӗнчери пур ялсенче
Колхоз пулӗ,—терӗ
Савӑтран килни.
Пичче
Тарласа итлерӗ.

— Манӑн та калас килет.
Калама юрать-тӗр...
Аллине чанках ҫӗклет
Чухӑн Мӑльӑк Петӗр.

Яланах вӑл пухура
Сӑвӑр евӗр ларнӑ
Хӗсӗнсе,
ҫавна кура
Мӑльӑк* ят кӑларнӑ.

Пулнӑ халӑх хушшинче
Пуринчен те мӗскӗн.
Ҫавӑнпа Калля пичче
Тӗлӗнсе ларать-мӗн.

— Петӗр тус мӗн калӗ-ши?
Мӗн тума хӑтланнӑ?—
Тет Калля.
Тапак шӑрши
Йӳҫӗхсе капланнӑ.

Пысӑк шухӑш килнӗҫем
Чӗрене пӑртакҫӑ
Пусарас тесе ҫынсем
Чӗлӗме паккаҫҫӗ.

Пушанать Калля пиччен
Тӑп тултарнӑ енчӗк.
Ик куна вӑл килӗнче
Лайӑх ҫитекенччӗ.

Мӑльӑк Петӗр ҫӗлӗкне
Хул айне хӗстернӗ.
Яр утса сӗтел умне
Пычӗ вӑл типтерлӗ.

Хӑй, пырне тасатнӑлла,
Кӗххӗм! тукаларӗ,
Такӑнмасӑр, малалла
Калама пуҫларӗ:

— Ӗлӗкрен мана ялта
Чухӑн Мӑльӑк Петӗр
Тенине халь пурсӑр та
Илтнӗ те пӗлетӗр.

* Мӑльӑк—халӑх хушшинче калаҫма именекен, хӑракан, ытла та чухӑн ҫын.

Ёлёк ёмёр тăршшĕнче
Тĕрĕс пулнă ятăм.
Эп илмен саттин кĕпе,
Туянман сар атă.

Тукасри Хараç панче
Эпĕ пулнă тарçă.
Манăн халь те каçсенче
Шăммăмсем сураççĕ.

Тăманпа йĕпе-сапа
Çитнĕ чух çан-çурăм
Ыратать те, çавăнпа
Çиллĕм пур, эх, турă!

Мур илесшĕ Хараçа
Пуйтарса тарларăм.
Ларчĕç килĕмре выçса
Ачапчам та арăм.

Тупрăм тарçă ĕçĕнче
Хурлăх...
Пĕлтерес-и?
Курăнать масар çинче
Виç ачан хĕресĕ.

Пулнă ёмĕр тăршшĕнче
Тум та çĕтĕк-çатăк—
Йыт вĕрсен те—сассипе
Çурăлать çĕр татăк.

Вилĕп, теттĕм, сив çĕрте
Кĕркунне, хĕлле-и...
Тăвансем, Октябрьте
Çитрĕ çын телейĕ!

Ленин кўчĕ çут тĕнче,
Пачĕ ырлăх çулĕ.
Вăл вилсен,
ман куççенчен
Юхрĕ тăр куççулĕм.

Ленин хăй вилес чухне
Сталина чĕнтернĕ,
Мĕн калас пек шухăшне
Каласа пĕлтернĕ.

— Халăхпа пĕрле çўре,
Вăл санран вĕренĕ,—
Куçне хупнă сехĕтре
Пехилленĕ Ленин.

Пысăк шанчăкла тусне
Ленин алă панă,
Ялсемпе хуласене
Çўреме каланă.

Ялсемпе хуласенче
Еплерех хуçалăх,—
Вăл çўрет тĕпче-тĕпче
Çĕрĕ-шывĕ тăрăх.

Саккуна колхозсенче
Çук-и пăсаканĕ?..
Учĕн сакăл уринче
Янтăрать таканĕ.

Чăх-чĕппе коммунăна
Çырнă вăхăт пулчĕ
Ялсенче,
анчах ăна
Сталин витĕр курчĕ.

Ун чухне ялтан яла
Анлă хир-хир урлă
Малалла та малалла
Çўресе вăл курнă.

Тен вăл пирĕн валакран
Лашине шăварнă,
Тен манпа та, сăмахран,
Калаçма пултарнă.

Сталин пулнă-тăр кунта,
Пит пулма пултарнă,
Чĕлĕмне турта-турта
Калляпа тен ларнă.

Сталин халĕ те курса
Çĕршывра çўрет-тĕр...
Павăл шăллăм, колхоза
Çыр-ха!—терĕ Петĕр.

— Шăллăм, çыр-ха ман ята!
Сталин ĕмĕт пачĕ,—
Терĕ те вăл хаçата
Хĕвĕнчен кăларчĕ.

— Çакăнта колхоз çинчен
Сталин çырнă!—терĕ,
Пĕтĕм халăх умĕнче
Хаçата çĕклерĕ.

Чӗринчи хаваслӑха
Пӗлтерни ҫил евӗр
Сӗм вӑрман пек халӑха
Кӗрлетет кӗр те кӗр.

Турисем, анатрисем,
Пур кассем пӗр харӑс
Тарӑн шухӑш килнӗҫем
Калаҫма пуҫларӗҫ.

—Павӑл шӑллӑм, ҫыр мана!—
Тенӗ вирлӗ сасӑ
Илтӗнсе тӑрать кӑна
Пухура хавассӑн.

Ватӑ ҫын Калля пичче
Лӑпланса курмарӗ,
Чи малти тенкел ҫинче
Канлӗ лараймарӗ.

Ним тума пӗлмен енне
Тем те вӑл хатланчӗ,
Тӑчӗ вӑл ури ҫине,
Урайне те ларчӗ.

Ҫурҫӗр иртнӗ тахҫанах.
Улача пек кӑвакарчӗ
Сывлӑш урамра,
анчах
Халӑх саланмарӗ.

Павӑл халь сӑмах калать
Пысӑк лампа умӗнче.
Пӑчӑр-пӑчӑр тар тухать
Сарлака ҫамки ҫинче.

Павӑлӑн кӑвак куҫне
Вутлӑ шухӑш халиччен
Кун пекех ҫутатнине
Астумасть Калля пичче.

Ҫамрӑк вӑл, анчах та ун
Пит хӗрсе калаҫнинче
Сисӗнет ӑспа саккун,
Курӑнать малти тӗнче.

Умӗнчи кӗнекинчен
Вӑл вула-вула илет:
—Ак ҫапла колхоз ҫинчен
Аслӑ Сталин ҫырнӑ!—тет.

Автансем кашта ҫинче
Юлашки хыпарлӑх
Авӑтсан,
ял ҫуртӗнчен
Тухрӗ шавлӑ халӑх.

Хресченсем килне-ҫуртне
Калаҫса утаҫҫӗ.
Ян та ян ҫапать чанне
Колхозри хуралҫӑ.

Лӳпперпе кахал-наян
Ҫывӑрса тӑман-и,—
Тенӗ пек ҫӳрет тӑман,
Ырӑ март тӑманӗ.

Шалчасен тӑррисенче
Шӑхӑрать вӑл халӗ.
Йӗпенет Калля пиччен
Мӑйӑхпе сухалӗ.

Хӑйӗн мӑрйинчен, ҫӳлтен
Аннӑ тӗтӗм тутлӑ.
Чинавье инке килте
Кӑмака-мӗн хутнӑ.

Вӑл пӗрмеллӗ кӗрӗкне
Хыврӗ те силлерӗ.
—Кӗтӗн-и?—тесе инке
Тӗпелте кӗрлерӗ.

—Ҫук-ха, карчӑк, ҫук-ха, ҫук,—
Тет пичче йӑвашшӑн,
Тарӑн шухӑш килнӗ чух
Чӗлӗмне хыпасшӑн.

Вӑл илет сентре ҫинчен
Ҫулҫӑ пиллӗк-улттӑ,
Кӑларать сакайӗнчен
Пӗр хӑма та пуртӑ.

Ывӑс пек ҫавра хӑма
Сак ҫине хурайчӗ,
Кӑчӑрт-кӑчӑрт турама
Пурттине хайратчӗ.

—Манӑн карчӑк кутӑн-ҫке,
Терӗн-и, мӑнтарӑн?—
Ҫулӑхать каллех инке,
Куршанак пек арӑм.

—Эпĕ, карчăк, сан çинчен
Ним те каламарăм,—
Тет пиччемĕр!
Пуçĕнче
Шухăш, шухăш тарăн.

Ӳхĕрет тăман ялта
Вирлĕрен те вирлĕ.
Колхоза пĕрех кунта
Кĕчĕ çирĕм килĕ.

12

Юр сахал хӳсе кайман-и,—
Тĕпчесе ирте-ирте
Ӳхĕрет курак тăманĕ
Пĕлĕтре, ялта, хирте.

Вата этемсем каларĕш,
Йĕрекен ачисене
Пуçтарса кĕрет çиламăш
Килсерен мăръесене.

Çичĕ пăт йăтма пултарнă
Çынсене те ураран
Ӳкерет вăл, пархатарлă
Юлашки çурхи таман.

Çĕрĕн-кунĕн, каçăн-ирĕн
Эрнипе тăман пырсан,—
Тыра пулĕ,—теççĕ пирĕн
Ваттисем мĕн авалтан.

Хулăм кĕртлĕ хĕлĕн юрĕ
Кĕрлесе каяс чухне
Ерĕхсе кĕрет ман юрă
Юр пек шура хут çине.

Кăть-кăтик!—тесе чăпар чăх
Чи малтан мая хума
Йăвана ларсан та—лайăх
Аллăма перо тытма.

Пĕтĕмпе илемлĕ питĕ—
Пăрусем хуллен кăна
Мĕкĕрни те, выляни те
Кăмăла каять мана.

Йăптăх çăмсăр та хаваслă
Тихасем кĕçеннине
Ӳкерес килет манмаслăх
Патефон çатми çине.

Путексем тата сахал-и—
Картара йăлт-ялт siksе
Вылякан путекĕн халĕ
Майраки имшер, çемçе,

Сухăр пек, анчах та çӳлĕ
Ӳсекен патвар такан
Майракиç кĕр кунĕ пулĕ
Кăлтăрмач пек çавракан.

Хут патне пырать ман аллăм,
Мухтап эпе çуркунне
Йăвари сап-сар сăмсаллă
Хур чĕппи шимплетнине.

Çырăп эп колхоз автанĕ
Хыта аватни çинчен.
Сивĕ критик мĕн анланĕ,
Мĕн ăна çурхи тĕнче?

Вăл автан çиме юратĕ,
Сурăх та аван ăна,
Çийĕ те юрра шăратĕ
Ӳйăхпа чечек çинчен.

Вĕркĕч пек тулли хăпарнă
Кăпашка тӳшек çинче
Чăхăмçă лаша пек тарлă
Критик тутлă ыйхинче

Çывăрать,
анчах та халĕ
Çил-тăман йĕри-тавра
Ӳрлă-пирлĕ, каллĕ-маллĕ
Çаварать çурхи юра.

Кун пек чух вĕрет-и йытă,
Сас парать-и тăмана...
Çурçĕр иртнĕ. Мăч-мăч çутă
Курăнать пĕрре кăна.

Чăрсăр та хура çил-тăвăл
Ахăрнă сехетсенче
Тĕрмешет çап-çамрăк Павăл
Пĕчĕк лампа умĕнче.

Сĕтелли çинче мĕн пурĕ
Икĕ карттă çеç выртать.
Юнашар Калля Якурĕ
Итлесе ахаль ларать.

—Икĕ карттă ак,—тет Павăл,—
Хам ӳкернĕ вĕсене.
Ку—хальхи, тепри вара вăл
Кăтартать пулассине.

Пирĕн виççĕр киллĕ ялăн
Çĕр нумай, анчах куран—
Хĕрлĕ тăмлă, питĕ таран
Касса тухнă ик çыран.

Сассине илтсе кăна тăр,—
Юрлă шывĕ çуркунне
Тирĕссĕр, çемçе тăпрасăр
Хăварать уй-хирсене.

Çиессе çиет те мурĕ,
Туйри халăх пек, вара
Пуçласа ярать çĕр юрă
Икĕ тарăн çыранра.

Чĕресри хайма пек шĕвĕ
Пирĕн çĕрĕн сĕткенне
Юхтарса каять юр шывĕ
Аçтăрхан хули енне.

Лерелле... Сайра кӳленчĕк
Юлкалать çырмасенче,
Илтĕнет шапа концерчĕ
Малтанхи эрнесенче.

Каярах вара хăюллă
Шăрăх кун пуçланнипе
Шапасем те тăрса юлнă
Кăмака çинчи типпе.

Малашне çыран сиенĕ
Инкекне тӳсме пире
Кам саккун çырса çӳренĕ,
Кам ал пуснă тĕнчере?

Алхасса юхма вĕреннĕ—
Малашне чипер кăна
Ĕçлеме пĕве вĕренлĕ
Икĕ тарăн çырана.

Хурăнпа йăмра вăрманĕ
Чăштăр-чăштăр çулçипе
Выляса унта хумханĕ
Хĕррипе те айккипе.

Сад-пахчи те хӳхĕм пулĕ,
Юмахри пекех хитре.
Чавсаран та вăрăм пулă
Ишĕ пирĕн кӳлĕре.

Çамрăк хурĕ-кăвакалĕ
Аталанĕ, кĕркунне
Пĕлĕт пек вĕçсе какалĕ
Пирĕн ялăн ун чухне.

Хăш çулта, епле типтерлĕ,
Ăçтарах тумаллине
Пĕтĕмпе çырса ӳкернĕ
Эпĕ çакă хут çине.

Ака площадь—хĕрлĕ вырăн—
Тасалать кунта çити.
Ку тĕлте пĕр ушкăн хурăн,
Кăвакки—лаша вити.

Халĕ ял çара, анчах вăл
Илĕртӳллĕ, тап-таса
Пулĕ, тусăм!—терĕ Павăл
Пӳртĕнче уткаласа.

—Килĕшет мана мĕн пурĕ.
Хурĕ те пулли аван,—
Терĕ те Калля Якурĕ
Сикрĕ-тăчĕ вырăнтан,—

Эсĕ тепĕр карттă ту та
Лар эппин пăха-пăха.
Лашасем валли те утă
Тупăнмасть паянлăха.

—Халĕ йывăр,—терĕ Павăл,—
Йывăр та хĕрӳ ĕçре
Хурама пекех ан авăн,
Юрамасть, ача, пире.

Çĕршыва тăшман çĕленĕн
Çавăрса илсессĕн те,
Çухатман хăватлă Ленин
Пĕр самант та ĕмĕтне.

Юн та, чир те выçлăх урлă
Пăр пек сивĕ пÿлĕмре
Паянхи пек Ленин курнă
Çут хĕвеллĕ ĕмĕре.

Комсомол йышне кĕрсессĕн,
Яланах малта пыма
Вĕрентсе калана Ленин,—
Юрамасть çакна манма.

Утă çук. Мускав кĕперĕ
Аслати пек кĕрлессе,
Поезд килессе кĕтер-и,
Пытанар-и кĕтессе?

Парти мĕн тума, мĕн калĕ,—
Кулленех астумалла.
Аслăран та аслă Сталин
Вĕрентет пире çапла.

Сылтăм аллине Якурăн
Хулпуççи çине хурса:
—Утă пулĕ. Акă курăн,—
Терĕ Павăл йăл кулса.

Алăк уçăлчĕ, чарларĕ.
Сивĕ сывлăш ăшĕнче
Паллама тăх курăнмарĕ
Малтанах Калля пичче.

—Ывăлна килтен пистертĕн,
Тет аннÿ. Тÿсмен енне
Тухрăм та тÿрех вĕçтертĕм
Çакăнта, тусу патне.

Ухмаха мана вăл халĕ
Тустарать çиленнипе,—
Тет Калля пичче. Сухалĕ
Шерепеллĕ, йĕп-йĕпе.

—Иртсе лар, пичче,—тет Павăл,
Яр тăсать аллисене,
Унăн аçамне çакать вăл
Тĕпелти пăта çине.

—Икĕ тип çырма çыранĕ
Акăш-макăш урнăран,
Пĕвесе лартсан аван-и,—
Тетпĕр Якурпа паян.

—Шухăшу сан, Павăл шăллăм,
Питĕ лайăх темелле.
Пĕр тăван пек, алла-аллăн
Ял çынни ĕçлемелле.

Халăха çапла шанан та,
Тăрăшас килет, анчах
Ĕмĕртен пырать шаланкă
Макăрни çинчен юмах.

Типĕ пулнă çутçанталăк,
Шыв тухман, тет, çĕр çинче.
Пуханнă пулать пур кайăк
Хирсенчен, вăрмансенчен.

Чĕрнипе те, сăмсипе те
Çичĕ кун пурте пĕр тан
Чавнă хыççăн шыв сипечĕ
Тухнă, имĕш, аялтан.

Кайăксем пурте пĕр харăс
Юрă янă самантра
Питĕ вăрттăн лăпăс-лапăс
Чÿхенет курак шывра.

Ĕçлемен, анчах çав кайăк
Пылчăкра ула пулса,
Çÿлелле вĕçет сасартăк
Çунатне саркаласа.

—Шыв чавса кăлартăм халĕ.
Улалантăм пылчăкра,—
Тет хайхи тĕнче кахалĕ
Тĕшмĕрте пĕлмен турра.

—Чăх чĕппи тытса, шап-шурă,
Ĕçлемесĕр çĕр çинче
Кам çÿрерĕ?—тенĕ турă
Кайăкран тĕпче-тĕпче.

—Вăл шаланкă, юн çăварлă.
Çавă тытнă-тăр чĕппе...
Турă шаннă та хăварнă
Шаланка вара типпе.

Çавăнтан вара мăнтарăн
Шыв ыйтать йĕре-йĕре.
Карăнса вĕçет вăл тарăн,
Тарăн çутă тÿпере.

Павăл шăллăм, пĕтеймен-тĕр
Халĕ те ула курак,—
Çаварса Калля пиччемĕр
Хуна май калать:—Пурах!

—Юмахна чипер шăлан-ха,
Пултаран, Калля пичче.
Эсĕ ху паян шаланка
Пирĕн халăх хушшинче!

Çынсемпе пĕрле хастарран
Ушкăнра ĕçлес чухне
Шывсăр кайăк пек мăнтаран
Пăхкалатăн хир çине.

Ячĕ те колхозăн „Атăл“.
Ха, епле хăватлă ят!—
Кăшкăрса калать те Павăл
Тĕпеле утса каять.

Халĕ те çынсем тăман-и—
Тенĕ пек, ирте-ирте,
Ӳхĕрет курак тăманĕ
Мăръере, ялта, хирте.

13

Сарăлса хĕвел ăшши
Ялтăрана кунсенче
Çĕмĕрсе кĕрлерĕ шыв
Çырмара, çырансенче.

Типрĕ çĕр. Малтан хитре
Симĕсленчĕ ту тăрри.
Янтăрарĕ пĕлĕтре
Тăрисен хавас юрри.

Васкаса çара вăрман
Тăхăнчĕ илемлĕ тум.
Куракăсăр çĕрсем юлман,
Пур енче ем-ешĕл хум.

Тĕнчере пули-пулми
Кайăк мар тесе, тĕкне
Хăпартса кăркка ами
Тухнă халь çерем çине.

Юнашар унпа тата
Никамран хăрамансăр
Хăтланса кăлтăртатать
Хĕрлĕ мăйлă ун аçи.

Таврара çурхи тĕнче
Ешерсе çекленнĕ чух
Ун ачаш арки çинче
Ĕрчесе сĕрлет чĕрчун.

Ытарми çĕршывăма,
Хирсене, вăрмансене
Тинкерсе пăхса тăма
Хăпаратăп ту çине.

Сакăлта таврашĕнчи
Чул çине ларатăп та,
Курăнать хĕвел тĕнчи
Инçетре, таçта-таçта.

Эпĕ пысăк кăмăлпа
Шăп итлетĕп юратса
Куккукпа улатăпа
Аватан хитре сасса.

Ху ӳстернĕ ывăлна
Юрлама, çĕршыв-анне,
Лартрăн эс савса кăна
Самана сакки çине.

Эх, çĕршыв, вĕри чунран
Тавтапуç сана, хисеп!
Çавăнпа тӳпе таран
Юррăма çĕклетĕп эп.

Яп-яка çулпа утать
Талпанса Калля пичче.
Хĕвелпе çунса пырать
Пуртă хулĕ айĕнче.

Уçă сывлăшра чухне
Çимесен те юрамасть,
Çавăнпа та хăй çумне
Вăл хĕстернĕ пĕр хутаç.

Çăпата тукалама
Пушăт кирлĕ те ăна,
Çавăнпа каять касма
Халĕ ешĕл вăрмана.

Шĕтĕрнек тытма пăртак
Кирлĕ кивĕ пучушши.
Сывлăшра тăрать пылак
Çеçкери çăка шăрши.

Тĕттĕм сулхăн вăрмана
Савăнса кĕрес чухне
Чĕлĕмне туртма кăна
Ларчĕ вăл каска çине.

—Çакă çутă çĕр çинче
Пурнасси нумай-и ман?—
Тилмĕрсе ыйтать пичче
Уçă сасла куккукран.

Çитерет куккук çичче,
Тăххăра та вуникке.
Пуранма Калля пиччен
Çул нумай, нумай иккен.

Хĕрлĕ пуçлă вут чулне
Чакмипе шакканăçем,
Ăвăс йывăç аввине
Шăтарса кĕрет хĕлхем.

Чĕлĕмне пакки-пакки
Туртрĕ те Калля пичче,
Тĕтĕмин кăвак унки
Юлчĕ унăн хыçĕнче.

Çĕрлехи пекех хура,
Çап-çара вăрман ăшне
Хушăран хĕвел карать
Йалтăркка çипписене.

Шĕшкĕлĕх çатракинче
Ерипен кайсан-кайсан
Кивĕ çапă айĕнчен
Хуйăхса вĕçет ăсан.

Пилĕк-ултă çăмарта
Сара мамăк ăшĕнче.
—Чĕп кăлар!—тесе тата
Малалла каять пичче.

Ăнсăртран, хăй те сисмен,
Килчĕ-тухрĕ уçланка.
Курăнать вăл хĕрринчен
Çĕрĕ евĕр çаврака.

Сăмсана пырса кĕрет
Имути кĕпçи шăрши.
Пăрушпе пĕрле çӳрет
Çӳлĕ те кервен пăши.

Этеме сиссе пулас,
Тап тутарчĕ вăл пĕрре.
Шăтăр-шатăр тунă сас
Хытă кайрĕ вĕтлĕхре.

— Саншăн ирĕк çут тĕнче!
Ан хăра!—кала-кала
Уттарать Калля пичче
Малалла та малалла.

Çакă питĕ те матур
Вырăнтан инçех те мар
Утнă хыççăн ĕнтĕ пур
Акăш-макăш тарăн вар.

Ик сунарçă—ик хуçа—
Йыттисем пĕррехинче
Кайнă, имĕш, çапăçса
Çакă варăн тĕпĕнче.

„Йытă варĕ“—тенĕ ят
Юлнă халăх хушшинче.
Çавăнта ĕнтĕ каять
Ăнтăлса Калля пичче.

Хĕррипе таса çăка
Кантăр пек ӳсет çăра.
Пушăчĕ тытма яка,
Явăнса тăрать алра.

Çуллахи эрнесенче
Кĕп-кĕрен хăмла çырли
Çамрăксен аллисенче
Пухăнать пурак тулли.

Кĕпçесем тата-тата,
Пĕр сукмаксăр-мĕнсĕрех,
Килсе кĕчĕ вăл кунта,
Тарăн вар тĕпне тӳрех.

Хулăм ешĕл мăк пусса
Илнĕ пĕр чул айĕнчен
Шăнкăр-шăнкăр сас парса
Шыв юхса выртать çинçен.

Ĕçрĕ те Калля пичче,
Ытарса çитмен енне,
Хĕрелсе çуталиччен
Канлĕ çурĕ пит-куçне.

Ҫӑкасем нумай ҫӗре
Вӑл иртетчӗ—ӑнсартран
Курӑнса каять куҫа
Пӗр такан ҫинчи хуран.

Вучахри кӑварӗпе
Кавайти нумай пирки
Лакӑр-лӑкӑр сиккипе
Калаҫса вӗрет яшки.

Те автан, те кӑвакал
Шывӗ явӑнна чухне
Каллӗ-маллӗ пӑлт та палт
Ҫавӑрать урисене.

Ни мала, ни каялла
Утаймасть Калля пичче:
— Ырӑ мар ку япала,—
Терӗ хӑйӗн ӑшӗнче.

— Эээ... Манпа калаҫ!..
Паттӑрлан!- тесе тискер
Кӑшкӑрса тӑрать Хараҫ,
Раскулачить тунӑскер.

Яланах вӑрра ҫӗрле
Ҫӳресе ислетнипе,
Ҫил вӗрсен те ӳкмелле
Ҫакӑнса тӑрать кӗпе.

Сарӑ тиллӗн йӗрӗпе
Кӗркунне хӗвелсӗр кун
Чупнӑ икӗ йытӑ пек,
Куҫӗсем пӑхаҫҫӗ ун.

„Халӗ вилӗп-ши ахаль?"—
Шухӑшлать Калля пичче.
Мунчала пек пулнӑ халь
Шӑнӑрсем чӗркуҫҫинче.

Ҫӳҫӗ шӑрт пек вирелле
Тӑнӑран, хӑранипе,
Вӑл туять ҫӳҫпе пӗрле
Шӗлепки ҫӗкленнине.

— Патшанни пек пысӑк влаҫ
Тупрӑм эпӗ пӗр-пӗччен,—
Калляна тытать Хараҫ
Силлесе сухалӗнчен.

Янаххи ыратнине
Тӳсеймест Калля пичче.
Сӑрхӑнать кӗпи ҫине
Сивӗ тарӗ ӳтӗнчен.

— Анкӑ-минкӗ, эсӗ те
Колхоза кӗрес пулсан,
Чун хӑвачӗ пӗлӗте
Кайӑк пек вӗҫетчӗ сан.

Тӑвӑттӑм колхоз вилли,
Ҫакӑттӑм вара ӳтне
Ҫӑханпа курак валли
Ав лере, юман ҫине.

„Йытӑ варӗ" тӗпӗнче
Таркӑн ҫын, кив ял ҫынни,
Ирӗк пурӑнни ҫинчен
Каласа паратӑн-и?

— Ак хӗвел, тӗнче ҫутти!—
Тенӗ чух Калля пиччен
Сӑхсӑхма тӑрсан, пуртти
Ӳкрӗ хулӗ хушшинчен.

— Сехремет тупа тума
Чӗл ҫыртмасӑр юрамасть,—
Ҫакӑр сӑмсине ҫыртма
Касрӗ те парать Хараҫ.

Ҫӑкӑрпа ҫӳлти хӗвел
Пархатарӗ умӗнче
Йывӑр та, анчах та чӗл
Ҫырткалать Калля пичче.

— Пӗлтерсен, пӗр лӑпкӑ каҫ
Юлӗ сан ҫири кӗпе,—
Харатса юнать Хараҫ
Сар чӗрнеллӗ пӳрнипе.

— Ҫул курки, сӑра курки,
Кирлӗ тепӗр куриччен!—
Йӑн та ян хӑлха чикки
Тыттарать юлашкинчен.

Вӑрмантан хӑй тухиччен,
Ӳсӗр пуҫлӑ пек утса,
Каялла Калля пичче
Пӗр пӑхмарӗ, иҫмасса...

Павăл сăмахне тепре,
Тепĕр хут астутарса
Ярăнать-мĕн тӳпере
Пĕр шаланкă макăрса.

Вăйĕ-халĕ чакнăран
Сăрласа тăран ӳтне
Тытайман пекех аран
Пырса çитрĕ вăл килне.

— Пушăту вара ăçта?—
Тĕпчесе ыйтать инке.
Пĕлтермерĕ вăрманта
Курнă пысăк инкеке.

— Пĕтерет ăшчик çунни,
Ыратать суран пек вар,—
Терĕ вăл, анчах суйни
Ват çынна илемлĕ мар.

Ĕçрĕ вăл тулли курка
Пăр пек сивĕ çăл шывне,
Кайса выртрĕ аякка,
Пахчана, лупас айне.

14

Йӳле пилĕк, пиçиххисĕр
Лайăх утă çуласси!
Улăха татти-сыпписĕр
Янратать çава сасси.

Юриех тумланнă халăх
Тĕрлĕ тĕслĕ пулнăран
Пин чечек пек хӳхĕм улăх
Курăнса выртать сăртран.

Улăхра çисе çӳренĕ
Лашасем çинче ирпе
Ярăнса вĕçет текерлĕк
Çуйăхса эшкерĕпе.

Хăлхаран каймасть пĕрре те
Харăс-харăс ял çынни
Янратса юрра тăсни те,
Тавлашса пырса çулни.

Улăхра тĕтре хăпарнă
Вăхăтра кая юлман,
Лашине килсе тăварнă
Инкепе пичче паян.

Йăлтăрти хĕвел кăварĕ
Сикекен сунтал çинче
Çавине сурса туптарĕ
Чи малтан Калля пичче.

Шатрине сĕрсе пĕтернĕ
Пĕлтĕрхи лапаткипе
Йăнтăр-янтăр та типтерлĕ
Иртрĕ икĕ айккипе.

— Утă тутлă тутăр, карчăк,
Хăймана, сĕте, çава!—
Терĕ те пырса тыттарчĕ
Инкене çӳхе çава.

Малалла пĕртак шутарчĕ
Урине, сулахайне,
Пĕшкĕнсе вара вăл ячĕ
Вăшăл-вăшăл çавине.

Кăн-кăвак та симĕс пуçлă
Курăксем, купа пулса,
Умлăн-хыçлăн, умлăн-хыçлăн
Пухăнаççĕ паккуса.

Пилĕк-ултă ансăр утăм
Турĕ те Калля пичче,
Ăшкăрса çаралнă утă
Йăванмарĕ умĕнче.

Çамрăк чух епле ăстаччĕ
Шăхăртса кăна çулма,
Сарлакан илсе пыратчĕ
Ешĕл курăклă ума.

Чăннипех вăл пулнă чаплă
Ĕлĕкрех çаран çинче.
Вăйĕ-халĕ унăн чакнă
Пилĕкпе урисенче.

Кĕçтерсе тăварлă тарĕ
Ӳчĕ тăрăх юхнăран
Пулăшмарĕ, кантармарĕ
Чĕресри çăра уйран.

Пилĕкпе чĕркуç хăвачĕ
Хускалса тăман енне
Пĕвĕ-сийĕпе таянчĕ
Вăл çава аври çине.

Улăхра хĕрсе ĕç вирлĕ
Пынипе чĕре тапать.
Камăллă, анчах та кирлĕ
Çавапа çулма хăват.

Улăхăн ешĕл çаранĕ
Умĕнче çынпа пĕрле
Çимелле така шăрттанĕ,
Сарă чей те ĕçмелле.

Чикĕнсе каяс пек халĕ,
Çĕмĕрес пек ĕçлесен,
Ўт çинчен ўксе сухалĕ
Хĕллехи çăпан-кĕсен.

Шăрттанне те çырткаларĕ,
Ĕçрĕ чей Калля пичче.
Пĕр мăскал та пархатарĕ
Хутшăнмарĕ хальхинче.

Хулпуççи те, чĕркуççи те
Ыратсан, начар чухне,
Çулмалли çаранĕ çитĕ
Сахалтан та эрнене.

Çип сĕвемĕ пек паккусĕ
Ăнăçлă пыманнинчен
Тарăхса анрана пуçĕ
Ыратать Калля пиччен.

Çакăр пек сĕткенлĕ, тутă
Курăк та пыра-киле
Ут çилхи пекех шак хытă
Пулнине те пĕлмелле.

Çаврака хĕвел халь анчĕ
Йывăç çўллĕш аяла,—
Халь ăна йăлттам мулкачă
Пĕр сиксе утланмалла.

Аннăçемĕн сар хĕвелĕ
Сапалать çуттисене,
Çĕр çырли пекех илемлĕ
Хĕретет çавасене.

Таврана ян-ян ямалăх
Юрăпа, хуткупăспа
Ушкăн халăх, çамрăк халăх,
Шавласа килет çулпа.

Анакан каçхи хĕвелĕн
Йăмăх хĕрлĕ çуттинче
Мĕлкисем вĕсен йĕркеллĕ
Шăвăнаççĕ çĕр çинче.

Хĕпĕртўллĕ пысăк шавăн
Варринче утса пырать
Ярханах кĕпеллĕ Павăл.
Çитрĕ те çапла калать:

— Юрласа эпир кĕр те кĕр
Килтĕмĕр çĕрў çине,
Кăтартас килет, пиччемĕр,
Колхозри çынсен вăйне.

Тĕрлĕрен яка тумтирлĕ
Çамрăк халăх хушшинче
Пĕр чĕнмесĕр каллĕ-маллĕ
Пăхкалать Калля пичче.

Васкаса кăна алхапăл
Çавипе пĕрре сулса
Сарлака ўт-пўллĕ Павăл
Хучĕ хулăм паккуса.

— Ман çине, пиччем, пăхса тăр,
Манăн пулĕ пысăк ят,—
Тенĕ пек çулать вăл паттăр,
Карăнса кăна çулать.

Хыçĕнчен Калля Якурĕ
Пĕтĕм çамрăк-кĕрĕме
Чĕннĕ пек тăрсан, мĕн пурĕ
Тытăнаççĕ илтерме.

Çамрăк чухнехи пек ăнлă
Кастарать Калля пичче,
Сухалса таçта пытаннă
Вăйĕ тухрĕ хальхинче.

Ĕмĕрне ванман пек харсăр
Туйăнса каять хăйне,
Яшсенчен кая юлмасăр
Тухрĕ вăл çаран пуçне.

Пĕр самант колхоз кĕрлерĕ,
Курăк ўкрĕ уринчен.
Силленеççĕ пĕчченшерĕн
Ут кăшкарĕ, тал-пиçен.

— Пурсӑр та эсир, ачсемӗр,
Сыва пулӑр малалла,
Тавтуса Калля пиччемӗр
Алӑ пачӗ Павӑла.

— Колхоза кӗрсе пӗр савӑн!
Куртӑн-и епле ӗçлет!—
Çавине тӗреклӗ Павӑл
Хулпуççи çине илет.

Çамрӑк ушкӑн—качча-хӗрӗ
Хӗшӗсем ларан çере,
Сӑрт çине, утса кӗрлерӗ
Вайӑри пекех хитре.

Нумайччен пахса сӑнарӗ
Юратса Калля пичче.
Сӑнекен хӗвел кӑварӗ
Çунчӗ унӑн куçӗнче.

Юнӗ тапнӑ та пӑлханнӑ.
Çавӑнпа та лашине
Нооо!—теме вӑл маннӑ
Хускалса каяс чухне.

Çамрӑк каччӑ пек вӑл ларчӗ
Сиксе урапи çине:
— Юрттарса каяр-ха, карчӑк!—
Туртрӗ карт тилхепине.

(Малалла ан васкӑр, чимӗр,
Пӗлтерес килет çакна:
— Карчӑк,—тет Калля пиччемӗр
Савӑннӑ чухне кӑна.

Килӗнче телей вӗренӗ
Таткаланнӑ кунсенче:
— Эй,—тесе чӗнме вӗреннӗ
Арӑмне Калля пичче).

Хуралса каçхи пӗркенчӗк
Ӳкнӗ тӗттӗм вӑхӑтра
Урапи вӗсен кисренчӗ
Ланкашкаллӑ урамра.

Уй хапхи панчи Верукӑн
Тӗлӗнче сӑмах çапса
Сӗрлесе тӑрать пӗр ушкӑн
Пысӑк çын та ачапча.

Урама пӑлсе пӗтерне,
Лашапа иртме те çук.
Мӗн çухалнӑ? Мӗн пӗтернӗ?
Татӑлса йӗрет Верук.

Хӑпӑл-хапӑл хыпаланчӑк
Анчӗ те Калля пичче,
Тӗпчесе пӗлме пытанчӗ
Кӗр-кӗр халӑх хушшинче.

— Вӑрӑсем кӑçал хӑюллӑ.
Çаратать хурах çынни.
Кӗтӳрен килмесӗр юлнӑ
Веруксен хура ӗни.

Пусакан вӑрри, каналйӗ,
Чӗрепе пӗвер кӑна
Илнӗ те, ытти какайӗ
Тӑрса юлнӑ вӑрмана.

Çимесен, мӗскер тума-ши
Выльӑха пӗтернӗ-ши?
Халӗ шурӑ хуртлӑ ашӗ,
Таçтанах перет шарши.

Пирӗн пысӑк ялӑн халӗ
Чӑх-и, хур-и е така
Каçсерен каять сахал-и
Пӗр нӳхреп пек карланка.

Вӑррине çапасчӗ тарӑн
Пӗр юпа, юман юпа!—
Каласа парать пӗр арӑм
Пӗççине çапа-çапа.

— Кам вӑрланӑ? Курнӑ ӗнтӗ
Уйӑх та хӗвел, тӗнче!—
Именсе илет пулин те,
Кӑшкӑрать Калля пичче.

— Кам та кам?—тесе ыйтаççӗ
Пилӗк-ултӑ хытӑ сас.
— Тукасри Митти Хараçӗ
Вӑрманта çӳрет пулас.

Пулнӑ вӑл пуян та ятлӑ,
Карланки яка, чипер,
Яланах çиме юратнӑ
Чӗрепе ӳпке-пӗвер.

Ялан хурĕ-кăвакалĕ
Кӳлĕ пек хуранĕнче
Вăрманта ишет мĕн халĕ,—
Такмаклать Калля пичче.

Малалла вăл каламарĕ,
Хăй, сехрийĕ хăпнипе,
Мунчари пекех тарларĕ.
Çамкипе ĕнси йĕпе.

Эх, чĕлхенĕн-хăяматăн
Сук чаракĕпе шăмми!..
Ăнсăртран каларăм-ятăм
Ăшăмра тытма пĕлми.

Хурăнташĕ е тăванĕ
Эпĕ мĕн каланине
Е паян-и е ыран-и
Çитерет Хараç патне.

Апатне те вăл çимерĕ,
Каллĕ-маллĕ пĕр пĕччен
Килкартне тухса çӳрерĕ
Сарă уйăх аниччен.

„Ăстиçук Хараç, тăсланчăк,
Шĕпĕн пек чĕлхем çинче“,—
Шухăша кайса хурланчĕ
Çĕрĕпех Калля пичче.

Вăл ӳпне выртма хăтланчĕ,
Айккине выртма тата...
Хăй сисмерĕ те шăпланчĕ
Тĕттĕм пăчă пăлтăрта.

Халĕ ĕнтĕ канлĕ çывăр,—
Тенĕ пек, этем çине
Мăй çинчи тăхлан пек йывăр
Килчĕ ыйхă ир енне.

Хуп-хура, пĕр шавсăр пушă
Вăрманта сип-сивĕ каç.
Упăте пекех хăрушă
Курăнса килет Хараç.

— Эсĕ-и ялта çӳретрĕн
Ман çинчен усал сăмах?—
Терĕ те мăйран тискеррĕн
Ячĕ-илчĕ çавăнтах.

Кăшкăрас, анчах та сассăр
Антăхать Калля пичче,
Вăранать пĕр сывлаймасăр
Пăлтăрти арча çинче.

Урăм-сурăм, акăш-макăш
Тĕтĕм тулнă пăлтăра.
Эрĕм евĕр йӳçĕ сывлăш
Çĕçĕ пек касать пыра.

Васкаса Калля пиччемĕр
Уçрĕ пӳртĕн алăкне:
— Эй-эй-эй! Çунса
пĕтетпĕр!—
Сехĕрлетрĕ арăмне.

Хăраса анранă карчăк
Тытăнать-мĕн макăрма.
Ĕнене пичче кăларчĕ,
Пăрăва та урама.

Кĕрĕк-и, тӳшек-минтер-и
Кăларма кĕрес чухне
Пысăк çуламсен кĕперĕ
Хупăрлать килкартине.

Пĕр кăвар пӳртрен çĕкленчĕ,
Витерен тата тепри.
Тĕртнĕ-мĕн Хараç-сӳсленчĕк
Икĕ вырăнтан юри.

Уярта ытла та хытă
Шатăр-шатăр çуннăран,
Хĕрлĕрен те хĕрлĕ çутă
Çекленет тӳпе таран.

Ĕмĕрне пуçтарнă çурчĕн
Вырăнне самант хушши
Вут çуларĕ, тăрса юлчĕ
Кĕл тата ĕнĕк шăрши.

Ыйхăра чухне пуçларĕ
Сăтăрне инкек-синкек.
Картаран та тухаймарĕ
Виçĕ сурăх, виç путек.

Витереччĕ кăвакарчăн,
Чĕкеçсем йăвисенче.
Чăх та хур та кукарланчĕ
Вут-кăвар хаярĕнче.

Çаруран, ура сырмасăр
Килнĕ халăх хушшинче
Пĕр сăмах та каламасăр
Хуйхăрать Калля пичче.

Вăрманта Митти Хараçĕ
Юнаса калана пек,
Ун çинче тăрса юлаççĕ
Çийĕнчи йĕмпе кĕпе.

Вăкăр тирĕнчен тутарнă
Енчĕк юлнă хĕвĕнче.
Енчĕкне çакса кăкарнă
Майĕнчен Калля пичче.

Пĕлĕте сирсе типтерлĕ
Шуçăм килнĕ вăхатра
Кўршисем сапса сўнтернĕ
Юпасем хура, хура.

Çўçĕсем кĕлпе хупланнă
Мĕскĕн çын Калля пичче
Пĕр юпа çумне таяннă
Çап-çара килкартинче.

15

Страховой текен кассин
Укçине Калля пичче
Илчĕ те уткаласси
Килчĕ ун урамсенче.

Хуларан хула енне
Тăсăлать тап-такăр çул.
Сарса тухнă ун çине
Шăкăр-макăр вĕтĕ чул.

Пур иртсе çўрен çынна
Сулхăн пултăр, тенипе,
Йывăççем çăра кăна
Лартнă икĕ айккипе.

Качака хăрта-хăрта
Кышласа пĕтересрен
Кăкарпа пĕр тан карта
Тытса тухнă шĕшкĕрен.

Мунчала хуçи сарай
Ĕлĕк тытнă вырăнта
Лайăх çурт—çынсем нумай
Пухăнаççĕ çав çурта.

Симĕс вывĕски çине
Ўкерсе, илемсĕр мар,
Лартнă пысăк хырăмне
Çутатса пĕр сăмавар.

Шурă çўçлĕ тутарпа
Калаçса Калля пичче
Пилĕк-улта сушкăпа
Ĕçрĕ тутлă сарă чей.

Кăмаллă калаçура
Ыйтса пĕлчĕ тутартан:
—Сĕзнĕн ниçĕк ĕш бара
Аулда, колхозларда?*

— Кăрларда бикрек эйбет
Çеçтĕк бу йăл игенне,—**
Терĕ те тарланипе
Хыврĕ леш тюбетейне.

Вăл чылай ĕçсем çинчен
Калаççаччĕ тутарпа.
Çамрăк Павăл курăнчĕ
Ĕшĕл гимнастĕркăпа.

— Манăн та паян киле
Каймалла, Калля пичче.
Халлĕхе çўремелле
Райколхоз союзĕнче.

Ан çўреччĕ аякра,—
Терĕ Павăл, чей ĕçсе.
Кайрĕ вăл унтан вара
Тепĕр хут нумай ĕçе.

Йăмăхса хĕвел çатми
Пытансан çурри таран,
Васкаса, ниçта тăми
Иккĕш тухрĕç районтан.

---

* Сирĕн ĕç епле пырать ялăрта, колхозсенче?
** Хирсенче кăçал тырра питĕ лайăх акрăмăр.

Çутçанталăк пур тĕлте
Хăрăм сапнă пек хура.
Тĕттĕмленчĕ пĕлĕт те
Ерипен, пыра-киле.

Пĕлĕтпе çĕр тытăçса
Тăнă вырăнта чипер
Курăнса тăрать куçа
Йăрăм-ярăм шурă йĕр.

Тăкăс, пăчă сывлăшра,
Çумăра кĕтсе пулас,
Карăш пачĕ улăхра
Вĕççĕр-хĕрсĕр çурăк сас.

Çырмари тăван яла
Таврăнса, канса тăма
Иккĕш харăс утмалла
Çичĕ-сакăр çухрăма.

Халĕ пысăк станцире
Коридор пуçланнă пек,
Тăсăлса каять лере
Ик вăрман хушши—тĕпек.

Кайăк та ытти чĕрчун,
Ешĕл курăк ыйхăра
Тĕлĕрсе киленнĕ чух
Питĕ лăпкă таврара.

Вĕрене çинчи хитре
Чăштăрти яка çулçа
Хускатса хутран-ситрен
Çил вĕринччĕ, иçмасса!

Халь çĕре ури лаппи
Лекнине итлет пичче.
Хăраса сехре хăппи
Сăр-сăр турĕ ӳтĕнче.

Хыпалать вăл хĕвĕнче,
Аллипе тĕке-тĕке,
Çамрăк вăкăр тирĕнчен
Тунă пысăк енчĕке.

Çуркунне шыва юхма
Алтнă ансăр канавран
Пĕр хура мĕлке ума
Сикрĕ-тухрĕ ăнсăртран.

—Колхоза эппин, мала!—
Терĕ те мĕлке пĕрре
Вĕлерес пек Павăла
Çапса ячĕ тĕттĕмре.

Çĕрлехи хурах çынни
Шавсăр лăпкă вăрманта
Сирпĕнсе чупса кайни
Илтĕнсе юлать кăна.

Йĕп чиксен те, курăнмасть
Халĕ тĕттĕм çĕр çинче.
Сассинчен пĕлет Харaç
Иккенне Калля пичче.

—Тĕллесен те, ман пуçа
Тивеймерĕ, тăм писмен,—
Ним пулман пек калаçса
Павăл тăчĕ çĕр çинчен.

Суранлана аллине
Майĕнчен пиçиххипе
Пĕр çаклатрĕ, ял енне
Утрĕ тикĕс уттипе.

Кĕркунне колхоз çăра
Капансем лартан сăрта
Иккĕш çитнĕ вăхăтра
Тухрĕ сарă уйăх та.

Аялти çуртсем çине
Тăсăлса ӳке-ӳке,
Аякка та инçене
Выртрĕ ик хура мĕлке.

Шыв та, хир те чӳрече,
Сад-пахчи, мунча, кĕпер
Пысăк уйăх шевлинче,
Кĕмĕлленĕ пек, чипер.

Ялĕнчи хитре тĕсе
Павăлпа Калля пичче
Ларчĕç иккĕш тинкерсе
Ту çинче, çерем çинче.

Павăл халь хăрах алли
Сурнине тӳсмен енне
Çӳçенсе çăвар тулли
Шăтăрт тутарать шăлне.

Лăпланас тесе, юри
Анлă шурă чул çинчен
Тăчĕ те вара вĕрин
Вал каларĕ нумайччен:

—Ман атте, салтак çынни,
Килнĕ граждан вăрçинчен.
Асăнта тытатăн-и
Аттене, Калля пиччем?

Паттăр коммунист, аттем,
Витĕр курнă малашне—
Халăха вĕрентнĕçем
Колхозсем пулассине.

Таврара çурхи тĕнче.
Çунтарса пăхать хĕвел.
Пулнă унăн çийĕнче
Симĕс шлĕм та сăр шинель.

Ленин парти умĕнче
Вăл тупа тăва-тăва
Вĕлкĕштернĕ ял çинче
Йăмăх хĕрлĕ ялава.

Тухнă вăл çурхи пусса,
Хăраман, яланлăха
Кулаксен çĕрне касса
Панă чухăн халăха.

Ытларах тискер пулма
Эрехпе ханша ĕçсе,
Харăс тухнă урама
Кулаксем усал ĕçе.

Чухăнсен комитетне
Килнĕ-çитнĕ çĕмĕрме,
Тимĕр сенĕксем çине
Тирнĕ манăн аттеме.

Пуçĕсем çине çӳле
Коммунист ӳтне йăтса
Утнă уйăхлă çĕрле,
Уяври пек юрласа.

—Пирĕн сенĕк юппинче
Ун чĕппи те пултăр-и!—
Ӳсĕр ушкăн хушшинче
Кăшкăрса ярать пĕри.

Çухăрса пыраканни
Пулнă-мĕн Митти пуян.
Ун ачи, вăрман çынни,
Тапăнчĕ пире паян.

Кашкăр пек асав шăлпа
Юнаса, кĕрле-кĕрле,
Уттараççĕ ушкăнпа
Пирĕн килĕ еннелле.

Сăпкари тĕпренчĕкне,
Тăлăх ывăлне, мана,
Ыталанă та анне
Тухнă-тарнă вăрмана.

Тимĕр сенĕкĕн юппи
Тивеймерĕ таврăма.
Эпĕ, коммунист чĕппи,
Сартăм хам çунатăма.

Йывăçран ӳкмест улми
Аякка, Калля пичче.
Хам аттем пек, пĕр чакми
Утрăм ирĕк çĕр çинче.

Çынсене телей уççи
Панă аслă çул пĕрре.
Ку çултан та тĕрĕсси
Çук пĕрре те тĕнчере.

Тăшмансем çапса шăмма
Нимĕрсен те виличчен
Шухăшламăп пăрăнма
Аслă Ленин çулĕнчен.

—Большевик ан пул!—тесе
Вут çине мана хурсан,
Ӳтĕм-тирĕм кĕлленсе
Çилсемпе саланĕ ман.

Кăварта е сив пăрта
Хам асап тӳсес пулсан,
Тытăп хамăн кăкăрта
Аслă партие ялан.

Каççерен автансене
Вăрлакан хура Хараç
Колхозри çынсен ĕçне
Çĕр айне пытараймасть.

Кам сап-сарă хĕвеле
Кăнтăрла-и е ирпе
Хупласа хăçан, епле
Витнĕ кивĕ кĕрĕкпе?

Пĕр тăшман та çĕнейми
Пирĕн парти вайлăран
Пулĕ-ха колхоз çемйи
Пуянран тата пуян.

Большевик епле тăван
Иккенне, Калля пичче,
Анланса илесчĕ сан
Вăрăм ĕмĕр тăршшĕнче.

Сан пекех этемсене
Çуклăхран та инкекрен
Ăраскаллă тĕнчене
Кăларма шутлать куллен.

Пур яла, пур урама,
Пур пÿрте те кĕтессе
Пурлăхлă, пуян тума
Васкарах ĕçлес тесен,

Ушкăнлă хуçалăха
Кĕмелле эсир пурте.
Çавăнпа каймасть ыйха
Халĕ Сталин Кремльте.

Пурлăхлă хитре шăпа
Юмахри пек ансăртран
Виçĕ самăр лашапа
Килсе çитмĕ аякран.

Халĕ йывăр кунсенче
Колхоза пырса кĕме
Сан чуну, Калля пичче,
Хускалса илмест темме.

Электрицă çуттинче
Хуплупа кулач шăрши
Сарăлсан, Калля пичче,
Пысăк кашăк тытăн-ши?

Хир пек аслă ырлăха
Курсанах, пĕррехинче,
Ушкăнри хуçалăха
Пырăн-и, Калля пичче?

Шăрăх типĕ пĕлĕтре
Вĕçекен шаланкăлла
Пырăн-и, йĕре-йĕре,
Пирĕн аслă „Атăла“?

Чул çинчен Калля пичче
Тăчĕ те утса çÿрет:
—Эсĕ, шăллăм, хальхинче,
Эх, пите хĕретрĕн,—тет.

Таврари хура каçа
Сирнĕ уйăх çуттинче
Утрĕç иккĕш калаçса
Павăлпа Калля пичче.

16

Кăштăр-кăштăр пурăнаççĕ
Инкепе Калля пичче
Кÿршĕ çын панче, пăртакçă
Хĕсĕкрех кĕлетĕнче.

Каçсерен, шăрçаллă сывлăм
Ÿкнĕ хыççăн, сивĕре
Шак хытса каять çан-çурăм,
Сăрлатса илет чĕре.

Витĕнме пĕр çĕтĕк-çатăк
Кĕрĕк те пулман енне
Чи малтан пĕр виçĕ тавлăк
Йывăр килчĕ вĕсене.

Яланхи пек питĕ хапăл
Калаçса, пур кăмăлтан
Килсе пачĕ çамрăк Павăл
Тăлăппа минтер, сăхман.

Павăл ырлăхне сиссе-тĕр—
Чунĕсем хускалнипе,
Ял çынни парать тем те пĕр,
Пуртă та çатма, кĕпе.

Вăрăран пин хут хăрушă
Вут-кăвар хĕрлĕ ĕне—
Çуласа илет те пушă
Хăварать çурт вырăнне.

Ун чĕлхи пурне те хирнĕ,
Хыпаланă пур çĕре.
Çавăнпа-мĕн пулса иртнĕ
Камитле инкек пĕрре.

Çурăкри хĕвел хĕлхемĕ
Хĕртнĕрен, Калля пичче
Васкаса тăрса ларать-мĕн
Ыйхинчен пĕррехинче.

Сăтăр çеç тума хастарлă
Çĕр çăтман йĕке хӳре
Çăпата пуçне шатарнă
Кышласа, чĕре-чĕре.

Каллĕ-маллĕ, урлă-пирлĕ
Сапласа тухма ирех
Пушăт та пăртакçă кирлĕ,
Кирлĕ шĕшлĕ те халех.

Сапламан; тытса хаяррăн
Пенĕ вăл çăпатине,
Çаруран вара мăнтарăн
Тухса утнă ĕç çине.

Кĕмĕл сапнă пек яр уççăн
Пăхнă уйăх çуттинче
Павăлпа калаçнă хыççăн
Кĕлетре Калля пичче

Кăтăша каяс пек ларчĕ,
Пĕр самант хупмарĕ куç.
Вăхăт иртрĕ. Кăвакарчĕ
Ярăм-ярăм шурампуç.

— Улăхра парка та çӳлĕ
Ут капанĕсем тума,
Мĕн тесен те, карчăк, кирлĕ
Старикне паян хăйма.—

Терĕ вăл, анчах пулмарĕ
Карчăкне йăпатасси.
— Супĕлти!—тесе янрарĕ
Чинавье инке сасси.

— Тупата, каятăп, карчăк,
Колхоза капан тума.
Вăй илме эппин кăларччĕ
Турилкке тулли хăйма!

Чăннипех те, хăймапа
Шурă тăпăрчă çисен,
Утрĕ вăл ирхи çулпа
Васкамасăр, ерипен.

Вĕлтĕр-вĕлтĕр, вĕл те вел
Çуттине тăка-тăка
Хĕрелсе пăхать хĕвел,
Пĕлĕт витĕр аякка.

Ешĕл курăксем çинчи
Çăл пек сивĕ те таса
Сывлăмăн нумай пĕрчи
Курăнать йăлтăртатса.

Пысăк çулăм хыпнă пек
Çуталать вăрман тăрри.
Шăнкăрав пек юррипе
Тӳпере вĕçет тăри.

Сывлăм хулăм ӳкнипе
Нӳрелсе сывлать тăпра.
Çулнă утă йĕп-йĕпе
Халĕ аслă улăхра.

Тĕтрене сирсе пырать
Ваштăр-ваштăр çиллĕ ир.
Хӳшшинчен тăрса тухать
Мăльăк Петĕр, бригадир.

Пит çума тесе анчах
Вăл утать сырма патне.
Ухльăм курăкпа хăях —
Леккеленĕ сухалне.

Ывăнсан, хӳшше кĕрсе
Тутлă утă ăшĕнче
Çывăрма аван,—тесе
Шухăшлать Калля пичче.

Курăк шăршинче канса
Сисĕнми тапать чĕре.
— Эпĕ килтĕм колхоза,—
Терĕ вăл бригадире.

— Эс капан тума ăста,
Пулаканччĕ ĕлĕк,—тет
Бригадир, шыва ăсса
Йĕкĕр ывăçпа илет.

Çунăçемĕн, аллисем
Нăтăр-нăтăр сĕрнĕрен,
Бригадирăн пичĕсем
Пĕрлĕхен пек кĕп-кĕрен.

— Çичĕ çул хушши капан
Ларĕ çумăр айĕнче,
Мухтанса калать, тупа
Тунă пек, Калля пичче.

Шыв ăсать çăл кусĕнчен
Сарлака шĕлепкипе.
Шыв янрарĕ пырĕнче
Лăнкăр-лăнкăр сассипе.

Сăртларах яка çĕрте
Выртăн кирлĕ, çаванпа
Харăс тытрĕç иккĕш те
Çивĕч пуртăпа çава.

Çĕр çинчен ик шит таран
Çÿлĕрех юпа çинче
Аптраса каймасть капан
Кĕркунне йĕпесенче.

Утă ларĕ хĕлĕпе,
Лекмĕ вăл çĕрти шыва.
Иккĕш сарчĕç йĕркипе
Вĕрлĕксем те тип хăва.

Çиеле тата пиçен,
Йÿçĕ эрĕм те кикен
Пăрахсан, шăшисенчен
Упранса тăрать иккен.

Петĕрпе Калля пичче
Выртăн тунă вăхăтра
Хĕвелпе çил çиййĕнче
Кушăркарĕ утă та.

Пăрчăкан пекех хĕрсем
Тухнă ĕнтĕ ушкăнпа.
Харăс-харăс ĕçлесен,
Пухăнать нумай купа.

Каччăсем купасене
Çаклатаççĕ вĕренпе,
Туртатаççĕ ку енне
Васкавар лашасемпе.

Типĕ утă пур енчен
Умлăн-хыçлăн килнĕрен,
Çĕкленет Калля пичче
Çÿлелле минутсерен.

Пиччене капан çинчен,
Хĕвелпе çунса йăл-ял,
Улăх урлă инçетрен
Курăнать пĕр пысăк ял.

Акатуй вăййи чухне
Пуçĕ урлă аякка
Пичĕке пек çынсене
Кустарса яран Микка

Эхлетсе ĕçленипе
Тарламасть-мĕн аялта,
Виçĕ юплĕ сенĕкпе
Вăркăтса парать утта.

Анакан хĕвел аран
Пăхкалать.
Ун çуттинче
Пиллĕкмĕш çавра капан
Тăрăлать Калля пичче.

— Ĕçлени паянлăха
Çитрĕ ĕнтĕ. Тыт-ха, ан!
Ян-ян ячĕ улăха
Мăльăк Петĕр аялтан.

Мăльăк Петĕр: —Тыт-ха, ме!—
Кăшкăрать те пиччене
Вĕрентен тытса сикме
Ывăтса парать вĕçне.

Хырнă пек яка, типтерлĕ
Ларакан капансенне
Хăвапа витсе пĕтернĕ
Шĕвĕркке тăррисене.

Хĕпĕртÿллĕ, пултаруллă
Ĕçлесен,—пĕлетĕр-и,—
Вучахра пĕçерне пулă
Тутлă пулĕ çав тери.

Нÿрĕленнĕ улăх касĕ
Таврара хураличчен
Сĕреке илсе утаççĕ
Миккапа Калля пичче.

Шывĕ витĕр тăра мар-и,—
Шăмпăлт-шăмпалт сĕрне чух
Курăнать хăва тымарĕ,
Хăйăр та шап-шура чул.

— Шампине тытасчĕ!—терĕ
Мăльăк Петĕрĕ, вара
Туртапа чышса çӳрерĕ
Тарăн шывлă авăра.

Пуçтарать-мĕн шунă майăн
Вĕтĕ çыхнă сĕреке.
Кутеме тени те лайăх,
Чи тутли вара кĕркке.

Ик витре кĕрен хуранлăх
Сĕрнĕ хыççăн,—пахăр-ха,—
Пăрахать Калля хуралнă
Кĕпине хăвалаха.

Кĕреçе пекех сухаллă
Ватă çын, Калля пичче,
Палăк пек таçтан та паллă
Курăнать çыран çинче.

Çамрăк пек чупса сасартăк
Сикрĕ тарăн авăра.
Шыв хăмпи те шурă кăпăк
Курăнса тăрать шывра.

Виç-тăват минут ытла-тăр
Курăнмасть Калля пичче,—
Сывлама хăвачĕ пур-тăр
Вĕркĕч пек ӳпкисенче.

Вăл тухать кĕрен ӳт-пӳллĕ,
Шывĕ тăрăх чул ярать.
Çăтăл-çатăл лаптăк чулĕ
Шыв çăххи пекех каять.

Çывăхри çырма кĕперĕ
Урлă каçрĕ те çулпа
Ерипен юртса кĕрлерĕ
Шăлтăр-шăлтăр урапа.

Яланхи пек хыпаланчăк
Лашине тытса чарса,
Çамрăк Павăл сикрĕ-анчĕ
Пĕр хутаç пекки тытса.

Ĕнерхи çĕрле амантнă
Шурă бинтлă аллине
Халĕ те çыхса вăл çакнă
Кăкăрĕ умне.

— Капансем тума ăста-мĕн
Пултарать Калля пичче,—
Мухтаса каланăçемĕн
Кăларать хутаçĕнчен

Çăкăрпа какай, хăяр та
Эрехне пĕр кĕленче.
Унталла та, кунталла
Ярăнать Калля пичче.

Месерле ишсе вăл халĕ
Кайрĕ ĕнтĕ шапалла.
Кайăк пек шăвать сухалĕ
Малалла та малалла.

— Эй-эй-эй! Кĕтетпĕр!—терĕ
Мăльăк Петĕр, бригадир.
Ааа...—тесе кĕрлерĕ
Улăх та, вăрман та хир.

— Колхозра çӳре те саван,
Çывăр каç, вăран ирех! -
Чăп-тулли тултарчĕ Павăл
Куркине эрех.

— Алăсем ĕçре канаççĕ
Ушкăн халах хушшинче,—
Терĕ те шывра партакçĕ
Шăннăскер, Калля пичче

Кĕпине те тăхăнмасăр,
Çап-çара, çарапакка
Янк тутарчĕ сывламасăр
Çуттине тулли курка.

17

Пӳрт те кирлĕ колхоза,
Кирлĕ çурт-хуралтă.
Платниксен çавна кура
Пур хăйсен бригада.

Бригадир ăста Микка
Чаплă та мухтавлă.
Çамăл савапа пăчка
Тытнă ылтăн алă.

Платниксем сăртра, çӳлте,
Çĕр лаша тăмалăх
Туса лартрĕç пĕр вите
Курнитса пек лайăх.

Пăрăхпа юхса кĕрет
Шăнкăр шăнкăр шывĕ;
Утсене ĕçме эйпет*,
Тăрă та сип-сивĕ.

Платниксем сĕт ферминче
Пĕр нӳхреп каларнă,
Тăпрана тăват енчен
Пурапа тыттарнă.

Пултарать хăйне тытма
Фермăри хуçалăх:
Кăмпана лармасть хăйма;
Пăсăлмасть сĕт турăх.

Платниксен ялта çӳрет
Чыслă ырă ячĕ.
Икĕ хутлă пĕр кĕлет
Кунсерен хăпарчĕ.

Çамрăк Павăл пусĕнче
Шухăшсем чупаççĕ:
Инкепе Калля пичче
Кайттă пурăнаççĕ.

Кӳршĕ çын кĕлетĕнче
Ăшă каç та сивĕ.
Мĕн шутлать вĕсем çинчен
„Атăл“ коллективĕ?..

Пӳрт лартма вĕсен паян
Тупăнмасть хăвачĕ.
Шывăн пур хăйне çыран,
Вырăн пур мулкачăн.

Пĕр-пĕччен сурни типет,
Халăх тăвĕ кӳлĕ.
Колхозра вăй-хал çитет,
Тăрăшсан, пӳрт пулĕ.

Çамрăк Павăл хушнипе
Тук та тук та хытă
Çутă кунăн таршшĕпе
Янтарарĕ пуртă.

Харăс-харăс ĕçлесси
Темĕнрен те лайăх.
Илтĕнет куккук сасси,
Чĕвлетет саркайăк.

Каçхине юрлас килет
Шăплăхра пурин те.
Çунатне çапса илет
Шăпчăк та, ытти те.

Сухăрлă турпас шăрши
Сывлăшра çӳрерĕ.
Тăрăшса эрне хушши
Платниксем ĕçлерĕç.

Тук та тук!—текен шавра
Халăх хĕпĕртӳллĕ.
Çĕкленсе пырать пура
Çӳлĕрен те çӳлĕ.

Лайăх шурă пуринче
Икĕ пӳлĕм аслă,
Çавăнпа Калля пичче
Питĕ те хаваслă.

Ĕмĕрне пĕрре курман
Телее вăл курĕ.
Тытăнчĕç хăма çурма
Пиччепе Якурĕ.

Хăрăмлă çĕлен çиппе
Туртнă та çаптарнă,
Хыр кĕрешĕ таршшĕпе
Йĕр туса хăварнă.

Куç-пусне Калля пичче
Йĕр çинчен илмерĕ,
Яланах такан çинчен
Анасси килмерĕ.

Хыр кĕрпи тăка-тăка,
Аялта Якурĕ
Йăнтăр-янтăр пăчăка
Юрлаттарчĕ юрă.

Чинавье инкен ялта
Тăрасси килмерĕ,
Çынсемпе пĕрле кунта
Савăнса ĕçлерĕ.

---

* Эйпет—лайăх, аван.

Уçă сывлăшра çĕрле,
Ир те, кăнтăрла та
Вăй кĕмелĕх çимелле
Вăрманти бригада.

Пĕр самант та мăн хуран
Сивĕнме пĕлмерĕ,
Пĕр кăвак та пĕр хура
Тĕтĕмре вĕрерĕ.

Пăтăпа какай шăрши
Сывлăша тутлатрĕ,
Вăрманта эрне хушши
Сăмсаран каймарĕ.

Халĕ типĕ вăхăтра
Куçарса лартмалăх
Вармантa типет пура
Çичĕ-сакăр тавлăк.

Каçхине, пĕррехинче,
Павăл шухăшларĕ:
Халăха çерем çинче
Пухăнма каларĕ.

Çĕнĕ пӳрт илсе килме,
Мăкласа лартма та
Тумалла иккен ниме
Виççĕмĕш бригадăн.

—Чĕнессе кĕтмесĕрех,
Пĕр тăван пек хапăл
Тухмалла пурте ирех!—
Терĕ çамрак Павăл.

Павăл шăллĕ умĕнче
Чĕринчи кăварĕ
Çуннине Калля пичче
Ним те калаймарĕ.

Тавтуса пĕрре сăмах,
Пĕр сăмах пулин те,
Каласси килет, анчах
Куççулленчĕ ĕнтĕ.

Ирхине кашта çинчен
Сар автан анманччĕ,
Колхозри килкартинче
Çын сасси хускалчĕ.

Мал енчи яка çулпа—
Вăрмана тӳп-тӳрĕ
Кайрĕ йышлă урапа,
Шăлтăр-шăлтăр турĕ.

Акатуй вăйĕи чухне
Хăйĕн пуçĕ урлă
Çичĕ пăтла çынсене
Ывăтса чап курнă

Шеп Микка тĕпсакайне
Тĕпчесе çӳрерĕ,
Урата юписене
Тăр та тăр силлерĕ.

Çуртсене унтан хитре,
Лайăх тăваканĕ
Районта тата тепре,
Тепĕр çын тупан-и!

Эпĕ кӳрщĕ ялсенче
Хушăран пулатăп,
Пӳртсене Микка хăшне
Тунине паллатăп.

Кашни пӳртĕн хĕррипе
Карнизсем тыттарнă,
Пурçăн тутăр вĕçĕ пек
Чĕнтĕрсем хаварнă.

Кăвакарчăн пурăнма
Вырăн пултăр чаплă,—
Килсерен пĕрер хăма
Пӳрт умне вăл çапнă.

—Сан пӳртне, Калля пичче,
Йĕркелерĕ халăх.
Çавăнпа вăл ял çинче
Пултăр курăнмалăх.

Пуринчен те аякка
Курăнса çуталтăр!—
Каласа хурать Микка
Татăклăн та паттăр.

Никĕсне пăртак йăтас,—
Тет Калля пиччемĕр.
Тӳнкĕр-тӳнкĕр турĕ сас
Пĕр вĕçĕ-хĕррисĕр.

Кӗрленай вӑрманӗнчен
Ҫитрӗҫ умлӑн-хыҫлӑн.
Каччӑсем лавсем ҫинче
Пӑшатан пек куҫлӑ.

Хӗрлӗ, шурӑ та таса
Чечексем пуҫтарнӑ,
Картуссем ҫине ҫакса
Йӗркипе тултарнӑ.

Типсе ларнӑ ку пура
Ҫичӗ-сакӑр тавлӑк,
Кӗленче пекех вара
Яп-яка, янравлӑ.

Пӗренен картне-мӗнне
Ватасран хӑраҫҫӗ,
Ҫавӑнпа та ҫӗр ҫине
Ерипен хураҫҫӗ.

Хӗрипраҫ пӗр ушкӑнпа
Шурлӑхра ҫӳренӗ,
Виҫӗ пысӑк урапа
Мӑк пухса тиенӗ.

Улӑхран лашасене
Юриехваскатнӑ,
Килсе ҫитнӗ те мӑкне
Килкартне пушатнӑ.

Никӗс те пулса ҫитет,
Тӗпсакай те тарӑн.
Мӑклама пуҫлар-и?—тет,
Сӗр-сӗрлет хӗрарӑм.

Килнӗ-мӗн ҫункав пухма
Ачипчи те хапӑл.
— Вӑхӑт ҫитрӗ пуҫлама!—
Терӗ ҫамрӑк Павӑл.

Виҫ-тӑватӑ вӗрене
Арҫынсем тытаҫҫӗ,
Никӗсри пӗренене
Харӑссӑн йӑтаҫҫӗ.

— Ой, ишшо, ишшо та раз
Вырӑсла тытар-и!—
Терӗ те пӗр ушкӑн сас
Кӗрлесе шавларӗ.

Шӑрӑх сывлӑш таврара
Сӳрӗлсе ҫитменччӗ.
Ҫӳлӗрен ҫӳле пура
Васкаса ҫӗкленчӗ.

Урайне те маччине,
Чутласа сармашкӑн
Юлчӗҫ халь Калля патне
Ӑстасем пӗр ушкӑн.

Хыпӑнса ӗҫленӗрен
Ырӑ вӑхӑт килчӗ.
Курӑнать Калля пиччен
Хир-хир урлӑ пӳрчӗ.

Пур ҫуртсем те хушшинче
Инҫетрен паллатӑн,—
Ялтӑрать урам енче
Чӳречи тӑваттӑн.

Каҫхине хӗвел вылять
Мерченпе ахахӑн,
Кӑн-кӑвак ҫиҫсе тӑрать
Чӳрече янахӗ.

Ырӑ халӑх вӑйӗпе
Лартнӑ ҫурт типтерлӗ,
Вӗтӗрех хӑмасемпе
Тӑррине виттернӗ.

Ӗлӗкхи пуянсенчен
Чаплӑ лартнӑ халӑх.
Ҫурчӗ халь Калля пиччен
Вырӑсла хапхаллӑ.

Таврари ӑста Микка
Пӗр кун та канмарӗ,
Ик юшкаллӑ кӑмака
Кӑларма васкарӗ.

Аллӑ градус шартлама
Сивӗре хаваслӑн
Хӗртӗнсе кӑна выртма
Кӑмака ҫи аслӑ.

Айккинчи тӑмне Микка
Якатса пӗтерчӗ.
— Эх, пӗҫертӗр кӑмака
Кулленех икерчӗ!—

Терĕ те кăвар çине
Хучĕ тимĕр татăк.
Вăл хăпарчĕ пӳрт умне
Пусмапа сасартăк.

Хăш çулта, хăш уйăхра
Ыра ĕмĕр çурчĕ
Халăх лартнине вара
Тимĕрпе вăл çырчĕ.

Çырнинче колхозăн пур
Хӳхĕм ячĕ „Атăл".
Яланхи пекех матур
Килчĕ-кĕчĕ Павăл.

Пĕтĕм чун кăмăлĕнчен
Павăла мухтарĕ,
Тав туса Калля пичче
Нумайччен каларĕ.

— Санăн телейне тупса
Пана çын лере вăл,—
Тенĕ май уткаласа
Ирткелерĕ Павăл.

— Районта-и? Хăш енче?
Е кунти çын мар-и?—
Аптраса Калля пичче
Аллине сулларĕ.

— Эсĕ кур вăл çын сăнне,—
Терĕ çамрăк Павăл.
Пычĕ вăл тĕпел енне
Васкаса алхапăл.

Тĕпелти стена çине
Кантăка тĕлме-тĕл
Аслă Сталин портретне
Çакрĕ председатель.

18

Кĕр çитни таçта та паллă,
Сарă йĕрĕ пур.
Виç кĕтес карта-карталлă
Иртрĕ кайăк-хур.

Сывлăш сивĕнме пуçларĕ,
Кун та вăрăм мар.
Кунсерен типсе, сап-сарă
Курăнать вăрман.

Пĕлĕт витĕр кĕр хĕвелĕ
Пăхнă сехетре
Çӳннĕ пек кĕрен хĕлхемĕ
Ăшăтмасть хире.

Кăнтăра вĕçсе каймашкăн
Самăр пуласси
Килнĕрен, кĕрлет халь ушкăн
Кураксен сасси.

Пĕлĕт пек вĕсем вĕçеççĕ
Пушă хирсене,
Ķаçхине канма килеççĕ
Йăмрасем çине.

Пуласси килет чĕрчунăн
Кĕркунне пуян.
Шĕкĕлченĕ мăйăр хунă
Шăтăкне арлан.

Çăралса çĕкленчĕ уçăм
Халĕ таврара.
Янтăрать çăлкуç пек уçă
Сассăм юрăра.

Сĕтелли çине лартмалăх
Вăрăм хĕл валли
Тутă çимĕç пухнă халăх
Нӳхрепсем тулли.

Купăсталлă та хăярлă
Пысăк каткана
Калĕмпĕр ярса тултарнă
Тутлатма кăна.

Тăварланă ырă çимĕç
Çĕресрен тата
Пур хыткан юман çулçи-мĕн
Тĕпĕнче, шалта.

Хĕпĕртет Калля пиччемĕр
„Атăл" колхозран
Халĕ аллă икĕ центнер
Тырă панăран.

Япала илме хăвачĕ,
Терт-терменĕ* пур.
Пальтопа пиншак туянчĕ
Кĕркунне Якур.

Ашшĕ ĕмĕрте, ниçта та
Тăхăнса курман
Çеп-çемçе кунчаллă атă
Якурта паян.

Курăксăр, çара та пушă
Нӳрлĕ çĕр çине
Хăварса пырать калушĕ
„Скороход“ ятне.

Çиййĕнчи вĕр-çĕн тумтирĕ
Килĕшет ăна.
Вĕренме Калля Якурĕ
Кайрĕ хулана.

Кунсерен çынсем ĕçлерĕç,
Итемри тырра
Çапнă хыççăн та пĕтмерĕç
Ĕçсем колхозра.

Шыв пĕве пуçланă халăх
Шавлă пулнăран
Çурăлса каяс пек халĕ
Ян каять вăрман.

Хоп! та хоп!—тесе хастаррăн
Харăс çапупа
Лачăр-лачăр, тарăн-тарăн
Тăрăнать юпа.

Пĕрисем тăпра чаваççĕ,
Теприсем лашасемпе
Чул та çапă турттараççĕ
Лавĕ-лавĕпе.

Тепĕр çул электăр çутă
Кĕртесси çинчен
Килĕшӳ те, калаçу та
Пулнă ялсенче.

Канавсем чавса хума та
Ыттине тума
Тепĕр ушкăн, пĕр бригада,
Аннă айлăма.

Хуралса кĕрхи çанталăк
Ячĕ çумăра,
Çавăнпа та канчĕ халăх
„Атăл“ колхозра.

Çамрăк Павăл планĕ тăрăх,
Çумăрлă кунта
Пĕр тăван пек çирĕп халăх
Ĕç тупать тата.

Йăпăркка çилсем пек вирлĕ
Çӳреме хĕлле
Хăмăт та çуна та кирлĕ,—
Пĕкĕ илмелле.

Килĕрен киле электăр
Çуттине яма,
Йĕкĕ хутлă йăлтăр-ялтăр
Клуб çуртне лартма,

Тилĕпе путек çухаллă
Пальтосем илме
Пулмалла колхоз укçаллă,
Тулмалла пӳлме.

Ĕлĕк те çӳхе тупанлă
Çунасем тăвассипе
Вĕсен ялĕ пулнă паллă
Хăй чаппе, асталăхпе.

Чăвашсем авса сăрланă
Хурама пĕкки
Çĕпĕре çитсе янранă
Хăй хитре пирки.

Çыннисем хавас та хапăл,
Ĕçлеме ăста,
Çавăнпа та уçрĕ Павăл
Мастерской ялта.

Юмахпа халап ямалăх
Вăхăт çук кунта.
Вĕренес йĕрке план тăрăх
Тăсалать ялта.

* Терт-терменĕ—кирлĕ вăхăтра вăй пур тенине пĕлтерет. „Терт пулсан,—терменĕ те пур“ —теççĕ халăх хушшинче.

Пĕр самант кахал тымарĕ*
Ӳстерме май ҫук.
Каҫсерен пула пуҫларĕ
Агротехкружок.

Вĕренме унта ҫӳрерĕ
Чинавье инке.
Ҫыварма тӳшек-минтерĕ
Илертмест иккен.

Вăхăтра пĕрре типтерлĕ
Тавранман пирки
Упăшки туса иртттернĕ
Пĕр камит пекки.

Ялкăшать татти-сыпписĕр
Пысăк кăмака.
Хĕрлĕ ҫутă кантăк витĕр
Кайнă аякка.

Урамри нумай кӳленчĕк,
Ҫутă ӳкнипе,
Ялтăрарĕ, илемленчĕ
Ылтăн тĕсĕпе.

Пăшăлти кăвас-чĕресĕ
Калаҫать шалта,
Хăпарса ҫитет, йĕркесĕр
Ӳккелет чуста.

Инкене Калля пиччемĕр
Шав кĕтсе ларать.
Пӳрт вĕри, анчах вăл тепĕр
Пулене хурать.

Мунчари пекех тултарнă
Ăшшине нумай.
Пичĕ те, ҫамки те тарлă,
Йĕп-йĕпе хул ай.

Кăмаки тытма ҫук хытă
Пĕҫерет алла.
Ҫăкăр та паян, хуплу та
Кукăль лартмалла.

Упăшки туртса кăларчĕ
Сӳннĕ кăварне.
Тарăхать, анчах та карчăк
Тавранмасть килне.

— Пĕҫерме хамах пултарăп, —
Тет старик хайне,
Таварса ярать мантарăн
Икĕ ҫаннине.

Мелкепе вăл шăлкаларĕ
Кăмаки тĕпне,
Такана ҫинче унарĕ
Йӳҫнĕ чустине.

Пултарать, чăнах та питĕ
Пултарать пичче.
Ҫăкăр та, палан кукли те
Халь кăмакинче.

— Хуплуне тăватпăр лайăх, —
Тет старик хайне,
Тултарать кăркка какайĕ
Пĕр ҫатма ҫине.

Суханне те хучĕ татăк,
Пăрăҫ та хурать
Васкаса, анчах та карчăк
Тем туса ларать.

Хуплăва вăл йĕркелерĕ
Лартрĕ пĕҫерме,
Паккаса илес-ха, терĕ,
Ырă чĕлĕме.

Шырасан та, тупăнмарĕ
Кукăр пуҫ, инкек.
Килчĕ-кĕчĕ те шавларĕ
Чинавье инке:

— Кăмака ҫинчен те маннă
Эпĕ хальхинче.
—Вăрҫăри пек хатĕр манăн,—
Тет Калля пичче.

* Кĕркунне кахал тымарĕ ӳсет, ҫуркунне хăрать, —тенĕ ĕлĕк.

Вăл хăех туртса кăларчĕ
Савнă апатне:
— Вĕрилле тутан-ха, карчăк!—
Терĕ арăмне.

— Кукăлĕ епле, чипер-и?
Эх, аван иккен!—
Чăннипех çисе мухтарĕ
Чинавье инке.

Сахăрпа пылак шăршиллĕ
Кукăль умĕнче
Чаплă повар пек телейлĕ
Пăхкалать пичче.

Хуплуне те тутанасшăн
Чинавье инке,
Çĕçĕпе касса ачашшăн
Уйăрать икке.

Астивсен, çӳçенчĕ карчăк, —
Йӳçĕ пек темме,—
Хуплуран туртса кăларчĕ
Пиçнĕ чĕлĕме.

— Тĕтĕм ашшĕ, аппаланчăк,—
Терĕ старикне,
Чĕлеме тытса сасартăк
Печĕ урайне.

Татăк-татăк, чĕллĕн-чĕллĕн
Чăпăк ванчĕ. Шел!
Пахарпа тыттарнă чĕлĕм
Тĕрĕс те тĕкел.

19

Пӳрт пек хӳтĕ витере,
Типĕ улăм шăршинче,
Кăнтăрла, каçа, ире
Ирттерет Калля пичче.

Сăлпаранлă сивĕ çил
Аснă чух, вите умне
— Чим те чим,—тесе çерçи
Сăранать апат çине.

— Çийĕр пĕсехе тулли,—
Текелет Калля пичче.
Йăптăхран тасатмалли
Йывăç хырчăк аллинче.

Çурăм тăрăх çăт та çат
Тутарать аллисемпе,
Вăл хăй тĕллĕн калаçать
Умĕнчи лашасемпе.

— Хирсенче çурхи ака
Кĕрлесе пуçланиччен
Çăмарта пекех яка
Пулăр,—тет Калля пичче.

Пĕр хитре, йăлттам лаша
Пур колхозăн витинче.
Çулсерен вăл тавлашать
Акатуй вăйăисенче.

Утсенчен ун пек шурри
Çук-тăр пирĕн районра,
Яштака, тăват ури
Чĕркуççи таран хура.

Курăнать хĕвеллĕ кун
Кайăк пек вăл аякран,
Çавăнпа та ячĕ ун,
Павăл хунă ят—„Чарлан".

Унăн çутă та таса
Уйрăм вырăн, пĕр пĕччен.
Яланах ăна пăхса
Савăнать Калля пичче.

Кăнтăрла та, ир те каç
Мăнтăрлантăр, çавăнпа
Кункăра çинчен каймасть
Тутă сĕлĕпе урпа.

Кĕреçе илсе тухать
Юр хырма Калля пичче.
Çуркунне хĕвел вылять
Урамра, çуртсем çинче.

Пĕр сĕвем пек татăк та
Шурă пĕлĕт çуккипе
Кăн-кăвак та, тарăн та
Курăнса тăрать тӳпе.

Кăвакарчăн ушкăнне
Тупнă кăйкăр-хурчăка,
Хӳтерет пĕр мĕскĕне
Аякка та аякка.

Мĕн тесен те вилĕмрен
Хӳтĕ вырăн тупмалла,
Çавăнпа анать çӳлтен
Кăвакарчăн аяла.

Терт-терменĕ пĕтиччен
Вăл çитесшĕн çын патне,
Çапăнать Калля пиччен
Аллинчи кĕреçине.

Çунатне амантнăскер
Вĕçтерет килкартине
Шĕл-кăвар пекех чипер
Çунакан тĕккисене.

— Пĕлĕтпе çĕр хушшинче
Ĕлĕкхи пек кайĕ-ха,—
Терĕ те Калля пичче
Тытрĕ халсăр кайăка.

Конюхсем выртса тăран
Пĕчĕкçĕ лутра пӳртре
Иртĕ-ха хаяр суран,
Вăй та кĕрĕ ӳт-тире.

Çунатне çыхать пирпе
Ыра пӳртĕн ăшшинче.
Кайăка хĕрхеннипе
Шухăшлать Калля пичче.

„Хамăн ватă ĕмĕрте
Çунатта амантнă пек,
Кăвакарчăн, эпĕ те
Куртăм пĕр усал инкек.

Курайман Хараç тăшман
Сикрĕ-ларчĕ ман çине.
Юлчĕ кĕл те кăмрăк ман
Çуртăм-йĕрĕм вырăнне.

Иртсе кайрĕ йĕркипе
Пур асап, хура хĕн-хур.
Кĕрĕкпе сăхман, кĕпе
Ăраскал та çурт та пур.

Пулĕ санăн та хăват
Шăнăрлă çунатсенче...“
Вир кĕрпи сапса парать
Урайне Калля пичче.

Вăл правлени хушнипе
Витере ĕçлет кăçал,
Ĕçĕ пит нумайййипе
Килĕнче пулать сахал.

Йĕтĕн-кантăр ăнтарма
Павăл хушнă инкене,
Хĕрсемпе хĕрарăма
Çырнă ун бригадине.

Ушкăнра епле вăй-хал
Тапнине курса-тăрса,
Çулсерен ăнланчĕ ял,
Кĕчĕ „Атăл“ колхоза.

Яхăнне те пыманни
Юлнă пĕр пĕччен мĕлке —
Кăрманай ратни çынни,
Кутăн Петĕркке.

Ĕлĕк, çамрăк чух, ялан
Кунсерен ыйткалама
Утнă вăл ялтан яла,
Урамран та урама.

Чăм тара ӳксе хирте
Ĕçлесси килмен енне
Парахмасть вăл халĕ те
Кĕлĕмçĕ хутаççине.

Хӳмесен хăмисене
Хайпăтса çӳре-çӳре,
Хуткалать кăмакине
Виç-тăват кунта пĕрре.

Çук минтер те, çук тӳшек,
Çийĕ те ялан çара,
Çавăнпа вăл пурăш пек
Сывăрать кăмакара.

Куç-пуçне шăлса хайхи
Вăл тăрать те ирхине
Асархать камсен мăрйи
Тутлăрах сывланине.

— Тыт икерчĕ, Петĕркке! —
Тенине илтес килет,
Хĕрĕх саплăк кĕрĕкне
Тăхăнса кӳрше кĕрет.

— Ĕлĕкхи йĕркесенчен
Юлнă кивĕ экземпляр,—
Терĕ Павал ун çинчен
Ăнсăртран, куласшăн мар.

Çамрăк Павăл калани
Пулса кайрĕ çĕнĕ ят.
„Экземпляр"—тесе чĕнни
Килĕрен киле каять.

Музее хура пӳртне
Куçарса каяс пирки
Пулнă, имĕш, кĕркунне
Пысăк калаçу пекки.

Укçине чиксе, юри
Хаклашса пахмя малтан
Те профессор, те тепри
Килнĕ, тет, Шупашкартан.

— Эпĕ йӳçĕ сывлăша
Юрататăп пĕчĕкрен,—
Шăлĕ витĕр харкашса
Петĕркке тулашнă-мĕн.

Килсе çитрĕ ерипен
Янтăравлă çуркунне,
Карчĕ çурт айăккипе
Сарă пар тĕррисене.

Йăвари çăмартаран
Тухнă халĕ хур чĕппи.
Тутанмасть хурланнăран
Кăвакарчăн вир кĕрпи.

Унăн ик çуначĕ те
Сывă халĕ, ирĕкре
Вĕçесси килет çӳлте,
Таран уçă тӳпере.

Хăвасем çырмасенче
Ларнă шурă кăчăка.
Вĕçтерет Калля пичче
Тĕрекленнĕ кайăка.

Кăвакарчăн пĕр пĕччен
Пĕлĕтре вылянине
Вăл тинкернĕ те сисмен
Çамрăк Павăл килнине.

Кулленех пĕр-икĕ хут
Павăл халь пулать хирте,
Çавăнпа та хуратут
Тухнă пит çăмартине.

— Районти артель юри
Тĕреленĕ тутăра
Вĕçтерме пĕлетпĕр-и
Хамăр вăйлă алăра?

Илĕ-и „Чарлан" чупса
Акатуй парнисене?—
Тутипе кулкаласа
Вăл пăхать Калля çине.

— Пирĕн алăра пулать
Çичĕ тутăр хальхинче!—
Лашасем енне тăсать
Аллине Калля пичче.

20

Вĕçсĕр-хĕрсĕр янракан
Тăрисен юррисенче
Савăнса пырать ака
Сарлака анасенче.

Тракторсем хирте канни
Пĕр самант та курăнмасть,
Сывлăша кисрентерни
Илтĕнет сĕм тĕттĕм каç.

Краççынпа бензин шăрши
Тăкăс тулнă хирсене.
Йăлтăркка хĕвел ăшши
Тарлатать этемсене.

Пăчă сывлăша уçса
Çил вĕрсен, хура тăпра
Варкăшса кĕрет куçа,
Халхана та çăвара.

Тырпула кĕрес тути
Сисĕнет пĕрчисенче,
Кăчăрт-кăчăрт-кăчăрти
Тукалать шăлсем çинче.

Эх, хура çĕр! Тĕнчере
Çук саиран та мăнтăрри,
Çавăнпа та чĕрере
Çуралать мухтав юрри.

Сĕткенӳ хăватлă сан,
Тулнă эсĕ мулупа.
Хурама турта аксан,
Ӳссе ларĕ урапа.

Пархатарлă пĕрчĕрен
Ҫитмĕл ҫиччĕ ӳстерме
Пĕр канмасăр кунсерен
Турăмăр ҫурхи ҫĕртме.

Сарă хăмаллă пусса
Хуратса, ҫурхи ака
Пĕтерсен, хавасланса,
Пусмалла эпир така!

Кĕтĕве ирех хуса
Ҫатлатать кĕтӳҫ пушши.
Таран ҫырана тулса
Йăпатать мунча шăрши.

Хулăм ларнă кирĕке
Ӳт ҫинчен тасатмалла,
Мăшăр ешĕл милĕке
Тытмалла патвар алла.

Сарă хĕвелпе пĕрле
Анна та тӳшек ҫинчен,
Иванов каларĕшле,
Чăваш ларать мунчинче.

Ырă ҫимĕк курăкпе
Шăлмалла ҫан-ҫурăмне,
Ҫĕнĕ шурă кĕпепе
Каймалла акатуйне.

Акатуй валли парне
Пĕр эрне тĕр маларах
Пуҫтарма урамсене
Тухрĕ виҫĕ урхамах.

Халăхăн уяв йĕрки
Пуррине ăнланмалла,
Ҫĕнĕ кин те сарă кин
Хӳхĕм сĕлкĕ памалла*

Паттăрсен аллисенче
Вĕлкĕшсе тăма юри
Пуҫтараççĕ хĕрсенчен
Тĕрĕленĕ алтутри.

Юланутçă юрттипе
Иртрĕ ҫурчĕ умĕнчен.
— Ил-ха, шăллăм, пĕр парне!—
Кăшкăрать Калля пичче.

Ҫичĕ ялăн вăйĕпе
Иртекен уяв валли
Тĕрĕленĕ пĕр кĕпе
Чинавье инке алли.

— Пĕтĕм хамăр халăхран
Тавтапуҫ, сăпаççипе!—
Теекен хитре ачан
Аллинче вĕҫет кĕпе.

Ҫитрĕ-мĕн хапха умне
Вăрахчен кĕттернĕ кун.
Ҫуркунне чĕресене
Хускатать хавaслă юн.

Йĕнерленĕ лашине
Чуптарать Калля пичче,
Пур ҫынна Акатуйне
Йыхăрать урамсенче:

— Ырă халăх, ял ҫынни,
Утăр харăс, ушкăнпе!
Эй! те эй!—утаймании
Шутăр икĕ аллипе!

Кăмака ҫинче выртма—
Эй! те эй! — вăтанмалла,
Вăкăр пуҫĕ кышлама
Шăлсăр карчăк пымалла!..

Лашапа тата ҫуран
Йышлă халăх килнĕрен,
Кĕрлесе тăрать паян
Виҫĕ ҫухрăмри ҫерем.

Чăвашла та вырăсла
Илтĕнет хавaслă шав.
Чи ҫӳлте шĕл кăварла
Ялкăшать хăмач ялав.

---

* Акатуй иртернĕ чух кăçал çеç качча тухнисенчен—çĕнĕ кинсенчен—сĕлкĕ—тĕрĕленĕ алшăлли пуçтараççĕ.

Çĕр çине карта-карта
Акăш-кайăк ларнă пек,
Пухăннă хĕрсем кунта
Юр пек шурă тумĕпе.

Купăспа йĕлме кĕсле
Янрасан, сехет хушши
Савнă хĕрсемпе пĕрле
Каччăсен каять ташши.

Аттисен кĕлисене
Алăпа çапа-çапа,
Аванса хĕрсен умне
Ярăнаççĕ ушкăнпа.

Хĕрсене, пĕрре пăхсах
Кăмăла каяс тесе,
Карттуса хăяккăнрах
Лартнă-мĕн каппаййисем.

Пĕр гектар та ытлашши
Çаврака çерем кĕрлет,
Ал çупни те, ши! те ши!
Шăхăрни те илтĕнет.

Виçĕ хут шăхлич сасси
Халăха курма чĕнсен,
Паттăрсен кĕрешесси
Пуçланса каять иккен.

Çӳлĕ мар, лутра кăна
Хулăм çын кĕрешӳре
Çĕклесе илет çынна,
Пăчăртать ăна пĕрре.

Хыр кĕреш пек сарлака
Хулпуççи çумне тытса
Ывăтать вăл аякка
Патăл-патăл тутарса.

Темиçе çынна çапла
Вăркăнтарчĕ те пĕччен
Майăхне шăла-шăла
Вăл ларать çерем çинче.

Картлă-картлă мăнтăркка
Курăнать кервен ĕнси.
„Атăл“ колхозри Миккан
Шухăш пур кĕрешесси.

Йĕтĕн пир те яп-яка
Тĕрĕленĕ кĕпине
Ывăтса ярать Микка
Айккинчи юпа çине.

Пĕр-пĕрне шăп пилĕкрен
Питĕ хытă ик енчен
Пушкăртла тытма вĕсен
Сĕлкĕ пур аллисенче.

Паттăрсем пĕрне-пĕри
Çĕр çинчен йатса илме
Тапăл-тапăл мĕн тери
Кисретеççĕ çереме.

Эхлетсе сывланипе
Хĕрелсе каять Микка.
Аллинчи алшăллипе
Пăчăртать вăл шыçмака.

Каялла тăрать тасса
Урине, сулахайне,
Çурăмне кăштах авса
Тайăлать вĕчи çине.

Пĕр кĕске самант кăна
Вăл тăрать пăртак канса,
Ывăтса ярать çынна
Хулĕ урла кустарса.

— Тухрĕ пирĕн çын чапа!
Сĕлкĕ унăн аллинче!—
Аллине çупа-çупа
Кăшкăрать Калля пичче.

Илтĕнет уяв çынни
Миккана „урра-урра!“
Каласа саламлани,
Ал çупни те таврара.

Мĕн камит те мерекке
Курнине çырса пыма,
Сахалтан та, пин йĕрке
Кирлĕ манăн сăввăма.

Çаврака çерем çинче
Мĕн вăййи кăна пулмасть!
Ав лере урисенче
Икĕ каччăн пĕр хутаç.

Лăхăл-лахăл култарса
Каялла ўкет пĕри,
Тепĕр каччă тăлланса
Малалла ўкет юри.

Пĕр камитçĕ-эккемет,
Пăхăр-ха, сĕтел тавра
Пуç çине лартса çўрет
Вĕрекен сăмавара.

Карăнса ларать юпа
Пĕтĕм халăх умĕнче.
Унталла нумайранпа
Пăхкалать Калля пичче.

Акатуй валли инке
Тĕрĕленĕ пир кĕпе
Тăрринче вĕçет иккен
Вĕлтĕр-вĕлтĕр çилсемпе.

Йĕкĕтсем аллисемпе
Ыталаççĕ юпана,
Хăпараççĕ ерипен
Çуррине ытла кăна.

Пĕр ача ак хăпарать,
Васкатать аллисене.
Сикрĕ-ларчĕ хăямат
Чи çўле, чи тăррине.

Чинавье инке тĕрри
Камăн çирĕп аллинче
Иккенне пĕлме юри
Уттарать Калля пичче.

Йăпăрт-япăрт йăпăркка
Çăмаллăн çĕкленекен
Хăй ўстернĕ хурчăка,
Хăй ачи Якур иккен.

— Лашасем килеççĕ! — тет
Тĕкĕр* витĕр пăхакан.
Чăннипех те, çĕкленет
Аякра хура тусан.

Çăмарта пекех „Чарлан“
Ăн тарлаттăр çурăмне,
Çавăнпа йĕнер хуман
Çамрăк Павăл ун çине.

Хăйĕнчен ирттересрен
Акăш-макăш тавлашса,
Ăнтăлать, хутран-ситрен
Тулхăрса илет лаша.

Хăйĕнпе пĕр тан пулса
Хыт чупса пыраканне
Хăварать вăл тăратса,
Хыçалти тусан ăшне.

Хăлхара çурхи çиле
Шăхăртса пыра-пыра,
Ял уявĕ еннелле
Таклатать тăват ура.

Çулăн икĕ айккипе
Пысăк мар вăрман ларать,
Ушкăн ешĕл кайăк пек
Курăнса кăна юлать.

Пĕр кăвак та пĕр хура
Курăнать хумханнă уй.
Кĕрлесе тăрать умра
Аслă пысăк Акатуй.

— „Атăл“ колхоза урра! “ —
Кăшкăрма çынсем хавас,
Каллĕ-маллĕ сывлăшра
Янраса çўрет çав сас.

Кĕпĕр-кĕпĕр çул сине
Тухнă халăх хушшинче
Пуç çинче шĕлепкине
Çавăрать Калля пичче.

Павăл пĕрхĕт-кайăк пек
Ўпĕнет лаша çине,
Çĕмĕрен пек пынипе
Хускатмасть урисене.

Районти парткомитет
Секретарĕн аллинчен
Парнене ярса илет
Юртакан лаша çинчен.

---

* Тĕкĕр—бинокль.

Районти ĕçчен артель
Тĕрĕленĕ тутăра
Вĕлкĕштерчĕ вĕл те вĕл
Павăл сылтăм алара.

21

Çĕртмере темрен те тарлă
Лашасем çине паян
Пур йышне пухса тултарнă
Найăлти шăна-пăван.

Явăнать шăна-пăванĕ,
Вĕтелет сăмсисемпе.
Сӳрери лаша каçанĕ
Чĕрĕ юнлă, йĕп-йĕпе.

Чăм тара ӳксе çӳрерĕ
Шăрăхра Калля пичче,
Иртенпех сӳре сӳрерĕ
Ик вăрман тĕпекĕнче.

Йытпырши те кивĕ улăм
Çакланать сӳре шăлне.
Пĕшкĕннĕ чухне çан-çурăм
Систерет ыратнине.

Шăрăх кун çĕртме хĕвелĕ
Ăшалана çĕр çинче
Антăра пек йывăр халĕ
Уткалать Калля пичче.

Кăчăкă çăмраң çĕленĕ
Çавраки шĕлепкине
Йĕпетме юри чăмтарнă
Темиçе хут çăл куçне.

Кăмака пекех çанталăк
Кăнтăрла çунтарнипе
Пăчăхса тăрать тавралăх
Пĕçерет çири кĕпе.

Сывлăша уçса вĕрмерĕ
Вăштăр-вăштăр çил паян.
Нăй-нăй-нăй туса сĕрлерĕ
Кукăркут-и е пăван.

Нăйăл-нăйăл аппаланчăк
Явăнса хăратнăран
Ĕрĕхсе лаша сасартăк
Тапрĕ-сикрĕ вырăнтан.

Çаврăçил пек хăвăрт кайрĕ,
Пурпĕрех тилхепинчен
Уртăнса пырса ямарĕ
Аллине Калля пичче.

Чĕркуççи çинче те пычĕ,
Хырăмпа та шумалла
Пулчĕ ун, анчах та учĕ
Хытă кайрĕ малалла.

Курăк ăшĕнчи пытанчăк
Тунката тăрри çине
Месерле лартса хăварчĕ
Кăтăр-кăтăр сӳрене.

Кăкăра чĕрет тем те пĕр,
Хуçăлма тăрать ĕнсе.
Сĕтĕрнет Калля пиччемĕр
Урлă-пирлĕ чикĕнсе.

Йăлтăр-ялтăр вут сасартăк
Сикрĕ-тухрĕ куçĕнчен.
Тилхепи кăна пĕр татăк
Юлчĕ унăн аллинче.

Сиккипе кайса пытанчĕ
Учĕ сулхăн вăрмана.
Унăн хыççăн мăкăрланчĕ
Тусанпа тăпра кăна.

Ыратать шăнăр тымарĕ
Чĕркуççийĕ патĕнче.
Ыратсан та, пурпĕр кайрĕ
Вăрмана Калля пичче.

Ĕрĕхсе кайса хаяррăн
Никама тертпе нуша
Кăтартман пекех, мăнтарăн
Пăхкалать сӳрен лаша.

Çĕлĕпе сипетлĕ утă
Ĕмĕрне те çименçи
Кăчăрт-кăчăрт, хытă-хытă
Кимĕрет юман çулçи.

— Сӳресси нумай юлмарĕ,
Пĕтĕ энтрĕк çитиччен,—
Çурăмран шăлса каларĕ
Лашине Калля пичче.

Шурутпа пиçен тымарĕ
Юлмиччен хура çĕре
Тепĕр хут чĕрме пуçларĕ
Сулланса пырса сӳре.

Хĕвеле хуплана анлă
Шурă пĕлĕт айĕнче,
Сулхăнра, утать хаваслă
Шăхăрса Калля пичче.

Каллĕ-маллĕ, каллĕ-маллĕ
Шыв çинчи пекех сӳре
Силленсе пыратчĕ халĕ
Тикĕс те яка, хитре.

Чул-и е хăва тӳрачĕ
Шăл çине çакланчĕ-ши,—
Лăпăл-лапăл çапкаланчĕ
Пĕр самант хушши.

Айккинчен тытса çĕклерĕ
Сӳрене Калля пичче.
Ним пурри те сисĕнмерĕ
Курăк хушшинче.

Шыраса тĕпченĕçемĕн
Тупăнать инкек:
Çĕр пекех хура выртать-мĕн
Пĕр чугун чӳлмек.

Ункăсем туса, типтерлĕ
Чӳлмеке мĕнпур енчен
Пралуксем çыхса пĕтернĕ
Иккенне Калля пичче

Курчĕ те ансат ăнланчĕ.
Мул тавраш çакланнине,
Пăтăр-патăр таткаларĕ
Тутăхнă çыххисене.

Çиелтен хурса тултарнă
Кĕççепе пире уçсан,
Çута мар, анчах каварлă
Курăнса каять укçа.

Вăл шăлпа та çырткаларĕ,
Чĕркелерĕ чĕрнипе.
Васкаса чĕри таккарĕ
Нумайран тĕлĕннипе.

Пашалу укçа çап-çутă
Йăлтăр-ялтăр пуличчен
Йĕм пĕççи çинче пит хытă
Сăтăрать Калля пичче.

Çирĕм пилĕк тенкĕ тенĕ
Авалхи укçа çине
Мăнтăр та кăтра ӳкернĕ
Кĕтерне патша сăнне.

Умĕнче хăватлă ылтăн
Пĕр чугун чӳлмек тулли,
Çавăнпа та халĕ унăн
Тăр-тăр-тăр чĕтрет алли.

Ăнсăртран пĕр ĕççĕр карчăк,
Е мучи тĕл пуличчен
Хутаçа чиксе пуçтарчĕ
Чӳлмекне Калля пичче.

Ку чӳлмекĕн сас-хыпарĕ
Ĕлĕк пурччĕ ял çинче.
Чылайччен сăмах каймарĕ
Этемсен чĕлхисенчен.

Мул выртни çинчен пăртакçă
Илтнĕччĕ Калля пичче.
Хунă, тет, Митти Харaçĕ
Раскулачить тăвиччен.

Ун чухне ака тĕренĕ
Тĕртĕнменччĕ ку сăрта.
Ашкăрса пĕрле ĕрченĕ
Çӳçепе хава кунта.

Йывăçлă, анчах сĕткенлĕ
Вăтă çереме уçма
Çамрăк Павăл вĕтеленчĕ,
Тӳсеймен пăхса тăма.

Колхозри çынсем вăй-халлăн
Кăклани сая кайман.
Тĕпекре ниçта пĕр паллă,
Пĕр турат та курăнман.

Хăнари пек питĕ тутлă
Тăпрари пур апата
Тутанса, кашлана тулă
Хăмăш пек çăра унта.

Тукасри Митти Харaçĕ,
Сылккăран тарса килсен,
Чӳлмекне шыранă, теççĕ,
Вăрттăн-шарттăн каççерен.

Вăл арлан пек чавкаланă,
Чакаланнă та тырра
Чылаях унта таптанă.
Юлнă хуп-хура тăпра.

Вăл унта, сăпка пепекĕ
Йĕрнĕ пек, тăранайман
Макăрса, анчах чӳлмекĕ
Тупăнман та тупăнман.

Тарăн шухăшĕ капланчĕ
Пуçĕнче Калля пиччен,
Çавăнпа вăл халĕ маннă
Сӳресси çинчен.

Ушкăн пĕлĕт килнĕçемĕн
Хуралса пырать тӳпе.
Хирсемпе вăрман илемĕ
Тĕксĕмленчĕ ерипен.

Пĕлтĕрхи кашлич тымарĕ,
Тусанпа писен çулçи
Пуçтарса ирте нӳçларĕ
Умлăн-хыçлăн çавраçил.

Улăпла тĕнче кĕперĕ
Аякка, таçта çити,
Кĕмсĕртетнĕ пек, кĕрлерĕ
Вăрăм саслă аслати.

Шăрăхри тусанлă, йӳçĕ
Сывлăша тасатмалла—
Йалтăр-ялтăр кайрĕ çиçĕм
Пĕлĕтрен аялалла.

Шултăра тумламлă çумăр
Чĕресрен пек чашкăртса
Лӳшкетсен, ӳт-тир те çăмăл,
Хир те ешĕл, тап-таса.

Çумăр иртессе кĕтмерĕ,
Утланса Калля пичче
Лашине юртма хистерĕ
Сивĕ çумăр айĕнче.

Тикĕт пек çăра, пăтранчăк
Шыв кĕрлет шырлансенче.
Çумăр иртрĕ. Кăвакланчĕ
Таврари пĕтĕм тĕнче.

Ачапча та хĕпĕртенĕ,
Тухнă халь çерем çине,
Пĕç тĕпĕ таран çĕкленĕ
Тавăрса йĕммисене.

Витене кĕртсе хăварчĕ
Лашине Калля пичче,
Тĕлĕкри этем пек ларчĕ
Пӳртĕнчи сакки çинче.

—Çĕр тĕпне путса çухалтăр!
Ĕмĕрте инкек-синкек,
Пысăк терт анчах курма-тăр
Тупрăм эпĕ пĕр чӳлмек.

Тукасри Митти Харaçĕ
Кун çинчен пĕлес пулсан,
Эх, манпа вара калаçĕ,
Эх, тыттарĕ çамкаран...“

Ылтăн укçапа тултарнă
Хăямат чӳлмекĕнчен
Пăрăнмасть, ĕçри пек тарлă
Шухăшлать Калля пичче.

Янтăравлă та иленчĕк
Ылтăна юратнăран
Ахалех пĕтсе сӳсленчĕ
Çамрăклах Çарха Иван.

Пурччĕ пĕр илемлĕ каччă
Анаткас урамĕнче,
Хулара суту тăватчĕ
Ĕлĕк пĕр хуçа панче.

Ĕмĕтленнĕ вак-тĕвекĕн,
Ерипен пуяс тесе,
Чухламан укçа инкекĕ
Пуçĕ урлă лекессе.

Пысăк хĕрлĕ кирпĕч çуртăн
Варринчи сĕтел çинче
Тил хӳри пек сарă ылтăн
Выртнă-мĕн пĕррехинче.

Купипе выртать çап-çутă
Куранса нумай укçа.
Питĕ мăнтăр питлĕ, тутă
Шутласа ларать хуçа.

Ыванса вăл анкă-минкĕ
Пăхкаланă самантра
Каччă çирĕм пилĕк тенкĕ
Пенĕ-чикнĕ çăвара.

Сехремет çĕрме пуянăн
Умĕнче хăранăран,
Хăй сисмен те, çăтса янă
Укçана Çăрха Иван.

Хырăмра выртса çӳренĕ
Ылтăна ӳкересрен
Вăл ялан пăхса тĕпченĕ
Картана тухмассерен.

Ик çултан-и, сахалтан-и,
Çулсерен, пыра-киле
Тарăхать Çăрха Иванĕ,
Макăрса ярас килет.

Кĕленче хурса тултарнă
Çăмахсем çитерне пек,
Çĕрĕн-кунĕн ыраттарнă
Ăшчикне усал инкек.

Хырăмне пĕр тухтăр каснă,
Панă ылтăн укçине.
Сывалман, анчах хаваслă
Тавранать Иван килне.

Çамрăк вăйĕпе хăвачĕ
Выляса тăрас чухне
Вăл укçа пирки ăсанчĕ
Çăвана, тăпра айне.

Ылтăнăн ахаль пĕтес-и,—
Çирĕм пилĕк тенкинчен
Ăшшĕ лартрĕ те хĕресĕ
Çӳлĕрех ыттисенчен.

—Халĕ те Иван хĕресĕ
Куранать масар çинче,—
Каласа хурать сисмесĕр
Сасăпах Калля пичче.

—Тилпĕрен çимен-и эсĕ?
Антăра, мĕскер пирки
Куранать масар хĕресĕ?—
Çухăрса илет инки.

Ухватне тытса сиктерчĕ
Вăл хĕрӳ кăмакинче.
Çатлатса выртать икерчĕ
Çаврака çатма çинче.

— Колхоза каям-ха, карчăк,—
Терĕ те Калля пичче
Ерипен туртса кăларчĕ
Хутаçне сакайĕнчен.

— Çимелле чухне каян-и
Хутаçпа килтен киле?—
Тет инке, яшка хуранĕ
Капăкне иле-иле.

— Лашана памасăр юлнă
Сĕлĕ унăн тĕпĕнче,—
Пĕр суйман пекех хăюллă
Калаçать Калля пичче.

—Хăвăрт таврăн! Санăнирттĕр
Лăпăш-лапăш çӳресси!—
Шултăрканă алăк витĕр
Илтĕнет инке сасси.

Çиçĕм ялкăшса çунтарнă
Сывлăш уçă урамра.
Шуралса тĕтре хăпарнă
Ешĕл хирлĕ таврара.

Чĕлĕмри хĕрӳ тапакăн
Тĕтĕмне çерем çинче
Ункăн-ункăн, кăн-кăвакăн
Хăварать Калля пичче.

Вăл çулне кайма тĕллерĕ
Колхоза, правленине.
Тăсăлать сĕрен кĕперĕ*
Улах урлă инçене.

* Сĕрен кĕперĕ—асамат кĕперĕ.

Йывăç çурт, правлени çурчĕ,
Виçĕ пÿлĕмлĕ, çап-çут.
Пиччене унта тĕл пулчĕ
Хĕр ача, счетовод.

— Халĕ çеç кунтаччĕ Павăл,
Кайрĕ парти пухуне.
Килеймест паян,—тесе вăл
Кустарать шăрçисене.

— Пурччĕ ĕç пекки
партакçă,—
Текелет Калля пичче,
Хĕсĕнсе тăрать хутаçĕ
Сулахай хул айĕнче.

— Шурă чул-и, пысак мул-и
Хутаçра, Калля пичче?
—Халь, ачам, тем те пĕр пулĕ
Колхозри этемсенче.

Çутçанталăк питĕ лайăх,
Хускатать чĕресене.
Хутаçра-и? Икĕ кайăк,
Икĕ мăнтăр путене.

— Кайăк халĕ чĕрĕ мар-и?
Йывăр-и катартасси...—
Купăс евĕр янăрарĕ
Хĕр ачан çинçе сасси.

Шĕвĕ пылчăк урлă паттăр
Сиккелет Калля пичче.
Çамрăк Павăл пулмалла-тăр
Ялсоветăн çурчĕнче.

Пăлтăрти пусма çинче вăл
Урине шакка-шакка
Шăлкаларĕ те, алхапăл
Уçре йывăр алăка.

— Пысăках ĕçсен хыпарĕ
Пулмасан, кил тепĕр ир,—
Халхинчен хуллен каларĕ
Мăльăк Петĕр, бригадир.

— Халĕ кирлĕ! Питĕ кирлĕ!—
Пĕр самант Калля пичче
Пăхкаларĕ каллĕ-маллĕ
Пысăк алăк умĕнче.

—Павăл шăллăм, вăхăт парччĕ
Калаçма колхоз çынне!—
Терĕ те йалттам уттарчĕ
Тĕпелти сĕтел умне.

— Итлеме питех те хапăл.
Яра пар, анчах кĕскен!—
Кулкаларĕ ăшшăн Павăл,
Малтанах тем сиснĕскер.

— Кĕртмелле эпир электăр
Çуттине хавасланса,
Çавăнпа укçа нумай-тăр
Кирлĕ пирĕн колхоза.

Ылтăна илме пултарĕ
Хулари пĕр магазин,—
Ун çинчен пĕр кун каларĕ
Районти пĕр пысăк çын.

Эпĕ халĕ тупрăм ылтăн,
Тĕрĕслерĕм шăл çинче.
Чăн-чăн ылтăн!—терĕ хыттăн
Кăшкăрса Калля пичче.

— Ылтăн кирлĕ япала вăл.
Алă пар, мухтав сана!—
Ыталать хавасла Павăл
Пĕркеленнĕ ват çынна.

Колхоза пăхать патшалăх,
Хĕрхенмест вăйне-халне.
Памалла хисеп тумалăх
Пирĕн те ăна парне.

Пулмалла вара парнемĕр
Вăйлă, çирĕп те паха.
Ылтăна, Калля пиччемĕр,
Памалла патшалăха.

Унăн хакĕпе тутарнă
Хурçă танк вăрçа тухсан,
Çулĕ пулĕ пархатарлă,
Кĕл çеç юлĕ тăшмантан.

Санăн пур этем хисепĕ,
Тӳрĕ чун, Калля пичче!
Тавтуса калатăп эпĕ
Парти пуххинче.

Танк çинчи ят пулĕ „Атăл“,
„Атăл“ ят хитре, çап-çут,—
Шĕл-кавар пек куçлă Павăл
Ала паче тепĕр хут.

— Хамăрăн колхозăн ячĕ
Пултăр Сталин умĕнче!—
Терĕ те чӳлмек кăларчĕ
Хутаçран Калля пичче.

— Хиртĕр çав колхоз хăвачĕ
Çичĕ ют тăшмансене!—
Терĕ вăл, лартса хăварчĕ
Чӳлмеке сĕтел çине.

22

Ялкăшать выртма вучахĕ
Çапă типĕ пулнăран.
Хитререн хитре юмахĕ
Тăсăлать ача-пăчан.

Ĕлĕк чух кукша Иванăн
Пулнă-мĕн хăла кĕсре,
Вăл пĕрер тиха хăмланă
Пĕр ярса пусмассерен.

— Ун пек хăвăрт хăмлаканĕ
Пултăрччĕ, Калля пичче!..—
Калаçса лараççĕ канлĕ
Тутлă ыйхă пусиччен.

Ыйăннă пек çутçанталăк
Кайнă халĕ кăташа.
Варатать пĕр сĕпсех-кайăк*
Лăпкă нӳрлĕ сывлăша.

Пĕр самант та хускалмасăр
Çывăрать çунатлă çил.
Вăштăр-вăштăр, вăштăр-
вăштăр
Хускалмасть хăва çулçи.

Илтĕнсе тăмасть шыв шавĕ.
Вăл та кайнă ыйăха.
Тихасен çеç хăнкăравĕ
Янратать тавралăха.

Хур чĕппи пек сарă уйăх
Пĕлĕте сире-сире
Кармашать, анчах та улах
Халь те тарăн тĕттĕмре.

Шурăмпуçĕ кăвакарчĕ
Ярăм-ярăм мал енче.
Сивĕ тытнă пек вăранчĕ
Чĕтресе Калля пичче.

Çывăрнă чухне шăрçаллă
Сивĕ сывлăм ӳкнипе,
Çийĕнчи аçамĕ халĕ
Витĕр лачăкам йĕпе.

Урасем вăранччĕр,—терĕ,
Çавăнпа вăл сивĕре
Сылтăмпа сиксе çӳрерĕ,
Сулахайĕпе тепре.

Утсене пăхма пуçларĕ
Улăхра Калля пичче.
Йăлăллă юман чукмарĕ
Силленет ун аллинче.

Кашкăр-и, ытти сиен-и
Тапăнма пырассинчен
Чукмарпа ялан çӳренĕ
Выртмана Калля пичче.

Пăшалне те панă Павăл,
Тăр-тăруп та хĕрхенмен.
Пăшала тытса пăхма вăл
Яхăнне те килĕшмен.

Ĕлĕкрех вăл перкеленĕ
Пăшалпа, автанлипе,
Тĕшмĕртмен, ялан çӳренĕ
Выртмана чукмарĕпе.

---

* Сĕпсех-кайăк — çĕрле вăрманта кăшкăракан кайăк, хăш-пĕр районсенче ăна саксук-кайăк, теççĕ.

Шăрçаланнă сивĕ сывлăм
Йепетет чĕркуç таран.
Турах пек çарална сывлăш
Шур тĕтре хăпарнăран.

Чĕлĕмне чĕртесчĕ, терĕ
Утнă май Калля пичче.
Аллинчи ăвви тивмерĕ
Тем тусан та хальхинче.

Чĕлĕмне инкек иленнĕ.
Нӳрлĕ сывлăш çапнипе,
Кĕсйинчи тапак йĕпеннĕ,
Чулĕпе чакми йĕпе.

Туртайман пирки пăртакçă
Тарăхать Калля пичче,
Çывăрса сĕнксе тăраççĕ
Лашасем ура çинче.

Хыçала юлас темерĕ
Канăçсăр „Чарлан" лаша,
Йăкăлт-якăлт сиккелерĕ
Таллипе турткаланса.

Мăшăл-мăшăл шăрăшларĕ
Этемме çаннисенчен.
Аллипе сĕрсе лапкарĕ
Лашана Калля пичче.

— Сивĕрех! Ура йĕпенчĕ.
Ăшăнса эппин çӳрер,—
Тенĕ май сиксе утланчĕ
Çамрăк каччă пек чипер.

Йĕркипе нумай капанлă
Таврари çара çаран
Тĕтрене путса пытаннă
Ут çилхи таран.

Юмахри пекех чăлт шурă
Курăнса выртать тĕнче.
Пĕр çын пуçĕ шурĕ, шурĕ
Лашасем таврашĕнче.

Чăмнă пек анса çухалчĕ
Пĕр минут хушши кăна,
Тухрĕ те тытса утланчĕ
Хайхискер пĕр лашана.

Тăлапа-и, пăявпа-и
Хĕртсенех, лаша вара
Урхамах пек хăвăрт кайĕ.
Хӳтерес! Тытас вăрра!

Урипе тапса хистерĕ
„Чарлана" Калля пичче.
— Эй-эй-эй!—тени кĕрлерĕ
Улăхри вăрмансенче.

Хыçĕнчи хăватлă çил те
Çитейми васканăран,
Çул çине ури лекни те
Сисĕнсе пымасть лашан.

Юмахри çĕлен пек сывлăш
Шăхăрать халхасенче.
Шĕлепки каять вăш та вăш
Сирпĕнсе Калля пиччен.

Урипе те, пăявпа та
Вăрă çын çунтарнипе
Урнă пек малти лаша та
Вĕçтерет шак-сиккипе.

Çул тытать хурах сасартăк
Вăрмана кĕрсе кайма.
Татăк-татăк, татăк-татăк
Вăркăнать тăпра ума.

Юлчĕ ĕнтĕ ансăр вырăн
Икĕ утăн хушшинче.
Пĕрхĕт-кайăк пек хаяррăн
Ăнтăлать Калля пичче.

Çамрăк чух хăватсăр марччĕ,
Хӳтерсе пыра-пыра
Пĕр çапса ăнран яратчĕ
Ватă сăрă кашкăра.

Тайăнса пĕрре вăл ларчĕ,
Мекĕрленнĕ майĕпе
Тăнлавран пĕрре тыттарчĕ
Пакăлча чукмарĕпе.

Тукасри Митти Харачĕ
Месерле выртать иккен.
Куçĕсем тухса тăраççĕ,
Пуçĕ çурăлнă икке.

23

Пĕр канми-ырми бригада
Улăхра ĕçленĕрен
Килĕнче ĕне сума та
Вăхăт çук кăçал инкен.

Кантăра кăçал хаваслă
Пуçтарасчĕ, çавăнпа
Ăмăртса пыма калаçнă
Кӳршĕри пĕр колхозпа.

Улăхра тĕкме пек çӳлĕ
Ыра кантăр ăнтарма
Тӳсĕмпе ĕçченлĕх кирлĕ
Хĕрсемпе хĕрарăма.

Кантăрăн чăрмавĕ пысăк,
Юрататъ ĕçчен алла.
Çуркунне пусать çум-курăк,
Пусине те татмалла.

Улăхра çăлса пĕтернĕ
Хыççăн—типĕ кунсенче—
Çапмалла ăна типтерлĕ
Сарлака итем çинче.

Кĕркунне, юман тăпачĕ
Çĕмĕрсе сӳслетесрен,
Ачашрах ăна çапаççĕ
Васкамасăр, ерипен.

Пур тата нумай инкекĕ,
Пур кайран мухтанмалли.
Çилсемпе вĕçет кипекĕ
Ăнкарти çинче тулли.

Çу тума тата сутмалăх
Пур вăрри итем çинче.
Сутсанах, паратъ патшалăх
Таварне лавкасенчен.

Ик эрне выртма хутаççĕ
Çурăм-çурăм кантăра.
Çиеле чулсем хураççĕ—
Пусăрнса выртать шывра...

Пурçăн евĕр ярăм-ярăм
Сӳсленсен, кăлармалла.
Типмелле. Вара хĕрарăм
Сиктерет шалт-шалт тылла.

Ирхине те, кăнтăрла та
Тар пек типĕ кунсенче
Кĕрмешсе ĕçлет бригада
Çӳлĕ кантăр пуссинче.

Кавак сĕрĕм евĕр йӳçĕ
Анрашса тăрать шăрши.
Аларан кайми ун ĕçĕ
Пычĕ ик эрне хушши.

Ӳснĕ ашкăрса тымарĕ
Юшкăн çĕр сĕткенĕнче.
Ыратман сыпăи юлмарĕ
Татнă чух пӳрнесенче.

Çуллахи нӳхреп пек нӳрлĕ
Тăпрана шаккамалла,
Çавăнпа та тӳсĕм кирлĕ,
Пысăк вăй кирлех алла.

Вăй хурса ĕçленĕ халăх
Пилĕкĕ ыратнăран
Ывăнать, анчах та лайăх
Кантăр пир кĕпи кайран.

Йывăç пек çăра тымарлă
Кантăра татса пыма
Çăмăл мар, анчах хастарлăх
Васкатать хĕрарăма.

Улăхри хĕрсем матуррăн
Янратса тăсан юрра
Итлесен, лăш кайрĕ çурăм,
Канчĕ ырнă ал-ура.

Хĕрĕсен сасси кĕрлерĕ
Аякка кая-кая.
Пĕрчĕ çирĕ, шĕкĕлчерĕ
Сарă тумла кăсăя.

Ĕç шăранчĕ харăс-харăс
Аслă улăх тăршшĕнче.
Авăтса ларать пĕр карăш
Тĕксĕм кантăр айĕнче.

—Çумăра кĕтет-тĕр кайăк.
Нӳр кирлех ыраш хирне,—
Ват инке калаçнă майăн
Çыхрĕ кантăр çурăмне.

Вăл ăна çӳле çĕклерĕ
Патакпа шакка-шакка.
Хĕрипраç ак хупăрларĕ
Çип-çинçе каçалăка.

— Эй! те эй! Ан тартăр карăш!
Эй! те эй! Тытас! Тытас!
Харăс-харăс, акăш-макăш
Янтарать пĕр ушкăн сас.

Пур енче хĕрсем хăюллăн
Харатса шавлана май,
Чăннипех те тăрса юлнă
Мĕскĕн кайăк, варăм май.

— Нимене пусма юратчĕ,
Ырханрах, чипер çимен, —
Кайăка инке чуптарчĕ
Ал тупанĕ çийĕнчен.

Ик енче çăра хăвалăх.
Айĕнче юхать çырма.
Çăвăнма питех те лайăх
Хĕрсемпе хĕрарăма.

Алăпа пусса пит хытă
Çунăçем, сăтăрнăçем
Ĕçченсен питне çап-çутă
Хĕрелсе кĕрет илем.

Касăлать улми хĕвелĕн
Пĕлĕтпе çĕр хушшинче.
Шăрăх иртĕ те, нӳрелĕ
Ерипен каçхи тĕнче.

Сичĕ ĕç кĕтсе тăраççĕ
Икĕ ывăннă алла,
Çавăнпа киле пăртакçă
Васкаса уттармалла.

Тарласа ĕçленĕ хыççăн
Апатне пĕçермелле,
Ачине çĕрле ачашшăн
Çывратма та пĕлмелле.

Пĕр тулли кăвас чĕресĕ
Çăкăр та унамалла.
Паттăр чун, хĕрарăм, эсĕ
Ĕнене те сумалла!

Ĕмĕрхи ĕçчен, вăй-халлă,
Чăтăмлă хĕрарăма
Вашаватлă парăп алă,
Эпĕ тайăп пуçăма.

Çулçăсем татса çакаççĕ
Кĕписем çине хĕрсем.
Улăх тăрăх янтăраççĕ
Шăнкăрав пек юррисем.

Алла-аллăн, ушкăн-ушкăн
Утнă чух — самант хушши
Кăмăла уçса ямалăх
Кисренсе илет ташши.

Каймалли нумай тă марччĕ,
Курăнатчĕ ĕнтĕ кил.
Тĕтĕмпе тусан кăларчĕ
Çул çинче автомобиль.

Вашкăртса кăна çитсе вăл
Чарăнайчĕ ăнсăртран.
Тавтума-мĕн килнĕ Павăл,
Секретарь те райкомран.

— Ăмăртса кая хăварчĕ
Сирĕн йыш ыттисене,—
Тенĕ май утса ал пачĕ
Секретарь ĕçченсене.

Инкене ялав тыттарчĕ
Çамрăк Павăл умĕнче,
Карăнать ялав çуначĕ
Вăштăр-вăштăр çил çинче.

Инçетри çĕрте таçта та
Пулнă пек, тунсăхласа
Кĕрлесе кĕрет бригада
Ялĕнчи Вăтакасса.

Темĕнле çынсен шăв-шавĕ
Укăлча хапхи панче
Илтĕнсен:— Кĕрхи уяв-и?—
Тĕлĕнет Калля пичче.

Юрăллă хаваслă халăх
Иртнине курса юлма
Витерен вăл пĕр самантлăх
Сиксе тухрĕ урама.

Ушкăнпа килет хĕрарăм,
Салтакла хастар утать.
Ялава тытса хастаррăн
Чи малта инке пырать.

Аслă Ленинăн сăнарĕ
Аллинчи ялав çинче.
Шухăшларĕ, шухăшларĕ
Урамра Калля пичче.

Чинавйин ялан хĕн-хурлă
Пынă пурнăç тамаши.
Халĕ вăл асапĕ урлă,
Чăннипех те, каçрĕ-ши?

Ачапча килте йалт выçă
Хытă макăрнă чухне
Кăтартмарĕ хайĕн куçĕ
Куççулленнĕ иккенне.

Тӳсеймерĕ, хуйхă тарăн
Килнĕ йывăр вăхăтра
Çĕр çине выртса хĕрарăм
Есĕклерĕ пахчара.

Чул чăтми инкек те терчĕ
Ларчĕ ун ĕнси çине.
Ăмăрткайăк пек ӳстерчĕ
Йăвинчи ачисене.

Саманан хĕвеллĕ кунĕ
Çитрĕ халĕ. Иртрĕ каç.
Чинавье инкен курпунĕ
Пĕр енчен те курăнмасть.

Çамрăк хĕр пекех тӳп-тӳрĕ
Яштака пӳ-сийĕпе
Мухтанса пек, халĕ утрĕ
Аслă ял урамĕпе.

Курăнать çулпуç сăнарĕ
Аллинчи ялав çинче.
Шухăша кайса каларĕ
Хăйне хăй Калля пичче:

— Эх, Калля, тĕнче тискерĕ,
Ӳсĕр чух, пĕррехинче,
Арăмна тытса хĕнерĕн
Çимĕкре, масар çинче.

Тăлăпа çапмарăн мар-и?
Эсĕ мĕншĕн тиврĕн-ши?
Чинавье яла тухмарĕ,
Выртрĕ пĕр эрне хушши.

Эх, сана хăвна парасчĕ
Çурăмна ислетиччен!—
Терĕ те, каллех уттарчĕ
Витене Калля пичче.

Çур ухмах утне мухтанă,
Тăр ухмах — хăй арăмне.
Ваттисем çапла каланă
Ĕлĕкех, панккав чухне.

— Чаплă арăмăм, чиперĕм,
Çавăнпа халь ял çинче
Мухтансан, начар-и!—терĕ
Сасăпах Калля пичче.

Пурăнаççĕ ӳркенмесĕр
Вăтăр çул ытла, анчах
Мăшăрне Калля пиччемĕр
Каламан ачаш сăмах.

Юратун сӳнмен кăварĕ
Пуррине калас пĕрре,
Çавăнпа сăмах шыраре
Ерипен Калля пичче.

Чĕлхинче пур халĕ унăн
Ылтăнпа мерчен-ахах.
—Ыртăн пулĕ, савнă чунăм?
Терĕ вăл вăтанарах.

—Лĕкĕрти, çап-çамрăк каччă
Пултăн-и, кăвакарсан?
Çавăн пек калас пулатчĕ
Çамрăк чух, мана курсан.

Хытă çăкăрпа паранкă
Хырăмна тултарнипе,
Ун чухне ларăттăн лăпкă,
Пĕр чĕнмесĕр çĕрĕпе.

Халĕ тин чĕлхӳ кăларчĕ
Кирлĕ мар айван сасса,—
Терĕ те инке уттарчĕ
Витрине янраттарса.

Арӑмне ачаш чӗнни
Пулаймарӗ хальхинче...
Чӑр-чӑр-чӑр ӗне суни
Илтӗнет килкартинче.

24

Топольсен ҫулҫисене
Саратать кӗрхи тӗнче.
Сывлӑш сулхӑн ку чухне
Шупашкар урамӗнче.

Хулари ҫуртсем ҫине,
Ывҫа ылтӑн сапнӑ пек,
Йалтӑркка ҫуттисене
Салатать хӗвел ирпе.

Нӳр пулмарӗ эрнипе.
Кун уяр. Тип-типӗ ҫӗр.
Ялтӑрать кӑвак тӳпе
Татӑк-кӗсӗк пӗлӗтсӗр.

Ирхине, ыйха сирсен,
Пилӗк-ултӑ сехетре
Лавсемпе машинӑсем
Кисретеҫҫӗ кӗпере.

Таврари районсенчен
Килнӗ темӗн те куҫса,
Шупашкар пасарӗнче
Илӗртсе выртать куҫа.

Каллясен Якурӗпе
Иккӗн хирӗҫ пултӑмӑр,
Карл Маркс урампе
Ҫӳресе калаҫрӑмӑр.

Вӗренет Шупашкарта.
Сийӗнче—ятуллӑ тум.
Ӑтӑр тирӗ пек хура
Курӑнать яка костюм.

Ҫӳҫӗ ун кӑтрисемпе
Пӑхӑнса тӑмасть хачча.
Симӗс галстук, шур кӗпе—
Килӗшет чипер каччӑ.

Сас парать урисенче
Хур чӗппи пек сар штиблет,
Урамри асфальт ҫинче
Кӑчӑрт-кӑчӑрт текелет.

Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса
Иккӗн харӑс утнӑ май
Курӑнса иртет куҫа
Тӗрлӗ тумлӑ ҫын нумай.

Васкаса урамсенче
Умлӑ-хыҫлӑ иртекен
Студентсен хул хушшинче
Пур пурин те кӗнеке.

Кам кӑна-ши ҫакӑ ир
Тӗл пулмарӗ хулара!
Хирӗҫ пултӑмӑр эпир
Доцентпа профессора.

Кам унта, унта епле,
Ӑҫталли район ҫынни
Ленинград урамнелле
Пӑрӑнса утакан-и?

Пархатарлӑ ӑс пурри
Сисӗнет сӑнарӗнче,
Тарӑн шухӑшӑн йӗрри
Курӑнать ҫамки ҫинче.

Эп пӗлетӗп вӑл камне,
Тахҫанах палланӑскер.
Мускавра хӑй мухтавне
Сарнӑ палла инженер.

Пушӑрах сехетсенче
Тӗл пулсан, хутран ситрен
Ун ҫинчен те кун ҫинчен
Калаҫма унпа хитре.

Ӳснӗ вӑл Канаш енче
Тӗтӗмлӗ хура пӳртре,
Юлнӑ унӑн куҫӗнче
Пӗчӗкрен темле тӗтре.

Ҫамрӑк хуйхӑллӑ пуҫа
Ӗлӗк уснӑ вӑл унта,
Ҫичӗ пушӑтран хуҫса
Тунӑ селӗм ҫӑпата.

Тунӑ та ӑна сутса
Ҫӑнӑх илесси ҫинчен
Шухӑшланӑ тек утса
Вӑл Шӑхран пасарӗнче.

Ашшĕ тăрăшнă, анчах
Вĕренте пĕлмен ăна
Шĕшлĕрен мухтавлăрах,
Чеерех техникăна.

Ĕлĕкхи саманана
Хут ҫине ўкерне чух
Чĕтретсе илет мана
Кўтнипе ҫиленнĕ чун.

Ҫав мура хура ҫĕре
Таптаса чикмен пулсан,
Мĕнччĕ эпĕ тĕнчере?
Чул-и, ҫын-и, е тусан?

Хурлă пурнăҫ айĕнче
Манăн тусăм ун чухне
Ҫăпата тăвассинчен
Каяймастчĕ инҫене.

Йўҫĕ тĕтĕме ҫăтса
Суккăрланнă майепе
Ҫўрĕччĕ вăл танккасса
Кĕлĕмҫĕ хутаҫҫипе.

Ун ĕнси пĕкĕрĕлсе
Аванĕччĕ ĕмĕрте,
Ачипчи пўрне ĕмсе
Выҫă ларĕччĕ килте.

Шупашкар, хĕвел тĕнчи
Эс те курмăттăн вара
Икĕ сăртăн хушшинчи
Таран мĕскĕн лакăмра.

Хырăм урлă вăчăра
Янă купцасем чунна
Ислетсе асаплăхра
Халь те тытĕччĕҫ сана.

Вĕсем Атăл тăршшĕпе
Иртĕччĕҫ сана, хула,
Ҫĕрĕллĕ пўрнисемпе
Кăтартса, кула-кула.

Хамăр Ҫеҫпĕл поэта
Вуласан, чăваш ҫынни,
„Иртсе кайнă вăхăта
Астăватăн-и?“

Ĕлĕкхи саманана
Асилер тата тепре,
Ылханар, вара ҫанна
Таврса ярар ĕҫре!

Эпĕ хамăн ĕмĕрте
Питĕ тивĕҫ мухтама
Тăвăлти Октябрьте
Ырлăх илнĕ хулана.

Ĕмĕрхи лачакаран
Тасалса ҫĕкленчĕ те
Улăпла ларать паян
Икĕ сăрт ҫинче ҫўлте.

Чан сасси, шапа сасси
Ĕлĕк иккĕш хутăшса
Темиҫе ҫĕр ҫул хушши
Кисрентернĕ сывлăша.

Ĕҫ йыхравĕ ирхине
Халĕ тутлă ыйхăран
Хулана вăратнине
Юрататăп чун-вартан.

Ман чăваш ҫĕршывĕнче
Кăн-кăвак ҫўлти тўпе
Хупланать заводсенчен
Мăкăрланнă тĕтĕмпе.

Тĕреклен, тăван хула,
Хурҫăлат, хытар хăвна!
Пĕр самант та каялла
Юрамасть чакма сана!

Ҫирĕп пул, анчах тулта,
Сарлака садусенче,
Шăпчăк та, саркайăк та
Кĕвĕлеччĕр каҫсенче!

Ҫамрăк Якурпа эпир
Куртăмăр урамсенче:
Мускаври пекех тумтир
Чăвашри хĕрсем ҫинче.

Ҫĕнĕлле пырать тĕнче,
Поэтсен анчах темме
Янтăрать кĕввисенче
Халь те кĕмĕл шўлкеме.

Çĕтĕк-çатăк шупăра
Ырласа юрлас пирки
Мекĕрленнĕ самантра
Теприсен тухать тинки.

Сурпанпа тухья-тевет
Лайăх-тăр пăхма, анчах
Ман чĕлхем çине килет
Урăхла, ытти сăмах.

Хĕр ача, чăваш çынни,
Тухьяпа теттесене
Пăрахса, ĕçре çунни
Хускатать поэт чунне.

Эх, мухтатăр пирĕн сас
Халĕ аслă телее
Тупнă паттăр та хавас
Çулăм чунлă Нарспие!

Янкăр уçă ирхине
Савăта, института
Каякан Нарсписене
Куртăмăр Шупашкарта.

Çырă, хăмăр та сенкер
Илĕртÿллĕ куçсенче
Курăнса тăрать чипер
Пĕлĕт те хула, тĕнче.

Чăвашла та вырăсла,
Тутарла калаçнипе
Кĕрлесе тăрать хула
Кăнтăрла, каçпа, ирпе.

Чăвашсен çĕршывĕнче
Мăк сутма тесе, юри
Аслă Атăл леш енчен,
Вăрмантан килет мари.

Икĕ сăртлă хушăра
Çулсерен хитре-хитре
Ÿсекен Шупашкара
Юрататăп чĕререн.

Анатран пароходпа
Килнĕ чух, мухтамалла
Ытарми хаваслăхпа
Курăнса ларать хула.

„Анатран хăпарать
Шурă пăрахут...“
Ман юрлас килсе каять
Çак юрра ик-виçĕ хут.

Эпĕ куртăм тĕнчере
Хуласем чылай, анчах
Шупашкарăм чĕрере
Пулчĕ манăн яланах.

Питĕ лайăх ир тăма,
Питĕ лайăх çÿресси!
Асфальтланă урама
Янратать ура сасси.

Эпĕ икĕ аллăма
Хĕресле хуратăп та
Атăла пăхса тăма
Улăхатăп çÿл сăрта.

Эп куратăп аякран
Леш енчен кунта куçса
Киммине шутаракан
Сĕрекеллĕ пулăçа.

Уçă сывлăш нÿрĕнче
Тытмалла шÿрпе валли!
Авăнать аллисенче
Пулăçсен вăлта хулли.

Ярăнса чăпар куккук
Авăтать йывăç çинче.
Куçсемпе виçме те çук
Сарăлса выртать тĕнче.

Вată тирекпе йĕлме
Айĕнче ута-ута,
Тарăн шухăшпа иртме
Юрататăп эп унта.

Эх, илемлĕ-çке çулла
Аслă Атăл тăршшĕпе!
Леш енне каçать хула
Кимсемпе, паромсемпе.

Икĕ сăртăн хушшинчи
Ватăлми Шупашкара
Мухтăп эп, Силпи ачи,
Малашне те юррăмра.

Хамăн халăх хулине
Ытарми юратнăран,
Эпĕ килтĕм ун патне
Хам çуралнă тавраран.

Мунчала сарайĕсем
Ĕлĕк пăнтăхнă çерте
Шупашкарăн çурчĕсем
Кармашаççĕ пĕлĕте.

Хупахпа çăра мăян
Ӳснĕ те юлман палли.
Сад-пахчи унта паян
Шавлă халăхпа тулли.

Илтĕнет унта куллен
Çамрăксен вăййи-тăшши.
Кĕркунне те чечексен
Саралать чипер шăрши.

Пулĕ вăл, тăван хула,
Малашне тата чипер.
Шывĕ урлă каçмалла
Чĕнтĕрлĕ гранит кĕпер.

Малашне бетон пĕве
Урлă вырттĕ Атăла.
Кĕртĕ вăл ĕçри кĕвве
Чăрсăр пысăк вай-хала.

Атăл лекĕ те алла,
Тапса ярĕ хăй шывне
Çирĕм çухрăмран ытла
Ӳлăх тăрăх инçене.

Ырă йывăç айĕнче
Ӳçăлса, хĕпĕртесе
Пынă чух çыран çинчен
Курăп эпĕ тинĕсе.

Чĕремри тăван хула,
Тусăм, чунăм, Шупашкар,
Эсĕ пулăн улăпла—
Çамрăк, хӳхĕм те хастар.

Манăн çĕрĕмри хăват
Юмахри пек станцирен
Кайĕ пин-пин киловатт
Таврана, нумай çĕре.

Ман хула урамĕнче
Тĕл пуласчĕ ун чухне
Тухьяпа сурпан çинчен
Юрлакан поэтсене!

Асамат кĕперĕ пек
Электрица çуттинче,
Шупашкар, илемӳпе
Чаплă пулăн каçсенче.

Атăлпа иртсе-çӳрен
Тĕрлĕрен нумай çынсен,
Шупашкарăм, сан çире
Пулĕç ыра куçĕсем.

Хăнасем сана пăхма
Анĕç Атăл хĕррине,
Курĕç йышлă урама,
Çуртсене, этемсене.

Кăмăлти таса сăвва
Хамăн шĕкĕр хулама
Кĕртнĕ майăн
Мускава
Эпĕ тивĕç тавтума.

Кулленхи юратупа
Пулăшса пыра-пыра
Вăл кăларчĕ чăн чапа
Ийăкне—Шупашкара.

Эсĕ, ĕмĕт, малалла
Çунатлан та, кай та кай!
Çирĕмшер тата ытла
Хутлă çурт пулать нумай.

Пĕлĕтпе пĕр тан хутри
Янкăр çута пӳлĕмрен
Эпĕ курăп таврари
Вăрмана, уя-хире.

Чĕререн хавасланса
Çырнă хам кĕнекене
Эп парăп вуласа
Халăха, юлташсене.

Каллясен Якурĕпе
Калаçса пыра-пыра,
Эпĕ почта урампе
Пырса кĕтĕм пасара.

Сăвăра киккирике
Яхăнне те юратман
Сивĕ чунлă критике
Хирĕç пултăм ăнсăртран.

Хăйĕн тусĕ Хусанран
Яна сăр шĕлепкине
Куçхаршийĕсем таран
Лартнă вăл çамки çине.

Вăл ялан хĕвел çинчен
Çыркалать, анчах паян
Мунчала кушелĕнчен
Карăнса пăхать автан.

Эпĕ çакă критике
Палласса паллап, анчах
Ун пек „хытнă кĕрĕке"
Ман чĕнес килмест сăмах.

Яланах сĕтел çинче
Кăвакал, кăркка та хур.
Кимĕрсе çиес енчен
Аппетит тени те пур.

Кашăкне çĕклес чухне
Ырлăха пĕлсе, пĕрре
Астумасть колхозсене,
Улăха, уя-хире.

Вунă çул ялан килте
Пурăнать вăл, çавăнпа
Уншăн пĕр пек иккĕш те
Тулăпа урпа.

Вăл ялан колхоз çинчен
Çырасса çырать, анчах
Янтарать çырнисенче
Барабан пек пуш сăмах!

Унăн пĕр калавĕнче
Юрласа ларать ялта
Август уйăх вĕçĕнче
Шăпчăк та, саркайăк та.

Шурă розăсем çинчен
Çыракан поэт тата
Канлĕ вăрăм ыйхинчен
Вăранса килет кунта.

Çинçешке пӳрнеллĕскер
Суйласа сутуçăран
Илчĕ вăл ӳпке-пĕвер
Сахалтан, пĕр килограмм.

Пасарта нумай чечек,
Розăсем те пур, анчах
Вăл каять васкана пек,
Вĕсене пăхмасăрах.

Халĕ пĕверпе ӳпке
Çинĕ хыççăн килĕнче
Çырĕ вăл нумай йĕрке
Тепĕр хут чечек çинчен.

Манăн халь чечек пирки
Калаçас килмест пĕртте.
Пур илемлĕ çеç çеçки
Йытпыршин, пиçенĕн те.

Лартăр хӳхĕм çеçкере
Улмуççи, арбуз, хăяр!
Вĕсене поэзире
Мухтани илемсĕр мар.

Ирхине хĕвел тухса
Пĕлĕте хĕретнĕ пек,
Хĕрлĕ ăшлă арбуза
Касрăм эпĕ пекĕпе.

Улăхпа çаран шăрши
Перекен пĕр лав çинче
Лартăмăр сехет хушши
Е ытла-и, нумайччен.

Унталла та кунталла
Шав курса çӳренипе,
Иртрĕ кун.
Каçхи хула
Илĕртет илемĕпе.

Халăх тулнă урама,
Бульвара, хула садне,
Тухрăмăр çынсем курма
Иккĕн Атăл хĕррине.

Çилсемпе ачаш кăна
Вылякан хумсем çинче
Курăнса авкаланать
Тӳпери кăвак тĕнче.

Сарă питлĕ çавракa
Уйăх тухнă сарăлса,
Атăл урлă йăлтăркка
Выртнă пĕр юпа пулса.

Сулхăн сывлăшлă таса
Шупашкар бульварĕнче
Эпĕ иртрĕм калаçса
Каллясен Якурĕпе.

Тӳпере те çĕр çинче
Халĕ янкăр çутă каç.
— Шур тумли леш хĕрринче,
Мĕн тесен те, вăл Наçтаç,—

Тет Якур,—сасси çинçе,
Татăлас пек туйăнать.
Ирĕлет чĕлхи çинче
Ачаран юратнă ят.

Каллĕ-маллĕ çӳреме
Йăлăхтарчĕ хальхинче.
— Сывă-и, Наçтаç!—теме
Пултарать юлашкинчен.

Ушкăн тантăш хушшинчен
Хĕр тухса тăрать вара.
Килнĕ-мĕн Çемен пиччен
Хĕр ачи Шупашкара.

Чĕкеçсен çуначĕ пек
Тĕксĕм унăн куçхарши.
Кун пекех хитре чечек
Хăш енче çуралнă-ши?

Хӳхĕм ӳснĕ хамăр та,
Чăвашсен çĕршывĕнче,
Тĕрекленнĕ вăл тата
Çĕпĕрĕн сиввисенче.

— Чăваша, института
Эпĕ килтĕм вĕренме,—
Пирĕнпе ута-ута
Вăл пуçларĕ пуплеме.

Йĕкĕр сивĕт вĕçĕсем
Кăкăрĕ çинче, малта.
Пĕвĕ çӳлĕ. Куçĕсем
Хуп-хура та, тарăн та.

25

Кĕркунне яма шутларĕç
Электрицăна хута,
Çавăнпа кăçал хĕрӳ ĕç
Чарăнмарĕ çу хута.

Ĕмĕтпе хĕмленнĕ халăх
Тавăрать çаннисене,
Темиçе çĕр киловатлăх
Туса лартрĕ пĕвене.

Çитрĕ кĕр. Ял-янкăр уçă
Халĕ сывлăш хирсенче.
Ешĕрет кĕççе пек усăм*
Айлăмпа сăртсем çинче.

Пĕсехи ытла та мăнтăр,
Питĕ йывăр пулнăран
Аялта çеç ушкăн пăчăр
Вĕçкелет аран-аран.

Çухрăм чухлĕ е ытла-и
Пултарать çунат сулма,
Пытанать каллех те кайăк
Канлĕ тарăн уçăма.

Сивĕ кĕр, анчах та халĕ
Питĕ кĕрĕк ăшшинче
Кĕрмешет вăй-питлĕ халăх
Улăхра, уй-хирсенче.

Кăчăрт çеç шăнса пăртакçă
Такăрланнă çулсемпе
Тутлă утă турттараççĕ
Пуслăхланă лавсемпе.

Сар хĕрсем пуса-и, кантăр,
Йĕтĕн-и тылланăран
Ян та ян каять çыран та,
Тарăн вар, çырма, вăрман.

Ачасем пĕрле юлташлăн
Анкартне каçпа кайса
Пӳртсене яма тытасшăн
Хĕрлĕ мăй та кăсăя.

* Усăм—калча.

Хӗлӗхсем ҫапса тухаҫҫӗ
Тӑрӑхла хӑма ҫине
Савӑлпа.
Ҫапла тӑваҫҫӗ
Ачасем серепине.

Урисем-и ывӑнаҫҫӗ,
Тар-и витнӗ ӳт-тире,—
Ирхинех тухса сунарҫӑ
Ҫаврӑнать нумай хире.

Йӗр тӑвать, сикет мулкачӑ
Каҫӑркка хӑлхисене
Тӑратать. Пӑшал хӑвачӗ
Янратать вӑрмансене.

Ӑсансем сӑхса лараҫҫӗ
Пилеше е палана.
Йӑпшӑнса пырать сунарҫӑ
Хырӑмпа шуса кӑна.

Пур енчен те халӗ тутӑ
Какӑрать кӗрхи тӗнче.
Пулмалла электӑр-ҫутӑ
Каллясен колхозӗнче.

Нихӑҫан пӗтми кӑварлӑ
Ҫунӗ лампа, ҫавӑнпа
Урама лартса тултарнӑ
Умлӑн-хыҫлӑн хыр юпа.

Тырӑ-пулӑллӑ, вӑй-халлӑ
Колхозри ҫынсем хитре,
Лайӑх хатӗрленнӗ халӗ
Кӑҫалхи октябре.

Ахалех тӑрас темерӗ,
Кунӗпе Калля пичче
Туратсем иртсе ҫӳрерӗ
Ҫамрӑк йывӑҫ садӗнче.

Сивӗтет каҫхи ҫанталӑк.
Лӑпланать ҫерҫи сасси.
Пур пиччен пӗрре выртмалӑх
Канасси те ҫыврасси.

Кӗркунне пӑртакҫӑ тарлӑ
Куҫлӑ кантӑксем умне
Тӗрӗсем инке тыттарнӑ,
Ҫакнӑ хӳхӗм сӗлкине.

Каҫхине мӗнпур бригада
Пухӑва уттармалла.
Тӑхӑнас пулать халь атӑ,
Сухала якатмалла.

Тӑхӑнсан, вӑл пӑхкаларӗ
Ҫутӑ куҫкӗски ҫине,
Пӗтӗрмесӗр хӑвармарӗ
Мӑйӑхин кӑтра вӗҫне.

— Саккӑрта мана вӑратӑн,—
Терӗ вӑл Чинавьене.
Кайса выртрӗ вӑл хӑяккӑн
Тӑрӑхла тенкел ҫине.

Тӗрлӗрен нумай ҫеҫкеллӗ
Ылтӑн садӑн варринче
Каллӗ-маллӗ, каллӗ-маллӗ
Вӑл ҫӳрерӗ ыйхинче.

— Ҫӗр ҫинче ӗҫле те савӑн,
Ӗмӗт кайтӑр аякка! —
Тет ӑна юлташӗ Павӑл,
Хулӗнчен лӑпка-лӑпка.

Юрласа ларать пӗр кайӑк
Ылтӑн йывӑҫ тӑрринче...
Ҫулӑм хыпнӑ пек сасартӑк
Вӑранать Калля пичче.

Кӗмӗл сапнӑ пек илемлӗ
Урайне, мӗн пур ҫӗре
Кӑтартса, Ильич хӗвелӗ
Ялкӑшса тӑрать пӳртре.

Курӑнать таҫти те паллӑ,
Тирнӗ йӗп те мӑк ҫинче.
Ӗмӗрне курман хаваслӑ
Уткалать Калля пичче.

Кӑкарса антарнӑ, тейӗн,
Хӗвеле Калля пӳртне.
Колхозри ҫынсен телейӗ
Килсе ҫитрӗ кӗркунне.

„Эс, Калля, малтан пӗлмерӗн,
Пӑрӑнтӑн колхозсенчен“,—
Тенӗ пек шинеллӗ Сталин
Пӑхкалать стена ҫинчен.

Сталина çапла каларĕ
Ăшĕнче Калля пичче:
„Эс вĕрентнĕ пек пуçларĕ
Пурăнма ялти тĕнче.

Эп сана кайран ăнлантăм,
Çавăнпа пĕччен лĕхре
Сапаланчĕ вăй-хăватăм
Ахалех хыткан çĕре.

Ĕмĕрте анса тăмарĕ
Мăй çинчен инкек-синкек.
Тарласан та, ĕç ăнмарĕ,
Алапа шыв ăсна пек.

Халĕ тин этем хисепĕ
Пуррине чĕре туять.
Колхозра туянтăм эпĕ
Чăннипех те ырă ят.

Самана кун пек илемлĕн
Килессе пĕлес пулсан,
Утнă пулăттăм, Сталин,
Ĕлĕк эп те сан хыçран.

Санăн çутă шухăшушăн
Хатĕр пулăттăм тӳсме,
Пулмĕччĕ мана хăрушă
Ни патша та ни тĕрме.

Сталин тус, кайран пулин те,
Тупрăм хамăн çулăма.
Эпĕ халĕ хатĕр ĕнтĕ
Кĕрешме, вутра çунма.

Çан ăсу та, шухăшу та
Ĕмĕрте шывра путмасть,
Кăварта çунмасть.
Çап-çутă
Çавăнпа сĕм тĕттĕм каç.

Ĕмĕрех ман пек мăнтарăн
Пурăннă çынсен пӳртне
Эс, аттем, кĕртсе çутатрăн
Çитнĕ ĕмĕт хĕвелне".

Шухăша кайса çӳрерĕ
Каялла та малалла.
Тĕпелте сехет шаккарĕ.
Вăхăт çитнĕ.
Каймалла!

Урампа утаççĕ хытă
Инкепе Калля пичче.
Кăнтăрла пек янкăр çутă
Тӳпере те çĕр çинче.

Колхозри çынсем лараççĕ
Электрица садĕнче.
Панулми пекех тăраççĕ,
Лампăсем мачча çинче.

Колхозра çĕкленнĕ, тейĕн,
Хупăнман кăвак хуппи.
Акă вăл — тĕнче телейĕ!
Акă вăл — Ильич лампи!

26

Чинавье инке пĕрре,
Тахçанах, ача чухне,
Кайнă ашшĕпе пĕрле
Инçетри тутар ялне.

Çирĕм пилĕк çухрăмри
Пысăк ял ермиккинче
Мĕн сутни те мĕн пурри
Юлнă унăн асĕнче.

Ашшĕ илнĕ ун валли,
Шăкăл-шăкăл калаçса,
Пĕр çиме кулач чĕлли,
Хурткуççи тата шăрçа.

Çитĕнсен, улахсенче
Аллинчен кайман йĕке.
Хăмăш пек хыткан, çинçе
Пулнă унăн пилĕкĕ.

Тыră вырнă çурлапа,
Вăл ĕçленĕ вĕçĕмсĕр,
Ӳснĕ пĕр тумлам шывпа
Сыпмалла илемлĕ хĕр.

Куçхаршин хура йĕрки
Выртнă икĕ çунатла,
Вăхăтпа çи-пуç çукки
Çӳретмен аяккалла.

Вунçичче çитес чухне
Пурлăхпа тулать арча.
Чинавье хăйсен ялне
Юратса каять качча.

Хӳхĕм каччă пур çинче
Хапсăнман ыттисене.
Савнă вăл Калля пиччен
Ункă-ункă кăтрине.

Вăтăр пилĕк çул ытла
Инкепе Калля пичче
Иккĕш арлă-арăмлă
Пурăнаççĕ çĕр çинче.

Кĕнчеле, хуран, йĕке,
Ҫашăк-тирĕк, турчăка.
Ĕмĕрне кайман инке
Хир-хир урлă аякка.

Пӳрнепе шакканипе
Янтăрарĕ чӳрече.
Килчĕ-кĕчĕ çынсемпе
Павăл çурçĕр тĕлĕнче.

Ырлăха е инкеке
Килчĕ Павăл ăнсăртран.
— Тавтапуç сана, инке,
Хамăр „Атăл“ колхозран!

Сан ятна, инке, ара
Халь пĕлсе тăрать тĕнче.
Илтнĕ аслă Мускавра
Хăй Калинин сан çинчен.

— Ыр сунас хĕрарăма!
Ĕçĕ паттăр!—тенĕ те
Ленин орденне пама
Алă пуснă Кремльте.

Çамрăк Павăл хĕвĕнчен
Кăларса хурать хаçат,
Сарлака сĕтел çинче
Васкаса ăна уçать.

Çирĕм пилĕк çухрăма
Кайнăччĕ пĕрре инке.
Мускава кайса курма
Ун шăпи пурах иккен.

Шухăшларĕ кунсерен,
Çывăрмарĕ каçсерен.
Пассажир вагонĕпе
Кайрĕ тепĕр эрнерен.

Вăрмансем унта-кунта
Ылтăн тăрăллă, чипер.
Кĕпĕр-кĕпĕр хыçалта
Кĕрлесе юлать кĕпер.

Вагона чӳречерен
Сулхăн çил кĕрет вĕçсе.
Вăш-вăш-вăш вĕçмессерей
Тураса илет çӳçе.

Айккипе шăва-шăва
Тĕтĕм ӳкрĕ çĕр çине.
Поезд çитрĕ Мускава
Пĕр хĕвеллĕ ирхине.

Килнĕ шавлă çынсемпе
Чинавье инке утать,
Нихăçан курманнипе
Кăлт та кăлт чĕри тапать.

Тĕлĕнет, çӳренĕ май,
Вăл хула вокзалĕнчен:
Алăксем унта нумай,
Ӳçăлаççĕ пур енчен.

Инçетри те çывăхри
Çын килсе капланнă та,
Тĕрлĕ халăхăн чĕлхи
Илтĕнсе тăрать кунта.

Хăйĕн савнă тусĕпе
Хăнара çӳренĕ пек,
Чăп-чăпар халачĕпе
Ярăнса утать узбек.

Тупнă ватă çын—тутар—
Мускава курма телей;
Пуç çинче илемсĕр мар
Тĕрĕленĕ тюбетей.

Тахçанах, ачалăхра,
Вăрăм тутлă тĕлĕке
Путнă пек, йĕри-тавра
Тĕлĕнсе пăхать инке.

Вокзалри урай таса,
Сăрлă-сăрлă та чипер.
Ун патне тухать пырса
Пĕр яка тумтирлĕскер.

— Михаил Иванч патне
Эсĕ килнĕ çын пулас,—
Терĕ пирĕн инкене
Вашаватлă уçă сас.

Вăл кăтартрĕ аллипе:
— Лар эппин, инкеçĕм, кил!—
Чаплă Киров урампе
Вĕçтерет автомобиль.

Тĕркĕшсе çӳрет умра
Тĕрлĕ тумлă йышлă çын.
Уçăлать йĕри-тавра
Ик енче те магазин.

Эх, утать урамсенче
Пур этемĕ те васкав!
Кĕр хĕвелĕ çуттинче
Кĕрлесе ларать Мускав.

Янтăрать хăлхасенче
Трамвайсен чăн-чан! сасси.
Чи малтан килекене
Питĕ лайăх итлесси.

Халиччен виç хутлă кил
Тĕл пулман Чинавьене
Çитерет автомобиль
Нумай хутлă çурт умне.

Чи çӳлти чӳречене
Аялтан курас тесе
Тăрăшать, анчах пуçне
Каçăртма памасть ĕнси.

Картари чăх йăвинчен
Çӳлерех пулман инке,
Çавăнпа та лифт çинче
Шикленсе пырать иккен.

Туйăнать шуса пыни
Кайăк вĕçнĕ пек кунта.
Электрицă машини
Çитерет çӳлти хута.

Шурă пурçăн тăхăнса
Типтерленнĕ хĕр ача
Хирĕç тухрĕ васкаса
Хăй тăванĕ пек ачаш.

Çул ыртарнă ӳт-тире
Кантарса килентерме
Чĕнчĕ вăл инкемĕре
Уйрăм çутă пӳлĕме.

— Халĕ кĕрĕр ваннине.
Пур сивви те пур вĕри,—
Тенĕ майăн крансене
Пăркаларĕ хĕр юри.

Чинавье инке пĕччен
Юлчĕ пӳлĕм варринче.
Кăмăлне кантариччен
Утрĕ вăл палас çинче.

Ĕлĕк вăйăпа ташша
Каçхине тухас чухне
Çунă пек, вăл тăрăшса
Çурĕ халĕ пит-куçне.

Шурă ваннă пур, анчах
Нихăçан та ĕмĕрте
Вăл курман-илтмен пачах
Кунашкал эккемете.[1]

Алăкран та сарлака
Умĕнчи куçкĕскинче
Кăвакарнă пайăрка
Курăнать тăнлав çинче.

Çӳçĕ пулнă хĕр чухне
Çап-çăра та хуп-хура.
Вăтăртах хитре сăнне
Вăл çухатнă асапра.

Çитмĕл тĕрлĕ инкеке,
Куççульпе нумай терте
Курнипе, чипер инкен
Пĕркеленнĕ пичĕ те.

—

[1] Эккемет—ăнланмалла мар япала.

Вăл пĕлмен малти тĕнче
Ăрăскаллă килессе,
Çавăнпа та питĕнче
Сыхлайман нар пек тĕсе.

Эх, инке, сана Мускав
Чĕнессе пĕлес пулсан,
Ватăлма пĕртте сăлтав
Тупăнмастчĕ пулĕ сан.

---

Пĕтĕм кăмăлăм тулли
Ытаруллă тавтума
Эп, сана, Мускав хули,
Тайрăм çамрăк пуçăма.

Хам вунсаккăрта чухне
Ырă ĕмĕтлĕ атте—
Сакăр пăт хуратулне
Алласа тасатрĕ те

Пĕтĕмпе патшалăха
Сутрĕ ялăн лавкинче:
— Ывăла паратăп-ха, –
Терĕ халăх умĕнче.

— Сан, ачам, çĕклемелле
Хамăр несĕлĕн ятне! –
Терĕ те силле-силле
Пачĕ хулăм енчĕкне.

Мăйăра кашта шăлпа
Кăт та кат катса пыма
Икĕ йăмăкпа аппа
Чикрĕç манăн арчама.

Аслă улăх сĕткенне
Çисе ўснĕ такаран
Турĕ ман валли анне
Пĕр çатма тулли шăрттан.

Килĕмре мĕн пуррине
Кăтартса, ялти Совет
Хучĕ манăн хут çине
Çавракка кăвак пичет.

„Выдана сия“ текен
Питĕ шанчăклă хута
Тытмалла пулать иккен
Укçапа пĕрле шалта.

Силпири тўрем хирсен
Çĕмĕрт пек хура ачи,
Эп лапка çинче хĕрсе
Лайăх кĕтĕм çул мунчи.

Хурăнташ-вĕрлесене
Алă патăм та вара
Тепĕр çутă ирхине
Эпĕ пултăм поездра.

Трамвайсен кĕрлевĕнче
Пĕвĕме лăска-лăска.
Сарлака арку çинче
Ачашларăн эс, Мускав.

Хартлатса чĕвен тăран
Чăмăр ўтлĕ утăма
Эпĕ пĕлнĕ ачаран
Юрттарма, кару яма.

Хирсенче, вăрмансенче,
Ту çинче те шикленмен,
Вăкăр тир йĕнер çинче
Эп силленнĕ пĕчĕкрен.

Пархатарлă ĕç валли
Хăвăн иксĕлми вăйна
Тултарса, Мускав хули,
Хытăрах силле мана!

Эс чăвашăн ачине
Патăн пĕр манми тивлет,
Çавăнпа сакки çине
Лартрĕ университет.

Мускаври профессорсем
Умĕнче ăспа хăват
Пуçтарса, ман ĕмĕтсем
Илчĕç яр вĕçме çунат.

Сарă мăйăр пек тулли,
Тарăн ырă шухăша
Хамăн халăхăм валли
Пухрăм эпĕ тăрăшса.

Халь те пурнăç тăршшĕпе
Яланах аса килет
Ломоносов ячĕпе
Лартнă университет.

Ун чухне юлташсемпе
Пĕр тăван пек пурсăмăр
Сарлака урамсемпе
Савăнса утаттăмăр.

Кремльти сехет хыпар
Çурçĕре пĕлтериччен
Сăвăсем вулаттăмăр
Атăлпа чăваш çинчен.

Халĕ те тăрать асра
Çамрăк каччă чухнехи:
Янтăратчĕ сывлăшра
Шăпчăк пек чăваш чĕлхи.

Эс мана айванлăхран
Кĕртрĕн çутă ăс-тăна,
Çавăнпа чунтан-варган
Тавтапуç, Мускав, сана!

Çĕр çинче Мускав пурри—
Пур этемĕн чĕринче,
Ян каять мухтав юрри
Пĕтĕм аслă çĕр çинче.

Чинавье инкен килте
Пăхмалла хуçалăха,
Çавăнпа пĕлмен пĕртте
Канлĕ тутлă ыйăха.

Качака-и е ĕне
Картара сас парсанах,
Вăранса кайса пуçне
Вăл çĕкленĕ яланах.

Сирсе янă ыйăха
Каçсерен йытсен сасси,
Шиклентернĕ выльăха
Сăрă кашкăр пăвасси.

Саккăрмĕш хутра, çўлте,
Чинавье инкемĕре
Çĕр хута та нимĕн те
Курăнмарĕ тĕлĕкре.

Васкаса йăри-яри
Вăл тăрать тўшек çинчен.
Йăлтăркка хĕвел ури
Тăсăлать урайĕнче.

Хăнари çынна пекех
Апата пыма чĕнме
Хĕр ача ĕнерхиех
Килсе кĕчĕ пўлĕме.

Чинавье инке утать
Чип-чипер хĕр умĕнче,
Анасса анса каять
Шавсăр лăпкă лифт çинче.

Хăйĕнчен аяккалла
Пăрăнса утман хĕре
Тавтуса каламалла,—
Кăмăл пулнă чĕрере.

Çамрăк ĕмĕт пек хитре
Хĕр ача, хула çынни,
Кастарать инкемĕре
Вырăсла пĕлейменни.

Йĕркипе сĕтел-пукан
Аялти хутра иккен.
Таврари тасалăхран
Тĕлĕнсе каять инке.

Ешĕл йывăç айĕнче
Пăсланать апат хитре.
Ялĕнче кун пек тĕнче
Пуласса шанать чĕре.

Халăха тăрантакан
Ешĕл йывăçлă çуртра
Йĕркипе сĕтел-пукан
Ларĕ „Атăл“ колхозра.

Ĕнерхи автомобиль
Кĕтсе тăнă урамра.
Чинавье инке:—Пехил!—
Тет хуллен кăна ăшра.

Ырă çын машинине
Силлĕтмесĕр вĕçтерет,
Кремĕле, хапхи умне,
Пĕр самант пырса çитет.

Салтакла тумланнăскер
Чыс парать инкемĕре,
Кăсăрук умне чипер
Аллине çĕклет пĕрре.

Чинавье инке унта
Ялсовет çавра пичет
Хунă шанчăклă хута
Кăкăр кĕсйинчен илет.

Çар çынни апла-капла
Çак хутаваскав кăна
Пăхкалать те малалла
Çул парать машинăна.

Темĕн пек кермен çурта
Кĕмелле пулать иккен,
Ерипен ута-ута
Именсе пырать инке.

Ĕлĕк чух çÿренĕ пуль
Патшапа майри кăна.
Ленин панă аслă çул
Çÿретет ялти çынна.

Коридор тÿлекĕнче
Чинавье инкемĕре
Тăрăхла палас çинче
Ярăнса утма хитре.

Ун пăхса иртес килет
Таврари пур илеме,
Кайнăçем пырса кĕрет
Анлă çутă пÿлĕме.

Уçă алăк патĕнче
Вăл тăрать пăха-пăха
Çĕршыври кĕтессенчен
Хăй пек килнĕ халăха.

Хур минтерĕ пек çемçе
Çаврака пукан çине
Вăл ларать, куçпа виççе
Асăрхать этемсене.

Пуç-пуç урлă аякран
Вăл курать хуллен кăна
Тепĕр пысăк алăкран
Кĕрекен Калинина.

Инкесен тĕпелĕнчи
Пĕр портрет çинчийĕ пек,
Çÿçĕпе сухал пĕрчи
Кăвакарнă пĕтĕмпех.

Пысăк ятлă çын çине
Пăхнă чух уйлать инке:
Курнă вăл патша чухне
Тĕрмере инкек-синкек.

Çĕр çинче телей уççи
Яланах шыра-шыра,
Ленин тусĕ – аслă çын—
Пулнă тарăн шухăшра.

Халăха валли саккун
Çырасси пит çамăл мар,
Çÿçĕпе сухалĕ ун
Çавăнпа шуралнă-тăр.

Çĕршыври мĕн пур тĕле
Ырлăх сарасси çинчен
Шухăшланă чух çĕрле
Вăранать-тĕр виç хутчен.

— Пултăр сан, вĕрентекен,
Икĕ ĕмĕр çĕр çинче!—
Теесси килет инкен
Пĕтĕм халăх умĕнче.

Шĕл-кăвар пекех хăмач
Витнĕ пĕр сĕтел умне
Чарăнса Михал Иванч
Тавтăвать хресченсене.

Çĕршыври колхозсенчен
Килнĕ халăх таврана
Кисретсе ура çинче
Хапăллать Калинина.

Харăс-харăс пĕтĕмпе
Ал çупса тăни вара
Вĕрене вăрманĕ пек
Янраса каять залра.

Çупăр-çупăр та çăт-çат
Ал çупни, „урра" сасси
Лăпланать те, пуçланать
Орденсем парнелесси.

Виç-тăват колхознике
Панă хыççăн, чĕрине
Чарайми илтет инке
Хăйĕн ячĕ тухнине.

Халиччен хушаматпа
Пĕр этем те каламан,
Чĕркуҫҫи те ҫаванпа
Тăр-тăр турĕ ăнсăртран.

Такамран вăтаннă пек,
Лашт пуҫне пĕке-пĕке,
Итлемен урисемпе
Именсе утать инке.

— Ҫĕнтерӳ те вăй-хăват
Сирĕн пултăр малашне! —
Тенĕ май алне парать
Хăй Калинин инкене.

Ҫака сĕтел умĕнче
Мĕнлерех калассине
Павăл пит вĕрентнĕччĕ
Килĕнче, килес чухне.

Халĕ те инке кунта
Астуса илет, анчах
Шăннă ҫу пек ҫаварта
Капланса тăрать сăмах.

— Тавтапуҫ!—тесе калать
Чăвашла, вĕри чунне
Кантарса кайса ларать
Ҫаврака пукан ҫине.

Вăхăт сисĕнми шăвать,
Тĕлĕкри пекех иртет.
Пĕр паллана хушамат
Хăлхана пырса кĕрет.

Хушамачĕ те—Талпас,
Ячĕ те тата—Ҫемен.
Пĕр пек ят та пĕр пек сас
Тĕнчере пулать иккен.

Ёлĕк кӳршĕ-аршăра
Пурччĕ пĕр Талпас ҫынни,
Колхозран хăра-хăра
Ҫĕн ҫĕре каяканни.

Ҫуркунне пĕррехинче
Хăямат автан пирки
Икĕ килĕ хушшинче
Пулчĕ ҫапăҫу пекки.

Ун чухне усал Ҫемен
Тăпăлтарчĕ ҫивĕте.
Асăнас килмест инкен
Урăм-сурăм камите.

Ҫырăрах ҫăра ҫӳҫне
Кăшкарла кастарнăскер
Тĕпелти сĕтел умне
Тухрĕ ҫăмăл та чипер.

Ҫын-ҫын урлă инҫетрен
Тĕлĕнсе пăхать инке:
Чăннипех те кӳршĕре
Пураннă Ҫемен иккен!

Вăтăлман сăнарĕпе,
Ёлĕкхи пекех матур.
Чинавье кĕвентипе
Тивнĕ вырăн халь те пур.

Ҫуталать ҫамки ҫинче
Тахҫанхи суран йĕрри.
Тарлă кăкăр айĕнче
Ҫӳҫенет инкен чĕри.

Ҫĕпĕр ҫĕрĕнче таҫта
Бригадир пулни ҫинчен
Чăн-чăн вырăс пек ăста
Каласа парать Ҫемен.

Тыткалать Ҫемен хăйне
Пуринчен хăюллăрах,
Калама чĕлхи ҫине
Тупăнсах пырать сăмах.

Килĕнчи пекех темле
Туйăнать пулас ăна,
Аллинчен силле-силле
Тавтăвать Калинина.

Юрăри пекех ĕлккен
Кремльтен тухас чухне:
— Эс иккен! тесе инке
Чĕнчĕ харсăр Ҫемене.

— Ҫӳретет пире тĕнче
Мускава та, Чинавье!
Эс те, эп те ҫĕр ҫинче
Тупнă хамăр телее.

Çĕпĕре каяс чухне
Çуркунне тăватсăмăр
Урлă-пирлĕ пĕр-пĕрне
Хĕнесе тылларӑмăр.

Эх, тӳнккерĕм эп сана
Çивĕтӳ тăпăличчен...
Тутине пĕрсе кăна
Йăл кулать Çемен пичче.

Хулăм хуллă çын çинче
Килĕшет пустав тумтир,
Сарлака çухийĕнче
Кăпăш çăмлă сарă тир.

Йăлтăр-йăлтăр хуп-хура
Ик хăлхаллă çĕлĕке
Ытармасăр хушăран
Юратса пăхать инке.

Кăн-кăвак кĕрхи тĕнче
Илĕртсе тăрать куçа.
Хĕрлĕ Площадь хĕррипе
Иккĕш утрĕç калаçса.

Чул хӳме таврашĕнче
Чанк лараççĕ кармашса
Шĕвĕр тăраллă, çинçе
Çамрăк ешĕл чăрăшсем.

Çакăнта тăрать тĕнчен
Кăвапи, чăн-чăн варри.
Аслă Хĕрлĕ Площадĕн
Чаплă чулĕпе тăпри.

Халĕ канлĕ ун çинче
Аслă партийĕн çынни
Çывăрать те, ыйхинчен
Вăратмасть çынсем иртни.

Çывăрать, анчах та тек
Шухăшĕ, çӳре-çӳре,
Архимед тĕревĕ пек
Кустарса пырать çĕре.

Çĕр çинче те шыв çинче
Пĕр путми-çунми каять
Халăхсен чĕлхисенче
Ленин тенĕ вирлĕ ят.

Аслă улăп шухăшне
Кăшт пулин те пĕтерме
Пулăшмасть тирансене
Пăшалпа хаяр тĕрме.

Вĕлерме тытса каю,
Пуç касу пырать, анчах
Тымартан ӳсет каю
Виçĕ хут нумайтарах.

Мур харамĕ çĕр çинче
Пĕтереймĕ телее.
Инкепе Çемен пичче
Кĕчĕç чул мавзолее.

Пасарми кĕленчере
Каннă пек выртать çулпуç.
Пысăк шухăшпа ĕçре
Вăл канман. Вăл хупнă куç.

Чинавье инкен чунтан
Каласси килет çапла:
– Пурăнасчĕ, Ленин, сан
Малалла та малалла!

Эх, сана татах та сыв
Тăратма эпир чĕнсен,
Юмахри пек чĕрĕ шыв
Тухтăрччĕ çĕр тĕпĕнчен!

Пирĕн ырă самана
Мел тупас пулсан чĕртме,
Эпĕ парăттăм сана
Хĕрхенмесĕр чĕреме.

Ĕç çинче ĕшеннĕрен
Ĕмĕрӳ кĕскелчĕ пуль...
Сăрхăнса тухать инкен
Куçĕнчен вĕри куççуль.

Инкепе Çемен пичче
Площăде тухас чухне
Пуç таяççĕ виç хутчен
Аслă Ленин хисепне.

Чаплă шĕкĕр хулара
Пилĕк-ултă кун хушши
Пурăнса, вĕсем вара
Мĕн кăна курмарĕç-ши?

Курнине калас пулсан,
Каласа пĕтериччен
Ӳссе ларĕ сĕм вăрман
Паянхи икелсенчен.

27

Килĕнче сайра кăна
Пулкалать Калля пичче,
Тĕрмешет яра-кунах
Выльăх-чĕрлĕх картинче.

Пĕр эрне кӳ яхăнта
Карчăкки пулман пирки
Пĕчĕкçеçĕ хуранта
Пĕçерет çăмах яшки.

Апетичĕ пулнăран
Вăхăта ямасть сая,
Чăмтарать çур килограмм
Тăварланă какая.

Витамин усси çинчен
Илтнĕ вăл пĕр тухтăртан,
Çавăнпа кĕлетĕнче
Хатĕр типĕ пултăран.

Пĕçерет пĕçерессе
Астивсе, сыпа-сыпа,
Тăварне ярать пĕлсе
Сарă йывăç кашăкпа.

Хĕрлĕ йӳçĕ пăрăçне
Янă ырă яшкине
Çинĕ чух, шăрçа-шăрçа
Тар тухать çамки çине.

Тин вăраннă хĕвеле
Пĕлĕт витрĕ ир çинче.
Хăйĕн çурчĕ еннелле
Уттарать Калля пичче.

Çӳçенӳллĕ сивĕре
Хăвăрт утнă вăхăтра
Урисем кĕрхи çĕре
Янратаççĕ урамра.

Ăшă пултăр кашни пӳрт,
Çунтăр вут кăмакинче!—
Тĕтĕмĕн юпи тӳп-тӳр
Хăпарать мăръесенчен.

Кӳлĕ хĕррине ларса
Тухнă яш йăмралăх пур.
Çĕкленет кикаклатса
Ӳшкăн-ушкăн шурă хур.

Мăй тăсса вĕçсе пырать
Хур карти çуртсем çинче.
Хĕрлĕ тĕс вĕсен вылять
Карăнтăк урисенче.

Хăшĕ, самăр пулнипе,
Йăтаймасть çӳле хăйне.
Аялта пур вăйĕпе
Шăхăртать çунаттине.

Шăнăрлă хиврě çунат
Хăлхаран тыттариччен
Пĕшкĕнсе тăрса юлать
Урамра Калля пичче.

Фермăра кăçал çапла
Икçĕр çитмĕл виçĕ хур
Колхоза пуйтармалла
Ӳснĕ самăр та матур.

Ирхине вĕри апат
Тумалла Калля пиччен,
Çавăнпа та кăлт тапать
Пĕчĕк шухăш пуçĕнче:

„Витери хуçалăха
Хам çӳренĕ вăхăтра
Суранлатнă пĕр чăхха
Çер çăтманĕ пăсара.

Халĕ çав аманчăка
Тытмалла та пусмалла,
Сăлтавне кура, яшка
Питĕ тутлă пулмалла“.

Чăхсене килкартинче
Йыхăрса çӳрерĕ те
Шалт уçса Калля пичче
Кĕрсе кайрĕ кĕлете.

Чăх тытма та тĕнчере
Кăшт пулин те пĕлмелле:
Ăскăçпа ăсса пĕрре
Памалла пулать сĕлле.

Ăнсăртран пĕр ял çынни
Шăлтăр-шăлтăр хапхана
Яр уçса пĕрре хупни
Илтĕнсе каять ăна.

— Ташлама пулать-и мел,
Юрлама вĕрет-и юн?—
Тет хура сăран кушел
Çакнă çамрăк почтальон.

— Ташлăттăм, анчах паян
Ыратать хăрах урам...
Килнĕ шĕкĕр Мускавран
Вун сăмахлă телеграм.

Инçетри пĕр паллă мар
Хăнапа килни çинчен
Чинавье инке хыпар
Пелтерет кĕтмен çĕртен.

Пысăк çын-и? Кам-ши, кам?
Ан тĕпче те ан калаç!
Чун çунтармĕш телеграм
Пĕр сăмах та шарламасть.

Кăт-кăтик чăххисене
Пĕр ăскăç тулли сĕлле
Панă хыççăн вăл çулне
Çавăрать витенелле.

Инкене чипер лавпа
Кĕтсе илесси çинчен
Вăл калаçнă Павăлпа—
Телаграмма çитиччен.

„Чарлана" тытса тухать
Йăпăрт-япăрт çавăтса,
Пĕр самант кӳлсе лартать
Чи хитре тарантаса.

— Нооо!—тесе пĕрре
Систерет тилхепипе;
Шурă учĕ шăн çĕре
Кисретет урисемпе.

Тирекпе йăмра укçа
Сапнă ылтăн урамра
Шăлтăртатрĕ калаçса
Сиктĕрмеллĕ урапа.

Ак правлени умĕнчен
Юрттарса иртес чухне
Çавăрать Калля пичче
Пуç çинче шĕлепкине.

Кантăк витĕр пăхакан
Павăла курсассăнах,
Вăл калать васканăран
Пĕтĕмпе те ик сăмах.

— Карчăка илме! –тесе
Кăшкăрать Калля пичче.
Кăшкăрни каять пĕтсе
Кустăрма кĕрлевĕнче.

Кĕпере шавлаттарса
Иртнĕ хыççăн,
каймалла
Лашана тарлаттарса
Икĕ çухрăм тăвалла.

Лашана чунтан пăхма
Пĕлмелле колхозсенче,—
Лав çинчен анса утма
Юратать Калля пичче.

Ывăнсан, ярса тытать
Урапин ӳречинчен.
Урине кантаркалать
Йывăр чăнкă çул çинче.

Пурнăçра та тĕл пулать
Этеме чи çӳлĕ ту,
Пăтранса вара каять
Шухăшу та кил-çурту.

Ĕлĕкхи йăласене
Çăмăл мар пăрахасси,
Чăнкă тăвăн леш енне
Питĕ йывăр каçасси.

Киввине çĕнни çĕнсе
Пынине ăнланманни
Кансĕрлет—
вара ĕнсе
Хыçкалать хресчен çынни.

Ашшĕ çамрăк сынсене
Авалхи камит çинчен
Каласа панисене
Астăвать Калля пичче.

Çĕрулми лартма хысна
Ĕлĕк, иртнĕ ĕмĕрте,
Вăрлăхне парсан, ăна
Илекен пулман пĕртте.

Пахчине „шуйттан улми“
Лартасран хăпать сехри,—
Пĕр эрне пĕрре тухми
Ашшĕ ларнă нӳхрепре.

—Çĕрулмисĕр çук апат
Халь çынсен кăмакинче...
Ихихик!—тесе кулать
Сасăпах Калля пичче.

Кивĕ калăпа хуçса,
Пĕр йăх-ях та çĕнейми,
Мĕн тесен те, пурнăçа
Çĕмĕрсе кĕрет çĕнни.

Пĕр самант та çĕн тĕнчен
Чарăнса тăмасть чуппи.
Уçăлать ялсем çинче
Хупăнми кăвак хуппи.

Мĕн калана—çав пулать,
Мĕн шутланă—çав килет.
Колхозра тулса тăрать
Тӳпине çити кĕлет.

Шавлă вирлĕ çулсенче
Кил-çуртне колхоз шăрши
Кĕресрен. Калля пичче
Мĕн кăна тумарĕ-ши?

Ăншăрта чарас майпа
Çапрĕ вăл ут таканне
Виçе тимĕр пăтапа
Алăк урати çине.

Çĕнĕ пурнăç утăмне
Ăнланса çитмен пирки
Ту пек тухрĕ ун умне
Колхозла тĕнче йĕрки.

Çамрăк Павăл ун чухне
Пăрăнмарĕ, пулăшса
Ӳкĕтлерĕ пиччене,
Ячĕ тарăн шухăша.

Артельсем пуçланнă çул
Йывăрччĕ, анчах утма
Тăсăлса ту урлă çул
Выртрĕ çип пекех ума.

—Колхозран айккинелле
Пăрăнса тăрса юлма
Эпĕ картăм пĕр çĕрле
Хамăн тимĕр картама.

Сивĕ тарăн юр çинче
Кусарне çухатнине
Астуса, Калля пичче:
—Ăссăр эсĕ!—тет хăйне.

Выльăх-чĕрлĕх пусасси
Пулнине те астăвать.
—Ихихик!—текен сасси
Тепĕр хут тухса каять.

Халĕ ĕнтĕ хăпарса
Тӳреме тухать лаша,
Тулхăрать янраттарса
Кĕленче пек сывлăша.

Ушкăн пăчăр явăнать
Сарă хăмăл çийĕнче.
Тарантас çине ларать
Шăхăрса Калля пичче.

Кăвакарчăн пек кăвак
Карăнса выртать тĕнче,
Пĕлĕтсем шăва-шăва
Карăнаççĕ пуç çинче.

Ылтăн тумĕ ӳкнĕрен
Тĕксĕм çапнă вăрмана.
Çулăм тивнĕ пек кĕрен
Пилешпе палан кăна.

Эх, уй-хир, тăван уй-хир
Сарлака! Анчах унта
Çын ури пусмасăр çĕр
Юлайман пĕр аршăн та.

Тăпрана тăрмаласа
Курнă терт те курнă хур.
Ун çинчен астутарса
Калакан ятсем те пур.

Иртнĕ пурăнăç çинчен
Халăха астутарма
Икĕ сăртăн хушшинче
Тăсăлать „Чукмар çырма“.

Ĕлĕкех-авал пĕрре,
Анасем валеçнĕ çул
Харкашуллă инкекре
Сикнĕ-тухнă çапăçу.

Кўп те кўп те çăт та çат
Тўпелешнĕ вăхăтра
Пĕр куштанĕ, хăямат,
Ярса тытнă чукмара.

Тăршшĕне ик аршăн та
Урлăшне пĕрре кăна
Çĕр пилленĕ вăл унта
Ялĕнчи чылай çынна.

Вилнисем хĕн-хурлăх та,
Чир-чĕрсем салатасран
Пулнă çавă вырăнта
Киремет кати кайран.

Кутамас лутра юман
Ларнине чухлать пичче.
Нухратпа çавра юсман
Пурччĕ унăн айĕнче.

Чухăнсем, пусма чĕрчун
Килĕнче пулман пирки,
Пăрахатчĕç чирлĕ чух
Пушăт выльăх кĕлетки.

Эх, çуралнă çĕр, санра
Тар та, юн та тăр куççуль!..
Кĕнекен выртать умра
Халăх тўссе иртнĕ çул.

Асăрхать Калля пичче
Улăха анас чухне
Çўлĕ сакăлта çинче
Ларакан хыр вăрманне.

Пулнă çакă таврара
Пĕр Чемей текен этем.
Халь те юлнă халăхра
Ун çинчен халап та тем.

Кĕтерне майра патша
Илтнĕ паттăр çын çинчен,
Чĕлхине касма хушса
Янă Питĕр хулинчен.

Чĕлхине Чемейĕнне
Каснă, тет,—пытарайман
Харсăр халăх ачине
Сакăлта çинчи вăрман.

Çавăнпа вăра хайхи
Амăрткайăк пек çынна
Асăнма „Чемей чĕлхи“
Тенĕ çакă вăрмана.

Юлнă ĕмĕр тăршшĕпе
Пур çĕрте те хурлă ят,
Пĕлсенех, çўçеннипе
Çын чĕри тăр-тăр тăвать.

Пит нумай мулпа сĕткен
Уй-хирте, анчах пин çул
Пулнă халăх çиекен
Çăкăр та вĕри куççуль.

Тутă тĕшĕллĕ пучах
Ўстерес тесе çуллен
Чўк иртгернĕ те, анчах
Пархатарĕ килеймен.

Ашшĕ-амăшĕ патне
Çавăна ăсаниччен
Курчĕ пурнăç ырлăхне
Çĕр çинче Калля пичче.

Çўремест килтен киле
Çăкăрпа тăвар нуши,
Урамра çўлтен çўлĕ
Çĕкленет кулач шăрши.

Кĕтнĕ вăхăт çитрĕ тин!
Халĕ ĕнтĕ ял çинче
Чăннипех те ятлă çын
Шутланать Калля пичче.

Пархатарлă ырă ят
Ялĕнче çўрет, анчах
Чапĕ арăмин пырать
Паллăрах, мухтавлăрах.

Шупашкар çынни пĕрре
Килчĕ те инке сăнне
Çамрăк хĕр пекех хитре
Çапрĕ пĕр хаçат çине.

Ырласа, ăна-кăна
Çырнисем кирлех те мар,—
Упашки—тесе кăна
Ӳкересчĕ юнашар...

Тĕрлĕ-тĕрлĕ шухăша
Пынăçем путать пичче.
Ярăнса юртать лаша
Шăннă такăр çул çинче.

Хир-хир урлă каясси
Кĕркунне епле хитре!
Чăк та чак такан сасси
Янратса пырать хире.

Сарăлать кăвакарса
Ешĕл уçăмлă тĕнче.
Пĕлĕтсем карталанса
Шăвăнаççĕ ун çинче.

Сивĕрех çанталăкра,
Малтанхи шап-шурă юр
Ӳкиччен, хăйне кура,
Кĕркуннен илемĕ пур.

Ушкăн йывăç айĕнче
Хӳтеленнĕ станцине
Шухăшлă Калля пичче
Сисеймерĕ çитнине.

Çул çуллана лашана
Çитермесĕр юрамасть,—
Куç таран çакать пуçне
Сĕлĕллĕ шалпар хутаç.

Икĕ аллине хурать
Хыçала, вĕчи çине,
Утнă майăн вăратать
Çывракан урисене.

Такăр чул урамĕпе
Ӳпĕнсе утать Микка.
Çил çинче çӳренипе
Пичĕсем кӳпшек, парка.

—Инкеке кĕтетĕн-и,
Сăвăр пуç, Калля пичче?—
Тенĕ чух Миккан кулли
Ярăнать тутисенче.

—Санăн, сăвăр пуç,—теме
Шĕпĕн-и чĕлхӳ çинче?—
Çиленсе чĕрре кĕме
Хăтланать Калля пичче.

—Арăму, Калля пиччем,
Килнĕ çамрăк каччăпа,
Кайрĕ эсĕ çитиччен
Районти машинăпа.

Пĕр сăмах та калама
Аптăрать Калля пичче,
Лашине те шăварма
Манса кайрĕ хальхинче.

Кун пек намăс курасса
Вăл кĕтмен, шĕлепкине
Икĕ алăпа пусса
Антарать çамки çине.

Лавçăн чунĕ вăркатса
Ыратса каять темле...
Антăлса каять лаша
Тунсăх килĕ еннелле.

Кутăн-пуçăн çӳресси
Лайăх мар иккен пĕртте!..
Чăк та чак такан сасси
Хăлхана çурать хирте.

28

Уçă чунлă, пархатарлă
Инкепе Калля пичче
Хăнасем паян пуçтарнă
Капăр ырă çуртĕнче.

Юриех çуса тасатнă
Икĕ пӳлĕмлĕ пӳртне
Пухăнма йыхрав ăсатнă
Хурăнташ-вĕрлесене.

Тĕрĕсем туса çĕленĕ
Кăпăшка минтер çине
Ларнă-мĕн Талпас Çеменĕ
Варринчи кĕрекене.

Орденлӑ инке хастарлӑ
Килнӗ аслӑ Мускавран,
Ҫавӑнпа та вӑл пустарнӑ
Пилӗк-ултӑ яш автан.

Тус-йышне хисеп тӑвасшӑн
Кӗркунне автан яшки
Пӗҫерсе чӗнме чӑвашӑн
Авалтан пырать йӑли.

Кӳлнӗ пӗкӗ ҫӳлӗш тырӑ
Пӳлмене кӗрсен, вара
Ҫаврӑнать янравлӑ юрӑ
Кӗреке йӗри-тавра.

Пӗр-пӗрне ҫынсем хаваслӑ
Кун сунаҫҫӗ кӗрлесе,
Икӗ вайлӑ сылтӑм алӑ
Уйӑраҫҫӗ йӗтесе.

— Сӑрана ӑсар-и, карчӑк,
Пыр типни пуҫланиччен?—
Терӗ те пичке кӑларчӗ
Кустарса Калля пичче.

Урнӑ пек сӑра хӑвачӗ
Хытӑ ҫапӑннӑ пирки
Маччана ҫити хӑпарчӗ
Вӑркӑнса ҫӑка пӑкки.

Куркара сӑра шавларӗ
Шурӑ кӑпӑк тухиччен.
Алтӑрне йӑтса, пуҫларӗ
Сӑмахне Калля пичче.

Яланах ҫапла хаваслӑ
Пурӑнма шакка-шакка
Тӳнтерер-и, ырӑ халӑх,
Чи малтан перер курка!

Ваттисем пӗлсе каларӗш,
Пирӗн савӑш куркине
Ӗҫейменӗ пулӗ карӑш,
Ӗҫекенӗ—путене.

Пултӑр пурсӑрӑн телейӗр
Килӗрте, уй-хирсенче!—
Пӗр ҫынна та сиктермесӗр
Тавтӑвать Калля пичче.

— Ман пек сывлӑш ҫавӑрмасӑр
Кӑтартсам курка тӗпне!—
Тыттарать вӑл васкамасӑр
Ҫемене, чунри тусне.

Теприне ӑсса ҫӗклерӗ
Ватӑ ҫын, Калля пичче,
Каламасӑр тӳсеймерӗ
Халӗ Павӑл умӗнче:

— Савнӑ шӑллӑм, эсӗ маншӑн
Чӑннипех те коммунист,
Ҫавӑнпа сана тӑвасшӑн
Килӗмре чи пысӑк чыс.

Пурӑнса пыма пире ӑс
Патӑн эс—
ачам, сана
Юратса туссем пӗр харӑс
Ҫӗклӗҫ тавлӑ куркана.

Хӑнасем сиксе тӑраҫҫӗ—
— Тавӑсье!—тесе пурте
Кӑшкӑрса ян-ян яраҫҫӗ
Икӗ пӳлӗмлӗ пӳрте.

Вӑрӑм та тивлетлӗ ӗмӗр
Суннӑ май, арҫынсене
Ӗҫтерет Калля пиччемӗр,
Чинавье—инкесене.

— Пурӑнар тата тивлетлӗ!—
Тенӗ май Калля пичче
Кӑларать сургуч пичетлӗ
Хӗрлӗ пуҫлӑ кӗленче.

Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫуллӑ
Сарлака кӗрекинче
Тавтӑвать сӗтелӗ урлӑ
Ҫемене Калля пичче.

Ҫӳҫенет старик, пӗр авӑк
Янк ярать, лӗпки ҫине:
— Куртӑр-и!—тесе сасартӑк
Черккине лартать ӳпне.

Чечексем туса тӗрленӗ
Йӑкӑр-йӑкӑр черккене
Пушатса Талпас Ҫеменӗ
Кӑтартать хӑнасене.

Автансем пирки хастарлă
Пулнă вăрçă—
ун чухне
Чинавье инке хăварнă
Паллă йĕр çамки çине.

Хăнасем ăна палларĕç,
Асăнас килмен енне
Пуçласа яраççĕ харăс
Шыв пек тикĕс юррине:

„Тĕнчере темрен те хаклă
Хамăр туслă пуласси...“
Илтĕнет тулта янравлă
Сарăлса автан сасси.

Çурçĕр çитнĕ. Ларнă Павăл
Варринчи пукан çине,
Пăрчăкан чуппи пек çăмăл
Çÿретет пÿрнисене.

Таянса ларать вăл меллĕ,
Урине хурать явса,
Хутлă-хутлă, каллĕ-маллĕ
Илтерет хуткупăса.

Çĕпĕртен пĕр ÿркенмесĕр
Килнĕ юлташа—
— Эх, линкка!—Калля пиччемĕр
Йыхăрать ташша.

Чĕринчи ташлас çил-тăвăл
Килнĕ майĕпе,
Чи малтан пĕрре тапать вăл
Сылтăм урипе.

Сулахайĕ тăпăр-тăпăр
Тунă самантра
Çаврăнса илет вăр та вăр
Вăл Çемен тавра.

Икĕ ватă хире-хирĕç,
Иккĕш те пĕрле
Сикрĕç те сасартăк кайрĕç
Икĕ еннелле.

Какайпа сăра сĕткенĕ
Тулнă сывлăша
Хускатса Талпас Çеменĕ
Илтерет ташша.

Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк
Çаврăннă чухне
Аллипе тивет пăртак
Ата кĕлине.

Тăсăлса пĕрре выртать
Сарă урайне,
Аллипе çăт-çат çапать
Анлă кăкăрне.

Тăпăр-тăпăр тутарать
Икĕ урипе,
Пĕр самант сиксе тăрать
Харсăр вăйĕпе.

Мулкачла сиксе тăма
Хăямат ăста,
Такмакне те калама
Пултарать тата.

Вăл тапса кисретнĕ май
Ертрĕ чĕтренке
Сĕтелсем çинчи нумай
Кашăк-тирĕке.

Хускатать мĕнпур çĕре
Ташăри хăват.
Турчăка та кĕтесре
Тăр-тăр-тăр тăвать.

Тăсăлать пĕрре чакми
Икĕ тус ташши.
Силленет урай хăми
Çур сехет хушши.

Пултарать Çемен пиччи,
Кисретет çурта,
Хускатать сакайĕнчи
Пăчкăпа пуртта.

Пĕр чакмасăр вăй тулли
Илтерет ташша,
Сикнĕ май пырать алли
Халĕ кармашса.

Хулăм хуллă та парка,
Пăлатна хăна
Хăварать шакка-шакка
Сарă маччана.

Йăкăр-йăкăр йĕрĕлчеллĕ
Йĕкелле Калля пичче
Ярăнса пырать илемлĕ
Пĕр ура çинче.

Тăпăр-тăпăр кайнăçемĕн
Тăсрĕ теприне,
Яврĕ вăл Талпас Çеменĕн
Сылтăм урине.

Халĕ харсăр та пĕр тикĕс
Ташă кĕввинче
Тăвăл пек пыраççĕ иккĕш
Ик ура çинче.

Павăл карăнса хуткупăс
Калакан çĕрте—
Тăпăр-тăп!—туса пĕр харăс
Чарăнаççĕ иккĕш те.

Çав самант Çемен тинкерчĕ
Аллинчи сехет çине:
— Каймалла!—тесе пĕлтерчĕ
Шавлакан хăнасене.

— Эпĕ хатĕр. Хатĕр мар-и?
Тăлăп та пăта çинче!—
Каласа пама васкарĕ
Вĕтĕлти Калля пичче.

— Ырă çул!—курка йăтаççĕ
Кĕреке тавра пурте,
Кăшкăрса ян-ян яраççĕ
Икĕ пӳлĕмлĕ пӳрте.

Килсенех Талпас Çеменĕ
Вăшават калаçура:
— Пыр-ха!—тенĕ, ӳкĕтленĕ
Кăмăлçах Каллямăра.

Çемене итленĕçемĕн
Килĕшсе, Калля пичче
Хăнана тухса каять-мĕн
Халĕ çурçĕр тĕлĕнче.

1935—1950.

Хăнана пырас хыпарлă
Телеграмма Çĕпĕре
Почтăра ĕнер çаптарнă
Икĕ туслă чун-чĕре.

Поезда çитме кăтартнă
Вăхăта пĕлсе тăрса,
Конюхсем кӳлсе тăратнă
Чи аван тарантаса.

Каллясен хапхаллă çурчĕ
Умĕнче „Чарлан" лаша
Тулхăрса янравлă çурчĕ
Уçă сивĕ сывлăша.

Тутă сĕлĕ çинĕрен-тĕр
Мăнтăрне тӳсменнипе
Шăн çĕре вăл тĕпĕр-тепĕр
Чакалать урисемпе.

Йĕтĕнпе чĕнтен явтарнă
Сарă тĕслĕ тилхепе
Ик енче те пархатарлă—
Икĕ тилĕ иртнĕ пек.

Юнашар пырса лараççĕ
Çеменпе Калля пичче.
Председатель Павăл, лавçă,
Хăй иккен кусла çинче.

Шăхăрса пĕрре хистерĕ
Хускалса кайма хушса.
Çавăнтах пуçне çĕклерĕ
Шурă ут, йăлттам лаша.

Сивĕре куллен çара çĕр
Çурăлас пек шăннăран
Тавраиа татти-сыпписĕр
Кисретет тăвăт такан.

Çывăрса выртать кĕр уйĕ
Паслă шурă тĕнчере.
Курăнать пасарнă уйăх
Пĕкĕ витĕр тĕтрере.

*Н. МРАНЬКА*

# ЁМĔР САККИ САРЛАКА

РОМАН

## 1

Çуркунне сар хĕвел ăшă хĕлхемне çĕр çине кăмăллăн сапалать. Хĕл ыйхинчен вăранса ураланнă ӳсентăрансем, пĕчĕк ача амăшĕн кăкăрĕ патнелле кармашнă пек, хĕвел ăшшине хирĕç тӳпенелле кармашаççĕ.

Тĕнчен илемĕ—пурнăç.

Вилтăпри айĕнче выртакан этемсене çеç нимĕн те кирлĕ мар. Вĕсем хĕвел ăшшине туймаççĕ, капăр тумланнă ӳсентăрансене курса савăнаймаççĕ... Вĕсен ячĕсем, ĕçĕсем чĕрĕ тăванĕсен, çывăх тус-йышĕсен асĕнче юлаççĕ пулсан та, пурте пĕр тан мар. Пурлăхпа çуклăх вилтăпри айне кĕрсе выртсан та этемĕн уйрăмлăхне палăртса тăнă. Тăванĕсем валли мул хăварнине кура хисеплесе, хăш-пĕрисен вилтăприйĕ çине пысăкрах та çирĕпрех хĕрес лартнă. Хăйĕнчен ним хăварман мĕскĕнсене хĕрессĕр те лайăх пытарнă. Çемçе чĕреллĕ этем тупăнсан, мĕскĕнсен вилтăприйĕ çине çăка хĕрес лартнă та, вăл часах çĕрсе, йăванса ӳкнĕ. Тăванĕсем пырса куççуль тăкман вĕсен тăпри çине...

Ку çапла иккенне Ĕнел приходне кĕрекен сакăр ялăн çăви çинче те курма пулнă. Çăва варринчи тӳремре, лапсăркка хурăнсен ешĕл турачĕсем айĕнче, парка та çӳлĕ юмантан тунă хĕрес ларнă. Ку вăл Энĕшкассинчи Янаш Петĕр ачин—Михха аслашшĕн вилтăприйĕ пулнă. Михха аслашшĕн вилтăприйĕ тавра, вилсен те «хура халăхпа» явăçма юраман пек, тимĕр карта тытса çавăрнă. Тимĕр карта таврашнелле пытарнă ытти этемсен тăприсем вара мăкăль-шакăлĕн çеç курăнса выртнă. Кунта çĕршер этеме пытарнă. Анчах вăхăт вĕсен тăприсене кашнинех çеремпе шайлаштарса хăварнă.

Ку кун çимĕк кунĕ пулнă. Çăва çинче халăх пасарти пек кĕрленĕ. Чăвашсем, ĕмĕрхи йăлапа, камăн мĕнле вăй çитнĕ таран, тăванĕсене асăнма пухăннă. Вилтăприсем çинче—икерчĕ, çăмарта, чăкăт. Ытлăн-çитлĕн пурăнакансем кукăль те хывнă. Сăра, эрех кăларса лартнисем те пур. Ватăрах вилесен тăпри çине пухăннă хурăнташĕсем, эрех ĕçсе хĕрнипе, шавлăн калаçни илтĕннĕ. Çавăнтах вилтăпри çинче йăваланса макăрнă сасăсем те илтĕннĕ.

Çăван хĕвелтухăç хĕрринерех, кивелнĕ хĕрес çумĕнче—арçынпа хĕрарăм.

Арçынни вăтам пӳллĕ, сарлака хулпуççиллĕ, патвар кăкăрлă этем. Вăл хĕрĕх пилĕк çулсене çитнĕ пулсан та, ăна пĕр вăтăр пилĕк-хĕрĕх çултан ытла пама çук. Çаплах-ха вăл çаврака питлĕ, çамрăк сăн-сăпатлă пулнă. Çĕмĕрт пек хура та чĕрĕ куçĕсем, кăшăлласа каснă çӳçĕ яп-якан курăнса выртни ăна татах та çамрăкрах кăтартнă.

Сăнасарах пăхсан, ку этем ытлăн-çитлĕн пурăннине те астума пулнă. Ун çиййĕнчи пĕрмечеллĕ сăхман, улача кĕпепе кăвак йĕм, уринчи тăхăр пушăт çăпати тата чăлт шурă пир тăли пĕтĕмпех вĕр-çĕнĕ пулнă.

Хĕрарăмĕ çиййĕнче те çакнах курма пулнă. Ун çиййĕнчи шупăр айĕнчен катан пиртен çĕленĕ кĕпе арки, шăтăклаллă чĕрçитти курăннă. Уринче вуникĕ пушăт çăпатипе шурă тăла пулнă.

Хĕрарăмĕ, арçыннипе танлаштарсан, лутрарах та, хĕн курса пурăннă этем пек шуранкарах сăн-питлĕ. Унăн тăрăхларах пичĕ çине вăхăт тарăн йĕрсем хăварма ĕлкĕрни уççăнах палăрнă. Вăл çулпа та арçыннинчен тăват-пилĕк çул ватăрах пулнă.

Ку ĕнтĕ ун чухнехи саманара арăмĕ упăшкинчен ватăрах пулма кирли йăлара пулнине пĕлтермен. Ку çыннăн арăмĕ ватăрах пулни хăйне май сăлтавран килнĕ.

Ашшĕ-амăшĕ халер чирĕпе пĕр эрне хушшинчех вилсе выртнă хыççăн, арçынни вунçичĕ çулта тăлăха юлнă. Ăна вара тăванĕсем, кил тыткалама пултаракан хĕрарăм пултăр тесе, хăйĕнчен аслăрах хĕре илсе панă. Анчах, çур ĕмĕр ытла пурăнса, хăйсем хушшинче çултан уйрăмлăх пуррине сиссех кайман вĕсем, ялан кăмăллă, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăннă.

Вĕсен умĕнче, кив хĕреспе юнашарах, тата виçĕ пĕчĕк хĕрес ларнă. Ку хĕрессене вĕсем хĕрлĕ шатрапа вăхăтсăр вилнĕ ачисен вилтăприйĕсем çине лартнă. Хĕрарăмĕ кашни вилтăпри çинех пĕрер икерчĕ, çамарта хурса тухрĕ те, чĕркуçленсе тăчĕ.

— Ати... ачасем... пил тăвăр...—çур сасăпа пăшăлтатса кăкăрĕ çине хĕрес хурса илчĕ вăл. Çĕнĕрех вилтăпри умне çĕре перĕнмеллех пĕшкĕнсе сасăсăр макăрса ячĕ.

Ачисене çухатнă амăшĕ çеç çавăн пек хурлăхлă макăрма пултарать...

— Пӳлĕхçĕм çырлахтăр, Татьян...—хумханса чĕнчĕ арçынни,—тем чухлĕ макăрсан та чĕртес çук ĕнтĕ вĕсене...

— Мĕнле тӳсес, Çтаппан?—куççулĕ витĕр каларĕ арăмĕ,—ман кун пулнă вĕт вĕсем... тăваттă çуратрăм та, пĕри кăна тăрса юлчĕ...

— Мĕн тăвăн ĕнтĕ? Хăвна ху амантни çеç.

— Айтăрух, Çтаппан. Тархасшăн ан чар мана. Чĕре ыратнине куççулĕпе кăларам...

Хурлăхлă чан сасси илтĕнсе кайрĕ. Ӳсĕрпе хускалнă шăв-шав лăпланчĕ. Хуйхă пуснине тӳсеймесĕр макăракан сасăсем вăйланчĕç.

Этем юхтарнӑ куҫҫуль тумламӗсене пӗр ҫӗре пухма май пулсан—тинӗс пулӗччӗ. Анчах ҫӗр тем чухлӗ куҫҫуле те хӑй ӑшне сӑхса типӗтме пултарать. Ҫӗрӗн пултарулӑхӗ ҫавнашкал. Вӑл савнӑҫ та парать, хурлӑхӑн йӳҫӗ тумламне те пытарать.

Татьян вилтӑпри ҫинчен хӑпса пуҫне ҫӗклерӗ. Шывланнӑ куҫӗсене тутӑр вӗҫӗпе шӑлса илчӗ.

— Пачӑшкӑ кӗлтума ҫитрӗ пулас...

Ҫтаппан арӑмне хирӗҫ чӗнмерӗ. Унӑн куҫӗсем—ҫӑва хапхинчен кӗрекен вӑрӑм тумлӑ этем ҫинче. Вӑрӑм тумлӑ этем сывӑхри вилтӑприсенчен иртсе кайса, тимӗр карта патне пычӗ.

Ялан ҫакнашкал пулнӑ. Пупсем улшӑннӑ, анчах ҫӑва ҫине кӗлтума килсен, чи малтан Михха аслашшӗ тӑпри ҫинче кӗлтума пуҫлас йӑла ҫавах пӗтмен. Капла тунипе вӗсем тӑпра айӗнче таххӑнах ҫӗрсе пӗтнӗ этеме мар, унӑн пурӑнакан тӑванӗсен, ачисен пуянлӑхне хисепленӗ. Анчах кунта та нумай тытӑнса тӑмарӗ пуп. Тытӑнса тӑма сӑлтавӗ те ҫук: паян Янаш тӑпри ҫинче асӑнакан тӑванӗсем пулман. Тата васканӑ та вӑл. Ӑна ҫӗршер этем кӗтнӗ. Кашни вилтӑпри ҫинчех чиркӳ йӑлисем хушнӑ пек кӗлтусан, тӗттӗм пуличчен те ӗлкӗреймӗ вӑл. Ҫавӑнпа, кадилӑпа вирҫтӑватӑ хут сулласа, кӗлтукаласа хӑварчӗ те, малалла утрӗ.

Татьянпа Ҫтаппан, пуп хӑйсем патнелле ҫывхара пуҫласан, ура ҫине тӑчӗҫ.

Лешӗ Ҫтаппансем патне ҫитиччен хулӑм та уҫӑ сассине янтратса ячӗ: «Со святыми упокой, христе, души усопших раб твоих!..»

— Сирӗн вилнисем мӗн ятлӑ?—ыйтрӗ вӑл, ҫывхарсан.

— Акӑ, пачӑшкӑ...—Татьян шупӑр кӗсйинчен вилнисене асӑнтармалли пӗчӗк кӗнеке кӑларса пупа тыттарчӗ.

— Иоанна, Михаила, Александра, Тимофея...—юрланӑ пек сасӑпа, кӗнеке ҫине ҫырнӑ ятсене вуласа тухрӗ те пуп кӗнекене каялла тавӑрса пачӗ.

Пуп хӑйсем патӗнчен кайсан, Ҫтаппанпа Татьян та нумаях тӑмарӗҫ. Татах чӗркуҫҫи ҫине тӑрса пуҫҫапрӗҫ вӗсем. Татьян тепӗр кана выртса макӑрчӗ те, вӗсем вилтӑпри ҫинчен хӑпса кайрӗҫ. Хуйхӑ пуснипе йывӑрланнӑскерсем, малтан хуллен, шарламасӑр утрӗҫ. Ҫӑва ҫинчен таса уй-хирелле тухсан, Ҫтаппан лӑпланнӑ пек пулчӗ.

— Ҫӗр йӑлтах пиҫсе ҫитнӗ. Ыран суха патне тухас мар-ши, тесе пыратӑп?

— Ялпа пӗрле ӗнтӗ... Ял тухсан тухӑпӑр.

Ҫтаппан арӑмӗн шухӑшӗпе килӗшмерӗ.

— Яла пӑхса тӑмалли ҫук, Татьян. Ял пӗрле—телей расна. Ҫӗр эпир суха тума тухасса кӗтсе выртнине чӗре туять.—Ҫавӑнтах вӑл, ҫултан кӑшт пӑрӑнса, ана ҫине кӗчӗ те, пӗр тӑпра муклашкине илсе, ӑна ҫул ҫинелле ывӑтса ячӗ. Тӑпра муклашки ҫул хытти ҫине ӳксе тӗпӗр саланнине курсан, ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗ:

— Пиçсе çитнĕ.

— Куртăм...—килĕшрĕ арăмĕ те.

Пусă урлă каçсан, Çтаппанпа Татьян умне, ывăç тупанĕ çинчи пек, Энĕшкасси ялĕ тухса ларчĕ. Çу ырлăхне кĕнĕ ял, хăй чухăнлăхĕнчен вăтаннă пек, урамăн икĕ айккипе лартса тухнă ват йăмрасемпе яштака хурăнсем айне пытаннă.

Ку ял ăçтан тата мĕнле пуçланса кайни çинчен халăх хушшинче тĕрлĕ сăмах çӳренĕ. Хăш-пĕрисем каланă тăрăх, пĕр икçĕр çул ĕлĕкрех Кивçурт çырми леш енче пĕр кил пулнă. Ку килте Сапанай ятлă çын пурăннă. Ялăн анат вĕçĕнчи айлăмра халĕ те-ха шĕшкĕ кати пур. Ку катана Кипеней кати тенĕ. Кунта Кипеней ятлă çын пурăннă. Энĕшкасси çыннисем çак икĕ килтен ĕрчесе кайнă пулать.

Кивçурт çырми леш енче мĕншĕн ял пулса кайманнине ăнлантарса паракансем те тупăннă. Вĕсем каласа панă тăрăх, çынсем малтан Кивçурт çырми леш енне ларасшăн пулнă-мĕн: унта ял тума вырăнĕ те тип-тикĕс тата шыв кӳме кайма çăлкуçĕ те çывăхра пулнă. Анчах та пӳрт айне шашкă лартма çĕр алтнă чухне кирпĕч татăкĕ сиксе тухнă пулать. Вара ун чухнехи этемсем, кунта ют йăх пурăннă тесе, Кивçурт çырми леш енне ял туман пулать.

Энĕшкассин ĕлĕк-авал çĕр нумай пулни çинчен тата вăл çĕре мĕнле çухатни çинчен те ял хушшинче тĕрлĕ халап çӳренĕ. Хăш-пĕрисем каланă тăрăх, Энĕшкасси çĕрĕ хăрах кĕтессипе Арапха вăрманĕнчен иртсе кайса, Атăл çыранĕ хĕрринех тухнă пулать. «Чикĕре халь те пысăк чул выртать», тесе ĕнентерекенсем те пулнă. Пурăна киле, пĕр çуллахи шăрăх каç, Энĕшкасси ялĕ çинче шутланса тăракан çыран хĕррине, Атăл хумĕ шыва путнă çын виллине кăларса пăрахнă.

Ун чухнехи йĕркесем тăрăх, виле кам çĕрĕ çинче тупăннă, ăна çав ял çыннисен хуралламалла, тăкак курмалла, тата çав ял çыннисенех пытармалла та пулнă. Энĕшкасси çыннисем вилесенчен темрен хăранă пек хăранă. Çавăнпа вĕсем: «Виле хураллама кайиччен, çĕрĕ пĕттĕр», тесе шут тунă, имĕш. Вара стражник яла пырса: «Виле сирĕн çĕр çинче мар-и? тесе ыйтсан, Энĕшкасси çыннисем: «Пирĕн çĕр унта çитмест», тесе, пĕр чĕлхеллĕ пулса каласа янă. Урăх ку çĕр çине ура ярса пусман. Çавăнтан вара Энĕшкасси ялĕн çĕрĕ хĕсĕнсе юлнă пулать.

Теприсем пачах урăх майлă ăнлантарнă: «Пирĕн çĕре Сала улпучĕпе Михха аслашшĕ туртса илнĕ»,—тенĕ вĕсем. Мĕнле майпа туртса илнине те ăнлантарса пама тăрăшнă.

— «Ĕлĕк-авал,—тенĕ вĕсем, сăмах пуçарсан,—пирĕн яла сала улпучĕ килнĕ пулнă. Тӳрех Михха аслашшĕ патне хăнана кĕнĕ. Ĕçкĕ-çикĕ хушшинче иккĕшĕ шухăш тытнă та, старостăна халăх пухма хушнă. Халăх пухăнса çитсен, Михха аслашшĕ çапла каланă: «Тăвансем, сала улпутне çĕр кирлĕ»... Халăх хумханнине сиссе, çавăнтах лăплантарма васканă: «Туятăп, тăвансем! Эсир,

ӑна ҫӗр нумай кирлӗ пулӗ тесе, хумханатӑр пулас. Уссӑрах. Ан хӑрӑр, нумай ыйтмасть вӑл. Мӗнпурӗ те пӗр вӑкӑр тирӗ ҫавӑрса илме пултарнӑ чухлӗ ҫеҫ. Хӑвӑрах шухӑшлӑр, вӑкӑр тирӗ пысӑк-и вӑл? Сарлакӑшӗ пӗр хӑлаҫ, тӑршшӗ икӗ хӑлаҫ!» тенӗ.

«Кунашкал сахал ҫӗр мӗн тума кирлӗ ӑна?»—тесе ыйтакансем те тупӑннӑ.

Михха аслашшӗ ун пеккисене ҫапла каласа ӑнлантарнӑ пулать: «Улпут ӑсне ӑҫтан пӗлсе ҫитерӗпӗр эпир, кӑмӑлӗ ҫав таран пулӗ? Эпӗ сире хакне калама астуман-ха. Ҫӗр хакне вӑл никам илтмен хак парать».

«Мӗн чухлӗ парать?»—тӗпчесе пӗлме тӑрӑшнӑ хӑюллӑраххисем.

Михха аслашшӗ улпут панӑ хакне каличчен чее куҫӗсемпе халӑх ҫине пӑхса илнӗ. Сайрарах сухалне шӑлса якатнӑ. Вара ҫапла каланӑ: «Пуснӑ вӑкӑрӗ, тирне сӳсе илсен, хӑвӑра пулать, ҫине тата икӗ витре эрех парать. Шухӑшлӑр хӑвӑрах, ку хака пирӗн уй-хирти мӗнпур ҫӗрӗ тӑмасть»... Сывлӑшне ҫавӑрса ярсан вӑл: «Килӗшетӗр-и?»—тесе ыйтнӑ.

Нумайччен сӳтсе явнӑ Энӗшкасси ҫыннисем. Темиҫе майлӑ та шухӑшласа пӑхнӑ. Юлашкинчен килӗшнӗ. «Мӗнех вӑл пирӗншӗн вӑкӑр тир лаптӑкӗш ҫӗр, хакне чӑнах та никам илтмен хак парать»—тенӗ. Улпут улталасран упранма, вӑкӑрне халӑх умӗнче пусма, ҫӗрне те халӑх умӗнчех виҫсе илме сӗннӗ.

Халӑх ку сӗнӗве хавасланса йышӑннӑ. Вара килӗшӳ-тивӗҫӳ туни ҫинчен хут ҫырса, пуриншӗн те, Михха аслашшӗне шанса, хут ҫине алӑ пустарнӑ. Вулӑс кантурне кайса, килӗшӳ хучӗ ҫине пичет хуртарнӑ.

Тепӗр куннех улпут яла пысӑк та мӑнтӑр вӑкӑр ҫавӑтса килнӗ. Икӗ витре эрехне илсе килме те манман. Вӑкӑрне ял ҫыннисем хӑйсем пуснӑ. Вунӑ хуранпа аш-какай яшки пӗҫернӗ, ялӗпех ҫинӗ. Ялӗпех эрех ӗҫнӗ. Пуҫсене эрех сӗрӗмӗ тивсен: «Ку улпут картран тухнӑ пулас?» тесе вӑрттӑн кулнӑ.

Ҫавӑн чухнех ҫӗр виҫсе илменни хӑш-пӗрисене тӗлӗнтернӗ, Михха аслашшӗ вӗсене улпут ячӗпе ҫапла каласа ӗнентернӗ: «Чӗрӗ, юнлӑ тир таса мар, тыткалама та аван мар. Типӗтсе килӗ те, ҫӗрне виҫсе илӗ».

Нумай иртет-и вӑхӑт, сахал-и, улпут вӑкӑр тирне каялла илсе килнӗ. Анчах чӗрӗ тир мар, сӑран тутарнӑ тир. Каллех халӑх пухӑннӑ. Улпут халӑх умӗнчех сӑранне ансӑрӑн-ансӑрӑн кастарнӑ. Тӑрӑхӗсене пӗр вӗҫрен сыптарса тем вӑрӑмӑш чӗн тутарнӑ. Ҫав чӗнпе виҫсе ҫӗр касса илнӗ.

Кайран улталаннине туйнӑ пулать те Энӗшкасси ҫыннисем, улпутпа нимӗн те тӑвайман вара. Ҫавӑнтан кайран «чавса ҫывӑх та ҫыртма ҫук»—тенӗ сӑмах сарӑлнӑ пулать. Ҫавӑнтан вара сала улпучӗпе Михха аслашшӗн ҫӗрӗ татах аслӑланса кайнӑ. Халӑх ҫӗрӗ хӗсӗнсе юлнӑ пулать.

Ку халапсем Энĕшкасси ялĕн историне тĕрĕс çутатса парассĕ, теме хĕн пулсан та, тĕрĕсси çакă пулнă: Энĕшкасси ялĕ пĕр икçĕр-икçĕр аллă çул ĕлĕкрех «Ёнел» çĕр общининче тăракан ял çыннисенчен пуçланса кайнă. Вĕсем пĕрерĕн, икшерĕн, тепĕр чухне ушкăнăн та, хăйсен ялĕсенчен тухса çакăнта килсе вырнаçнă. Кун пек шухăшсене ĕнентерекен сăлтавсем çаксем пулнă. Вăтакасра пурăнакан Çтаппан ашшĕ Минкĕш ялĕнчен килнĕ. Макçăм ашшĕ—Вулпуç ялĕнчен. Анаткас урамĕнче пурăнакан Сантăр аслашшĕ Мăнçырма ялĕнчен килнĕ.

Энĕшкасси вырнаçасса илемлĕ вырăна вырнаçнă. Унăн икĕ енче те сĕм вăрман кашласа ларнă. Ялăн анат вĕçĕнчен инçе мар Энĕш шывĕ юхса выртнă. Энĕш шывĕ урлă каçсан, аслă улăх сипсимĕсĕн ешерсе выртнă. Улăх урлă каçсан аслă Атăл хумханса юхнă.

Хирти ялсенче пурăнакансем ялан Энĕшкасси çыннисен пурнăçне кура кĕвĕçнĕ. «Мĕн мар çавсен пурнăçĕ... Вутти-шанки умрах, вылььăх-чĕрлĕх усрама улăхĕ аслă»,—тенĕ.

Çавна пула, хирти ялсен хĕрĕсем Энĕшкасси хусахĕсене качча тухасшăн çуннă. Энĕшкасси хĕрĕсем, хирти ялсене качча тухма тивсен, тем пекех хуйхăрнă.

Тĕрĕссипе, Энĕшкасси çĕршывĕн илемĕсĕр пуçне, ытти ялсенчен нимĕнпех те уйрăлса тăман. Ку ялта мĕнпурĕ аллă кил шутланнă. Аллă килĕрен пĕрин çеç шурă пӳрт пулнă. Ку пӳртре çĕрме пуян Янаш Петĕр ачи Михха пурăннă.

Янаш ăрăвĕ мĕнтен çав тери пуйса кайнине тĕплĕн никам та каласа пама пултарайман. Ку истори кĕрхи каç пекех тĕттĕмре пулнă. Ун çинчен те халăх хушшинче тĕрлĕ халапсем çӳренĕ. Хăш-пĕрисем: «Михха аслашшĕ çамрăк чухне арăмĕн ӳтне çулçӳрен хуçасене сутса пуйнă»,—тенĕ. Теприсем: «Хусан хуçисем Михха аслашшĕ патне хваттере кĕрсен, çав хуçасене çаратса юлнипе пуйнă»,—тенĕ. Тата «Янаш тавращĕ тени—вăрă пуçĕ»—тенĕ сăмахсем те татти-сыпписĕр çӳренĕ. Ку сăмахсене тĕрĕс теме сăлтав та пулнă. Мĕншĕн тесен, Михха ашшĕ ытла та тĕлĕнмелле сасартăк çухалнă пулнă. Çуллахи каçсенчен пĕринче вăл ялтан тухса кайнине куракансем нумай пулнă. Анчах каялла килсе кĕнине никам та курман. Ăçта кайса çухалнине те никам та пĕлмен.

Кирек мĕнле пулсан та, Янаш тавращĕн халь пурăнакан ăрăвĕ валли шутласа кăларайми мул юлнă пулнă. Михха пек пуян таврара пулман.

Ытти хĕрĕх тăхăр килĕ хура пӳртре пурăннă. Вĕсен кĕрсе тухмалăх та хуралтисем пулман. Вылььăх-чĕрлĕх усрайман. Çур ял ытла Михха тарçи пулса ĕçленĕ. Миххана парăмлă мар çынсене ялта чи телейлĕ этемсем, тесе шутланă. Çакнашкал телейлисенчен пĕри Çтаппан пулнă. Унăн виçĕ ят çĕрĕ пĕтĕмпех хăйĕн аллинче тăнă. Çавăнпа вăл çăкăр-тăвартан аптраман. Лаша, ĕне усранă.

Миххан киревсĕр йăлисенчен пĕри, ӳсĕрĕлсен урхамахĕ çине утланса тухса, урамра тĕл пулакан çынсене таптаттарасси пулнă.

Урамра тӗл пулакан ҫынна Михха, ним шеллемесӗр, урхамахӗпе таптаттарнӑ. Урамра никам та тӗл пулаймасан, урхамахне лутрарах карта алӑкӗсем урлӑ сиктерсе, ҫын килхушшине кӗнӗ. Асаписерле кӑшкӑрашса, ҫынсен сехрисене хӑпартнӑ. Тӳре-шара, кантур таврашӗсем Михха сиен кӳнӗ этемсен хутне кӗмен, Михха майлах пулнӑ. Миххашӑн чару-тӑру пулман.

Ҫавӑнпа, Михха юланутпа урама тухнине пӗлсен, ҫынсем, хура ҫӗлентен хӑранӑ пек, ӑҫта ӗлкӗрнӗ, ҫавӑнта тарса пытаннӑ. Вӑл кун ачисене те урама кӑларман. Ҫтаппан ҫеҫ, Миххаран хӑрамасӑр, вӑл юланутпа тухсан ниҫта та пытанман. Кӳршӗ ҫыннисем ӑна асӑрханма кирли ҫинчен яланах астутарнӑ.

— Ах, Ҫтаппан,—тенӗ вӗсем,—ытла та хӑрамастӑн эсӗ, таптатса кайсан, мӗн тӑвӑн вара?

Ун пек чухне Ҫтаппан яланах тенӗ пек, шӳтле каласса иртернӗ.

— Мӗне кирлӗ эпӗ Миххана? Мана таптаттармасӑр ҫӳреме ҫул ҫук-и ун валли?—тенӗ вӑл. Ӑшӗнче хӑй Миххана тӗл пуласса кӗтнӗ. Ӑна вӑл асса пурӑннӑшӑн курайман. «Ашкӑнса ҫӳреме пӑрахтармаллах ҫав ачана»,—тесе шухӑшланӑ. Анчах ку таранччен, ӑраскал упранӑ пекех, иккӗшӗ тӗл пулман вӗсем. Ҫавӑнпа инкекӗ те пулман. Паян акӑ вӗсем тӗл пулчӗҫ.

Паян Михха, ҫимӗк кунӗ ячӗпе ӗҫсе ӳсӗрӗлсе, кӑнтӑрлапах хура ӑйӑрне утланса тухнӑ. Вӗҫтерсе ҫӳрет ял тӑрӑх. Урамра никама тӗл пулайманшӑн тарӑхать ун чунӗ. Юлашкинчен аса илчӗ вӑл: «Халӑх ҫӑва ҫинче-ҫке паян. Таврӑнма вӑхӑт. Уй-хирте ниҫта тарса хӑтӑлаймӗҫ. Миҫе ҫынна таптатма пулать!» Урхамахне вӑл тӳрех Турикас вӗҫнелле тытрӗ. Нумаях та чуптармарӗ, усал юн тӑвӑннипе алчӑранӑ куҫӗсем пус хапхинчен арҫынпа хӗрарӑм кӗнине курчӗҫ.

— Вперед!—тесе хаяррӑн кӑшкӑрса ячӗ вӑл, алӑри саламачӗпе утне каллӗ-маллӗ ҫапса илчӗ.

Урхамах аҫа-ҫиҫӗм пек малалла ыткӑнчӗ.

— Турӑ ҫырлахтӑр, такама курчӗ ӗнтӗ, таптаттарса вӗлерет пуль,—шиклӗн каласса юлчӗҫ чӳречерен курса юлнӑ этемсем.

Михха асар-писерле вӗҫтерсе пынине малтан Татьян курчӗ. Сасартӑках унӑн чӗри, вӑлтана ҫакланнӑ пек, хӑвӑрттӑн тапа пуҫларӗ.

— Айтӑрух, Ҫтаппан!—хӑранипе упӑшкине ярса тытрӗ вӑл.

Ҫтаппан ним ӑнланмасӑр арӑмӗ ҫинелле ҫаврӑнса пӑхрӗ:

— Мӗн пулчӗ?

— Курмастӑн-и мӗн, тӳрех пирӗн ҫине килет...

— Кам килет?

— Айтӑрух, Ҫтаппан! Пӑхсам.. Пӗтрӗмӗр вӗт...

Ҫтаппан куҫӗсене вӑр-вар арӑмӗ ҫинчен илсе, урама тӑрӑх тӗллерӗ. Михха ҫывхарнине курсан, чарӑнса тӑчӗ.

— Айтӑрух, Ҫтаппан, ҫул ҫинчен пӑрӑнар!—упӑшкине сӑхманӗнчен туртса йӑлӑнчӗ Татьян.

— Пӳлĕхçĕм çырлахтăр, Татьян, çул айккипе çӳреме кама мĕн тунă эпир? Эсĕ, хăратăн пулсан, пăрăн. Пыр, çатан хӳтлĕхне кайса тăр.—Арăмне кăштах тĕксе хăй çумĕнчен сирчĕ Çтаппан.

Татьян, юнашар кил умĕнчи çатан çумне йăпшăнма ĕлкĕрсен, Михха урхамахĕ Çтаппан çине чурăс кайăк пек вĕçсе пынине курса, аран тухакан сассипе:—Пĕтрĕ,—терĕ. Таптаса кайнине курас мар, тесе, куçне аллисемпе хупласа, çатан çуммипе сăтăрăлса анса çĕре ларчĕ. Ăна, антраса кайнăскере, Михха урхамахĕ упăшкине таптаса кайнă пекех туйăнчĕ. Вăл: «Пĕтрĕмĕр-çке, пĕтрĕмĕр»,—тесе макăрса ячĕ.

Çав вăхăтра, Çтаппанпа урхамах хушшинче тепре сикмелĕх çеç хушă юлсан, Çтаппан урхамаха хирĕç сикрĕ... Çиçĕмрен те хăвăрт йĕвенрен ярса тытса, урхамах пуçĕнчен уртăнчĕ. Урхамах, пуçне арман чулĕ çакнă пек йывăра тӳсеймесĕр, кăштах турткаланса илчĕ те, тăпах тăчĕ. Вăркăнса пынă çĕртен сасартăк чарăннипе Михха малалла ыткăнчĕ, анчах та урхамах çилхинчен ярса тытма ĕлкĕрчĕ.

Урамра мĕн пулса иртнине чӳречерен, хӳме хушăкĕсенчен пăхса тăракансем пурте курчĕç. Анчах хăйсене хăйсем ĕненмесĕр, тата лайăхрах курас шутпа, хăюллăраххисем урамах тухса тăчĕç. Чӳречисене уçса пăхма хăякансем те тупăнчĕç. Михха усал çын пулнине, вăл тем тума та хатĕррине пĕлсе, Çтаппана шеллерĕç вĕсем. Çапах пырса хута кĕме хăякан тупăнмарĕ.

Урхамах сиккипе чупнă сасă тăп пулсан, Татьян тăна кĕчĕ. Ун чунĕ халь пушшех пăшăрханса ыратрĕ. Çтаппан таптанса юлнине пĕр иккĕленмесĕр ĕненчĕ вăл. Куç хӳрипе те пулин курас тесе, аллине куçĕ çинчен илсе пăхрĕ. Çтаппан лаша пуçне тытса тăнине курса:

— Айтăрух!..—тесе кăшкăрса ячĕ. Пурлă-çуклă вăйне пухса вăл ура çине тăчĕ. Çтаппансем тăнă çĕрелле утса, çуйхашса кăшкăрчĕ:—Мĕн тăван çавăнпа, Çтаппан! Лаши пуçне ярсам тархасшăн. Кайтăр хăйĕн çулĕпе.

Татьян вĕсем патне çитсе ĕлкĕреймерĕ, Михха тăна кĕрсе юсанса ларчĕ. Халь ĕнтĕ вăл, мĕн пулса иртнине пĕтĕмпех тавçăрса илнĕскер, çиллине шăнараймасăр, ним тума аптраса, урхамахне енчен-енне саламачĕпе ăшаласа илчĕ.

— Вперед! Вперед!—тесе хаяррăн кăшкăрса ячĕ.

Татьян чарăнса тăчĕ.

— Çтаппан! Мĕн тăван çавăнпа, мĕн тăван? Ярсам тархасшăн, кайтăр хăйĕн çулĕпе...—татах йăлăнса кăшкăрчĕ.

Çтаппан арăмĕ йăлăннине илтмерĕ. Михха тилĕрсе кайсах кăшкăрашни те ун хăлхине кĕмерĕ. Вăл çаплах-ха урхамах пуçне аллинчен вĕçертмесĕр тăрать.

— Эккей, юрал мар çын-мĕн эсĕ, Михаил Петрович... Çынна таптатмасăр çӳреме урам хушши тăвăр-ши сан валли?.. Е эпир те сан пекех этем мар-и?.. Куратăн, çăва çинчен ваттисене, ачасене асăнса таврăнатпăр. Çынтан хăрамсан, çынтан вăтанмасан,

кӳлĕхçĕрен те пулин хăрас пулать...—Хăй тĕллĕн калаçнă пек каларĕ Çтаппан.

Ĕмĕрĕнче малтахи хут хăй çулне пӳлме хăтланакан этем тĕл пулнине кура, пĕтĕмпех урса кайрĕ Михха.

— Вперед!—тата хытăрах кăшкăрса хăваларĕ вăл лашине.— Тапта, ват ăна!

Урхамахне саламачĕпе вĕçĕмсĕр çапма тытăнчĕ вăл. Урхамах чĕвен тăма хăтланчĕ, анчах Çтаппанăн йывăр алли ăна ирĕк памарĕ.

— Пӳлĕхçĕм пĕлет, Михаил Петрович, ман çиллĕм хускалнăшăн эпĕ айăплă мар, хăв айăплă!—кăмăлĕ тăвăлланма пуçланăçем сассине хăпартса каларĕ Çтаппан.—Ытах, çырлахасшăн мар пулсан, мана ан ӳпкеле!—чăмăрне сулса ярса, урхамаха çамкинчен чукмарпа çапнă пек чышрĕ вăл.—Ме, асăн!

Урхамах тути-çăварĕнчен юн тапса тухрĕ. Вăл кутăн чака-чака кайса кайри урисем çине ларчĕ.

— Асту вара! Çынсене урхамахпа таптама тухнине тепре курам... Нимĕр тăватăп!—юнаса эхлетрĕ те Çтаппан, вăр-вар çаврăнса, Татьян еннелле утрĕ.

## II

Хĕвел паçăрах каç еннелле сулăннă пулсан та, уйра çуракп хĕрсех пырать. Сухапуç тытса пĕшкĕннĕ çынсем хушшинче:— Ну-ну!.. Йăран тыт!—тесе лашисене хăваланă сасăсем унта та кунта илтĕнеççĕ. Çавăнтах тата:—Ы-ый, суккăр мулкач, темерĕн! Йăрантан таçталла тухса кайрăн!—тесе кăшкăрашнă сасăсем те илтĕнеççĕ. Инçетелле пăхсан, шурă кĕпеллĕ сухаçăсем хура çĕр çинче шурă мăкăль вырăнтан вырăна куçса çӳренĕн курăнаççĕ.

Хăйрал çырми пуçне тухакан ана тăрăх Çтаппан юлашки лаптăка сӳресе тухрĕ: лашине ана пуçне кăларса тăратрĕ те вăл, хĕвеланăç еннелле çаврăнса тăчĕ:—Тырра ăнăçлă акса пĕтерме пулăшнăшăн тавтапуç сана, пӳлĕхçĕм... Тухăçлă ӳстерсе парсам,—тесе пăшăлтатса сăхсăхрĕ. Унтан вăл лашине тăварчĕ. Кунтăка акаран юлнă сĕллине ярса, лаши умне лартса пачĕ. Лаши мăйăр пек тулли тĕшĕллĕ сĕлле кăмăртаттарса çинине пĕр самант пăхса тăчĕ.

— Çи, çи, Машук. Сана сĕлĕ çитерме тивĕç. Эсĕ мана çынсенчен малтан тырă акса пĕтерме пулăшрăн,—терĕ те вăл, лашине çамкинчен ачашласа илчĕ. Лашинчен хăпсан, çĕрте выртакан пештерне уçса, çăкăр чĕлли, икĕ çăмарта тата чăкăт кăларса, пештер хупкăçĕ çине хучĕ.

Ахаль кун, ака-суха туса пĕтермен кун, хирте нихçан та апатланса вăхăта ирттермен вăл. Кулленхи ĕçне пĕтернĕ те килне кайнă. Паян ун пек тума юраман. Авалхи йăлапа, тырă акса пĕ-

терсен, ваттисене асӑнса хиртех апатланмалла пулнӑ. Ҫав майпа арӑмӗ паян ун валли ҫӑмарта пӗҫерсе, чӑкӑт туса парса янӑ.

— Эй, пӳлӗхҫӗм, ҫырлах, ан пӑрах...—тесе пӑшӑлтатса сӑхсӑхрӗ Ҫтаппан, хӗвеланӑҫ еннелле ҫаврӑнса тӑрса.

Кӗлтума чарӑнсан, урисене хуҫлатса пештер хупкӑҫӗ умне ларчӗ. Чӑкӑтран пӗр татӑк хуҫса илсе:—Эй, асатте-асанне... аттеанне... пиччесем-йӑмӑксем, тӑвансем-хурӑнташсем... ҫырлахӑр, ан пӑрахӑр... пурте пил тӑвӑр. Акнине шӑтарӑр. Шӑтнине пулса ҫитӗнтерӗр... Пулса ҫитнине чипер пухса кӗме пулӑшӑр. Ҫил-тӑвӑла, пӑрлӑ ҫумӑра сирсе ярӑр... Ҫырлахӑр, ан пӑрахӑр...—терӗ те чӑкӑт татӑкне ана ҫинелле ывӑтса ячӗ. Унтан вӑл, ҫавӑн пекех темӗскер мӑкӑртатса, ҫӑкӑр чӗллинчен хуҫса илнӗ татӑкпа пӗр ҫӑмартине те айӑккалла ывӑтрӗ.

Юлашки апат-ҫимӗҫне ҫисе ярсан, кӗпе арки ҫине ӳкнӗ ҫӑкӑр тепренчӗкӗсене пуҫтарса илсе ҫӑварне хыпрӗ. (Выҫҫипе мар, сукшӑн та мар, ӗлӗк-авал йӑли ҫавӑн пек пулнӑ. Ҫӑкӑр тӗпренчӗкне сапалакан этеме тирпейсӗр этем тесе шутланӑ). Каллех хӗвеланӑҫ еннелле сӑхсӑхрӗ те вӑл, пештерне хупласа, ҫӑпата кантрипе ҫавӑрса ҫыхрӗ. Ҫӗрте выртакан ҫӗлӗкне илсе тӑхӑнчӗ. Тӳрленсе тӑрсан, уй-хир тавра пӑхса ҫаврӑнса, хӑш-пӗр ана ҫинчи сухаҫӑсем лашисене кӳлнине курчӗ. Хӑй анипе юнашар анасем ҫинче сухаҫӑсем ҫаплах-ха тертленеҫҫӗ. Кусем Михха ҫӗрӗ ҫинче ӗҫлекенсем. Паллах, вӗсен ӗнтӗ хуҫи хушмасӑр ӗҫе пӑрахма хӑюлӑх ҫитмест.

Тарҫӑсем хӗн-хурлӑ пурӑннине аса илсен, Ҫтаппанӑн кӑмӑлӗ йывӑрланнӑ пек пулчӗ. Анчах вӑраха пымарӗ ку. Хӑй ирӗклӗн пурӑннине аса илсен, кӑмӑлӗ каллех ҫаврӑнчӗ. Куҫӗсем савнӑҫлӑн кулса илчӗҫ. Вӑл лаша, ӗне, виҫ-тӑватӑ сурӑх тата чӑх-чӗп те усранӑ. Хӑш ҫулсенче сысна та тыткаланӑ. Тӗрӗсрех каласан, Михха анисем хушшинче хӑй анисем ҫеҫ тӑрса юлнӑшӑн пӑртак мӑнаҫланнӑ та вӑл.

Михха ӑна темиҫе хутчен те хӑй анисем хушшинчен кӑларса яма тапӑннӑ. Ҫтаппан килӗшмен. Ун ҫинчен сӑмах тапратсан, ялан:—Пӳлӗхҫӗм пиллесе панӑ ҫӗре мӗнле пӑрахса каятӑн пуль?—тесе иртгерсе янӑ. Ҫимӗк кунӗ Михха урхамахне чышса чӗп-чӗр юн тунӑранпа вара Ҫтаппанӑн чапӗ татах ҫӗкленнӗ. Унтанпа ытти ҫынсем те урам хушшинче хӑюллӑрах ҫӳреме пуҫланӑ. Михха та урӑх юланутпа урама тухман.

Халь, ҫаксене пурне те аса илнӗ май, Ҫтаппан пуҫне кӑмӑллӑн сулса илчӗ. Ҫӑмӑллӑн утса лаши патне пычӗ.

Хуҫи ҫывӑха пырса тӑнине туйсан, лаша, пуҫне кунтӑк ӑшӗнчен кӑларса, кӗҫенсе илчӗ.

— Эккей эсӗ, Машук, ҫисе те ятӑн-и? Тата кирлӗ-и? Халлӗхе ҫитӗ, килте ҫитерӗп тата. Карчӑк пӑтратни туса хатӗрленӗ унта. Ҫӑнӑхне ытларах сапса парӑп.—Ҫтаппан лашине ҫамкинчен лӑпка-лӑпка калаҫрӗ те, ӑна суха турти хушшине кӗртсе тӑратса, васкамасӑр кӳлчӗ.

Çтаппан лаша выльăха çав тери юратнă, çав тери шелленӗ. Еçрен пушăлла таврăннă вăхăтра та урапа çине е çуна çине сайра хутра çеç ларнă вăл. Ялан лашине çавăтса çуран утнă. Пасара-мӗне кайнă чухне çын хыçӗнчен чуптарма тивсен те шелленӗ. Ҫайраҫ вара, виç-тăватă кун кӳлмесӗр кантарса тăратнă. Лаши те, ăнланнă пекех, пур ӗçре те хуçи кăмăлне кайма тăрăшнă. Лав çине çирӗм пăт тиенӗ-и е хӗрӗх пăт-и, пурӗпӗр, Энӗшкасси тăвайккинчен пӗр канмасăр туртса хăпартнă.

Халӗ те вăл, ытти чухнехи пекех, лашине çавăтса утрӗ. Ҫайсан-кайсан, ыраш калчи урлă тăсăлса выртакан çул çине тухсан, лашине ирӗк парса, вăл икӗ аллине каялла тытрӗ те канлӗн утма пуçларӗ. Çумăр хыççăн тӳрленнӗ калча кавир пек сарăлса выртни ун кăмăлне татах çӗклерӗ, вара вăл ырă ӗмӗт-шухăш ăшне путрӗ.

Унăн чи ырă ӗмӗчӗ—мӗнле те пулин шурă пӳрт туса лартасси пулнă. Шурă пӳрт туса лартсан, ывăлне авлантарма шутланă вăл. Ана валли качча илме сăнаса хунă хӗрӗ те пулнă. Анчах хăйӗн ӗмӗт-шухăшне вăл, такам вăрласа каясран хăранă пек, никама та пӗлтермен. Çакна вăл систермесӗр, кӗтмен çӗртен туса çынсене тӗлӗнтересшӗн пулнă. Çак ӗмӗтпех кăçал çуркунне ывăлне вăл ӗçлесе укçа тупма Атăл çине янă. Ывăлӗ ӗçлесе тупнă укçа та çитмесен, усрас ӗнине те сутма шутланă. «Ӗне пӳртех мар. Пирӗн сӗтсӗр аптракан пӗчӗк ачасемех çук. Пӳлӗхçӗм ырлăх парсан, ӗне туянма пулӗ. Шурă пӳрт тусан, урăх çын пулăп. Ялта вара икӗ çыннăн шурă пӳрт пулать»,—шухăшланă вăл.

Пус хапхи çывăхӗнче, Атăл хӗрринчен килекен çулпа пус çулӗ йӳпӗ пулнă вырăнта, ăнсăртран, Çтаппанпа Михха тӗл пулчӗç. Михха пӗçтӗп таран сăран атă тăхăннине тата ун аллинче пакур пуррине кура, вăл Атăл çинчен таврăннине тавçăрса илчӗ Çтаппан. Çимӗк кунӗнче тӗл пулнăранпа вара иккӗшӗ тӗл пулман пирки, унăн çан-çурăмӗ темӗнле сӳлесе кайрӗ. Пӗр вăхăтрах Михха та Çтаппан çине пăхса илчӗ. Çавăнтах, унăн кăмăлӗ усал çилӗпе тӗксӗмленчӗ. Анчах, хăй ăшӗнче мӗн пуррине палăртасшăн мар, юри çемçе сасă кăларса:

— Аван-и, Çтаппан пичче!—терӗ.

— Аван-ха!—лăпкăрах сасăпа хирӗç чӗнчӗ Çтаппан.

— Акса пӗтертӗн-и?

— Пӗтрӗ тесен те юрамалла ӗнтӗ. Акмалли урăх çӗр çук.

— Ытла та хăвăрт акнă-çке эсӗ.

Михха сасси Çтаппан хăлхинче кӗвӗçнӗ пек те эрленнӗ пек те илтӗнчӗ. «Хăйӗнчен малтан акса пӗтернӗшӗн тарăхать»,—тесе шухăшларӗ вăл. Ун пуçне Мисхана пушшех те тарăхтарас шухăш пырса кӗчӗ.

— Ман мӗн акса пӗтермелле марри пулгăр? Çӗрӗ нумаях мар, эпӗ хама пӳлӗхçӗм пилленӗ çӗр çине çеç акатăп,—тесе малтанхи

сассипех каласа хучĕ те Çтаппан, Михха çине çаврăнса пăхмасăрах, пусă хапхине уçрĕ.—Ну-у... Атя, Машук... Кил инçех юлмарĕ ĕнтĕ,—тесе, лашине çавăтса урамалла кĕрсе кайрĕ.

Çтаппан пĕрре те йăнăшмарĕ. Ун сăмахĕсем Миххана чăн та тарăхтарчĕç. Вĕресе хăпарнă çиллине çавăрса яраймасăр, ним калама аптранă енне тимĕр-тăлăпа тăлласа янă пек, хапха умĕнче тăрса юлчĕ вăл. Юлашкинчен шăл витĕр тухакан хаяр сассипе:

— Асăнăн-ха мана, кĕлмĕç!—тесе пăшăлтатрĕ.

Михха мĕн каланине Çтаппан илтмерĕ. Вăл, лаши умĕнчен васкамасăр утса, килĕ тĕлне çитрĕ. Пӳрт умĕнче ларакан лапсăркка йăмра патĕнче лашине тăратрĕ.

Çтаппан çурт-йĕрĕ те ялти ытти хресченсеннинчен ытлашши уйрăмах пулман. Улăм витнĕ хура пӳрт. Пӳрт çумĕнче хăмаран çапса тунă кивĕ çенĕх. Çенĕхпе пĕр вĕçрен улăм витнĕ пĕр алăклă лутра кĕлет. Килхушши урлăшĕпех сарай, пĕр лутра аслăк. Сарайĕн сылтăм кĕтессинче вак пĕренесенчен хӳсе тунă лаша вити. Юнашарах сурăх карти. Картарах чăххисене туса панă кашта пулнă.

Ку çурт-йĕрсене хăçан лартнине Çтаппан хăй те аран-аран çеç астăвать. Халь çурт-йĕрĕн пĕренисем тĕссĕрленсе, вырăнĕвырăнĕпе кăмпаланса ларнă. Инçетрен пӳрт çийĕ çунтарнă улăм кĕл купи тĕслĕ курăнать. Анчах килкартинче ялан тасалăх, ялан йĕркелĕх.

Çтаппан акаран таврăннине чӳречерен курсанах, Татьян хирĕç васкаса тухрĕ. Вĕсен хушшинче мĕн мăшăрланнăранпах çакнашкал йăла пулнă. Упăшки кирек ăçта кайсан та, Татьян вăл таврăнасса çывăрмасăр кĕтсе илнĕ. Таврăннине чӳречерен курсанах, карталăк уççа кĕртме васкаса тухнă. Тепĕр чухне, хĕллехи шартлама сивĕ вăхăтсенче Çтаппан:—Ма тухрăн çак эсĕ, хам уçса кĕрейместĕп-им?—тесе калани те пулнă. Анчах арăмĕ парăнман. Хăй йăлине çаплах çирĕп тытнă.

Татьян карталăк умне васкавлăн пычĕ те йăваш сассипе:

— Акса пĕтерсех килтĕн-и?—тесе ыйтрĕ, карталăк сайхахĕсене иле-иле пăрахма пуçларĕ.

— Акса пĕтерсех!—хаваслăн каларĕ Çтаппан. Пăртак тăрсан, шӳтлĕрех сасăпа сăмах хушрĕ.

— Кулăшла паян!

— Мĕн кулăшла?—ăнланаймарĕ Татьян.

— Çавна каламастăп-и! Пусă хапхи патĕнче Миххана тĕл пултăм.—Çтаппан хăй Миххапа мĕн-мĕн калаçни çинчен каласа пачĕ.

— Сăмахăм килĕшмерĕ пулмалла. Ним калаймасăр, шак хытса тăрса юлчĕ,—терĕ вăл юлашкинчен.

— Айтăрух, Çтаппан, мĕн тăван çак эсĕ çав усалпа çыхланса? Çӳретĕр хăйĕн çулĕпе...

Арӑмӗ ӳпкелешни Ҫтаппанӑн шӳтлӗ кӑмӑлне сирчӗ. Миххана тӗл пулни ҫинчен каласа панипе арӑмӗн ӑшчикне вӑркаттарнӑшӑн хӑйне хӑй айӑпларӗ вӑл.

— Нимех те каламарӑм эпӗ ӑна. Хӑй сӑмах хускатнӑран ҫеҫ тавӑрса каларӑм,—терӗ вӑл, Татьяна лӑплантарас шухӑшпа.

— Пулсан та... Ҫӳретӗр хӑй ҫулӗпе,—аллине сулчӗ Татьян.

— Юрӗ, юрӗ... Хӑямат унпала. Урӑх нихҫан та чӗнместӗп ӑна,—килӗшрӗ Ҫтаппан.

Арӑмӗ карталӑкне уҫса хатӗрлесен, Ҫтаппан лашине килхушшине ҫавӑтса кӗчӗ.

— Татьян!

— Мӗн терӗн?

— Пӑтратни хатӗрлерӗн-и?

— Хатӗрлеймерӗм ҫав.

— Ма тата?

— Еҫ нумай пулчӗ те ал ҫитерeймерӗм... Паянлӑха сӗлӗ парсан та ҫырлахӗ. Вара Уҫка ҫитерме илсе кайтӑр.

— Юрӗ, сӗлӗ парӑпӑр эппин,—килӗшрӗ Ҫтаппан.

Лашине кӗлетум хӑми ҫине сӗлӗ сапса парсан, Ҫтаппан урине салтрӗ, ҫӑпати ӑшне кӗрсе тулнӑ тӑприне юпа ҫумне шаккаса тасатрӗ.

— Кӑвас тултарса пар-ха эс мана,—терӗ вӑл арӑмне.

— Сӑра ӗҫместӗн-и?—ыйтрӗ кӗлет алӑкне хупса Татьян.

Ҫтаппан килӗнче яланах ҫакнашкал йӑла пулнӑ: ака туса пӗтерсен е вӑн ҫапса пӗтерсен—арӑмӗ сӑра юхтарнӑ. Сӑрине ваттисене асӑнса ӗҫнӗ. Ҫавӑнпа вӑл сӑра ӗҫме васкамарӗ.

— Халлӗхе кӑваспа та ҫырлахӑпӑр. Сӑрине—кайран...

— Халех ӑсса тухатӑп,—килӗшрӗ арӑмӗ.

Вӑл васкавлӑн ҫенӗхе кӗрсе кайрӗ.

Мӑшӑрӗ кӑвас ӑсса тухасса кӗтсе, Ҫтаппан вут каски патӗнчен патак илчӗ те, суха тимӗрӗ ҫумне ҫыпҫӑннӑ тӑпрасене хырса тасатрӗ. Сухапуҫ тимӗрӗ ҫине тырӑ кунтӑкне тӑхӑнтарчӗ. «Кун пек сыхлӑрах. Выльӑх-чӗрлӗхсем суха тимӗрӗ ҫинче хӑршаланса аманас ҫук»,—терӗ вӑл хӑй ӑшӗнче.

Татьян ҫенӗхрен куркапа кӑвас тата ҫӑм калуш илсе тухрӗ.

— Ҫтаппан,—ӑшшӑн чӗнчӗ вӑл,—кил ӗнтӗ, ӗҫ!—Упӑшки хӑй патне пырсан:—Малтан ҫак ҫӑм калуш тӑхӑн-ха. Ват ҫын ҫара уран ҫӳрени мӗн илемӗ пур? Тата ҫӗр те чӗрӗ,—тесе ҫӑм калуша упӑшки умне лартса пачӗ.

— Эккей, карчӑк, эс мана ҫамрӑк чухнехинчен те ытларах пӑхма пуҫларӑн пулас?—шӳт туса илчӗ Ҫтаппан.

— Ҫамрӑк чухне пӑхма та кирлех пулман. Ун чухне вӑйпитти пулнӑ. Халӗ, ватӑла-киле, шӑнса ан пӑсӑлтӑр, тетӗп,—терӗ Татьян та, упӑшки пекех шӳт тукаласа.

— Халех вӑйран сулӑнас этем мар-ха эпир,—хӑй ҫирӗп сывлӑхӗпе мухтаннӑ пекрех каларӗ Ҫтаппан, арӑмӗн аллинчи куркана тытса.

— Тулта кӑвас ӗҫсе тӑмасан та юранӑ пулӗччӗ те ӗнтӗ. Пӳртре сӑра та пурччӗ те...—татах астутарчӗ Татьян.

— Сӑрине кайран ӗҫӗпӗр терӗм-иҫ? Ма васкамалла. Тырӑ акса пӗтерне ӗнтӗ. Вӑхӑчӗ хамӑрӑн.

— Вӑхӑчӗ пулӗ те... эпӗ тата мунча хутса пултарнӑччӗ.

— Мунча?

— Ия.

— Питӗ аван. Ҫан-ҫурӑм кӗҫтекен пулнӑччӗ-ха. Матур карчӑк эс ман. Мӗн кирлине каламасӑрах чухлатӑн.

Упӑшки ырланипе савӑнса, Татьянӑн куҫӗсем йӑл кулса илчӗҫ.

— Тӗттӗм пуличчен кайса кӗр эппин,—кӑмӑллӑн сӗнчӗ вӑл.

— Мунчине хамӑр ҫеҫ хутнӑ-и?—кӑвас ӗҫнӗ май, аса илсе ыйтрӗ Ҫтаппан.

— Макҫӑм кумсемпе пӗрле хутнӑ.

Ҫав вӑхӑтрах урам енчен:

— Хреснатте! Мунчана атя!—тесе кӑшкӑрнӑ ҫамрӑк сасӑ илтӗнчӗ.

— Ав, Уҫка мунчана кайма тухнӑ пулас. Таса кӗпе-йӗм парха, эпӗ те каям,—васкатрӗ Ҫтаппан.

Кӑшт тӑрсан Татьян упӑшкине кӗпе-йӗм илсе тухса пачӗ.

— Милӗкне шыв вӑлашкине чикнӗччӗ. Унтан илсе кайӑр вара,—астутарчӗ вӑл.

— Юрӗ, илсе кайӑпӑр...

Мунча умӗнче Ҫтаппан кӗпе-йӗмне хывса пӑрахнӑ Уҫкана курчӗ.

— Аҫу акаран таврӑнмарӗ-и-ха?—ыйтрӗ вӑл.

— Ҫук-ха. Атте таврӑначчен мунча кӗрсе тухма васкатӑп. Выртма каймалла.

Ҫтаппан Уҫка ҫине куҫхаршм айӗн пӑхса илчӗ:

— Темӗн, выртма кайнӑ-килнӗ чухне лашасене хытӑ чуптаран, теҫҫӗ-ха сана?

Уҫка хреснашшӗ вӑлтса ҫеҫ каланине ӑнланса илеймерӗ. Хӑйне тивӗҫсӗр ӳпкеленӗшӗн кӑмӑлсӑрланса, Ҫтаппан ҫине хӑюллӑн пӑхрӗ те:

— Кам калать ӑна?—терӗ.

— Кам калать? Илтнӗ...

— Суя сӑмах ку, хреснатте. Сирӗн лашана чуптарма мар, хыттӑн уттарма та ҫук.

— Ҫавӑнпа мӑнтӑр вӑл,—йӑхлатса иларӗ Ҫтаппан.

— Мӑнтӑр-р!..—Ҫтаппан ҫине кӳренерех пӑхса илчӗ Уҫка.

— Юрӗ-ҫке, ятлаҫмӑпӑр ӗнтӗ. Юри каларӑм. Кӗрер те, ӑшши парса ҫапӑнма пуҫлар,—терӗ Ҫтаппан.

— Эс́ мана малтан ҫапса кӑларса яр. Юрать-и?

— Юрӗ, сана малтан ҫапӑп. Хывӑнам-ха. Вара иксӗмӗр милӗк пӗҫерӗпӗр. Ҫапла-и?

— Эс ытла вӗрилле ан ҫап вара.

— Курӑпӑр унта, мунча ӑшши мӗн калать,—юриех Уҫкана хӑратмалла татса каламарӗ Ҫтаппан.

— Апла пулсан, ҫапӑнмастӑп...

— Ҫапӑнмастӑп тетне? Аҫу килсен, парӗ сана ҫапӑнмастӑп...

— Эс аттене каласа ан пар.

Иккӗш те шӳтлӗн кулса ярса мунчана кӗчӗҫ. Уҫка, вӗрие тӳсеймесӗр, труках урайне кукленсе ларчӗ.

— Ай-яй, хӑлхана чӗпӗтрӗ.

— Хӑлхана чӗпӗтмен мунча—мунча-и вӑл?—йӑхлатса кулчӗ Ҫтаппан.—Ак, ӑшши парам-ха, пӗтӗм ҫан-ҫурӑмӑнтан тар тапса тухӗ!—Милӗксене чул ҫине хурса, вӑл алтӑрпа шыв ӑсса сапрӗ.—Пӳлӗхҫӗм, ҫырлах... Тутлӑ-тимлӗ мунчи пултӑр. Йӳҫҫи кайтӑр, пылакӗ юлтӑр...

Шыв милӗк витӗр вӗри чул ҫине юхса ансан, чашкӑрса вӗресе пӑс пулса тӳпенелле сарӑлчӗ. Ниҫтан тухса кайма хушӑк тупаймасӑр, аялалла анма пуҫларӗ. Ҫтаппан татах шыв ӑсса сапрӗ.

— Ай-яй, вӗри!—Уҫка тӳсеймесӗр урайне тӑсӑлса выртрӗ.

— Эк-кей, тӳсеймен ача. Ху авланас тетӗн, мунча ӑшшине тӳсеймestӗн?

— Авланас тенӗ пуль, асту?—Ҫтаппан чӑнласа каланӑ пекех, хирӗҫрӗ Уҫка. Витререн ывҫипе сивӗ шыв ӑса-ӑса питне сапрӗ.

Ҫтаппан милӗксене чул ҫинчен илсе тыткаласа пӑхрӗ те, хурӑн турачӗсем чӗн пек авкаланнине кура:

— Эккей, аван пиҫнӗ, пурҫӑн пек ҫемҫе. Ҫапӑнатӑн-и?—терӗ.

— Аюк, хреснатте. Малтан ху ҫапӑн. Эпӗ сан хыҫҫӑн.

— Ытла та хӑратӑн пулсан,—малтан хам ҫапӑнса тутлантарам, килӗшрӗ Ҫтаппан.

Вӑл алтӑрпа шыв ӑсса сентре ҫине сапрӗ. Сентре ҫинчи шыва милӗкпе сӑтӑркаласа,—мунчи тутлӑ-тимлӗ пултӑр. Йӳҫҫи кайтӑр, пылакӗ юлтӑр...—терӗ. Унтан пушӑ сентрене милӗкпе ҫапса:— Асаттесем, асаннесем... Атте-анне... хурӑнташсем-тӑвансем... Ачасем... Пурте, эпир мунча кӗнине эсир те кӗрӗр... Ҫан-ҫурӑмӑрсем канлӗ пулччӗр...—тесе, ҫапӑнас умӗнхи йӑласене пурне те туса пӗтерсен, сентре ҫине хӑпарса выртрӗ. Урисене ҫӳлелле ҫӗклесе—Карӑмӑр, Уҫка!—терӗ те, икӗ милекӗпе харӑс хырӑмне ҫапрӗ. Милӗксем вӑркӑштарса хӑй ҫине антарнӑ вӗри сывлӑш ӳтне чӗпӗтнипе:—А-ах!—тесе эхлетсе илчӗ те ҫапӑнма тытӑнчӗ.

Ҫтаппан ҫапӑннӑҫемӗн сӑрпалана-сӑрпалана «Ай-яй! Ох! У-ух! Ая-яй!» тенине илтсен, Уҫка ихиклетсе кулса ячӗ.

Ик-виҫӗ хутчен ӑшши парса ҫапӑннӑ хыҫҫӑн Ҫтаппан тула тухрӗ. Мунча умӗнче ҫӑл шывпе тулли ларакан витрене ҫӗклесе пуҫ тӳпине ӳпӗнтерчӗ.

— У-ух... Аван та ҫав мунча тени!—Сивӗ шыв ҫӳҫентернипе уҫҫӑн сывласа илчӗ вӑл.—Ну, черет сан ҫинче ӗнтӗ. Атя, ҫапса ярам,—терӗ вӗрирен хӑраса паҫӑрах тула тухса ларнӑ Уҫкана.

— Ытлашши вӗри халь унта, хреснатте. Пӑртак сивӗнтӗр.

— Мĕн вĕрийĕ? Мунча пылакĕ çеç.
— Пылакĕ, асту! Ăшшине тек ан пар, юрать-и?
— Юрĕ-çке, юрĕ. Ытах çапăнма хăратăн пулсан, милĕкпе сăтăрса ярам.
Уçка килĕшрĕ. Вĕсем мунчана кĕчĕç.
Çтаппан малтанхи пекех сентре çине сивĕ шыв сапса милĕкпе сăтăркаларĕ. Милĕке чул çине тытса лăстăр-лăстăр силлерĕ те, шыв ăсма алтăр ярса тытрĕ.
— Ой, хреснатте! Ăшшине ан пар!—тархасларĕ Уçка.
— Ан хăра, ăшши памастăп. Мунча йӳççине çеç хăвалатăп.
Çтаппан çур алтăр шыв ăсса чул çине чашлаттарчĕ.
— Ой-ой!—кукленсе ларчĕ Уçка.
— Мĕн айлатан! Сахал сапрăм тесе-и?
— Çитет, çитет, хреснатте!—Татах ăшши парасран хăраса ӳкрĕ Уçка.
— Çитрĕ пулсан, хăпарса вырт.
Уçка итлерĕ. Сентре çинче сывлăш чăтма çук вĕри. Сывлама йывăр пулин те, Уçка чăтрĕ, пĕр сăмах та шарламарĕ.
Çтаппан икĕ милĕке икĕ аллине тытса:
— Пӳлĕхçĕм, çырлах... Хури кайтăр, тетти юлтăр!—тесе хăй тĕллĕн калаçса, милĕксене çӳлелле çĕклерĕ. Вĕри сывлăша варкăштарса антарса, Уçка çурăмĕ çине тивретрĕ.
— Ой, хреснатте!—йынăшса хутланчĕ Уçка.
— Мĕн пулчĕ? Ма хутланса выртрăн?
— Тӳсме çук пĕçертет.
Уçка тархаслани Çтаппан кăмăлне çемçетрĕ. Шеллерĕ пулас вăл ăна.
— Атя, тăсăлсах вырт. Сăтăркаласа çеç çапăп,—терĕ вăл.
Уçка тепĕр хут тăсăлса выртсан, сивĕ шыв ăсса илсе, милĕк витĕр çумăр пек юхтарса Уçка çурăмĕ çине сапрĕ:—Аван-и?
— Ой, питĕ аван, хреснатте!—хаваслăн каларĕ Уçка.
Çтаппан Уçкана чăн та çампарĕ, кăштах милĕкпе сăтăркаларĕ те:
— Анах. Пуç çине лĕпрех шыв яр та, шыва кĕр,—терĕ.
Çав вăхăтра тултан:
— Мунчи тутлă пултăр!—тенĕ сасă илтĕнсе кайрĕ.
— Эс каланă пек пултăр!—терĕ Çтаппан тулти сасса хирĕç.
— Хăвăртрах çăвăнкала, Уçка, ав, аçу килчĕ. Лашасене вырттарма илсе каяс пулать.
— Халех, хреснатте!—Уçка алтăрти вĕри шыва витрери шывпа хутăштарса пуç тăрăх ячĕ те мунчаран тухса кайрĕ.
— Пулчĕ те-и?—ыйтрĕ Макçăм, ачи тухсан.
— Пулчĕ.
— Çапăнтăн-и?
— Çапăнтăм.
— Çапăннă пулсан юрать. Тумлан та, чуптар килелле. Унта ачасем выртма кайма тухатчĕç. Лашасене чипер пăх. Ан сывăр,

калча ҫине тухма пултараҫҫӗ. Выртмаран иртерех килсен те юрать, ыран акса пӗтересчӗ,—астутарчӗ Макҫӑм.

— Юрать, атте!—Уҫка сиккипех килнелле чупрӗ.

III

Ҫтаппанпа тӗл пулнӑ хыҫҫӑн Михха хӑй килне вӗчӗрхенчӗк кӑмӑлӗпех таврӑнчӗ. Вырӑсла хапхи умне ҫитсен, вӑл ӑна яланхи пек аллипе тӗксе мар, урипе тапса уҫрӗ. Ҫавӑн пекех, каялла вӑйпа тӗксе, шалтлаттарса хупрӗ. Хуҫи килхушшине кӗрсен, икӗ кӗлет умӗнче сӑнчӑрта тӑракан икӗ пысӑк йытти, йынӑшкала-йынӑшкала ачашланса, ҫӗре выртрӗҫ. Михха вӗсене ытти чухнехи пек асӑрхаса савмарӗ. Алӑри пакурне кӗлет умнелле ывӑтса ячӗ те, килкарти варринче чарӑнса тӑрса, ҫурт-йӗрӗ тавра пӑхса ҫаврӑнчӗ. Вӗресе хӑпарнӑ ҫиллине шӑнараймасӑр, куҫ тӗлне никам пулманшӑн тарӑхса, ула йыттине пырса тапрӗ. Йытти, хаяррӑн йынӑша-йынӑша, сӑнчӑрне шанкӑртаттарса кӗлет айнелле кӗрсе тарчӗ. Михха тата тепӗр самант ывӑннӑ лаша пек хашкаса пӑхкаласа тӑчӗ те икӗ алӑклӑ кӗлет умне пырса ларчӗ. «Мӗн туса тавӑрас? Мӗнле майпа ӑна хам умра упалентерес?»—ҫаврӑнчӗ Михха пуҫӗнче усал шухӑш.

Юлашкинчен мӗн тума кирлине тавҫӑрса илчӗ вӑл. Кӑмӑлӗ уҫӑлнӑ пек пулсан, куҫӗсене сарай еннелле йӑл-ял ыткӑнтарчӗ.

— Эй?!

Икӗ хутлӑ сарай тӳпи янтраса кайрӗ. Анчах хирӗҫ чӗнекен пулмарӗ.—Эй?!—тата хытӑрах кӑшкӑрчӗ вӑл. Пӑртак итлесе ларнӑ хыҫҫӑн, сарай тӳпинче:—Эхе-хе!—тенӗ мӑкӑртатакан сасӑ илтӗнчӗ.

— Ан хӑвӑртрах!—сассине хулӑмлатса хушрӗ Михха.

— Халех анатӑп!—Сарай тӳпинчи сасӑ халь пасӑрхинчен уҫӑнрах та чӗррӗнрех илтӗнчӗ. Вӑхӑт нумай та иртмерӗ, пусма тӑрӑх вӑтам пӳллӗ, сарлака хулпуҫҫиллӗ ҫын сиксе анчӗ.

Ку ҫын камне, вӑл Михха патне ӑҫтан килсе тухнине ялта никам та пӗлмен. Халӑх ҫине вӑл сайра хутра ҫеҫ тухкаланӑ. Михха патӗнче мӗн ӗҫ туса пурӑнни те паллах пулман. Тарҫӑ вырӑнӗнче пурӑнать теме те май килмен ӑна. Вӑл Михха патӗнче ӗҫленине никам та, нихҫан та курман. Миххан ҫывӑх ҫынни теме те пулман ӑна. Вӑл Миххапа пӗрле ҫӳренине ял ҫыннисем ӗмӗрте пӗрре тенӗ пек ҫеҫ куркаланӑ. Хӑна-мӗн кӗртнӗ вӑхӑтра та Михха ӑна хӑйпе пӗрле явӑҫтарман.

Ҫак ҫын сарай айӗнчен тухрӗ те пит-куҫӗсене кӗпе ҫаннипе шӑлса илчӗ. Сӑмах каличчен ҫӑварне карса анасларӗ.

— Ха, каҫ пулнӑ-ҫке! Эпӗ халь тин тул ҫутӑлнӑ тесе выртатӑп.

Пӳрт алӑкӗ уҫӑлса хупӑннине илтсе, Михха ҫынна калас сӑмахне калама чарчӗ:

— Тӑхта, ан шарла!

Ҫенӗх алӑкӗ патнелле пушмак чӗриклетнӗ сасӑ ҫывхарни илтӗнчӗ. Ҫенӗх алӑкӗ уҫӑлчӗ. Алӑкран ҫамрӑк хӗрарӑм тухса тӑчӗ. Ури хырӑмӗ ҫук унӑн, ҫавӑнпа-и тен, пушмакӗ ӑшне, ура вырӑнне шӗвӗртнӗ юпа кӗртсе лартнӑ пек курӑнать. Ҫийӗнче ансӑр аркӑллӑ шурӑ батис кӗпе. Вӗче шӑмми пӗвӗпе пӗр майлӑ яштак пулас пулсан, ырӑ кӗпе татах илемлӗ курӑннӑ пулӗччӗ-и тен, кӗпине те ӑста ҫӗвӗҫех ҫӗленӗ пулмалла. Анчах та, вӗче шӑммисем ик еннелле ытлашширех мӑкӑрӑлса тухнӑ пирки, кӗпе пилӗкрен аяларах тулли михӗ пек карпӑҫланса тӑрать. Хыҫӗнчи ҫут шӑрҫаллӑ сарри хӑма ҫине ҫакса янӑ пек усӑнса тӑрать. Пуҫӗнче унӑн ҫӳҫеллӗ пурҫӑн тутӑр. Анчах вӑл, хӑйӗн йӑлтӑрккипе ҫамрӑк хӗрарӑмӑн пит-куҫне илем кӳрес вырӑнне, питҫӑмарти ҫинчи шатрисене уҫҫӑн палӑртса, ӑна пушшех илемсӗрлетет. Ҫамрӑк хӗрарӑм ку шатрасене пӗтерме тӑрӑшни те паллӑ. Тӑртанса тӑракан шатрасем хушшинче путӑк-путӑк вырӑнсем курӑнкалаҫҫӗ. Ҫӑкӑрӗ вара ытла та пысӑк.

Пӗр сӑмахпа каласан, сӑнасарах пӑхнӑ хыҫҫӑн, ку ҫамрӑк хӗрарӑм тӗрлӗ татӑк-кӗсӗкрен пӗр ҫӗре ҫыпӑҫтарса тунӑ пек курӑнать. Анчах ӑна вӑл хӑй те, Михха та асӑрхаман. Ытти ҫынсем те ӑна-кӑна сӑнасах кайман. Ҫамрӑк хӗрарӑм пуян ҫын хӗрӗ пулни такам куҫне те сӑхлантарнӑ. Ҫынсем ҫамрӑк хӗрарӑмӑн сӑн-сӑпатне курса мар, ун ҫийӗнчи пуян тумне курса ытларах тӗлӗннӗ. Унӑн вӑтам пӳрнери ахах куҫлӑ ылтӑн ҫӗррипе ылтӑн хӑлха алкисем ҫынсен куҫӗсене йӑмӑхтарнӑ.

Ҫамрӑк хӗрарӑмӑн хӑйне май тивӗҫлӗхӗсем те пулнӑ. Вӑл, Миххана качча тухни икӗ ҫул иртнӗ пулсан та, хӑйне хӑй хӗр чухнехи пекех тыткалама тӑрӑшнӑ. Хура та яка ҫӳҫне ял хӗрарӑмӗсем пек тутӑр айӗнче пытарса усраман, икӗ ҫивӗт явса вӗсен вӗҫӗсене ука хӑю ҫакса ҫӳренӗ. Чӗлхи-ҫӑварӗ те ҫу пекех ҫемҫе пулнӑ. Арҫын кӑмӑлне юравлӑ сассийӗ пулнӑ. Ак, халӗ те вӑл, ҫенӗхрен тухса тӑчӗ те, сӑмах хушса каличчен, Михха ҫине куҫ айӗн пӑхса, йӑл кулса илчӗ. Ҫивӗт вӗҫӗнчи укасене хыпашлакаласа:

— Ах... Михха...—тесе ачашшӑн чӗнчӗ.

— Мӗн пулнӑ?—кӑмӑллӑ-кӑмӑллӑ мар сассипе ыйтрӗ Михха.

Лукарье, пушмак кӗли ҫинче саврӑнкаласа, каллех куҫӗсемпе йӑл кулса илчӗ. Именнӗ пек, пушмак пуҫӗ ҫинелле пӑхрӗ.

— Виҫӗ талӑк хушши киле ҫакланмасӑр ҫӳретӗн, намӑс та мар-и сана?.. Таврӑннӑ... Татах пӳрте кӗместӗн.

Михха ку ачаш сасса, ялан илтсе йӑлӑхнӑран пулас, питех хисепе хуман. Тата ёҫ тӑвас чухне чӑрмантаракана, кирек кам пулсан та, юратман. Ҫавӑнпа ун куҫӗсем сиввӗнрех выляса илчӗҫ. Анчах «ют ҫын» ҫывӑхра тӑнине аса илсе, сивӗ сӑмах калама тытӑнарах тӑчӗ вӑл. Шӳт тӑванҫи пулчӗ:

— Тунсӑхларӑн-им?

— Тунсӑхларӑм ҫав,—упӑшки кӑмӑлне килесшӗн, каллех пушмак кӗли ҫинче хиркеленчӗ Лукарье.

— Кӗр-ха эс, кӗр, эп халех кӗретӗп, пирӗн кунта кӑшт калаçмалли пур,—терӗ Михха, çав-çавах шӳтлӗрех калаçма тӑрӑшса.

— Юрӗ-çке, чӑрмантармӑп...—чӗлхе вӗççӗн чӗвӗлтетнӗн каласа хӑварчӗ те Лукарье, çенӗхе кӗрсе кайрӗ, хӑй хыçӗнчен алӑкне таччӑн хупрӗ. Пушмак тӗпӗ чӗриклетнӗ сасӑ пӳрт алӑкӗ уçӑлса хупӑнсан тин çухалчӗ.

Михха пӗççисене шарт çапрӗ.

— Илтрӗн-и?

— Мӗн?—Михха мӗн çинчен каланине ӑнланаймасӑр ыйтрӗ çын.

— Тунсӑхланӑ, тет!

— А-а...

— Вӑл тунсӑхланӑ... Уншӑн пулсан, урӑх нимӗнле шухӑш та çук. Упӑшки мӗн ӗç тӑвать, мӗнле пурӑнать, ун ӗç çук. Çук, Хӗлип, ку тӗлӗшрен эсӗ пуринчен те телейлӗ. Хӑлат пек ирӗк! Мӑйран çакӑнаканни çук сан. Паян кунта эсӗ, ыран—тӗнчен тепӗр хӗрринче. Тутӑ, питӗ... Арӑм та пур.

— Ун пекки çинчен калаçас килмест-ха ман, Михал Петрович. Чӗлхе-çӑвар типсе кайрӗ.

— Мухмӑр-им?

— Çавӑн майлӑрах. Юлташсене тӗл пултӑм та...—Куштӑркана чӗлхипе сурма хӑтланчӗ Хӗлип,—сураймарӗ.—Ав, сурчӑк та хӑпми пулнӑ.

— Ӑнланатӑп, ӑнланатӑп... Ун пек ман хамӑн та пулкалать тепӗр чухне.—Михха урипе çенӗх алӑкне тапса илчӗ.—Эй?!

Пӳрт алӑкӗ уçӑлса хупӑнни илтӗнчӗ. Çенӗх алӑкӗ патнелле пушмак чӗриклетнӗ сасӑ çывхарчӗ. Алӑкран Лукарье тухса тӑчӗ. Михха çине куç айӗн пӑхса йӑл кулчӗ те вӑл:

— Эсӗ чӗнтӗн-и?—терӗ.

— Эпӗ... Кӗтерук ӑçта?

Тарçӑ-хӗр ятне асӑннине илтсен, Лукарье пӗр вӗриленсе, пӗр сивӗнсе кайрӗ. Михха аскӑн арçынне, ют хӗрарӑмсемпе явӑçса пурӑннине лайӑх пӗлнӗ вӑл. Çавӑнпа, Кӗтерука тарçӑ вырӑнне илнӗренпе, ялан кӗвӗçсе пурӑннӑ. Упӑшки ун çумне çыпӑçасран хӑранӑ. Анчах ун çинчен тӳррӗн калама шикленнӗ. Халь те, тем таран хумханчӗ пулсан та, хӑй кӑмӑлне пытарма тӑрӑшса, сассине пушшех ачашлатрӗ Лукарье:

— Кӗтерук ӗçрен таврӑнман-ха. Мӗн тумаллаччӗ ун пекех, хам тӑваймастӑп-ши?—терӗ.

— Юрӗ, никам та çук пулсан, хӑвах илсе тух!—килӗшсе хушрӗ Михха.

— Мӗн илсе тухмалла?

Арӑмӗ пӗр сӑмахранах ӑнланса илейменни Михха çиллине хускатрӗ.

— Тавçӑрса илейместӗн пулать?

Лукарье ӑнланчӗ.

— Илсе тухатăп, илсе тухатăп!—терĕ те вăл çенĕхелле васкавлăн кĕрсе кайрĕ.

Хăй арăмĕпе калаçнă пирки сарай айĕнче тăракан çын мĕн шухăшланине пĕлесшĕн Михха ун çинелле тĕпчевлĕн пăхрĕ. Тем пулсан та, çемъери сас-хурасене ял çине кăларасшăн пулман вăл. Лешĕ, пĕр шухăшсăр тенĕ пек, чĕлĕмне ĕмсе тănине курсан, вăл лăпланчĕ.

— Кил кунта. Хампа юнашар лар!

Хĕлип чĕлĕмне çăварĕнчен васкамасăр кăларса айккинелле сурчĕ:

— Ларасси-мĕнĕ... Эсĕ мĕн ĕçпе чĕннине пĕлеймерĕм-ха эпĕ.

— Лар тенĕ сана!—татах сĕнчĕ Михха.

Хĕлип итлерĕ. Миххаран кăшт аяккарах ларчĕ. Чĕлĕмне чĕрни çине шакка-шакка:

— Итлетĕп,—терĕ.

— Сан валли ĕç пур.

— Мĕнле ĕç-ши?—итлеме хатĕрленсе хăлхисене чăнк тăратрĕ Хĕлип.

— Ĕçĕ пысăках мар. Анчах, тем пулсан та, хăвăртрах, кĕçĕрех тăвас пулать.

— Тума пултармалла ĕç пулсан—тăвăпăр. Ма тăвас мар?

— Пултармалла мар сăмах—мĕнле сăмах вăл?—кăмăлсăрланчăса сиввĕн пăхрĕ Михха.

Хĕлип ăна асăрхамарĕ.

— Кам пĕлет, ĕçпе ĕç пĕр килсе тухмасть, Михаил Петрович,—чеерехххĕн пăхса илсе каларĕ çын.

Пўрт алăкĕ уçăлса хупăнни Миххапа Хĕлип сăмахне татрĕ. Лукарье çенĕхрен тухасса пĕр шарламасăр кĕтсе илчĕç вĕсем. Арăмĕ эрех илсе тухнине курсан, Михха хавассăн эхлетрĕ:

— Вăт, пирĕн шыв тухрĕ те...

— Ах, Михха,—йăл-ял пăхса, ачашшăн чĕнчĕ Лукарье.—Ма пўрте кĕместĕр? Кĕлет умĕнче ĕçсе ларма пўртре сĕтел çук-им пирĕн? Унта апат-çимĕç те хатĕр. Пыллă сăра ăсса кĕрĕттĕм.

— Эпир ырăнне тиркекеннисемех мар. Ĕçки пултăр. Эпир бурлаксем. Çапла-и, Хĕлип?—çурма шўтлĕн каласа хучĕ Михха.

— Маншăн пурĕпĕр...—килĕшрĕ лешĕ.

Михха арăмĕн кăмăлне те çырлахтарасшăн пулчĕ.

— Кунтах ĕçме шут тытнăшăн ан çилен, Лукарье. Хĕрсе çитсен, пўрте те кĕрĕпĕр эпир,—терĕ. Арăмĕн аллинчен эрехпе черккине илчĕ.

— Çырткаламалли нимĕн те кирлĕ мар-и?

— Чăрманас мар, мĕн кирлĕ тата?—каллех сăмах хушрĕ Хĕлип.

Пулăштух кĕленчи тĕпне ывăç тупанĕ çине çапса пăккине кăларса сирпĕтсен, Лукарье халĕ те пăхса тăнине астуса, Михха аллине сулчĕ:

— Эсĕ кĕр ĕнтĕ.

Лукарье хирӗç сӑмах хушмасӑр çенӗхе кӗрсе çухалчӗ.

— Упранакана турӑ та упрать, тенӗ ваттисем,—терӗ Михха.

— Ку тӗрӗс,—килӗшрӗ Хӗлип.

Михха черккене эрех тултарчӗ:

— Ну, ӗçе ӑнӑçлӑн туса ирттермелле пултӑр!

— Эпӗ мӗн ӗçне те пӗлмерӗм те... Атя, эсӗ каланӑ пек пултӑр.—Ӗçне тӑвас шутпа хыпӑнса мар, эрех ӗçес килнӗрен чунӗ вӗчӗлтетнине тӳсеймесӗр килӗшрӗ Хӗлип.

Эрехне ӗçсе ярсан, Михха Хӗлипе тепре тултарса пачӗ.

— Мухмӑрна уç та, вара ӗç çинчен калаçӑпӑр.

— Телей пултӑр!—сӑмах хушрӗ Хӗлип хаваслӑрах сасӑпа. Эрехне вӑл сӑрӑхтарса ӗçсе ячӗ. Черккине каялла парсан, хырӑмне сӑтӑркаласа илчӗ:

— Питӗ аван вырнаçрӗ ку... Ӗнтӗ ӗç çинчен те калаçма пулать.

Михха татах тултарса пачӗ.

— Теприне йӑвантар та, вара калаçӑпӑр.

— Ырлӑхран ырас мар. Панӑ пек чухне ӗçес.—Уçӑла пуçланӑ сассипе каларӗ Хӗлип. Малтанхи пекех васкамасӑр, сӑрӑхтарса ӗçсе ячӗ. Тути-çӑварне кӗпи çаннипе шӑлса тасатрӗ.—Ме, тыт. Ӗнтӗ пулмаллах пулчӗ,—тесе черккине каялла пачӗ.

Михха Хӗлип еннелле çаврӑнса ларчӗ.

— Çтаппан текеннине пӗлетӗн-и эсӗ?

Умне труках хӑрушлӑх сиксе тухнӑ пек, Хӗлип куçне чарса пӑрахрӗ. Ахӑрнех, Çтаппан Михха урхамахне чышса йӑвантарнине асилчӗ пулас вӑл. Вилес умӗн юлашки сывлӑшне çӑтнӑ пек, çӑварне карса пӑрахрӗ.

— А-а...—тесе сассине тӑсрӗ. Çӑварӗпе кавле-кавле:—Пӗлетӗп,—тесе ячӗ.

— Пӗтерес пулать ӑна...—шӑл витӗр тухакан сасӑпа каларӗ Михха.

— Вӗлермелле-и?—пуçне малтан пырса кӗнӗ шухӑшне хӑвӑрт персе ячӗ Хӗлип. Çавӑнтах хӑйне хӑй çӑмӑлланнӑ пек туйрӗ. Мӗншӗн тесен, çынна вӗлересси уншӑн нимех те пулман. Вӑрттӑн пырса, çынна кӳсекпе çапса пӑрахассине вӑл чи çӑмӑл ӗç тесе шутланӑ.

—Вӗлерме ухмах та пултарать,—Хӗлип ӗмӗтне татрӗ Михха.— Тӑрук вӗлернипе вилекенӗ те сахал асап курать. Куна чӗрӗллех пытарас пулать. Чӗрӗллех пуçне çиес пулать.

Малтанхи шухӑшсем тӗллевсӗр пулнипе тарӑхса, Хӗлип Михха мӗн тума хушнине тавçӑрса илме тӑрӑшрӗ. Юлашкинчен, тавçӑрса илнӗ пек пулса:

— Пӗлетӗп, вут тивертмелле,—тесе ячӗ. Ку ӗçе те ытлашши йывӑр ӗçех тесе шутламан вӑл. Тӗттӗм çӗр, çынсем йывӑр ыйӑха путнӑ вӑхӑтра, сарай улӑмне вут тивертсе ярассине ним вырӑнне те шутламан. Михха килӗшменнине курсан, ним шухӑшлама аптраса ларчӗ.

— Тĕрĕс, вут тивертсе çунтарса яни пысăк сиен кӳрет,—терĕ Михха.—Çапах та ку ĕç килĕшмест мана. Ăнлан эс мана, Хĕлип: вут-кăвар пĕр кана çеç çунĕ. Çунса пĕтсен, кĕлпе кăмрăк çеç юлĕ. Кĕлпе кăмрăк мĕн тума кирлĕ? Çунса кайнă этем те çавах. Çатта-çарамас тăрса юлнă этемĕн пурăнас килнĕ хăвачĕ сӳнет. Ӳн йышши çынна кайран алăра тыткалама пушшех те хĕн. Турă пиллетĕр мана,—çавăнтах сăхсăхса илчĕ Михха,—ман кӳршĕсене сиен тăвас кăмăл çук. Хамăр та ытлашши инçех пурăнмастпăр. «Çапма пĕлмен пушă кутăн çаврăнса тивнĕ», тенĕ ваттисем. Вут-кăварăн хăвачĕ вăйлă.

Хĕлип ним калама аптраса, пăтранчăк куçĕсемпе Михха çине пăхрĕ. «Тата мĕн шутласа кăларĕ ку... Мĕн ĕç тума хушĕ?» тесе шухăшласа ларчĕ.

Михха, тусĕн шухăшне ăнланнă пек, ун еннелле тата ытларах ӳпĕнсе пăхрĕ:

— Қасăкăн-татăкăн ваклас пулать ун пурнăçне. Ман ура айĕнче ăман пек йăшăлтатса выртакан тăвас пулать. Тупăк ăшне кĕрсе выртнă чухне те ман хăвата туйса вырттăр. Ăнлантăн-и?—сăмахне татса, Хĕлип çине тĕпченĕн, шăтарасла пăхрĕ. Иккĕшин куçĕсем тĕл пулчĕç. Михха Хĕлип мĕн каласса кĕтрĕ. Йывăррăн сывланипе икĕ хулпуççийĕ туртăшса илчĕç.

— Сан ирĕк, хуçа... Анчах мĕн тумаллине тавçăрса илеймерĕм-çке...—тарăхнăн хуравларĕ Хĕлип.

— Мĕн тумалла тетĕн-и?—сывлăшне çавăрнă май, Хĕлип çинелле тинкерчĕ Михха.—Пичке пек лаша пур унăн...

Хĕлип темрен хăранă пек, тăруках каялла сиксе ларчĕ. Куçĕсене тĕллевсĕрле çаврăкаласа илчĕ. Лаша вăрлас ĕçе те йывăр ĕçех тесе шутламан вăл. Анчах та хыçран хăваласа тытасран шикленнĕ. Çтаппан тытсан, чĕррĕн юлас çуккине лайăх пĕлнĕ.

— Хăратăн мар-и эсĕ?—тĕлĕнсе ыйтрĕ Михха.

— Тытсан?—хăйне хăратакан шухăшне персе ячĕ Хĕлип.—Тытсан...—аллипе мăйĕнчен сĕрсе кăтартрĕ.

— Ну, Хĕлип, эсĕ капла каласса кĕтменччĕ,—кăмăлсăрланса сассине хăпартрĕ Михха.—Эсĕ, шыври шуйттанран хăраманскер, тухатмăшпа пĕр каварлă этем те, çак сăмаха калама пултартăн-и? Апла тесен, тĕнче пĕтнĕ-пуçĕ çакă пултăр. Эпĕ сана чи сывăх тус вырăнне хурса, эпĕ мĕн хушнине кирек хăçан та тума хатĕр тесе, тăрантаратăп, тумлантаратăп. Тӳре-шарасенчен упраса усратăп. Анчах эсĕ, хăвна ырлăх тунине кура, мĕнпе тавăртăн? Çĕр лаша вăрлама хăраман, пĕр лаша вăрлама хăратăн...

— Хăвах пĕлетĕн, Михал Петрович...

Малалла калама памарĕ Михха. Аллипе сулса сăмах вĕçленине пĕлтерчĕ.

— Ыран Çтаппан лашасăр тăрса юлмалла!

— Сан ирĕк хуçа...

— Кĕçĕр тумалла, урăх вăхăтра мар. Эпĕ Атăл çинчен таврăннă çĕре тумалла. Ăнлантăн-и?

— Ăнлантăм.

— Ăнланни паха. Ĕçне тусан, ӳпкелешмелле тумăп. Ман сăмах нихçан та çĕре ӳкмест.—Михха ура çине тăчĕ.—Атя, кĕрсе аптат çырткалар та, ĕçе тытăн!

Миххапа Хĕлип çенĕхе кĕрсе çухалчĕç.

## IV

Татьян мунчаран таврăнсан, Çтаппан хăй çутса ячĕ. Çтаппансен пӳртĕнче япала тавраш нумаях пулман. Алăкран кĕрсенех, сылтăм енче, сарлака путмар пулнă. Унта тĕрлĕ тумтир купаланса выртнă. Тумтир купи айĕнчен кăвак пир çиттиллĕ тӳшек курăннă. Ку тӳшеке Çтаппанпа Татьян хăйсен ĕмĕрĕ тăршшĕпе чăхчĕп тĕкне ывăçăн пухса тунă. Тӳшек вĕсен мухтанмалли япали пулнă. Тĕпелте урисене хĕреслетсе тунă ансăр сĕтел ларнă. Çавăнтах, кĕтесре, турăш пулнă. Анчах иконĕсем çине мĕнле сăваплă сынсен сăн-сăпачĕсене ӳкерсе хунине уйăрса илме май пулман. Вĕсене кăмака çăварĕнчен тухакан тĕтĕм хура сăрпа витсе хăварнă. Çавăнпа икона тенисем хăрăм тĕслĕ хăма таткисем пек çеç курăннă. Тĕпелти стена çумĕнче сарлака урлă сак ларнă. Ку сакăн пĕр вĕçĕ кăмака умĕнчи çăкăр-тăвар тыткаламалли ансăр сак вĕçне перĕнсе тăнă. Вучах патĕнчи стена çумĕнче кашăк-çăпала хумалли шĕвĕр тĕплĕ пĕчĕк карçинкка çакăнса тăнă. Кăмака çумĕнче ансăр хăваран тунă ушукуççи сакки пулнă.

Çтаппан пӳртĕнче, ытти çынсеннипе танлаштарсан, хăш-пĕр уйрăмлăхсене те курма пулнă. Вăл тасалăха юратнă. Пӳрт урайне яланах тимĕр кĕреçепе хырса тасатса тăнă. Çӳп-çап таврашне нихçан та урайĕнче сапаланса вырттарман. Питшăлли вырăнĕнче тепĕр чухне çĕтĕк кипке çеç çакăнса тăнă пулсан та, вăл яланах таса пулнă.

Çтаппан хăй çутса ярсан арăмĕнчен:

— Мĕнле, ăшши çителĕклĕ пулчĕ-и?—тесе ыйтрĕ.

— Айтăрух, ăшши пирĕнтен те тем чухлех юлчĕ унта. Ыран кĕме те çитмелле.

— Чăнах та, ăшши вăйлă пулнă паян. Мунча питĕ аван пулнă.

Упăшки хăй ĕçне ырлани Татьяна, яланхи пекех, савăнтарчĕ. Хăй ăшĕнче вăл кăмăллăн кулса илчĕ.

— Сăра антăр тесе, мунчара шыв ĕçмесĕр тӳсрĕм. Халь ăш хыпнă пек туйăнать,—терĕ Çтаппан.

— Апат-çимĕç те хатĕрлес пуль?

— Юрĕ, хатĕрле. Çиес, ĕçес те, канас вара. Ыран каллех акма каяс пулать.

— Акса пĕтертĕм, терĕн-иç?

— Хамăрăнне акса пĕтернĕ.

— Тата камăнне акас тен?

— Матюка акса парас, терĕм. Эс мунчара чух килсе кайрĕ те вăл, тырă акма лаша халĕ те тупайман, терĕ. Пĕр ят çĕрĕ нумаях

мар, акса парас пулать. Акса панăшăн улăх утине паратăп, терĕ. Қансĕрлемĕ. Кăçалхи пăрăва та усрас тесен, утă-улăм ытларах кирлĕ пулать...

— Кăçалхи пăрăва та усрас тетĕн-и вара эсĕ?—кун çинчен иккĕшин хушшинче халиччен сăмах пулман пирки ыйтрĕ Татьян.

— Усрар пуль, Татьян. Чипер хĕл каçарсан, çитес çул пĕр-пĕр саплăка кайĕ.

— Хĕль каçарсан аванччĕ те...—килĕшрĕ Татьян,—анчах виçĕ шултра выльăх усрайăпăр-ши?—çавăнтах иккĕленсе илчĕ вăл.

— Усрас пулать,—терĕ Çтаппан. Сăмах тапратнă май хăй ăшĕнчи таса ĕмĕтне, шур пӳрт лартма хатĕрленнине каласа парас шухăш пырса кĕчĕ ун пуçне. Анчах тытăнса тăчĕ вăл. Қаламарĕ. «Иртерех-ха ун çинчен калаçма. Тупсăмĕ курăнсан та каласа парăп», тесе, тепĕр май шухăшласа илчĕ. Урăх сăмах çине куçас майпа:—Апат-çимĕç хатĕрлесе памарăн-çке эс мана?—терĕ. Çав хушăрах хăй сĕтел хушшине пырса ларчĕ.

— Сăмаха пула мансах кайнă. Ма ятламалла мар мана,—тарăхса илчĕ Татьян. Вăл сĕтел çине пуçламан çăкăр, çĕçĕ, кашăк илсе пырса хучĕ, кăмакаран çăмарта хăпартни кăларса лартрĕ.

— Сăра пар-ха хăвăртрах!—ăш хыпнипе васкатрĕ Çтаппан.

— Халех, паратăп!

Татьян кăмака умĕнчи ансăр сак айĕнче ларакан каткаран кăкшăм çине васкавлăн сăра ăсса тултарчĕ те сĕтел пуçне пырса ларчĕ.

Çтаппан, çăкăра тытса, çăкăр пичĕ çине çĕçĕпе хĕрес хучĕ. Унтан сăмсине касса илчĕ те, ăна икĕ пая уйăрса, пĕр пайне Татьян умне хучĕ. Мĕн мăшăрланнăранпах çакăн пек йăла пулнă вĕсен. Татьян качча килнĕ кунранпах çăкăр сăмсине çурмаран уйăрса çинĕ вĕсем.

Татьян кăкшăмри сăрана тултарчĕ те Çтаппан çине ăш-пиллĕн пăхса:

— Ме, сăра ĕç,—терĕ. Çав хушăрах хăй ăшĕнче вăл: «Ырлĕши, хурлĕ-ши ку сăрана?» тесе шухăшласа канăçсăрланчĕ. Малтанах астутарма тăрăшрĕ.—Сăри темле пулчĕ ĕнтĕ... Хама килĕшрĕ пек те...

Çтаппан, куркине тытса, турăш еннелле пăхса сăхсăхрĕ:—Эй, пӳлĕхçĕм, çырлах... Эсир те, атте-анне, асатте-асанне, тăвансемхурăнташсем, ачасем,—пурте пил тăвăр. Пире ан пăрахăр. Эпир çинине çийĕр, эпир ĕçнине ĕçĕр... Эй, пӳлĕхçĕм, тутлă-тимлĕ сăра пултăр,—тесе кĕлтурĕ те, курки çине виçĕ хутчен вĕрсе илсе, сăрине сыпса илчĕ. Анчах çăтса ямарĕ. Малтанхи сыпкăмпа сăра тутине пĕлесшĕн, чĕлхи çинче тытса тăчĕ. Хăмла хăвачĕ чĕлхине уççăн та ыррăн чĕпĕтнине туйсан, çăтса ячĕ.

— Аван!—Сăрине тĕппипех, пĕр чарăнмасăр ĕçсе ячĕ вăл.

— Тата тултарса пар-ха! Сăра çав тери чаплă пулнă.

Татьян тинех çăмăллăн сывласа ячĕ...

— Килӗшрӗ пулсан, ӗҫ-ха, ӗҫ!—тесе, хаваслӑн сӗнчӗ. Ҫтаппан каллех пӗр сывламасӑр ӗҫсе ярсан:—Тата тултарса парас-и?—тесе ыйтрӗ.

— Ҫӑштах тӑхта. Апат ҫинӗ хыҫҫӑн ӗҫетӗп.

— Юрӗ эппин. Ҫи-ха, ҫи,—терӗ Татьян, сӑра куркине сӗтел ҫине лартса.

Кашни апат ҫимессерен ҫапла пулнӑ. Упӑшка кӑмӑлне юрӑхлӑ апат пӗҫертӗм-ши?—тесе, Татьян ялан канӑҫсӑрланнӑ. Кирек мӗнле пӗҫерсен те, Ҫтаппан Татьяна нихҫан та тӳррӗн каласа кӳрентермен. Анчах Татьян упӑшки кӑмӑлӗ мӗнлине сӑмахсӑрах чухлама вӗреннӗ. Апат тӑварсӑр пиҫнӗ пулсан, Ҫтаппан пӗр кашӑк сыпсанах, тепӗр хут ӑсса илме васкамасӑр, чӗлхипе тутанса ларнӑ. Куҫне хӗссе пуҫӗпе сулнӑ та, ҫиме тытӑннӑ. Апат-ҫимӗҫ тӑвар каласа тутлӑ пиҫнӗ пулсан, пӗр тытӑнса тӑмасӑр ҫиме пуҫланӑ. Ҫтаппан кӑмӑлне кайман апат-ҫимӗҫ пӗҫернӗ тӗл килсен Татьян питех хуйхӑрнӑ. Ун пек чухне вӑл апат ҫимесӗрех сӗтел хушшинчен тухнӑ. Ҫӑмарта хӑпартни кӑмӑла каяссипе каймасси ҫинчен иккӗленсе шухӑшланӑ. Шухӑшламалӑх сӑлтавӗ те пулнӑ. Ку ҫимӗҫ ялан пӗҫерекен ҫимӗҫ пулман: тырӑ акса пӗтерсен пӗҫернӗ ӑна, мӑнкун чухне тата ҫимӗк кунӗ...

Ҫтаппан ҫӑмарта хӑпартнине тытӑнса тӑмасӑрах ҫиме пуҫларӗ. Татьян каллех ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗ. Хӑй те ҫиме тытӑнчӗ. Пӗр кана шарламасӑр ҫисен кашӑкне сӗтел ҫине хучӗ:

— Ҫтаппан...

Ҫтаппан та арӑмӗ мӗн каласса кӗтсе ҫиме чарӑнчӗ.

— Матюка тырӑ акса параССИ ырӑ ӗҫ те-ха... Ыран, кӑнтӑрласӑр тухас марччӗ ӗҫе.

— Ма тата?

— Ыран вырсарникун-ҫке-ха. Иксӗмӗр те чиркӳве кайсан пит аван пулӗччӗ. Тыррине акма чиркӳрен таврӑнсан, кайран та ӗлкӗрӗн.

— Тырӑ акас ӗҫ—таса ӗҫ, Татьян. Ыран ирех кайсан та пӳлӗхҫӗм каҫарӗ. Уншӑн эпӗ уй-хирте ытларах кӗл тӑвӑп.

— Ялан ҫакнашкал вара эсӗ...—кӳреннӗ сасӑпа каларӗ Татьян.

— Пӳлӗхҫӗм ҫырлахтӑр, Татьян, эпӗ сана чармастӑп.

Ҫтаппанпа Татьян хушшинче, чиркӗве каяс пирки, яланхи ҫырлахман сӑмах-юмах пулнӑ. Татьян кашни вырсарникун, кашни праҫникрех чиркӳве ҫӳренӗ. Ҫтаппан яланах, мӗнле те пулин сӑлтав тупса, чиркӗве каясран пӑрӑнса юлнӑ... «Пӳлӗхҫӗм кирек ӑҫта та пур», тенӗ вӑл. Пуп тавраШсене те килӗштерсех кайман. Ӗлӗкхи йӑласене ытларах хисепленӗ.

Упӑшки чиркӳве ҫӳременни Татьяна пӑшӑрхантарнӑ. Чиркӳве кайсан вара вӑл хӑйшӗн те, Ҫтаппаншӑн та кӗлтунӑ.

Апат ҫисе тӑрансан, Ҫтаппан канма ҫенӗхе тухса выртрӗ.

V

Ыйхăран пуринчен малтан чĕкеç вăранчĕ. Вăл шурăмпуç çути кăшт палăрсанах сарай тӳпинчи йăвинчен вĕçсе тухрĕ. Çуначĕсене сарса çурт тавра çăмăллăн ярăнса вĕçсе çаврăнчĕ те, сарай çийĕнчи хăрăк турат çине пырса ларчĕ. Шурăмпуç çутине саламласа, хаваслă та илемлĕ юррине шăрантарма пуçларĕ.

Чĕкеç сассине илтсен, сурăх картинчи кашта çинче ларакан автан та сас пачĕ.—«Эпĕ те санран çывăрсах юлман»—тенĕ пек, çуначĕсемпе хăлаçланса илчĕ те, «куку-ре-кук!» тесе килхушшине янратрĕ. Ăна илтсен, кӳршĕри автансем те ыйхăран вăранчĕç. Пĕрин хыççăн тепри тĕрлĕ сасăпа авăтса ячĕç.

Ирхи сасăсене илтсе Татьянпа Çтаппан та вăранчĕç. Çтаппан шăналăк ăшĕнчен тухса урине сырчĕ те çенĕхрен килхушшине тухрĕ.

Автансем янраттарса авăтнă сасă, чĕкеç юрлани, ирхи лăпкă ăшă çанталăк Çтаппан кăмăлне тыткăна илчĕç. Çавăнпах-и тен, вăл килкарти варринче чылайччен ытараймасăр итлесе тăчĕ.

Сарай тӳпинчи чĕкеç йăви Çтаппана яланах савăнтарнă. Халăх çинче «Чĕкеç таса кайăк, таса чĕреллĕ этемсен çурт-йĕрĕнче çеç йăва çавăрать», тенĕ. Çтаппан хăйне çавăн йышши таса чĕреллĕ этем тесе шутланă. Вăл хăй ĕмĕрĕнче никама та улталаман. Çимĕк кунĕ Миххапа тĕл пулса, хăйĕн яланхи кăмăлĕнчен тухнисĕр пуçне, урăх никама та сивĕ сăмах каласа курман. Кӳршисемпе килĕштерсе пурăннă. Çав хушăрах чĕкеç ăна кирек хăçан та çамрăк чухнехи кунĕсене аса илтернĕ. Çамрăк чухне, выртмаран таврăнсан, мĕн чухлĕ итленĕ вăл чĕкеç юррине.

Урамра лаша мăйне çакнă шăнкăрав сассисем, ачасем хаваслă янрашса лашисене чуптара-чуптара иртсе кайнисем Çтаппанăн ырă-ĕмĕт шухăшĕсене татрĕç. Шăв-шав хускалнăран пулас, чĕкеç те турат çинчен вĕçсе кайрĕ.

Çтаппан урама васкавлăн тухса тăчĕ. Хăй умĕнчен юланутпа чуптарса иртсе каякан ачасенчен:

— Уçка килет-и?—тесе ыйтрĕ.

— Çукчĕ-ха! Сирĕн лашăра шыратчĕ!—янраса юлчĕç урам хушшинче ачасен сассисем.

— Пирĕн лашана шыратчĕ? Апласкер, ăçта кĕрсе кайнă пуль вăл?—каярах юлнă ачасенчен татах ыйтрĕ Çтаппан.

— Таçта кĕрсе кайнă-çке! Уçка шыратчĕ-ха!—илтĕнчĕç сасăсем.

Çтаппан шухăша кайрĕ. «Мĕнле вара, халиччен ниçта та каякан марччĕ-çке çав?»

— Çтаппан! Уçка килеймерĕ-им?—тесе арăмĕ чĕннĕ сасса илтсен, Çтаппан килхушши еннелле çаврăнса пăхрĕ. Арăмĕ çенĕх умĕнче сĕт чӳлмекĕ тытса тăрать.

— Килеймерĕ-ха.

— Ытти ачасем килчĕç мар-и унта?

— Килчӗҫ пулас.

— Апла Уҫка ма килеймерӗ-ши тата?

— Пирӗн лашана шыраса юлчӗ, тет-и?

Ҫтаппан килхушшине кӗчӗ.

Татьян чӗри те картах сикрӗ.

— Айтӑрух, Ҫтаппан, хирӗҫ кайса пӑхмӑн-ши?

— Хирӗҫ каймасан та тупса килӗ-ха. Тимӗр тӑлӑллӑскер, ӑҫта кайтӑр вӑл. Пӗр-пӗр ката хӳтлӗхӗнче тӑрать пуль. Ачапча вӗт вӑл, ҫывӑхран иртсе кайсан та курмасть.—Ку сӑмахсене Ҫтаппан ытларах хӑйӗн чӗрине йӑпатса каларӗ.

Татьян та лӑпланмарӗ.

— Вӑрманти япала, тимӗр тӑлӑпа пушшех хӑрушӑ, Ҫтаппан. Те тунката ҫине пырса тӑрӑнас пулӗ? Ҫырма-ҫатра та питех нумай вӑрманта. Хирӗҫ кайсах пӑхмӑн-ши? Ҫул ҫинче тӗл пулсан, каялла таврӑнӑн.

— Юрӗ. Пит-куҫа ҫукалам та, кайса пӑхӑп,—килӗшрӗ Ҫтаппан.—Шыв ӑсса тух-ха эппин.

— Халех ӑсса тухатӑп.—Сӗт чӳлмекне кӗлет умне ӳпӗнтерсе, Татьян ҫенӗхе кӗрсе кайрӗ. Часах куркапа шыв тата питшӑлли илсе тухрӗ.—Кил, ҫӑвӑн!

Пит-куҫне ҫусан, Ҫтаппан хӗвелтухӑҫ еннелле пӑхса кӗлтурӗ. Унтан.

— Эпӗ Максӑм кумсем патне кайса пӑхам-ха малтан,—тесе хӑварса, килхушшинчен тухса кайрӗ.

Урам хушшинче пурнӑҫ пуҫланса кайнӑ. Ав, икӗ хӗрарӑм, пуш витрисене чӑнкӑртаттарса, ҫӑлкуҫ еннелле васкавлӑн иртсе кайрӗҫ. Пӗр-икӗ кил урлӑ, урамра ҫӗр каҫнӑ ӗне хуҫин карталӑкӗ умне пырса тӑнӑ та сутарасшӑн мӗкӗрет. Ҫавӑнтах Ҫтаппан анаткас урамӗпе Сантӑрпа хӗрӗ тыр акма тухса кайнине курчӗ. Ӑна курсан:

— Вӑт кулатник ачи, тырӑ акма кайма та кая хӑварчӗ,—тесе хӑй тӗллӗн тарӑхса илчӗ те, васкарах утрӗ.

Максӑм текенӗ Ҫтаппанӑн чи туслӑ кӳрши тата чи килӗштерекен кумӗ пулнӑ. Пурнӑҫ енчен илсен, вӑл Ҫтаппантан вӑйсӑртарах пурӑннӑ. Куна ют ҫын Максӑмӑн ҫурт-йӗрӗ ҫине пӗрре пӑхса илсех чухланӑ. Хура пӳрт умӗнче, кӗлет вырӑнне, лаҫ пек лутра хуралтӑ пур унӑн. Сарай вырӑнӗнче аслӑк ҫеҫ. Ӗне-выльӑх усрайман вӑл. Максӑм чухӑнраххи, вӑл ӗҫлеменнинчен мар, унӑн ачисем йышлинчен, икӗ ят тырпуллипе утӑ-улӑмӗ ҫителӗксӗрринчен килнӗ. Вӑл кашни ҫурах Миххаран кивҫен тырӑ илсе, ӑна ҫулталӑкчен тем чухлӗ ӗҫ туса панӑ. Ҫтаппан хӑйӗн ывӑлне Атӑл ҫине шурӑ пӳрт тӑвас ӗмӗтпе укҫа тупма ярсан, Максӑм та хӑйӗн ывӑлне, пурнӑҫ сыпӑнтармалӑх укҫа тупӗ-и тесе, Атӑл ҫине янӑ.

Ҫулӗпе Максӑм, Ҫтаппантан кӗҫӗнрех пулсан та, пурнӑҫ йывӑрлӑхне пула, Ҫтаппантан ҫамрӑкрах курӑнман. Вӑл лутрарах, ырхан питлӗ-куҫлӑ этем пулнӑ. Анчах хӑйне йӑрӑ тыткаланӑ. Кӑмӑл енчен тепӗр чух кӑштах ҫатракарах та пулнӑ.

Çтаппан пырса кĕнĕ çĕре вăл, сухапуçне çавăрса лартса, тырă акма кайма хатĕрленсе тăнă.

— Пÿлĕхçĕ пулăштăр, кум!—çĕлĕкне илсе саламларĕ Çтаппан.

— Тавтапуç! Килех!—хирĕç саламласа чĕнчĕ Максăм.

— Уçка килеймерĕ-çке пирĕн?

— Ҳам та çавăншăн тарăхмастăп-и? Тырă акма каймаллаччĕ. Çук, çитеймерĕ. Каçхине, выртмаран иртерех таврăнсан та юрать, тесе юри астутартăм. Ял ачисемпе пĕрле таврăнмарĕ. Выртмара сыварнă пуль те ĕнтĕ, лашисем калча çине тухрĕç пуль, хуралçă тĕл пулса тытса кĕчĕ пуль? Йĕксĕк ачи! Таврăнсан хăлхине пăрап та-ха.—Йÿçсе çитнĕ шухăшĕсене пĕр чарăнмасăр кăларса хучĕ Максăм.

— Ун пекех ятлаçма кирлĕ мар-ха, кум. Хамăр та çамрăк пулса курнă. Çамрăк чухне хамăр та сыварнă. Лашана куçран çухатса вăхăтра тупманни те пулнă.

Çтаппан ачи хутне кĕни Максăма килĕшмерĕ.

— Эсĕ акса пĕтернĕ те, сан васкамасан та пырать!

— Хамăнне акса пĕтернĕ те тата сынăнне тепĕр ят çĕрĕ акса парас тенĕччĕ.

— Камăнне?

— Енер каçхине Матюк пырса каланăччĕ.

— Çавăншăн ятлаçатăп хам та,—авăк çиллине тÿрре кăлармасăлтав пуррипе тепĕр хут чăркăшрĕ Максăм.—Акма каймалла, вăл çук. Ах, шельма ачи темерĕн?!

— Тăхта, кум, ытлашши ятлаçас мар,—каллех Уçка хутне кĕрсе каларĕ Çтаппан.—Эпĕ пус хуралçи патне кайса килем. Тен, ман лаша чăн та унта?

— Ма эсĕ? Хам каятăп!

— Эсĕ акма кайма хатĕрлен. Эпĕ пурĕпĕр килтен тухнă. Халех кайса килетĕп.

Çтаппан тухса кайрĕ. Турикас урамĕнче ĕне-сурăхсем макăрнине илтсен, «кĕтÿ хăвалаççĕ, мĕн туса хучĕ ку ача?» тесе хăй тĕллĕн тарăхса илчĕ. Çула май килне кĕчĕ.

— Максăм кум мĕн калаçать?—ыйтрĕ Татьян.

— Мĕн калаçтăр вăл. Хамăр пекех тарăхать.

— Айтăрух, ăçта, мĕн туса юлчĕ ку ача?

— Ача-пăчан мĕн туса кая юласси паллă. Выртмара сыварнă пуль те, лаши калча çине тухрĕ пуль. Пус хуралçи тытса кĕчĕ пуль! Эпĕ çавăнта каятăп-ха, çула май, сана каласа хăварас тесе çеç кĕтĕм.

— Кайса кил те...—терĕ Татьян, сăмахне татса пăртак шухăша кайса тăрсан.—Мĕнле-ши, мансăр пуçнех тырă акма пуçтарăнса каймăн-ши? Эпĕ ирхи кĕллех çитесшĕнччĕ те...

— Кай ара. Хам та пуçтарăнса кайăп. Анчах сынсенчен кая юлтăм.

— Уншăн ытлашши тарăхмасан та юрĕ, Çтаппан. Паянхи кун кăшт кая юлса тытăнни те вырăнлă.

— Вырсарникун ёҫлемесёрех тăрантармĕ.

— Айтăрух, Ҫтаппан! Праҫник ҫинчен тапратсан ялан ҫапла калаҫатăн эсĕ,—тарăхса каларĕ Татьян.

— Юрĕ, юрĕ,—ун ҫинчен сăмах пĕтнине астутарса аллине сулчĕ Ҫтаппан.—Эпĕ кайрăм...

## VI

Лукарье выльăх-чĕрлĕхсем сĕрлешсе макăрнă сасăпа вăранчĕ. Вăл ыйхă чаршавĕ куҫĕ умĕнчен сирĕлме ĕлкĕричченех, аллине пĕр еннелле, унтан тепĕр еннелле ярса хыпашларĕ те, хăйпе юнашар никам ҫуккине туйрĕ. «Мĕнлеччĕ-ха ҫав, хăш вăхăтра вырăн ҫинчен тăрса кайрĕ ҫав?»—аса илме тăрăшрĕ вăл. Кăштах выртсан, каҫхине мĕн пулса иртни куҫ умне шăвăнса тухнă пек пулчĕ. «Ҫук, манпа юнашар выртмарĕ те вăл. Савмарĕ те. Ăшă сăмах каламасăрах тухса кайрĕ», терĕ вара вăл. Миххапа Хĕлип пӳрте кĕрсе апат ҫини, эрех ĕҫнисем, хальхи пек, куҫ умне тухса тăчĕҫ. Иккĕшĕ тем ҫинчен пăшăлтатса калаҫрĕҫ те, Михха: «Эпĕ каллех Атăл ҫине каятăп, ыран те килейреп, те килеймĕп», терĕ. «Качча килнĕренпе миҫе каҫ пĕччен, тăлăххăн ирттернĕ эпĕ?»—шутласа кăларас пек, хăй ăшĕнче суса выртрĕ Лукарье. Шутнейĕрне тупаймарĕ: кун пек каҫсем ытла та час-часах пулнă вĕсен.

Хăйĕн тăрлавсăр пурнăҫне пĕтĕмпех аса илчĕ те вăл, хăйне хăй шеллерĕ. Шăннă пек, одеялне пуҫĕ ҫинчен витсе хутланса выртрĕ. Тепĕр хут тĕлĕрнĕ пек, куҫне хупса, иртнисене аса илме тытăнчĕ. Акă вăл пасар урамĕнче, темиҫе ял хĕрĕсен ушкăнĕнче. Ҫийĕнче пасарĕпе пĕрре симĕс сукна пустарнă кĕрĕк. Пуҫĕнче ярапаллă пысăк шаль тутăр. Уринче пасарĕпе пĕрре чусăнкипе ҫут калуш. Мĕн чухлĕ хусах явкаланаҫҫĕ ун умĕнче? Унăн ăшпиллĕ пĕр сăмахĕ кирек мĕнле хусаха та ухмаха ертнĕ. Анчах вăл хусахсенчен никама та шантарма, сăмах пама васкаман. Вĕсем ҫине вăл, ҫӳлтен аялалла пăхнă пек, мăнаҫлăн пăхса ҫеҫ иртнĕ. Пуян ҫын ачисем паллашма тăрăшнă. Чухăн ҫын ачисем, пырса сăмах хушма хăяймасăр тенĕ пек, аякран пăхса тăнă. «Кама ытларах килĕштернĕ эпĕ? Миххана-ши?»—хăйĕнчен хăй ыйтрĕ Лукарье.

Ҫавăнтах хирĕҫле ответ пачĕ: «Ҫук! Эпĕ ăна качча киличчен мĕнпурĕ те иккĕ-виҫҫĕ ҫеҫ курнă. Лайăххăн палламан та. Михха ҫĕрме пуян ҫын ачи тенине ҫеҫ илтнĕ. Тата, Михха пуяннине кура, хăйĕн ашшĕ кĕвĕҫсе калаҫнине илтнĕ. Ҫавăншăн ĕнтĕ вĕсем, Михха ячĕпе евчĕ пырсанах, качча пама васканă». Ҫаксене аса илсен, Лукарье пушшех тарăхрĕ. Татах хутланчĕ, ытти хусахсене аса илме тăрăшрĕ. Хĕр ĕмĕрĕнче курнă хусахсене пĕрерĕн-пĕрерĕн тишкĕрсе, куҫĕ умне кăлара-кăлара тăратрĕ. Вуншар хусах хушшинчен таҫтан ун умне пĕр яштака хусах тухса тăчĕ. «Ăҫта тĕл пулнăччĕ-ха эпĕ ăна?—сывлама чарăнсах шухăшларĕ вăл. Аса

илсен, ыррăн сывласа ячĕ. Чĕри савнăçлăн кăлт-кăлт тапса кăкăрне çĕклерĕ. Çан-çурăмĕ вĕриленсе кайнăран пулас, вăл тăсăлса выртрĕ. «Малтан улахра... унтан вăйăра куртăм пулас çавна...» Лукарье тĕл пулнă вăхăтри вак-тĕвек ўкерчĕксене аса илме тăрăшрĕ.

...Пĕррехинче... вăйă картине татса, вăйă даррине пĕр яштака хусах тухса тăчĕ.

— Ну?!—уçă та янравлă сассипе кăшкăрчĕ вăл, вăрăм, яка çўçне силлентерсе,—хавасларах кала хуткупăсна! Эпĕ ташлатăп!

Купăсçă хуткупăсне хавасларах калама тапратрĕ, хĕрсем ал çупма тытăнчĕç. Яштака хусах ташлама пуçласан, айккинче çўрекен çамрăксем, васкавлăн пырса, хĕрсем хушшине кĕрсе тăчĕç. Каччă ташланине тўсеймерĕ купăсçă, ывăнса калама пăрахрĕ.

Çамрăк ташлама чарăнса:

— Начар калатăн купăсна!—терĕ те, .аллине сулчĕ. Вăйă варринчен тухса кайрĕ.

Халиччен пĕрре те курман каччăн пў-сийĕ, сăн-сăпачĕ Лукарье чĕрине вут тивертсе хăварчĕ. Вăл çавăнтах яштака каччăпа курнăçса паллашасшăн пулчĕ. Ун умнерех пырса тăрас шухăшпа, каччă хыççăнах ташлама тухрĕ. Ташла-ташла вăйă тавра çаврăннă май, лешĕ ăçта кайнине сăнарĕ. Анчах тупаймарĕ вăл ăна. Вăйă салансан та тĕл пулаймарĕ. Вырсарникун çав шухăшпах чиркĕве кайрĕ. Унта та тĕл пулаймарĕ. Каччă ун куç умĕнчен йĕп пек çухалчĕ.

Тепĕр хут вăл ăна хăйĕн туйĕнче курчĕ. Лукарье йĕре-йĕре алăк патĕнче тăракан çынсене сăра ĕçтерсе çўрет. Пĕр кĕтесре хусахсем кĕпĕрленсе тăраççĕ. Çав хусахсем хушшинче Лукарье хăйхи каччă тăнине курах кайрĕ. Ун чухне хăйне хăй мĕнле туйнине Лукарье халь те лайăххах астăваймасть. Сăнтан улшăннине, çынсем ан сисчĕр тесе, пит-куçне пĕркенчĕкпе хупланине, çав каччăна тулли курка сĕннине çеç астăвать.

— Тавтапуç... сăра ĕçме укçа çук ман,—терĕ каччă ун чухне, темшĕн кулкаласа.

Ун тавра тăракан ытти каччăсем те кулса янине илтрĕ Лукарье. Чĕри ыратсах кайрĕ унăн. Татах сĕнме хăймасăр, каччă умĕнчен пăрăнса кайрĕ.

Вăл каччă Çтаппан ывăлĕ Микула пулнă. Çавăнтанпа Лукарье, ăна ăнсăртран тĕл пулсан, яланах пĕр вĕриленсе, пĕр сивĕнсе каять. «Çакăнта килейсе тухинччĕ... Кайран кирек мĕн пултăрччĕ...»—ăмсанса выртрĕ Лукарье. Çавăнтах, «неушлĕ качча тухнăранпа хĕрарăмлăх хакне çухатрăм эпĕ?»—тесе, тепĕр майлă шухăшласа илчĕ вăл. Шухăш хыççăн шухăш... «Çук, текех тăлăхтурат пек пурăнас мар. Тем пулсан та икĕ ĕмĕр пурăнас çук», тесе татăклăнах шухăшласа хучĕ.

— Кĕтерук, эсĕ пур-и çавăнта?

— Кунтах эпĕ!—хирĕç чĕннĕ сасă илтĕнчĕ аслă пўлĕмрен.

— Кил-ха кунта!

Çав самантрах, пӳлĕм алăкне уçса çамрăк хĕр кĕрсе тăчĕ. Лукарье çине тӳррĕн пăхма хăймасăр, вăл пуçне çĕрелле чикрĕ:

— Мĕн тумалла?

Сăмах каличчен Лукарье тарăнăн йынăшса илчĕ.

— Чирлерĕм пулмалла...

— Мĕн тăвас-ши?—Тарăхма пуçланă сасăпа ыйтрĕ Кĕтерук.— Васуххa аппана кайса чĕнес-и мĕн?

— Ăна чĕнмесĕрех иртĕ-ха... Тыра акма тухса кайрĕç-и?

— Кайрĕç.

— Килхушшине тасарах шăлкаласчĕ.

— Шăлтăм.

— Татах шăл. Михха таврăннă çĕре пур çĕрте те таса пултăрччĕ.

— Юрĕ, шăлăп,—килĕшрĕ Кĕтерук. Вăл, чăлантан тухса каяс шухăшпа, алăк еннелле çаврăнчĕ.

— Тăхта...—чарчĕ ăна Лукарье.—Якура кала-ха, кĕрсе тухтăр кунта.

— Юрĕ, калăп.

— Ентĕ каях...—каллех хушрĕ Лукарье.

Кĕтерук тухса кайсан, Лукарье хăй çине витнĕ одеяла вăр-вар сирсе, кĕпине турткаласа юсарĕ. Вырăн çинчен анса, йĕркесĕр сапаланнă çӳçĕсене якатмасăр, тĕкĕр умне пырса тăчĕ, карăнкаласа кăкрине тытрĕ: «Мĕнтен хăрарăм мар вара эпĕ?» тесе шухăшларĕ. Пӳрт алăкĕ уçăлса хупăнни илтĕнсен, Лукарье тепĕр хут вырăн çине васкавлăн кĕрсе выртрĕ.

— Кам килчĕ çавăнта?—йынăшрĕ вăл.

— Эпĕ.—Аслă пӳлĕмре арçын сасси илтĕнсе кайрĕ.

— Якур-и?

— Çавă.

— Ах-х...—каллех йынăшса илчĕ Лукарье.—Кĕр-ха кунта.

Хуçа арăмĕ хăй патне кĕме чĕнни Якура тĕлĕнтерчĕ. Ĕçлеме пуçланăранпа ку пӳрте кĕрсе курманскер, хăй илтнине хăй ĕненмесĕр, иккĕленсе, малалла иртме хăймасăр тăчĕ вăл.

— Якур, ма килместĕн?—татах чĕнчĕ Лукарье.

«Иккĕленмелли çук, чăн та чĕнет». Якур васкамасăр пӳлĕм алăкĕ умне пырса тăчĕ, ăна уçса ячĕ. Алăк урлă хăрах урине каçарса, тепĕр урине улăштармасăр, çаплипех хытса тăчĕ. Лукарье вырăн çинче выртнине курa нимĕнле мар пулса кайрĕ вăл, ун çине тĕпчевлĕн пăхса илчĕ.

Лукарье те Якур çине тинкерсе пăхрĕ: «Мĕнтен арçын мар ку?» шухăшларĕ вăл, Якура пасартан тавар илнĕ чухнехи пек хаклаcа.

— А-ах...—ассăн сывласа, йынăшса илчĕ. Куçне Якур çинчен илмесĕр тепĕр май çаврăнса выртрĕ.—Чирлерĕм пулмалла.

Хуçасем хура чунлине Якур нумай хут курнă. Михха патне ĕçлеме киличчен çеç-ха, пуп патĕнче ĕçленĕ чух, пĕррехинче, раштав кунĕ, пуп вăйлă ĕçкĕ тунă. Пурте ним пĕлми ӳсĕр пулсан,

пупӑн подрясникӗ ҫухалнӑ. Айӑпне тӳрех Якур ҫине йӑвантарнӑ. Каланине ӗненмен, ҫылӑх каҫарттарма кайсан ыйтса хӑшкӑлтарнӑ. Ҫавна пулах вӑл пуп патӗнчен ӗҫрен тухса кайнӑ. Халь, пӳлӗм алӑкӗ урлӑ каҫма тӑнӑскер, ҫавсене аса илчӗ те, вӑл ним калама аптраса хускалмасӑр тӑчӗ.

— Ах-х...—карӑнкаласа илсе йынӑшрӗ Лукарье,—пӗтӗм шӑмшак ыратать...

Якур сӑмах чӗнмесӗр тухса кайма май ҫуккине кура, сӗнӳ парса пӑхрӗ:

— Тен, Ваҫуххана кайса чӗнес пуль?

— Кирлӗ мар,—терӗ Лукарье, Якур ҫине йӑлкӑшакан куҫӗсемпе пӑхса.—Эсӗ ху та чир-чӗрсене чухлама кирлӗ.

— Ҫук, унашкал ӗҫпе нихҫан та аппаланман, Лукерья Семӗновна.

— Ан суй, ан суй...—Якур сӑмахӗсене итлемесӗр, ҫине тӑрса каларӗ Лукарье.—Сыватсан ахаль тумӑп.

— Чӑнах, Лукерья Семӗновна!..

Якура сӑмах вӗҫлеме памарӗ Лукарье. Сасӑсӑр йӑхлатса кулса ячӗ.

— Хӗрарӑм чирне чухламан арҫын мӗн арҫынӗ вӑл?

Ҫав вӑхӑтра ирхи кӗлле кӗме ҫапнӑ чан сасси янраса кайрӗ. Лукарьен тӑруках ӑс-тӑнӗ пырса кӗчӗ пулас.

— Воспоти помилуй!—текелесе, вӑл вырӑн ҫинчен сиксе анчӗ.

— Урхамаха тухса кӳл, чиркӗве каятпӑр.—Якур кайма тӑрсан, ӑна вӑл тепӗр хут чӗнсе чарчӗ.—Тӑхта, Кӗтерука кала—кӗтӗр кунта хӑвӑртрах.

Якур тухса кайсан, Лукарье вырӑнне кӑшт-кашт пуҫтаркаларӗ те, каллех тӗкӗр умне пырса тӑчӗ. Аллисене ӗнси ҫине хурса, карӑнкаласа, хиркеленсе илчӗ. Тӗкӗр умӗнче ҫаврӑнкаласа хӑйӗн пӳ-сине сӑнаса тухрӗ. Унтан чӑланти ҫӳпҫерен сарӑ пурҫӑн кӗпе, ҫӳҫеллӗ кӗрен пурҫӑн тутӑр, укапа тӗрлесе тунӑ ҫӗнӗ сарӑ, хушпу кӑларса хатӗрлерӗ. Алӑк уҫӑлса хупӑннӑ сасӑ илтӗнчӗ, пӳлӗме, пӗр сас-чӗвӗсӗр, Кӗтерук кӗрсе тӑчӗ.

— Кил-ха хӑвӑртрах!—чӗнчӗ Лукарье.

Ҫамрӑк хӗр, Лукарье сывах иккенне курсан, кӑштах тӗлӗннӗ пек пулчӗ, анчах ун ҫинчен сӑмах тапратма хӑймарӗ. Яланхи пек:

— Мӗн тӑвас?—тесе йӑваш сассипе ыйтрӗ.

— Пухрасене чӑмӑртаса кӑлар-ха!—хушрӗ Лукарье. Ҫав самантрах вӑл, вырӑн ҫине хӑпарса, месерле вырнаҫса выртрӗ.

Пухрасене пӑчӑртаса кӑларас ӗҫ Кӗтерукӑн кашни ир тӑвакан ӗҫӗ пулнӑ. Пайтах йӗрӗннӗ вӑл ку ӗҫрен. Ҫапах хушнине итлемеллех пулнӑ. Халь те, чӗрнепе хӗссе кӑларнӑ пухрана курсан, унӑн кӑмӑлӗ пӑтрана-пӑтрана хӑпарчӗ. Кӑларса пӗтерсен:

— Пулчӗ,—терӗ те айккинелле кайса тӑчӗ.

Лукарье вырӑн ҫинчен тӑрса тӗкӗр умне пычӗ. Питҫӑмартине аллипе сӑтӑркаласа тепӗр хут тӗкӗр ҫине тимлӗн сӑнаса пӑхрӗ. Сӑн-пичӗ тасине курсан—савӑнчӗ.

— Аван...—терĕ.—Ĕнтĕ тухса пăх-ха, урхамаха кӳлсе тăратнă-и? Кӳлнĕ пулсан кĕрсе кала.

Кĕтерук тухса кайсан, вăл яшка-çăкăр тыткалакан пӳлĕме кайса çăвăнса килчĕ те тумланма тытăнчĕ. Чи малтанах вăл пурçăн кĕпине уртса ячĕ. Унтан урине тӳмеллĕ пушмак тăхăнчĕ. Саррине илсе тĕкĕр умне пычĕ те, пилĕкне юсаса, ăна тирпейлесе çыхрĕ. Каллех тĕкĕр умĕнче çаврăнкала-çаврăнкала пӳ-сине пăхса илчĕ.

Лукарье тумланса хатĕрленнĕ çĕре Кĕтерук таврăнчĕ. Чăлан алăкĕ умне пырса тăчĕ те вăл:

— Урхамаха кӳлсе тăратнă,—тесе пĕлтерчĕ.

— Юрĕ...—пуçне сĕлтрĕ Лукарье.—Çӳçе çивĕтле-ха хăвăртрах.

Кĕтерук хăнăхнă аллисемпе часах икĕ çивĕт яврĕ. Çивĕтсен вĕçĕсене кĕрен пурçăн хăю ячĕ.

— Пулчĕ, тĕкĕр çине пăхăр ĕнтĕ,—терĕ хĕр.

Лукарье çивĕтсене васкавлăн тыткаласа пăхрĕ. Кăмăлне кайнипе хĕпĕртесе:

— Аван...—тесе мухтарĕ. Çавăн пекех васкаса, мăйне тенкĕлĕх кĕмĕлсем çакса, çиелтен хушпу тăхăнчĕ.

— Апатланма мĕн парас?—хăйса ыйтрĕ Кĕтерук.

— Эсĕ мĕн, турра мантăн-и?—Лукарье, кӳреннĕ пек пулса, Кĕтерук çине çаврăнса пăхрĕ.—Чиркĕве кам апат çисе каять?

Вăл пăтара çакăнса тăракан тумтирне вĕçертсе илсе тăхăнчĕ те пӳлĕмрен тухрĕ. Утнă çĕртех тӳмисене тӳмелесе пырса:—Михха Атăл çинчен таврăнсан кала, чиркĕве кайрĕ те,—терĕ.

Алкум вĕçĕнче, çунатлă тарантас кӳлнĕ, йĕпкĕм хура урхамах урисене кукалесе тăрать. Пĕр тарçи урхамаха пуçĕнчен тытнă, аран-аран чарса тăрать. Якур тилхепене тытса тарантас ларкăчĕ çинче кĕтсе ларать.

Лукарье хушпу кĕмĕлĕсене чăнкăртаттарса çенĕхрен тухрĕ те тарантас çине лĕпĕш пек çăмăллăн хăпарса ларчĕ.

— Кайрăмăр!

— Хапхана уç!—лаша пуçне тытса тăракан тарçине хушрĕ Якур.

Тарçă кайсан, урхамах пĕтĕм вăйĕпе малалла туртăнчĕ. Анчах, тимĕр çăварлăх тута хĕррисене каснăран пулас, вырăнтан хускалаймарĕ, мăйне кукăртса чĕвен тăчĕ. Малти урисемпе сывлăша кукалесе илсе каллех çĕре анса тăчĕ. Ташланă пек, пĕр вырăнта тăпăртатма пуçларĕ. Тарçă хапхана уçсан, Якур, тилхепине кăштçеç пушатрĕ те, урхамах, вĕçсе каяс пек, малалла ыткăнчĕ. Аслă урампа кайса пус хапхинчен тухсан, Якур тилхепине татах пушатрĕ. Урхамах пĕр тăтăш юртса чупма пуçласан, вăл пӳлĕмре мĕн пулса иртнисене аса илсе шухăша кайрĕ. «Вăт, эс унпала... Паçăр çеç сывă мар тесе йынăшса выртатчĕ. Тарантас çине такамран та çăмăллăн хăпарса ларчĕ. Çук, тем пулсан та, ыр

шухăшлă хĕрарăм мар ку. Ĕҫсĕр пурăннипе хăйне хăй пĕлми аскăнланса кайнă». Якур тилхепине пĕрре пушатса, тепре хытарсарах тытрĕ те, урхамах вырăнтанах сикĕпе кайрĕ.

— Ерипен хăвала! Эс мĕн, мана ӳкерсе хăварас тетĕн-им?— кăшкăрчĕ Лукарье.

Якур каялла ҫаврăнса пăхрĕ.

— Ан ҫиленĕр, Лукерья Семёновна, эпĕ чиркĕве хăвăртрах ҫитерес тесе ҫеҫ хăваларăм. Вар-хырăмăр ыратнине мансах кайнă,—терĕ.

Лукарье пĕрре хĕрелсе, тепре шуралса илчĕ. Хăй хумханнине пытарма та шутламарĕ вăл:

— Ман вар-хырăма турă сыватĕ. Сан тăмсай чĕлхӳне касса ан яччĕр, асту!

— Эй, хуҫа-пикем, ман чĕлхе кама кирлĕ? Эпĕ мĕн пурĕ те хăвăра шеллесе ҫеҫ каларăм.

Якур тăрăхласа калаҫнине уҫҫăнах туйрĕ Лукарье. Анчах ятлаҫас вырăнне хăй те шӳтле сасă ҫине куҫрĕ:

— Ытла та ҫак эс... этемле мар... Чирлĕ ҫынран кам кулать пуль?

— Ҫакăнтах аҫа ҫаптăр, Лукерья Семёновна, пĕртте кулма шутламан. Мĕнле хăйăп сирĕнтен кулма?—Якур айккинелле пăхса хуллен кулса илчĕ.

— Чĕлхене ăна тыткалама пĕлес пулать,—терĕ Лукарье юнавлăрах сассипе.

Ҫакнашкал калаҫкаласа пырса вĕсем сисмесĕрех чиркӳллĕ яла ҫитрĕҫ. Якур, ял хушшинче хытăрах юрттарса, урхамаха тӳрех чиркӳ картишĕ еннелле тытрĕ. Аслă хапха текенĕ тĕлне ҫитсен чарса тăратрĕ.

— Лашана кам патне тăратас?

— Пачăшкă патне кайса тăрат—хушрĕ те Лукарье, тарантас ҫинчен каллех лĕпĕш пек ҫăмăллăн сиксе анчĕ. Чиркӳ еннелле пăхса сăхсăхрĕ те, пĕчĕк калинккинчен чиркӳ картишнелле кĕрсе кайрĕ.

## VII

Уҫка киле пĕр лашипе ҫеҫ таврăнчĕ. Хапха умнĕ ҫитсе чарăнсанах, ăна ашшĕ курчĕ те ятлаҫма тапратрĕ:

— Эсĕ мĕн, ҫывăрса ҫӳретĕн-и. Ял ачисем тахҫанах таврăннă. Тырă акма та тахҫанах кайрĕҫ. Эсĕ мĕн, тырă акма каймаллине те маннă-и! Халь вырттарса хулăпа ҫунтаратăп!—Макҫăм ачи патнелле ҫывхарчĕ. Анчах Уҫка ашшĕнчен пăрăнмарĕ, лашине чĕлпĕр вĕҫҫĕн ҫавăтса карталăкран кĕрсе тăчĕ. Вăл ашшĕ ҫине салхуллăн пăхса:

— Хреснаттесен лашине тупаймарăм,—тесе пуҫне усрĕ.

Макҫăм ун ҫинчен халĕ ҫеҫ аса илсе пушшех вĕчĕрхенме тытăнчĕ.

— Хамăр лашапа çеç таврăнтăн-и-ха эсĕ?—хаяррăн кăшкăрса ачи умне пырса тăчĕ.

— Хамăрăннипе çеç...

— Ыйхă чăпти темерĕн!

— Çывăрман эпĕ...

— Тата çывăрман тесе тăратăн-и? Ах-ти, пўтсĕр!—Макçăм ачине питрен çупса ячĕ.—Ак сана çывăрман!

Уçка ыратнипе мар, хурланса макăрса ячĕ.

Макçăм тарăхнипе хăй тĕллĕн çатăртатма тапратрĕ.

— Мĕн тăватпăр ĕнтĕ, э? Мĕн калать ĕнтĕ Çтаппан кум? Е хуралçă калча çинчен тытса кĕнĕ пулсан? Ăçтан çирĕм пус тупса парас! Ак вара хайхине, çывăрман паратăп сана!—каллех ачине çупса ярас пек аллисемпе хăлаçланчĕ Макçăм.

— Ма çав териех ятлаçатăн, кум?—терĕ халь тин карталăк умне çитсе чарăннă Çтаппан.

— Çак ыйхă чăптине ятлаçмастăп-и!—Аллине Уçка еннелле сулса илчĕ Макçăм.—Çывăрса çўрет, анкă-минкĕ! Лашисене упрайман. Хуралăçа укçа тўлемелле пулсан, мĕн тумалла ĕнтĕ. Çирĕм пус ăçтан тупса парас?

— Хуралçă патĕнче çук ман лаша. Çĕрле уй-хир тăрăх çаврăнса çўрерĕм, тет те вăл, калча çинче пĕр лаша та тĕл пулман.

— Апла тесен, ăçта çўрет пуль вăл, э?

— Ăçта çўретĕр? Вăрмантах çўрет пулĕ? Уçка тĕл пулайман ĕнтĕ ăна.

— Пур çĕрте те шырарăм эп ăна.—Уçка каллех тўрре тухма хăтланчĕ.

— Ан шарла эсĕ, çăварна хупла! Ширанă пулсан, ăçта кĕрсе кайтăр вăл! Чуп! Шыраса тупнă пултăр!—хушрĕ Макçăм.

Тăхта кум,—Макçăма чарчĕ Çтаппан.—Ятлаçма кирлĕ мар. Уçка çывăракан ача марччĕ-ха. Вăрманта, шаларах кĕрсе кайсан, тупма хĕн. Хам кайса тупса килĕп. Уçка! Йĕвенне парха... Лашасене хăш вырăна янăччĕ эсир?

Çтаппан йăвашшăн калаçни Уçка кăмăлне лăплантарчĕ. Вăл ĕсĕклеме чарăнса:

— Кĕтў çулĕ çинчи пылăха янăччĕ. Ытти лашасем аякках та кайман, сирĕн лаша çук.

— Çĕрле пăхнă-и эс вĕсене? Хăш вăхăтранпа çукчĕ лаша, астăватăн-и?—тĕпчерĕ Макçăм.

— Темиçе те тăрса пăхнă. Икĕ лаши те пĕрле çўретчĕç.

— Вара?—Уçканаваскатрĕ Макçăм.

— Ир çинче тытма кайрăм та, хреснаттесен лаши çук. Тем чухлĕ шырарăм, ниçта та тупаймарăм.

— Мĕн кирлĕ мара калаçатăн эс, тимĕр тăлăллă лаша ăçта кайтăр вăл? Лайăх шыраман эс ăна, айван!—Макçăм каллех ятлаçма тапратрĕ.

— Ятлаçас мар, кум,—чарчĕ ăна Çтаппан.—Вăрман аслă, лаша выльăх валли вырăн нумай кирлĕ-и? Ача-пăчана вăрçма кирлĕ мар, кум, хам тупса килетĕп.

— Тупасса тупăн та-ха, ĕç кая юлать. Çавăнпа ятлаçас килет.

— Пÿлĕхçĕм пулăшсан, ĕлкĕрĕп. Пĕр ят çĕрĕ нумаях мар. Уçкапа ан ятлаç, кум, хамăр та çамрăк пулса курнă,—Çтаппан татах ача хутне кĕрсе сăмах хушрĕ те килхушшинчен тухса кайрĕ.

Çула май килне кĕрсе, Çтаппан пĕр чĕл çăкăр касса тăвар сапрĕ. «Лаша валли пултăр ку», терĕ.

Тепĕр хут урама тухсан, вăл: «Пÿлĕхçĕм, çырлах, усала аяккала сирсем», тесе, ăшĕнче кĕлтуса илчĕ. Урам тăрăх пус хапхи еннелле утрĕ.

Таса уй-хире тухсан, тĕнче илемĕпе савăнса, Çтаппан йĕвенне пилĕк тавра явса тытрĕ те, яланхи ырă шухăш-ĕмĕтсем ăшне путрĕ.

«Нумай пурăнсан та ултă уйăхран Микула киле таврăнать. Çармăс енчен пÿрт кайса илĕпĕр. Раштавра вара Микулана авлантарма та юрать... Кам хĕрĕ патне хăтана каяс-ха?» Çавăнтах вăл ялти хĕрсене суйлама тытăнчĕ. Пĕрне тиркерĕ, теприне килĕштермерĕ. «Кин тени муллă та ĕçчен пултăр,—малалла шухăшларĕ вăл.—Камăн пур-ха ун пек хĕр? Сантăрăн. Анук», аса илсе хавасланчĕ Çтаппан.—Ĕçчен те, пир-авăрĕ те пулмалла унăн. Ашшĕ-амăшсем сÿс-кантăр тăвакан çынсем»...

Çтаппан пуçне сасартăках шиклĕ шухăш пырса кĕчĕ. «Пÿлĕхçĕм çырлахтăр, ăçта кĕрсе кайрĕ пуль вăл лаша? Халиччен ниçта та каякан марччĕ-çке. Яланах Макçăм кум лашипе пĕрле çÿрекенччĕ. Е çырмана-мĕне тăраннă пулсан? Тимĕр тăлăлласкер, пĕтрĕ пуç вара...»

Çтаппан, вăрман хĕррине çитсен, чарăнса тăчĕ. Сывлама чарăнса вăрманти сас-чĕвĕсене итлерĕ. Анчах, хăйĕн чĕри хăвăрттăн тапнисĕр пуçне, урăх нимĕнле сасă та илтĕнмерĕ.

— Машук... Ма-ашу-ук! Ме, ме!—тесе хыттăн кăшкăрса чĕнчĕ те вăл, лаши яланхи пек кĕçенсе хирĕç сасă парасса кĕтрĕ. Унăн сасси вăрман тăрăх кайса пĕр самант янласа илчĕ те каллех шăпланчĕ. Хушăран тарăн варти юманлăхра куккук аватнă сасă илтĕнкелет. Çтаппан, авалхи йăлапа, куккук миçе хут аватнине шутлама тытăнчĕ. Вунвиççĕ çитерсен, куккук чарăнчĕ. Вăрман хушши каллех шăп пулчĕ. «Пÿлĕхçĕм çырлахтăр, тата вунвиççĕ çул çеç пурăнатăп-и эпĕ?» шухăшласа илчĕ вăл. Анчах ку шухăш нумая пымарĕ. Вăл каллех хăй кунта мĕншĕн килнине аса илчĕ, лашине тепĕр хут чĕнме тăчĕ, анчах чĕнмерĕ. «Уçка кĕтÿ çулĕ çинчи пылăха ятăмăр, терĕ вĕт», астуса илчĕ вăл. Вăрман хĕррипе айлăмалла утса анчĕ. Пĕчĕк çырма урлă каçса, вату хурама тĕпĕнчен юхса тухакан çăлкуçĕ патне çитсен, вăл, ăшчикĕ

типнӗ пек туйӑннӑран, шыв ӗҫме шут тытрӗ. Чӗркуҫленсе тӑрса, ем-ешӗл курӑка ҫӑлса ҫӑлкуҫне пӑрахрӗ. Унтан, ҫӑлкуҫӗ ҫине хӗрес хурса, виҫӗ хутчен вӗрчӗ те, шывне курӑк витӗр сӑрхӑнтарса ӗҫрӗ. Сухалӗпе уссине шӑлса типӗтсен, тӑрса малалла утрӗ.

Кӗтӳ ҫулӗн икӗ айккипе чечекленнӗ уй улмуҫҫисем хушшине кӗрсен, Ҫтаппан каллех шухӑша кайрӗ.

Хӑйсен вӑхӑтӗнче ку улмуҫҫисем те ҫамрӑк пулнӑ. Халь вӗсен вуллисем те хуйӑрланнӑ. Чечек сарнӑ туратсем хушшинче хӑрса ҫатракаланнӑ туратсем кичемӗн курӑнаҫҫӗ. «Этем пурнӑҫӗ те ҫак улмуҫҫисен пурнӑҫӗ майлах ҫав».

Ҫтаппан, сӑртарах хӑпарсан, ват юман тӗлне ҫитрӗ. Ку юман та уншӑн питех паллӑ. Ҫамрӑк чухне, выртма килсен, вӗсем яланах ҫак юман айне вут чӗртнӗ. Вут ҫунтарнӑ вырӑн халӗ те паллӑ. Унта халӗ те курӑк шӑтман. Юманӗн те хӑрах айӑкки хӑрсаларнӑ. Хальхи ҫамрӑксем кунта вут хуман. Вӗсем, выляма ирӗк пултӑр тесе, сӑртри пылӑха суйласа илнӗ.

Ҫапла, кирлӗ-кирлӗ мар ҫинчен шухӑшла-шухӑшла, Ҫтаппан пылӑхваррине тухса тӑчӗ. Йӗри-тавра ҫаврӑнкаласа пӑхрӗ те, пӗр кӗтесре, каҫхи вучах вырӑнӗнче халь те тӗтӗм йӑсӑрланса тӳпенелле ҫӗкленнине курчӗ. Анчах вучах патне пымарӗ вӑл, кӑкӑр тулли сассипе:

— Машук, Ма-ашу-ук!!! — тесе кӑшкӑрчӗ. Пӗр сас-хура та илтӗнменнине кура, тата тепӗр хут кӑшкӑрчӗ. Вӑрман ҫаплах шӑппӑн ларни ӑна канӑҫсӑрлантарма пуҫларӗ.

«Хӑш еннелле кайса шырам-ши ӗнтӗ?.. Пӳлӗхҫӗм ҫырлахтӑр, телей сылтӑм енче, тетчӗҫ», такам каланине аса илчӗ те вӑл, хӗвелтухӑҫ еннелле чӑтлӑха кӗрсе кайрӗ.

Чӑтлӑхра самай вӑхӑт шыраса ҫӳресен, вӑл, хырлӑха пырса тухрӗ те, ирӗксӗрех сӑхсӑхса илчӗ. Лӑп-лап ҫыпҫӑнасса-мӗне питех ӗненмен пулсан та, ку хырлӑхра хӑйсен ӳсӗмӗнчи ҫамрӑк хӗр ҫакӑнса вилнине аса илнипе, Ҫтаппанӑн ҫан-ҫурӑмӗ ҫӳҫенчӗ. Хӗр ҫакӑнса вилнӗренпе ялти этемсем ку хырлӑха кӗме те хӑранӑ. Ҫавӑнтанпа ку хырлӑх ҫинчен тем тӗрлӗ хыпар та ҫӳренӗ. Хӑшпӗрисем: «Эпир унта хӗр макӑрнине илтрӗмӗр», тенӗ. Теприсем: ҫак хырлӑхран вутлӑ-хӗмлӗ валем купи куҫса анса, улӑхалла каҫса кайнине куртӑмӑр, тенӗ.

Ҫтаппан, турра асӑннипе чӗрине хытарсан, йӗри-тавра пӑхса ҫаврӑнчӗ. Анчах лашине кунта та тупаймарӗ. Хырлӑхран тухнӑ чух вӑл йывӑҫ ҫинче хура ҫӑхан ларнине курчӗ. Ҫӑхан, Ҫтаппана аякранах курса тӑрас тенӗ пек, хырӑн чи ҫӳлти туратти ҫине вӗҫсе хӑпарчӗ. Хӑйӗн ҫӗршывне этем ури ярса пусни кайӑка тарӑхтарчӗ пулас, вӑл ик-виҫӗ хутчен кӑранклатса илчӗ.

— У-у, хӑямат кайӑкӗ, ырлӑха кӑранклататӑн-ши эсӗ, ман тӗллӗн?—ятлаҫса илчӗ Ҫтаппан.

Ҫӑхана курни Ҫтаппан кӑмӑлне пӑсрӗ. Вӑл, хырлӑхран васкавлӑн тухса, вӑрман хӗррине утрӗ. Вӑрман сайралса пӗтнӗ ҫӗре

тухса малалла пăхрĕ те ун куçĕ умне Энĕш шывĕ леш енчи емешĕл улăх тухса выртрĕ. Тепĕр чухне лашасем улăх еннелле каçса кайнисене аса илсе, куç ытамĕ таран тинкерсе пăхса çаврăнчĕ. Анчах унта та нимĕн те курмарĕ вăл. Аптраса çитнĕ енне, «çырана-мĕне тăрăннă пулсан, çыран хĕррипе пырсан хăвăртрах тĕл пулăп», тесе, çыран хĕррипе анса шырама пуçларĕ. Тăватпилĕк çухрăм хушшинче каллĕ-маллĕ çӳрерĕ пулсан та, лашине мар, лаша йĕррине те тĕл пулаймарĕ вăл. Вара, ним тума аптранипе, каллех каялла, паçăрхи çăлкуçĕ патне таврăнса ларчĕ. Иртенпе пĕр турам çăкăр çыртманскерĕн хырăмĕ выçнă пек туйăнчĕ. Вăл кĕсйинчен чĕл çăкăр кăларса çиме тытăнчĕ. «Ăçта кĕрсе кайрĕ пуль?» çăкăр çие-çиех шухăшларĕ Çтаппан. «Ма шăнкăрав çакса ямарăм-ши, ăçта çӳрени инçетренех илтĕннĕ пулĕччĕ».

Кăшт-кашт çырткаласан, юлашки çăкăрне кĕсйине чикрĕ те, каллех вăрман тăрăх çӳреме тытăнчĕ. Нумайччен çӳрерĕ. Анчах лашине хальхинче те тĕл пулаймарĕ. Хĕвел кăнтăрларан иртнĕ, ĕнтĕ каç еннелле сулăнать. «Çук, ку таранччен пĕччен çӳрес çук вăл, килех кайрĕ пуль-ха»,—терĕ Çтаппан, хăй тĕллĕн мăкăртатса. Тек шыраса çӳремерĕ вара, килнелле уттарчĕ.

Татьян, упăшкинчен те ытларах канăçсăрланса кĕтнĕскер, Çтаппан пӳрте кĕнĕ-кĕменех:

— Мĕнле, тупрăн-и?—терĕ.

Çтаппан арăмне тавăрса калас мыранне:

— Киле килмерĕ-и?—тесе, хирĕç ыйтрĕ.

— Çук, килмен. Тупаймарăн-и?

— Ниçта та çук...

— Айтăрух, аплă пулсан, ăçта кĕрсе кайрĕ-ши вăл?

— Ним калама та аптрарăм-ха ĕнтĕ...

— Çук, ырра мар ку, Çтаппан. Ваçухха патне кайса юмăç пăхтармăн-ши? Çав пĕлет текенччĕ çынсем?

Çтаппан аллине сулчĕ:

— Пӳлĕхçĕм çырлахтăр, юмăç патне каясси пулаç çук манран,—терĕ вăл.

— Айтăрух, Çтаппан, аплах ал сулас марччĕ-çке. Çынсем ăна питĕ пĕлет, тесе калаçаççĕ. Иртнĕ кĕркунне çеç-ха, Тĕмшерти Калля Микулин лаши çухалсан, çав юмăç пăхнипех тупнă, теççĕ. Виçĕ кун хушши çухалса пурăннă лашана тупнă, теççĕ... Ах, çав Пакăш вăрманех çиет-çке çынсен пурнăçне...

— Вăрă-хурах Пакăш вăрманĕнче кăна мар, Татьян. Ял пур çĕрте вăрă-хурахĕ пурах ĕнтĕ вăл. Ялта вăрă-хурах пулмасан, ютран килсе çаратнине каламаççĕ.

— Тем пулсан та, Ваçухха патне кайсах килесчĕ,—каллех сĕнчĕ Татьян.

— Кăмăлу пулсан, ху кайса кил. Ман кайса пулмасть. Максăм кум патне кайса килем-ха. Пĕр ăс аван, иккĕ тата авантарах,

теҫҫӗ. Макҫӑм кумпа сӳтсе явар-ха. Вӑл мӗн калӗ тата?—Ҫтаппан пӳртрен тухса кайрӗ.

Татьян ҫӳпҫерен ҫур тӑрӑх пир кӑларса саппун аркипе чӑркарӗ те тухса кайрӗ.

Ваҫухха ватӑ карчӑк. Вӑл миҫе ҫула ҫитнине ял хушшинче никам та астумасть. Пӗр пӗччен, Уйкас урамӗ вӗҫӗнче, лутра хура пӳртре пурӑнать вӑл. Урӑх ҫурт-йӗр тавраш ҫук унӑн. Килхушши тавра тытса ҫаврӑннӑ ҫатан та пит нумай ларнипе кивелсе, лутраланса, шӑтӑк-шатӑкланса пӗтнӗ. Выльӑх-чӗрлӗх усраман пирки, килхушшинче вӗлтӗренпе мӑян ахӑрса ӳсет. Килхушши варринче хӑйпе пӗр тантӑш ватӑ хурӑн ларать. Вӑл хурӑн турачӗсем тахҫанах хӑрса типнӗ. Чӑлхӑр-чалпӑр ҫулҫӑсем ҫеҫ кунта пурнӑҫ аран-аран сывланине палӑртаҫҫӗ.

Ваҫухха ҫинчен те ял ҫыннисем хушшинче тӗрлӗ халап ҫӳренӗ. Ваҫухха калӑм эрнинче тылӑ ҫине утланса вӗҫет, тенӗ. Е тата ҫӗрле кушак пек макӑрса ҫӳренине илтнисем те пулкаланӑ, имӗш. Улах вырӑнта сӑмах тапратса, ӑна «тухатмӑш» тесе те ят панӑ. Ун килӗ умӗнчен иртсе ҫӳреме хӑракансем те пулнӑ.

Ҫавӑнпа ӗнтӗ, юмӑҫ тӗлнелле сывхарнӑ май, Татьянӑн чӗркуҫҫи шӑнӑрӗсем чӗтреме тытӑнчӗҫ. Ҫан-ҫурӑмӗ ҫӳҫенсе илчӗ. Хӑранине аран ҫӗнтерсе лутра карта урлӑ каҫса кӗчӗ те вӑл, хурӑн еннелле пӑхса, сӑхсӑхрӗ.

Пӳрте кӗрсен ӑна хаяр табак тӗтӗмӗ тата темӗнле пӑнтӑх шӑршӑ чыхӑнтарчӗ. Тӳсеймен енне, Татьян ӳсӗрсе илчӗ. Ҫавӑнтах кӑмака умӗнчен:

— Кам этемми ывӑлӗ-хӗрӗ килнӗ ҫавӑнта?—хӑрӑлтатнӑ сасӑ илтӗнчӗ.

— Эпӗ,—Татьян калас сӑмахне калаймарӗ, каллех ӳсӗрсе илчӗ, сывлӑш ҫавӑрсан тин:—Эпӗччӗ те-ха,—тесе тепӗр хут каларӗ.

— А-а...—кӑмака умӗнче каллех хӑрӑлтатнӑ сасӑ илтӗнчӗ. Лӑкӑш-лакӑш ҫӑпаталлӑ ҫын урисене сӑтӑрса утни илтӗнчӗ. Кӑмака умӗнчен чӗлӗмне мӑкӑрлантарса Ваҫухха тухрӗ.

Ун улача кӗпи, пуҫне сырӑннӑ сурпанӗ, нихҫан шыв курман пек, кӑмака ҫӑварӗпе пӗр тӗслӗ пулса кайнӑ. Ваҫухха урай варрине тухса тӑчӗ те, чӗлӗмне ӗмме чарӑнса:

— А-а...—каллех хӑрӑлтатрӗ.—Эсӗ-ҫке ку. Мӗнле ыр-усал илсе килнӗ сана ман килӗме?

— Айтӑрух, Ваҫухха аппа, йывӑр инкек ҫапса хуҫрӗ пире,—юмӑҫ кӑмӑлне юрасшӑн ҫемҫен каларӗ Татьян.—Қаҫ выртма илсе кайнӑ лашана ҫак таранччен те тупаймарӑмӑр. Мӗн пулчӗ-ши, ӑҫта кӗрсе кайрӗ-ши?

— А-а... ӑнланатӑп, ӑнланатӑп...

Татьян Ваҫухха сӑмахне итлесе тӑмарӗ. Хӑйӗн шухӑшне каласа пама васкарӗ.

— Эсӗ аслӑ юмӑҫ, Ваҫухха аппа, сан ӑс-пӗлӳрен нимӗн те пытанас ҫук. Тупсӑмне тупса парсамччӗ,—терӗ те ӳсӗре-ӳсӗре, ҫав хушӑрах саппунӗпе чӗркесе тытнӑ пирне кӑларса кӑтартрӗ.

— А-а...—Ваҫухха, чӗлӗмне шаккамасӑрах кӑмака умне хурса, пирне ярса тытрӗ. Куҫӗ умне илсе пырса ҫавӑркаласа пӑхрӗ,—ҫинҫе пир, аван пир,—терӗ.

— Айтӑрух, Ваҫухха аппа, ҫамрӑк чухне тӗртсе хатӗрленӗ пирехчӗ,—юмӑҫ ырланипе кӑштах хӗпӗртенӗ пек пулса каларӗ Татьян.

— Аван...—хӑрӑлтатрӗ Ваҫухха. Кӑштах чӗнмесӗр тӑрсан:—Сахалтарах, лаша выльӑх, пысӑк выльӑх,—терӗ.

— Уншӑн ан кӳрен, Ваҫухха аппа, васканипе ал тӗлне урӑх нимӗн те пулмарӗ. Май пулсан татах мӗн те пулин илсе килӗп. Сыпмалла кӗпе те пурччӗ-ха ман...

— А-аа... ырлӑх тунине ан ман, сиплӗх тунине асра тыт, тенӗ тур папай.

— Ах, Ваҫухха аппа, енчен, лаши чипер тупӑнсан, сан кӑмӑлна нихҫан та манассӑм ҫук.

— Пурнӑпӑр, курӑпӑр!—терӗ те Ваҫухха, пире тӗпсакайне кӗртсе хучӗ. Унтан мӗштӗртеткелесе тухсан, вӑл тӗпелти сак ҫине урисене явса ларчӗ, хӗвӗнчен ура сыппи шӑммине туртса кӑларчӗ. Шӑмма, ҫыхнӑ ҫип вӗҫӗнчен тытса, чӗрҫи ҫинелле усӑнтарчӗ. Сура-сура, Татьян ӑнланмалла мар сӑмахсем каласа пӑшӑлтатма пуҫларӗ.

— Мӗнле, Ваҫухха аппа, уҫӑлать-и?—Кӗтсе илеймесӗр васкаса ыйтрӗ Татьян.

— А-а... Куратӑп. Куратӑп...

— Мӗн куратӑн?

— Пӗтӗмпех куратӑп,—терӗ Ваҫухха, куҫӗсене шӑмӑ ҫинчен илмесӗр.

— Ах, Ваҫухха аппа, чӗрем сиксе тухать-и тен... Каласа парсамччӗ хӑвӑртрах!

— Ҫилваскать, шавлать, йӑмӑкӑм... Ҫилӗн васкани те шавлани те килӗшӳллӗ... Ҫил чарусӑр... Ҫилӗн тӗнче хӗррине ҫитсе каялла ҫаврӑнмалла... Этеме васкани килӗшмест. Этем ҫӗр ҫинче утса ҫӳрекен чӗрчун. Ҫӗр ҫинче лакӑм-тӗкӗм пит нумай. Такӑнса ӳкме те пулать.

— Ан тарӑхтар-ха, Ваҫухха аппа...

— Тарӑхтармастӑп, йӑмӑкӑм.

— Ах, Ваҫухха аппа, апла каласшӑн марччӗ эпӗ,—хӑй йӑнӑш сӑмах персе янине сирме тӑрӑшрӗ Татьян.—Чӗре ҫунни ҫинчен ҫеҫ каласшӑнччӗ... Лаша тупӑнмарӗ-ҫке пирӗн?..

— А-а... лаша-и?—Татьян мӗн ӗҫпе килнине халь тин аса илнӗ пек, сассине тепӗр хут хӑрӑлтаттарчӗ Ваҫухха.

— Лаша ҫав, Ваҫухха аппа,—астутарчӗ ӑна Татьян.

— А-а...—урӑх сӑмах чӗнмесӗр, Ваҫухха куҫӗсене тепӗр хут

шăмă ҫине тĕллерĕ.—Куратăп, йăмăкăм, куратăп... ав, сирĕн лаша ҫӳрет...

— Ăҫта?

— Ав, вăрман урлă, пус-пус урлă каҫса кайрĕ... Ҫавăтса кайрĕҫ... Макăрать сирĕн лаша... Куҫҫульне юхтарать... Пĕтрĕ. Ҫухалчĕ!—терĕ те юмăҫ карчăк, шăммине суллантарма чарăнса, тĕссĕр куҫĕсемпе Татьян ҫинелле тинкерсе пăхрĕ.—Сирĕн лаша хытă алăра, йăмăкăм... Вуникĕ тимĕр алăклă витере тăрать.

— Айтăрух...—йынăшса, аран сывлăш ҫавăрса илчĕ Татьян. Урăх сăмах калама унăн чĕлхи ҫаврăнмарĕ.

— Сире курайман усал тăшман пур, йăмăкăм. Ҫав тăшман куҫĕ ҫиет сирĕн пурнăҫа.

— Ах, Ваҫухха аппа, ăҫталла кайса шырамалла-ши ĕнтĕ?

— Уй-хирти ҫиле тытаймăн... Курайман тăшман аллине лекнĕ лашана тупаймăр.

— Пĕтрĕ апла пулсан...—макăрса ярас пек хурлăхлă сасăпа каларĕ Татьян.

— Тӳсме йывăр пулсан та, тур папай мана тĕрĕссине калама пилленĕ. Аякри кĕлле кайма асăн. Тур папай хапăл тусан, телей пулĕ...—Ваҫухха сак ҫинчен анса кăмака умĕнче выртакан чĕлĕмне ҫăварне хыпрĕ, пăк-пак ĕмсе илчĕ те тĕтĕмне каялла пĕрĕхтерсе кăларчĕ.

Татьян кунта урăх ним ĕҫ те ҫуккине тавҫăрса илчĕ, пăчăртанса тухнă йӳҫĕ куҫҫульне тутăр вĕҫĕпе шăлса, тепĕр хут ахлатса илчĕ. Вара, урăх ним калама аптăранă енне:—Хамăр патăра пырса кур, Ваҫухха аппа,—терĕ.

— А-а...—хăрăлтатрĕ Вуҫухха,—пырса курăттăм, йăмăкăм, урасем йывăрланса ҫитрĕҫ. Асанне-аннесем, кукаҫи-кукамайсем хăйсем патне чĕнеҫҫĕ. Леш тĕнчене куҫма хатĕрленетĕп...

Ваҫухха патĕнчен сĕрĕм тивнĕ чухнехи пек анкă-минкĕленсе тухрĕ Татьян. Уҫă сывлăшра вăл юмăҫ мĕн каланине ăнланса илме тăрăшрĕ, анчах ун пуҫĕнче мĕн пурĕ те «лаша пĕтнĕ» тени ҫеҫ хура ҫĕлен пек явкаланчĕ.

*Малалли пулать.*

*И. ТРОФИМОВ*

# ЧЁМПЁРТИ УЧИТЕЛЬСЕМ ХАТЁРЛЕКЕН ЧӐВАШ ШКУЛЁНЧЕ ВЁРЕННИ ÇИНЧЕН АСА ИЛНИСЕМ

1903-мёш çулхи июнь уйӑхё. Шӑрӑх та уяр çанталӑк тӑрать. Ытти шкулсенче тахçанах каникулсем пуçланчёç. Эпир кӑна, Элёкри двухкласнӑй училищёрен вёренсе тухакансем, каникула саланман. Занятисем пётнё пирён, экзаменсем пуçланас вӑхӑт та иртнё ёнтё, анчах пирён экзаменсене йышӑнма Хусан вёренў округёнчи чӑваш шкулёсен инспекторё Иван Яковлевич Яковлев килсе çитеймерё.

Пирёнтен чылайӑшёсем питё хумханаççё. Эпир çакна пёлетпёр: Иван Яковлевич чи лайӑх вёренекен ачасене суйласа илсе, Чёмпёрти учительсем хатёрлекен хӑй уçнӑ чӑваш шкулне вёренме илсе каять. Çав телейлё ачасен шутне эпё лекёп-ши?—тесе кашни ёмётленет. Çак шкул çинчен кашни чӑваш ёç сынни, кашни вёренекен ача аван пёлсе тӑратчё. Чёмпёрти шкулта вёренекен ачасем çине эпир (ун пек ачасем уездран та 2—3 çын кӑначчё) чи телейлё те, чи пултаруллӑ ачасем çине пӑхнӑ пек пӑхаттӑмӑр.

Чёмпёрти учительсем хатёрлекен чӑваш шкулё ун чухне чӑвашсен пёртен-пёр аслӑ шкулё пулнӑ. Тёттёмлёхре тата чухӑн пурнӑçпа пурӑнакан чӑваш ачисем çак шкулта кӑна вӑтам пёлў илме, культурӑллӑ çул çине тухма, унтан вара тёттёмлёхре пурӑнакан тӑван халӑха тивёçлё пулӑшу пама пултарнӑ.

Двухкласнӑй училищён пёрремёш класёнче вёренме пуçласанах, эпё хам умма епле те пулсан Чёмпёрти шкула кёрсе унтан вёренсе тухас ёмёт хыврӑм. Акӑ эпё халё двухкласнӑй шкултан вёренсе тухатӑп. Анчах ман ёмёт пурнӑçланё-ши? Е ялтах пурӑнса ирттермелле пулё-ши?

Инçетре-инçетре шӑнкрав сасси илтёнсе кайрё. Эпир вылярма пӑрахсах шӑнкрав сасси илтённё çёрелле пӑхма тытӑнтӑмӑр. Шӑнкрав сасси çывхарнӑçем çывхарать. Акӑ пар лаша кўлнё тарантас курӑнса кайрё, ларчӑк çинчи ямшӑк лашасене пирён шкул патнеллех тытрё. Тарантас çинче Иван Яковлевич ларать. Эпир ӑна пурте палласа илтёмёр, мёншён тесен вӑл пирён шкула çулсеренех килсе каятчё.

Пурте класа чупса кётёмёр, кёнекесем ярса тытрӑмӑр, хамӑр начар пёлетпёр тесе шутланисене тепёр хут вёренетпёр. Кӑшт вӑхӑт иртсенех пирён пата училище заведующийё В. Н. Орлов

пырса кӗчӗ те, экзаменсем 12 сехетре пуҫланасси ҫинчен пӗлтерчӗ. Учительсем чупкаласа ҫӳреме тытӑнчӗҫ, вӗсем хӑйсене мӗнле ӗҫ тума хушассине кӗтеҫҫӗ. Сторожсем васкасах шкул пӳлӗмӗсене тасатаҫҫӗ, сӗтелсемпе пукансене майлаштарса лартаҫҫӗ.

Сехет стрелкисем вуниккӗ патне ҫывхарса ҫитрӗҫ. Эпир пурте чӳрече патне пухӑнса тӑтӑмӑр, экзаменаторсем килессе кӗтетпӗр. Акӑ учительсен ушкӑнӗ курӑнса кайрӗ, вӗсем хыҫҫӑн училище заведующийӗ В. Н. Орлов тата Иван Яковлевич утса пыраҫҫӗ. Иван Яковлевич ҫӳлӗ те кӗрнеклӗ ҫын, вӑл хӑйпе пӗрле пыракан учительсенчен раснах палӑрса тӑрать. Вӗсем пурте класа пырса кӗчӗҫ. Эпир ура ҫине тӑтӑмӑр, пурте Иван Яковлевич ҫине пӑхатпӑр. Вӑл формӑллӑ сюртук тӑхӑннӑ, ҫӳҫӗпе сухалӗ самаях шуралнӑ.

Иван Яковлевич пирӗнтен эпир мӗнле предметсем вӗренни ҫинчен, вӑл предметсене епле вӗренни ҫинчен, вӗренӳре мӗнле йывӑрлӑхсем пулни ҫинчен ыйтса пӗлме тытӑнчӗ. Сӑмахласса вӑл кӑмӑллӑн, пире хаваслантарса сӑмахлать. Эпир вӑл мӗн ыйтнисене хирӗҫ самантрах хӑюллӑн ответлеме пуҫларӑмӑр. Иван Яковлевич хӑй экзаменра пулма пултарайманни ҫинчен, экзаменсене ирттерме училище заведующине В. Н. Орлова хушни ҫинчен пӗлтерчӗ. Вӑл ҫапах та доска патне арифметикӑпа чи лайӑх вӗренекен ачана кӑларма хушрӗ. Доска патне мана кӑларчӗҫ. Арифметикӑна эпӗ лайӑх пӗлетттӗм, Малинин, Буренин тата Евтушевский учебникӗ ҫинчи пур задачӑсене те лайӑх тӑваттӑм. Анчах кунта эпӗ, те савӑннипе, питӗ хумханма тытӑнтӑм. Иван Яковлевич манран эпӗ хӑш ял икkенне, пирӗн ҫемьере кам-кам пуррине, килте ҫиме тырӑ ҫитнипе ҫитменнине тата ӗне пуррипе ҫуккине ыйтма пуҫларӗ. Майӗпен хумханма пӑрахрӑм. Ҫакна кура Иван Яковлевич мана икӗ задача пачӗ. Икӗ задачине те эпӗ хӑвӑрт та лайӑх турӑм, задачӑсене мӗнле тунине ӑнлантарса патӑм. Иван Яковлевич мана мухтарӗ, ман ята вӑл хӑйӗн записной кӗнеки ҫине ҫырса хучӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вӑл тата икӗ ачана чӗнсе кӑларчӗ, унтан вырӑс чӗлхипе ыйтма пуҫларӗ. Унӑн записной кӗнеки ҫине пирӗнпе вӗренсе тухнӑ ачасенчен пурӗ 8 ача хушамачӗ лекрӗ. Пирӗн ҫине юлташсем пурте ӑмсанса пӑхма пуҫларӗҫ.

* *
*

Вӗренсе тухмалли экзаменсене пурне те ӑнӑҫлӑ панӑ хыҫҫӑн, эпӗ епле пулсан та Чӗмпӗрти учительсем хатӗрлекен чӑваш шкулне вӗренме кӗрес тесе пурӑнтӑм. Эпир чухӑнччӗ, аттесӗр пурӑнаттӑмӑр. Анне пире хӑй тӗллӗнех пӑхса ҫитӗнтернӗ. Чӗмпӗре кайма укҫа тупас тесе, эпир ялти кулаксем патӗнче ӗҫлеттӗмӗр. Ҫапла ӗҫленипе кӗркунне тӗлне пурӗ 5 тенкӗ укҫа пухрӑмӑр, ӑна пӗтӗмӗшпех мана пачӗҫ. Ман валли сӑран атӑ та илесшӗнччӗ, анчах ун валли укҫа тупаймарӑмӑр.

1903-мĕш çулхи августăн 20-мĕшĕнче эпĕ, хампа пĕрле икĕ çăкăр, виçĕ кăшăл чăкăт, пĕр мăшăр çăпата тата сăхман илсе, Элĕкри двухкласнăй училищĕне тухса утрăм. Кунтан пире Чĕмпĕре пĕр учитель илсе кайрĕ. Шупашкара лавпа ăсатрĕç. Пире, ку тăранччен çывăхри пасарпа прихутри чиркӳсĕр пуçне урăх ниçта та кайса курманскерсене, Шупашкарта пуçласа куракан япаласем хытă тĕлĕнтерчĕç. Вăл вăхăтра Шупашкар пĕчĕк уезд хули кăна пулин те, хулара чиркӳсем, лавккасем нумаййи тĕлĕнтерчĕ.

Чĕмпĕре çĕрле çитрĕмĕр. Ниçта чарăнса тăмасăрах, кутамккасене çурăм хыçне çакса, шкула кайрăмăр. Шкул хулан тепĕр вĕçĕнче, Атăлтан 2—3 çухрăмра ларать. Пире пысăк чул çуртăн иккĕмĕш хутне вырнаçтарчĕç. Çывăрса вăрансан эпир сехĕрленсех ӳкрĕмĕр: шкула вĕренме кĕмешкĕн пурĕ 200 ача килсе тулнă. Вĕренме килнĕ ачасенчен пуринчен ытларах чăвашсемччĕ. Çак ачасем кунта Хусан вĕренӳ округне кĕрекен пур кĕтессенчен те пухăннă, вĕсем пурте хăйсен енчи пек тĕрлĕ тумсем тăхăннă. Чĕмпĕре килнĕ чухне эпир пурсăмăр та вĕренме кĕрессе çирĕп шаннă, мĕншĕн тесен пирĕн ятсене И. Я. Яковлев хăй çырса кайнăччĕ. Анчах кунта çитсен, вĕренме кĕмешкĕн питĕ нумай ача килнине курсан, эпир пăшăрханма пуçларăмăр.

Экзаменсем августăн 25-мĕшĕнче, эпир Чĕмпĕре çитсен тепĕр куннех пуçланчĕç.

Ĕлĕк пур шкулсенче те закон божий тĕп предмет вырăнĕнче шутланнă, çавăнпа экзаменсене те çак предметран пуçланă. Анчах питех те тĕлĕнмелле пулчĕ: эпир вĕренме кĕнĕ чухне закон божий экзаменне комисси мар, пĕр пуп кăна irttерчĕ. Иван Яковлевич çак предмета паха предмет вырăнне хуман пулмалла, ăна вăл ячĕшĕн çеç туса ирттернĕ пулĕ. Тепĕр кун, арифметикăпа çырса экзамен панă çĕре, Иван Яковлевичпа пĕрле комисси пырса кĕчĕ. Иван Яковлевич хăй экзамен пуçлансанах тухса кайрĕ. Пире йывăр та кăткăс задача пачĕç. Пирĕн вăл задачăна туса, ăна епле туни çинчен ăнлантарса çырса памалла. Пĕр шкултан вĕренсе тухнă ачасене пĕр çĕре мар, тĕрлĕ партăсем хушшине вырнаçтарса лартрĕç. Манпа юнашар Шĕнерпуçĕнчи двухкласнăй шкултан вĕренсе тухнă ача ларчĕ. Задачăна эпĕ лайăх ăнланса илтĕм, ăна çăмăллăнах туса хутăм. Тунă задачăна черновик çинчен беловик çине çырма хатĕрленнине курса, экзамен йышăнакан учитель П. И. Ильин ман пата пычĕ, ман черновике пăхса тухрĕ, 2 паллă лартса ал пусса хăварчĕ. Эпĕ тĕлĕнсе хытсах кайрăм. Мĕншĕн «2» паллă кăна лартрĕ-ха?! Задачăна тĕрĕс турăм-çке. Задачăна мĕнле тунине тепĕр хут тĕрĕслесе тухрăм, мĕнле ответ тухнине тĕрĕслерĕм—пурте тĕрĕс. Нимĕн тума аптранипе макăрса ятăм. Ман ĕмĕтĕмсем кăлăхах пĕтсе ларчĕç вĕт! Ыранах киле тухса каймалла пулать ĕнтĕ. Эпĕ сасăпах йĕнине П. И. Ильин илтрĕ, вăл ман пата пычĕ те: «Мĕншĕн йĕретĕн, мĕншĕн беловик çине çырмастăн?» терĕ. «Задачăна тĕрĕсех турăм, тĕрĕсмарри тупмарăм, анчах мĕншĕн «2» лартнине ăнланмастăп,» терĕм эпĕ. Вăл

кулса ячӗ те ҫапла каларӗ: «Акӑ мӗн пирки йӗме пуҫланӑ эсӗ! Эпӗ отметка мар, задачӑна малтан тӑвакансенчен эсӗ иккӗмӗш пулнине паллӑ турӑм. Хӑвӑртрах беловик ҫине ҫырса пар, «5» отметка илетӗн терӗ». Эпӗ вӗҫӗмсӗр савӑнтӑм! Задачӑна беловик ҫине ҫырса пиллӗкмӗш номерпа патӑм. Йӗмен пулнӑ пулсан, ӑна чи малтан ҫырса параттӑмччӗ пулӗ, мӗншӗн тесен задачӑна чи малтан тунӑ ача кайран нумай аппаланса ларчӗ, вӑл задачӑна епле тунине часах ҫырса пӗтереймерӗ.

Вӗренме кӗнӗ чухне паракан экзаменсем вӗренме килнӗ ачасен пӗлӗвне ҫеҫ мар, тӗрлӗ шкулсенче мӗнле вӗрентнине кӑтартса паракан экзаменсем те пулнӑ темелле, мӗншӗн тесен кунти экзаменсем хыҫҫӑн кашни шкулӑн вӗрентӳ ӗҫӗ лайӑх паларса тӑнӑ. Вӗсем И. Я. Яковлевшӑн лайӑх материал пулнӑ, вӗсем тӑрӑх Иван Яковлевич уйрӑм шкулӑн ӗҫне аванлатас тӗлӗшпе тӗрлӗ мерӑсем йышӑнма пултарнӑ.

Вӑл вӑхӑтра Элӗкрипе Шӗнерпуҫӗнчи двухкласнӑй училищӗсем чи лайӑх училищӗсем шутланнӑ. Ҫак училищӗрен вӗренсе тухнӑ ачасем хушшинче вӑл вӑхӑтра чӑн-чӑн ӑмӑрту пынӑ темелле. Арифметика тӑрӑх илсен, эпир малта пыраттӑмӑр, ҫак предметпа пирӗн училищӗрен вӗренсе тухнисем пурте экзамен пачӗҫ. Шӗнерпуҫӗнчи училищӗрен вӗренсе тухнӑ ачасенчен ку предметпа икӗ ача экзамен параймарӗҫ. Вырӑс чӗлхипе ҫырса экзамен панӑ чухне вара Шӗнерпуҫӗнчи училищӗрен вӗренсе тухнӑ ачасем пӗрремӗш вырӑн йышӑнчӗҫ, эпир иккӗмӗш вырӑна тӑрса юлтӑмӑр.

Арифметикӑпа тата вырӑс чӗлхипе ҫырса экзамен панӑ хыҫҫӑн вӗренме кӗме тесе килнӗ ачасенчен нумайӑшӗсем каялла тухса кайрӗҫ. Ытти экзаменсем хӑвӑрт пулса иртрӗҫ, ытти предметсенчен уйрӑмӑнах юрлама пултарнине ытларах пӑхрӗҫ. Пӗтӗм экзаменсене панӑ хыҫҫӑн, пӗрремӗш курса пурӗ 60 ача вӗренме илчӗҫ.

Тепӗр кун, вӗренме илнисене пурне те пӗр ҫӗре пухса класа илсе кайрӗҫ. Партӑсем хушшине вырнаҫтарса лартиччен пире ретӗн тӑратса тухрӗҫ, врач кашни ача мӗнле курнине, мӗнле илтнине тӗрӗслесе тухрӗ. Лайӑх куракан тата лайӑх илтекен ачасене хыҫараха лартрӗҫ, пӗчӗк ачасене—малти партӑсем ҫине, ҫӳлӗрех-хисене—кайри партӑсем хушшине вырнаҫтарса лартрӗҫ. Ытла аванах курман тата начартарах илтекен ачасене, вӗсем мӗн ҫӳлӗшне шута илмесӗрех, пурне те малти партӑсем хушшине лартрӗҫ.

* * *

Классем, ҫывӑрмалли пӳлӗмсем ӑҫта вырнаҫнипе тата шкулти йӗркесемпе паллашнӑ хыҫҫӑн, вӗренме тытӑнтӑмӑр.

Малтанхи класра ялти училищӗре вӗреннӗ предметсенех вӗрентӗмӗр. Анчах кунта ҫӗнӗ преподавательсем пулчӗҫ, вӗсем пире ҫав предметсене тарӑнрах ӑнланса илме пулӑшрӗҫ. Занятисем пуҫланнӑ хыҫҫӑн икӗ эрне иртсен, пире арифметикӑпа тата вырӑс чӗлхипе контроллӗ ӗҫсем пачӗҫ.

Ҫак ӗҫсем вӗсем иккӗмӗш экзаменсем выранне пулчӗҫ. Иван Яковлевич вӗренме кӗрекен ачасем малтанхи экзаменра шикленнипе йӑнӑш тума пултарнине шута илнӗ-мӗн. Шкула лайӑх вӗренекен ачасене кӑна суйласа илес тӗлӗшпе вӑл малтан нумайтарах илнӗ. Ҫайран вара, ачасен пултарулӑхӗпе лайӑх паллашса ҫитсен, 60 ачаран 20 ачана каялла ячӗҫ.

Сентябрь уйӑхӗнче хӑш-пӗр кунсенче занятисем вуҫех те пулмастчӗҫ, пӗтӗм класӗпе шкул участокӗ ҫинчи ҫимӗҫсене пухма каяттӑмӑр. Ҫак участока шкул хула управленинчен тара илсе тӑнӑ.

Участок ҫинчи ҫимӗҫсене пухса пӗтерсен, пире столяр ӗҫне вӗрентме тытӑнчӗҫ. Вӑл вӑхӑтра йышӑннӑ программа тӑрӑх, пӗрремӗш класа вӗренме илнӗ ачасен икӗ ҫул хушши кунсеренех икешр сехет столяр ӗҫне вӗренмелле пулнӑ. Ҫак занятисенче кашнинчех пирӗн пурӗ 26 е 32 тӗрлӗ япала пайӗсем тумаллаччӗ, вӗсене вара Иван Никонорыч маҫтӑра кӑтартаттӑмӑр. Вӑл эпир тунӑ япалана пур енчен те лайӑх тӗрӗслетчӗ, унтан ҫапла калатчӗ: «Ку япала ниме те юрӑхсӑр, унпа урнӑ йытта та хӑратаймӑн! Верстак патне кай, пуҫупа лайӑх шухӑшла, куҫусемпе тимлӗн пӑхса сӑна, аллусемпе тӑрӑшса ӗҫле». Ҫапла пирӗн кашни япала пайнех темиҫе хутчен ҫӗнӗрен тума тиветчӗ, маҫтӑр вӗсене лайӑх тунӑ хыҫҫӑн ҫеҫ йышӑнатчӗ. Япала пайне лайӑх тума вӗренсе ҫитнисем кайран хӑйсем тӗллӗнех сӗтелсем, пукансем, табуреткӑсем, шкафсем, комодсем, шкатулкӑсем тата ыт. те тума тытӑнчӗҫ. Пирӗн мастерской шкула кирлӗ япаласем ҫеҫ мар, хулари ҫынсем тума паракан япаласем те тӑватчӗ. Мастерскойра яланах ӗҫ нумайччӗ, мӗншӗн тесен пирӗн мастерской пур япаласене те хулари ытти ҫынсенчен йӳнӗрех хакпа туса паратчӗ. Пирӗн мастерской шкула чылай тупӑш панӑ. Вӑл тупӑшпа каярах Иван Яковлевич шкул валли ял хуҫалӑх ферми тума 264 гектара яхан ҫӗр сутӑн илчӗ.

Историпе географине пире Никифоров Василий Никифорович пуп вӗрентетчӗ. Хӑй предметне вӑл аванах пӗлместчӗ. Учебниксенче мӗн ҫырнинчен ытла вӑл урӑх нимӗн те каласа памастчӗ. Хӑй вӑл Иван Яковлевичран питӗ хӑратчӗ. Хамӑр шутпа пирӗншӗн вӑл лайӑх ҫын пекчӗ, анчах ун пирки вӑл пирӗн ҫинчен Иван Яковлевича элек парать, тесе калаҫатчӗҫ. Ҫавӑнпа та эпир ӑна хамӑр хушӑра Мамай, теттӗмӗр.

Ытти преподавательсенчен чистописани преподавательне Ф. Д. Данилова асӑнас килет. Хӑйӗн предметне вӑл питех те юрататчӗ, ачасене лайӑх вӗрентме тӑрӑшатчӗ. Шкулта вӗренекен ачасен, малтан тӗрлӗ ҫӗрте тӗрлӗ шкулсенче вӗреннӗскерсен, паллах, почерксем пӗр пек пулман. Ф. Д. Данилов тӑрӑшса вӗрентнипе пула, ҫулталӑк хушшинчех ачасем пурте пӗр пек почеркпа ҫырма вӗренсе ҫитрӗҫ. Пирӗншӗн, пулас учительсемшӗн, ҫакӑ питех те паха пулнӑ, мӗншӗн тесен начар ҫыракан учитель ачасене лайӑх ҫырма вӗрентме пултараймасть.

Вӗренӳ ҫулӗн иккӗмӗш ҫурринче программӑри предметсемсӗр

пуҫне урӑх хыпарсемпе интересленме пуҫларӑмӑр. Эпир Японипе Россия хушшинчи вӑрҫӑ ҫинчен хыпарсем пӗлекен пултӑмӑр. Тӳрех калас пулать, вӑл вӑхӑтра хупӑ шкулсенче вӗренекен ачасем хаҫатсем вулама пултарайман. Российйа е унӑн тулашӗнче пулса иртекен хыпарсем ҫинчен эпир учительсем урлӑ ҫеҫ пӗлкелесе пыраттӑмӑр. Анчах, паллах ӗнтӗ, учительсем ҫав хыпарсем ҫинчен пире хӑйсем майлӑ кӑна пӗлтернӗ. Вӑл вӑхӑтра эпир пурте калама ҫук аслӑ Россия пӗчӗк Японие кӗске вӑхӑтрах ҫӗнтерессе шанса тӑнӑ. Ҫакӑн пирки пире географи вӗрентекен В. Н. Никифоров та шантарсах каласа паратчӗ. Вӑл пире вӑрҫӑри ҫапӑҫусем мӗнле пыни ҫинчен пӗлтерекен телеграммӑсене вуласа паратчӗ, вӑл телеграммӑсенче пур хыпарсене те Россия майлӑ мухтаса ҫыратчӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вӗренекен ачасенчен нумайӑшӗн патриотла-шовинистла туйӑм аталанса хӑпарма пуҫларӗ. Вӗренекенсенчен чылайӑшӗсем начальствӑна ыйтусем ҫырса пачӗҫ, вӗсем хӑйсене фронта яма ыйтрӗҫ. Анчах вӗсене пӗрне те фронта ямарӗҫ.

Ҫак вӑрҫӑ пире историпе географине тимлӗрех те тӑрӑшарах вӗренме хушнӑ пекех туйӑнчӗ. Эпир Япони, Китай тата Англи ҫинчен калакан пур кӗнекесене те вуласа тухрӑмӑр, эпир вара Россия тулашӗнче пулса иртекен ӗҫсемпе ытларах интересленекен пултӑмӑр. Ҫак вӑхӑтра революци хумӗ хӑпарсах пычӗ. Ҫӗршывра пулса иртекен хыпарсене пӗлтермесӗр усранӑ пулин те, хӑш-пӗр хыпарсем ҫапах пирӗн пата ҫитетчӗҫ. Вӑл хыпарсене эпир килтен яракан ҫырусенчен, ялсенчен килекен хресченсенчен, пуринчен ытларах, ремесленнӑй училищӗсенче вӗренекен ачасенчен пӗлеттӗмӗр. Мӗн пулса мӗн килессе тӗплӗн ӑнланса илме пултарайман пулсан та, эпир пысӑк событисем пуласса шансах тӑраттӑмӑр.

* * *

Май уйӑхӗн ҫурринче пире ҫуллахи каникула ячӗҫ. Пирӗнтен нумайӑшӗсен киле пароходпа каймалла. Пирӗн ыпаласене пристане лавпа турттарса кайрӗҫ. Пире учитель Д. И. Кочуров ӑсатса ячӗ. Кӑшт тӑрсан пирӗн пата, пристане, Иван Яковлевич пычӗ. Вӑл пирӗнтен укҫа пухрӗ те билетсем илме конторӑна кайрӗ. Вӑл пире ача билечӗсем илсе пама тӑрӑшнӑ, мӗншӗн тесен ача билечӗ ҫур хак ҫеҫ тӑрать. Эпир Иван Яковлевич кассира ӳкӗтленине те илтсе тӑратпӑр, анчах кассирӗ ӳкӗте кӗресшӗн мар. «Тур ҫырлахтӑрах, Иван Яковлевич, мӗнле ачасем пулччӑр-ха вӗсем? Вӗсене авлантарма та юрать», тет кассир.

Иван Яковлевич кассирпа шӳт тума тытӑнать. «Нимӗн те тӑваймӑн, хӑвӑрах куратӑр, турӑ кӳрентермест вӗсене, ӳсеҫҫӗ эдак и таксем», тет вӑл кассира. Вӗсем нумай вӑхӑт хушши калаҫаҫҫӗ, юлашкинчен ҫапах та кассир ӳкӗте кӗрет. Иван Яковлевич пире кашниех ача билечӗсем тыттарчӗ. Ӑсатнӑ май вӑл пире пурне те чуптурӗ, ялта хамӑра йӗркеллӗ тытма вӗрентсе ячӗ, атте-аннесене хӑйӗнчен салам калама хушрӗ.

Ҫак саманта эпир ӗмӗрне те манас ҫук.

* * *

1905-мӗш ҫулхи ҫуллахи каникула эпир мӗнле те пулин событисем пуласса кӗтсе салантӑмӑр. Ялта эпир хаҫатсем тупкаласа вулаттӑмӑр. Тӗрӗссипе каласан, вӑл вӑхӑтра хаҫат тупса вулама ҫӑмӑлах марччӗ, мӗншӗн тесен ун чухне хаҫатсене учительсем анчах ҫыранса илетчӗҫ. Вӑл вӑхӑтри «Русское слово», «Утро России», «Биржевые ведомости» текен буржуаллӑ хаҫатсене вуланипе те ҫӗршывра пулса иртекен событисем ҫинчен кӑшт-кашт пӗлкелесе тӑраттӑмӑр. Кӗркунне ҫывхарнӑ май эпир выранти учительсенчен вӑрттӑн тухса тӑнӑ кӗнекесем те, «Донская речь» изданийӗсене те илкелесе вулама тытӑнтӑмӑр. Ҫав брошюрӑсемпе изданисем урлӑ пурнӑҫри пӗртанмарлӑхпа пӗрправасӑрлӑхсем ҫинчен тавҫӑрса илекен пултӑмӑр.

Ҫапла эпир ҫак ҫулхи кӗркунне шкула хамӑр килсене саланнӑ ачасем пек мар, урӑхла ачасем пулса пухӑнтӑмӑр. Пирӗнтен кашниех шкула хайпе пӗрле вӑрттӑн кӑларнӑ мӗнле те пулин кӗнеке илсе килнӗ; ҫак майпа пирӗн вӑрттӑн кӑларнӑ кӗнекесен пӗчӗк библиотеки пулса тӑчӗ, ӑна эпир вӑрттӑн тытса усраттӑмӑр.

Пӗрремӗш класран иккӗмӗш класа куҫни ачасен пурнӑҫ условийӗсене те, вӗренӳ условийӗсене те улшӑнтарчӗ. Иккӗмӗш класра вӗренекен ачасем пӗрремӗш класри ачасем пек хӑйсен тумтирӗсене сарса ҫӗрте ҫывӑрмаҫҫӗ, вӗсене кашнинех кровать, матрац, простынь тата одеял параҫҫӗ.

Иккӗмӗш класра вӗренӳ программине ҫӗнӗ предметсем: алгебра, словесность теорийӗ, славян чӗлхин грамматики, логика кӗртетчӗҫ. Логикӑна Иван Яковлевич хӑй вӗрентетчӗ. Ҫавӑнпа та эпир логикӑн пӗрремӗш урокне питӗ пӑлханса, теме кӗтнӗ пекех кӗтрӗмӗр. Пирӗн ҫак чаплӑ ҫынпа таччӑнрах паллашас, унӑн каласӑвне часрах итлес килетчӗ.

Акӑ, эпир тахҫантанпах кӗтнӗ урок кунӗ ҫитрӗ. Ҫак урок Иван Яковлевич хӑйне майлӑ преподаватель пулнине, вӑл хӑйӗн предметне ҫав тери аван пӗлнине кӑтартса пачӗ. Ытти преподавательсемпе танлаштарсан, вӑл хӑйне майлӑ вӗрентетчӗ. Вӑл хӑй урокне лекци формипе мар, калаҫу формипе, интереслӗ ирттеретчӗ. Ыйтусем лартса, ҫав ыйтусем пирки ӑнлантарса паратчӗ. Ҫитес урокра пирӗн вӑл паракан ыйтусене ответлемеллеччӗ, хамӑр ответсене тӗрлӗ примерсемпе ҫирӗплетмеллеччӗ, вӑл паракан примерсем тӑрӑх выводсем тумаллаччӗ. Унӑн урокӗнче хуть мӗнле урӑх япалапа аппаланса ларма мар, мӗн те пулин урӑх япала ҫинчен шутлама та май ҫукчӗ, мӗншӗн тесен вӑл хӑйӗн урокне ҫав тери интереслӗ ирттеретчӗ, ачасем ӑна пӗр хускалмасӑр тимлӗн итлесе ларатчӗҫ. Иван Яковлевич урок ирттернӗ чухне нихҫан та учебник ҫине пӑхмастчӗ, тӗрӗссипе каласан, урока вӑл учебниксем те илсе пымастчӗ. Ӑна е кӑна ӑнлантарса парас пулсан, вӑл яланах пурнӑҫри примерсене илетчӗ.

Яковлев урокне хатӗрленме те ҫӑмӑлах марччӗ: чи малтанах Яковлев каласа панисем тӑрӑх пӗтӗмӗшлӗ выводсем тумаллаччӗ, вӑл выводсене учебникре ҫырнисемпе сыхӑнтармаллаччӗ, юлашкинчен вара конспект ҫырса хатӗрлемеллеччӗ. Иван Яковлевич яланах урок калама кӑларнӑ ачаран малтан конспект ыйтатчӗ. Хӑш чухне вӑл хӗрсех каятчӗ, унӑн урокӗ 2—3 сехет таранах тӑсӑлатчӗ, мӗншӗн тесен вӑл нимӗнле звонока та хисепе илместчӗ. Хӑйӗн урокӗн темине лайӑх ӑнлантарса памасӑр, вӑл нихҫан та класран тухман.

* * *

Занятисем хыҫҫӑнах пушӑ вӑхӑтсенче эпир вӑрттӑн кӑларнӑ кӗнекесене вулаттӑмӑр, ушкӑнпа пӗрле пухӑнса ҫӗршывра пулса иртекен событисем ҫинчен сӳтсе яваттӑмӑр, революциллӗ юрӑсем вӗренеттӗмӗр. Сайра хутра пирӗн пата хуларан агитаторсем килетчӗҫ, эпир вӗсене хамӑр пата аялти хутри чӳречесем витӗр вӑрттӑн кӗртеттӗмӗр. Хӑш чухне тата икӗмӗшпе виҫҫӗмӗш класенче вӗренекенсемпе митингсем туса иртеретттӗмӗр. Преподавательсенчен хӑшӗ те пулин килсе ан тухтӑр тесе, часовойсем тӑратса тухаттӑмӑр, вӗсен вара мӗнле те пулин преподаватель килнине асӑрхасанах, хӑрушлӑх ҫинчен уйрӑм паллӑпа систермеллеччӗ. Анчах пӗрре эпир чутах инкеке лекеттӗмӗр. Пирӗн пата агитатор килчӗ. Митинг хӗрсе ҫитнӗ самантра пирӗн корпус патнелле пӗр преподаватель утса пынӑ пулнӑ. Пирӗн пӗрремӗш часовой ӑна самантрах асӑрханӑ пулнӑ, ҫакӑн ҫинчен уйрӑм паллӑпа систернӗ. Корпуса кӗмелли алӑк умӗнче тӑракан иккӗмӗш часовойӗ ҫак самантра таҫталла пӑрӑннӑ пулнӑ та, инкек ҫывхарса килни ҫинчен систерме пултарайман. Юлашки виҫҫӗмӗш часовойӗ преподавателе вӑхӑтра асӑрханӑ, анчах вӑл нимӗн тума та пултарайман, мӗншӗн тесен ҫак самантра преподаватель иккӗмӗш хутра, пирӗн митинг ҫывӑхӗнчех пулнӑ.

Юлашки часовой класа чупса кӗчӗ те: «Кочуров!» тесе кӑшкӑрса ячӗ. Инкекрен митинг председателӗ кӑна хӑтарчӗ: вӑл, кафедра ҫинчен анмасӑрах, тӳрех: «Чуден Днепр при тихой погоде!..» тесе декламировать тума тытӑнчӗ... Класа Кочуров пырса кӗчӗ. Пирӗн председатель самантрах чарӑнчӗ те Кочурова: эпир литература вечерӗ тума хатӗрленетпӗр, халӗ кам епле каланине тӗрӗслетпӗр, тесе ӑнлантарса пачӗ. Кочуров пире ӗненчӗ пулас, вӑл ҫавӑнтах: «Апла пулсан, эпӗ те итлетӗп», терӗ.

Митинг председателӗ Гоголь произведенине малалла калама тытӑнчӗ. Ун хыҫҫӑн кафедра ҫине ытти ачасем те черетпе тухатуха мӗнле те пулин сӑвӑ каласа пачӗҫ. Юрать-ха сӑвӑсем нумай пӗлеттӗмӗр эпир. Хуларан килнӗ агитатора ҫак вӑхӑтра партӑсем айне пытартӑмӑр, вӑл ан курӑнтӑр тесе, пурте ҫав парттӑ йӗритавра хӗсӗнсе тӑратпӑр. Ҫапла кӑна инкекрен хӑтӑлса юлтӑмӑр.

Хамăр митингсенче эпир забастовка тăвасси çинчен, вĕрентӳ ĕçне, шкулти пурнăçа тата преподавательсемпе вĕренекен ачасем хушшинчи çыхăнăва аванлатас тĕлĕшпе требованисем лартасси çинчен сӳтсе яваттăмăр. Декабрĕн пĕрремĕшĕ тĕлне эпир çак ыйтусене пурне те татăклăн сӳтсе яврăмăр, вĕсем пирки петици çыртăмăр, ун çине пурте алă пусса ăна Иван Яковлевича патăмăр. Эпир мĕн ыйтнине пурнăçа кĕртмесен, вĕренекен ачасем палăртнă срокра забастовка тăватчĕç.

Малтанах Иван Яковлевичпа ытти преподавательсем пире ӳкĕтлесе пăхрĕç, петицине каялла илме ыйтрĕç, забастовкăна пула шкула хупма пултарасси çинчен ăнлантарса пачĕç. Анчах эпир хамăр йышăннинчен пĕр утăм та каялла чакмарăмăр. Çакăн хыççăн пурне те киле салатрĕç.

Чăваш ялне таврăнса коллективран уйрăлнине пула пирĕн çутă ĕмĕтсем сӳнсех пынă. Çитменнине тата пире атте-аннесем кусçулĕпе йĕрсе ӳкĕтленĕ, эпир хамăра епле тытнине урядник е полици стражникĕ кулленех тĕрĕслесе тăнă. Çаксем вара пирĕн пусçри çутă ĕмĕтсене сӳнтерсе пынă. Килте пĕчченшерĕн сапаланса пурăнакан ачасене ӳкĕте кĕртме май пуррине Иван Яковлевич аван пĕлнĕ. Киле таврăннă хыççăн икĕ эрне иртсенех, эпир унтан çыру илтĕмĕр. Çырура вăл пирĕнтен хамăр ыйтнине каялла илме, хамăр «айванла» шухăшсемшĕн каçару ыйтни çинчен çырса пĕлтерме хушнă. Юлташсем И. Я. Яковлев çырăвĕ пирки мĕн шухăшланине пĕлменнипе, забастовка тунă ачасенчен нумайăшĕ Иван Яковлевич ыйтнă пек çыру çырса янă. Вăл вара Петербургпа çыхăнса тата Хусанти вĕренӳ округне кайса пирĕн çырусене кăтартнипе Чĕмпĕрти Чăваш шкулне хупса лартасран хăтарса хăварнă, пире шкула чĕнсе илмелле тунă.

Эпир шкула 1906-мĕш çулхи январĕн вĕçĕнче пухăнтăмăр. Иван Яковлевич пире забастовка тунăшăн пĕрре те ятламарĕ, çавăн çинчен вăл хăйне манса кайнă пек тытрĕ.

Иван Яковлевич пирĕнпе халичченхи пекех калаçатчĕ. Шкулти пурнăçпа вĕренӳ ĕçĕсем те малтанхи пекех йĕркеленсе кайрĕç. Анчах забастовка хыççăн эпир хăш-пĕр çăмăллăхсем илтĕмĕр. Сăмахран, никамран ыйтмасăрах хулана тухса çӳреме те пултараттăмăр, хула библиотекине те каяттăмăр.

* * *

Вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнче литературăпа пире словесность магистрĕ (вăл вăхăтра çакăн пек ученăй степень ячĕ пулнă) Арфаксадов вĕрентрĕ. Вырăс литературипе хĕвеланăç литературине вăл калама çук аван пĕлетчĕ, нумай произведенисене пăхмасăр каласа паратчĕ. Вăл вĕрентессе те лайăх, интереслĕ вĕрентетчĕ. Эпир çырнă сочиненисене пăхнă чухне вăл чи малтан эпир предложенисене тĕрĕс йĕркелесе тунине, литература стилĕ пуррипе çуккине тата хамăр шухăшсене логика тĕлĕшĕнчен епле аталантарса пынине шута илетчĕ.

Кашни сочинениех вӑл класра пӑхса тухатчӗ, сочиненин лайӑх енӗсемпе начар енӗсене кӑтартса паратчӗ. Пире вӑл илемлӗ литературӑна юратма, хамӑр шухӑшсене йӗркеллӗ тӗрӗс ҫырса пама вӗрентрӗ.

Математикӑпа пире Иван Иванович Турченко помещик вӗрентетчӗ. Хӑй вӑл ҫав тери шыҫмак та мӑнтӑрччӗ. Ачасем хушшинче уп пирки «вӑл тухтӑр хушнипе кӑна вӗрентет, унсӑрӑн ниҫта тухса ҫӳременнипе вӑл татах мӑнтӑрланса шыҫмакланса каять», тесе калаҫатчӗҫ. Вӗрентес енчен илсен, вӑл ытлашши нимӗнпех те палӑрса тӑмастчӗ, анчах Иван Яковлевичпа питӗ килӗштернӗ пек пурӑнатчӗ. Ҫакӑ вӑл Иван Яковлевичшӑн питӗ усӑллӑ пулнӑ, мӗншӗн тесен Турченко помещик Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи пур дворянсемпе те тенӗ пекех ҫыхӑну тытса тӑнӑ, вӑл дворянсем Иван Яковлевича пур вӑхӑтра та кирлӗ пулма пултарнӑ.

Шкул регенчӗ Иван Митрофанович Дмитриев вӗренекен ачасем хушшинче хӑйне ҫав тери аван тытатчӗ. Вӑл дежурнӑй чухне ачасем хулана тухса ҫӳреме те, театра кайса курма та пултаратчӗҫ. Анчах ӑҫта каясси ҫинчен малтан хӑйне пӗлтеретчӗҫ. Вӑл вӗренекен ачасенчен кам та пулин суеҫтерсе каланине чӑтма та пултараймастчӗ. Мӗнле те пулин айӑпа кӗрсен, ҫав айӑп ҫинчен пӗр пытармасӑр каласа парсан, вӑл вара ачана ҫийӗнчех каҫаратчӗ, ун ҫинчен Иван Яковлевича та пӗлтерместчӗ. Каҫхи вӑхӑтсенче вӑл час-часах пирӗн пата класа пыратчӗ, вӗренекен ачасемпе кӑмӑллӑн калаҫатчӗ. Уйрӑмӑнах вӑл пире Петербург хулипе унти ҫынсем мӗнле пурӑнни ҫинчен интереслӗ каласа паратчӗ. (Вӑл хӑй патша ҫуртӗ ҫумӗнчи капеллӑра музыкӑна вӗреннӗ пулнӑ). Вырӑс композиторӗсен пурнӑҫӗсем ҫинчен, уйрӑмӑнах Мусоргский пурнӑҫӗ ҫинчен каласа пама юрататчӗ. Хӗллехи каникулсем вӑхӑтӗнче, вӑхӑт кичемӗн иртнипе, пирӗнтен нумайӑшӗ ун патне хваттере кӗрсе калаҫса ларатчӗҫ. Пире вӑл яланах кӑмӑллӑн йышӑнатчӗ.

* * *

Чӗмпӗрти учительсем хатӗрлекен чӑваш шкулӗ вӑл вӑхӑтра икӗ класлӑ шкула, пуҫламӑш шкула тата хӗрарӑмсен педагогика курсне пӗрлештерсе тӑратчӗ. Хӗрарӑмсен педагогика курсӗн пӗрремӗш класне двухкласнӑй училищӗрен вӗренсе тухнисене илетчӗҫ, унта кашни класрах икшер ҫул, пӗтӗмӗшпе тӑватӑ ҫул вӗренмеллеччӗ. Учительсен шкулӗн программипе танлаштарсан, хӗрарӑмсен педагогика курсӗн программине нумай чакарса тунӑччӗ.

Иван Яковлевич хӑй каласа панӑ тӑрӑх, хӗрарӑмсен педагогика курсне вӑл ялсенче уҫӑлакан пуҫламӑш шкулсенче вӗрентме хӗрарӑм учительницӑсем хатӗрлес шутпа тата шкултан вӗренсе тухакан арҫын ачасене ҫав хӗрсемпе мӑшӑрлантарас шутпа уҫнӑ-мӗн. Вӑл пирс ҫапла калатчӗ: «Акӑ эсир шкултан вӗренсе тухса,

ялсене учитель пулса ěçлеме каятăр. Эсир чăвашсен тěттěм ялěнчен тухса культурăллă çынсем пулса çитěнтěр. Малашнехи пурнăçра сирěн культурăллă çěнě интерессем тухса тăраççě. Сирěн хăвăр пурнăçпа, хăвăрăн ěçри примерсемпе чăвашсене культурлатма пулăшас пулать. Çак задачăсене шута илсе, сирěн хăвăрăн çемьери пурнăçа та культурăллă тăвас пулать. Çавăнпа та сирěн арăмусем те культурăллă çынсем пулмалла. Вěренмен хěре качча илсен, вăл упăшкин пурнăçне культурсăрлатса яма пултарать. Вěреннě вырăс гимназисткисем сире качча тухас çук. Çапла ěнтě, сирěн кунта вěренекен чăваш хěрěсенех качча илмелле пулать».

Иван Яковлевич хăй патěнче вěренекен ачасене культурлă та таса пурăнма вěрентетчě. Шкулта вěреннě чухне вăл пире юрату тавраşě çинчен шутлама та хушмастчě, педагогика курсěнче вěренекен хěр ачасемпе курнăçтармастчě, вěсене эпир чиркӳре тата раштав вăхăтěнче туса ирттерекен вечерсенче кăна кураттăмăр.

* * *

Чěмпěрти учительсем хатěрлекен чăваш шкулě çумěнче пуçламăш шкул пурччě. Шкулта вěренекен ачасемшěн педагогика практики ирттерес тěлěшпе çак шкул кăтартуллă шкул пулнă. Вěренекен ачасенчен кашниййěнех çак шкулта икě çул хушши педагогика практики ирттермеллеччě. Çак тěлěшпе черет тăрăх кулленех 2—3-шер ача уйăрса çав шкула яратчěç.

Виççěмěш класра вěреннě вăхăтра практика шучěпе хамăрах уроксем ирттереттěмěр. Çак тěлěшпе пире пěр эрне маларах урок теми паратчěç. Вăл тема тăрăх эпир çав тери лайăх хатěрленеттěмěр, эрне хушшинче методика учебникне тепěр хут тěплěн пăхса тухаттăмăр, урок конспектне çырса хатěрлеттěмěр. Урок епле ирттернине курма хамăрпа пěрле вěренекен ачасем, педагогика курсěнче вěренекен хěр ачасем тата преподавательсем пыратчěç. Практикăллă урок ирттерне хыççăн каçхине урока епле ирттернине тишкěрсе сӳтсе яватчěç. Кунта чи малтан практикăллă урока ирттерекен ача хайěн йăнăшěсем çинчен каласа паратчě, унтан ытти ачасем тухса калаçатчěç, чи юлашкинчен вара çав предмет тăрăх вěрентнě преподаватель сăмах илсе, урок епле ирттернине татăклă хак паратчě.

Хăш-пěр чухне, хěрсех калаçнипе, урок епле ирттернине сӳтсе явасси 4—5 сехете яхăнах тăсăлатчě.

Çавăн пек тишкěрӳсене Иван Яковлевич хăй те пыратчě. Çак нашкалах вăл урока мěнле ирттернине курма та пыратчě. Эпě çакна аван астăватăп. Пěрре хамăрпа пěрле вěренекен ачан практикăллă урокне сӳтсе явма пухăнтăмăр. Урокне вăл методика енчен тěрěс, анчах ытти ачасем ирттернě евěрлех пěр пек шаблонпа ирттернě пулнă. Унăн урокě пирки пуçласа эпě сăмах тухса каларăм. Хам сăмахра эпě вăл урока урăх майăлрах, интереслěрех ирттерме май пулнине, вара вăл усă та ытларах пама пултарнине

кӑтартса патӑм. Юлашкинчен методикӑпа вӗрентекен преподаватель тухса сӑмах каларӗ, вӑл мана хирӗҫлесе практикӑллӑ урок ирттернӗ ачана хӳтӗлерӗ. Преподавательпе килӗшмесӗр эпӗ иккӗмӗш хут сӑмах илтӗм, хам малтан мӗн каланинех ҫирӗплетсе патӑм. Иван Яковлевич эпир тавлашнине итлесе ларчӗ-ларчӗ те, сасартӑк тӑрса ҫапла каласа хучӗ: «Пӑхӑр-ха, епле ҫитӗнет ҫак сысна ҫури, преподавательпе те килӗшмест вӗт! Ман шутпа вӑл тӗрӗс калать»», терӗ. (Иван Яковлевич пире час-часах е «сысна ҫури», е «тыркас», тетчӗ. Мухтакан ачана вӑл «сысна ҫури», хурлаканнине—«тыркас», тетчӗ).

* * *

Революциччен Чӗмпӗрти учительсем хатӗрлекен чӑваш шкулӗнчех кӗнекесем пичетлесе кӑларатчӗҫ. Тухакан кӗнекесем ытти чӗлхесенчен чӑвашла куҫарнӑ тӗн кӗнекисем, пуҫламӑш шкулта вуламалли кӗнекесемччӗ. Вӑл кӗнекесене преподавательсем тата аслӑ классенче вӗренекенсем чӑвашла куҫаратчӗҫ.

Чӑвашла куҫарма вӗренсе хӑнӑхмашкӑн пире преподавательсем малтан чи ҫӑмӑл статьясем куҫарма паратчӗҫ. Чӑвашла куҫарнӑ кашни статьяпа кӗнекенех, вӗсене пичетлесе кӑлармалла пулсан, пурте пӗрле пухӑнса пӑхса тухаттӑмӑр, пӗрле тӳрлететтӗмӗр. Ҫапла туни вӑл вӑхӑтра илемлӗ литература чӗлхине туса ҫитерес ӗҫре пысӑк усӑ панӑ, мӗншӗн тесен Чӗмпӗрти шкулта вӑл вӑхӑтра тӗрлӗ кӗпӗрнесенче пурӑнакан чӑваш ачисем вӗреннӗ, вӗсем чӑвашсен илемлӗ литература чӗлхине нумай ҫӗнӗ сӑмахсем кӗртсе пуянлатма пулӑшнӑ. Ҫапла вара чӑвашсен илемлӗ литература чӗлхи анатри чӑвашсемшӗн те, тури чӑвашсемшӗн те лайӑх ӑнланмалла пулса ҫитӗннӗ.

* * *

Юлашкинчен кӗскен те пулин, Иван Яковлевич Яковлев мӗнле ҫын пулни ҫинчен асӑнса хӑварас килет. Ана эпӗ хам епле астунӑ, ҫапла сӑнласа пама тӑрӑшатӑп.

Иван Яковлевич питӗ пултаруллӑ ҫынччӗ, вӑл хӑй мӗн тума шутланине епле пулсан та пурнӑҫа кӗртетчӗ. Хӑйне ҫилентерсен вӑл чаплӑ туйине те хута яма хатӗрччӗ. Унтан вӗренекен ачасем те, преподавательсем те хӑратчӗҫ, анчах ҫав хушӑрах ӑна пурте юрататчӗҫ.

Чӗмпӗрти учительсем хатӗрлекен шкула вӑл иртнӗ ӗмӗрӗн утмӑлмӗш ҫулӗсенче уҫса, ӑна III-мӗш Александрпа II-мӗш Николай патшасен хура реакцийӗсем вӑхӑтӗнче те сыхласа хӑварма пултарнӑ. Хӑйӗн шкулне сыхласа хӑварас тата ӑна аталантарса пырас тӗлӗшпе унӑн вырӑнти влаҫпа дворянство умӗнче пур майпа та чееленмелле пулнӑ. 1903-мӗш ҫулта Хусан вӗренӳ округӗ чӑваш шкулӗсен инспектор вырӑнне пӗтернӗ, ҫакӑн хыҫҫӑн

И. Я. Яковлева Чӗмпӗрти чӑваш учителӗсем хатӗрлекен шкул инспекторӗ вырӑнне кӑна лартнӑ. Каярахпа Иван Яковлевичӑн шкулне те хупасшӑн пулнӑ. Ҫакна малтанах аван сиссе тӑрса, Иван Яковлевич Чӗмпӗр кӗпӗрнатӑрӗпе дворянсен предводительне шкулӑн лайӑх енӗсене кӑна кӑтартма тӑрӑшнӑ, ҫакна пула лешсем те патша патне ҫулленех ҫыракан хӑйсен отчечӗсенче чӑваш шкулне аван енчен кӑтартса панӑ. Юлашкинчен Иван Яковлевича статски советник чинне тата Станислав орденне панӑ, вара И. Яковлевӑн пурнӑҫ условийӗсемпе шкул ӗҫӗсем самаях аванланнӑ.

Пирӗнпе калаҫнӑ чухне И. Я. Яковлев яланах хӑй шкулшӑн епле тӑрӑшни ҫинчен, йывӑрлӑхсене мӗнле майпа ҫӗнтерсе пыни ҫинчен каласа паратчӗ. Ҫапла туса вӑл пире малашне епле пурӑнмаллине, йывӑр лару-тӑруран мӗнле тухмаллине вӗрентнӗ.

Хӑйӗн пӗлӗвӗсемпе пурнӑҫра усӑ курма пӗлмен ҫынсене Иван Яковлевич тӳсме те пултараймастчӗ. Пирӗн шкулта ял хуҫалӑх ӗҫне вӗрентекен пӗр преподаватель пурччӗ. Теори енчен вӑл лайӑх пӗлекен преподаватель шутланатчӗ, анчах хӑйӗн пӗлӗвӗпе ӗҫре анлӑн усӑ курма пӗлменнипе, вӑл ертсе пыракан шкул ферми тупӑш параймастчӗ. Пӗрре эпир ҫав преподавательпе канцелярире лараттӑмӑр.—Пирӗн пата Иван Яковлевич пырса кӗчӗ те тӳрех ҫав преподавателе ятлама пуҫларӗ:

«Эсӗ, акӑ, ача амӑшӗ ҫинчен ҫырнӑ кӗнекене вулатӑн. Анчах сан арӑму тарантас ҫинчех, вӑрмантах ҫӑмӑлланнӑ, манӑн кучер апӑс карчӑк вырӑнне пулнӑ, нимӗн те ҫуккипе тин ҫуралнӑ ачана чӑптапа чӗркенӗ. Кӗнеке вуласса вулатӑн та, анчах арӑмна больницӑна ӑсатмалла пулнине тавҫӑрса илеймен эсӗ. Санӑн яланах ҫапла пулать: вуласса нумай вулатӑн, темӗн те пӗр ҫинчен шутлатӑн, анчах фермӑри купӑстана ҫӗртетӗн, ҫӗрулмине халӗ те купалаттарман. Хуть мужиксенчен ӗҫлеме вӗрен! Пурпӗрех санран ҫын пулас ҫук»! терӗ вӑл ӑна.

Иван Яковлевич пурӑнма пӗлекен типтерлӗ ҫынччӗ. Укҫана вӑл пули-пулми ҫӗре расхутламан, уйрӑмах вӑл хысна укҫине типтерлӗ тытатчӗ. Хӑй уҫнӑ шкула вӑл аслӑлатсах пынӑ, ҫуллен ҫӗнӗ ҫуртсем лартнӑ. Ҫуртсем лартма е туянма хысна укҫа сахал панӑ. Ҫавӑнпа та Иван Яковлевич кашни пус укҫанах тирпейлӗ те усӑллӑрах расхутлама тӑрӑшатчӗ, вӑл пур ӗҫе те сметӑпа пӑхнинчен йӳнерехе тӑватчӗ.

Анчах Иван Яковлевич пӗрре те хыткукар ҫын пулман. Часчасах вӑл чухӑн ҫын ачисене хӑй укҫипе билет илсе паратчӗ, вӗсене ҫул ҫине валли укҫа та парса яратчӗ. Хӑш чухне вӑл чӑваш хресченӗсене хӑйӗн укҫипех адвокат та тытса паратчӗ.

Иван Яковлевич хӑй патӗнче вӗренекенсемпе, уйрӑмӑнах, юлашки ҫул вӗренекенсемпе калаҫма юрататчӗ. Пире вӑл мӗнле пурӑнмаллине, шкулта ачасем хушшинче хамӑра епле тыткаламаллине, ачасене епле пӑхса ҫитӗнтермеллине вӗрентетчӗ. Пире пур-

не те Л. Н. Толстойӑн «Телей мӗнте» ятлӑ кӗнекене вуласа тухма хушатчӗ.

Шкултан вӗренсе тухас умӗнхи экзамента И. Я. Яковлев пире педагогикӑпа «Сознательное усвоение и его возможность в начальной школе» темӑпа сочинени ҫырма пачӗ. Хальхи вӑхӑтра пире ҫак ыйтӑва ҫапла лартни тӗлӗнмелле пек туйӑнать, анчах ун чухне кӗнеке ҫине ҫырнине ӑнлантармасӑр, пӑхмасӑр калама ҫеҫ вӗрентнӗ, вӗренме пултарайманнисене учительсем хӗртме те пултарнӑ. Ҫитменнине вырӑс мар халӑхсене тӑван чӗлхепе вӗрентме чарнӑ. Пӗллӑх ёнтӗ, вырӑс мар халӑхсем хӑйсем ӑнланма пултарайман чӗлхепе мӗн вӗрентнине ӑнланмасӑр, пӑхмасӑр каланипе кӑна вӗреннӗ.

Иван Яковлевич ҫак йӗркене чун-чӗреренех хирӗҫлетчӗ. Вӑл хӑйӗн доклачӗсенче, отчечӗсенче яланах вырӑс мар халӑхсене малтан хӑйсен тӑван чӗлхипе вӗрентни усӑллӑ пулнине, тӑван чӗлхе урлӑ кӑна вӗсем аслӑ вырӑс халӑхӗн культурипе анлӑн паллашма пултарнине ӗнентернӗ... Педагогикӑна вӗрентнӗ чухне хутла вӗренес ӗҫре тӑван чӗлхе пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине, кӗнеке ҫине ҫырнине пӑхмасӑр калама пӗлнипе мар, вӗсен содержанине лайӑх ӑнланса вӗренме кирлине кӑтартса панӑ.

Иван Яковлевич Яковлев мӗнле ҫын пулнине тӗплӗн пӗлес тесен, вӑл мӗнле вӑхӑтра пурӑннине те, ун чухне мӗнле самана пулнине те шута илес пулать. Анчах, хуть мӗнле пулсан та, чӑваш халӑхӗ Иван Яковлевича ӗмӗр-ӗмӗрех ыр ятпа асӑнать, мӗншӗн тесен вӑл чӑвашсене ҫутта кӑларассишӗн вӑйне-халне шеллемесӗр тӑрӑшса ӗҫленӗ, вӑл пуҫласа чӑваш ҫырулӑхне тунӑ.

Т У П М А Л Л И

Стр.

**Я. Ухсай**—Çул (роман) . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

**Н. Мранька**—Ĕмĕр сакки сарлака (роман) . . . . . . . . . . . 105

**И. Трофимов**—Чĕмпĕрти учительсем хатерлекен чăваш шкулĕнче вĕренни çинчен аса илнисем . . . . . . . . . . . . . . 146

Ответственный редактор *В. О. Алагер.*
Редколлегия: *А. Д. Калган, М. Я. Сироткин, Н. Ф Евстафьев, В. Д. Дмитриев.*

Адрес редакции: г. Чебоксары, Дом печати.

НТ 00715. Подписано к печати 28.III—1950 г. Объем 10 п. л.
Колич. печ. зн. в 1 п. л. 47040. Заказ № 745. Тираж 3 000 экз.

Тип. № 2 Чувашполиграфиздата при Совете Министров ЧАССР, г. Алатырь.